83.3(2РОС)
К14
4-35852

«Канаш» библиотеки

Николай Казаков (Ильмовский)

# Тăван ен — Çĕнĕ Йĕлмел



(Çĕнĕ Йĕлмел ялне никĕсленĕренпе 250 çул çитрĕ)

Национальная библиотека ЧР
4-035852

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К963.5
К 14

Николай КАЗАКОВ (ИЛЬМОВСКИЙ)

# ТĂВАН ЕН - ҪĔНĔ ЙĔЛМЕЛ

Историлле-этнографилле очерк



(Ҫӗнӗ Йӗлмел ялӗн историйӗнчен)

Ульяновск
«Канаш» хаҫат редакцийӗ
1996

К63.5[Чув]76-[Тат]
63.52(235)[Чув]76[Тат]
О... ...НЗ.

Книга издана в соответствии с постановлением председателя Новоильмовского Сельского Совета местного самоуправления Дрожжановского района Республики Татарстан от 13 сентября 1994 года.

Автор выражает глубокую признательность за помощь, оказанную в работе над книгой, заслуженному работнику культуры Российской Федерации, члену Союза писателей Чувашии, поэту **А. Ф. ЕРМИЛОВУ (ЮМАНУ)**, начальнику налоговой инспекции Цильнинского района Ульяновской области **А. И. КАЗАКОВУ**, директору краеведческого музея с. Новое Ильмово **А. А. КАЗАКОВУ**, корреспонденту газеты «Канаш» **Н. Н. ЛАРИОНОВУ**, художнику **В. Я. КАШЕЕВУ**, главе администрации Новоильмовского Сельского Совета местного самоуправления **Г. Н. КАРСАКОВУ**, главе администрации Дрожжановского района Республики Татарстан **Р. Х. ХАЙРУЛЛИНУ**, председателю колхоза «Ильмово» **Н. М. МИСКИНУ**, зам. председателя районного Совета народных депутатов **В. П. БИЛЬДЯКОВУ**, главному редактору областной чувашской газеты «Канаш» (г. Ульяновск) **В. Ф. РОМАШКИНУ**.

## Н. КАЗАКОВ (ИЛЬМОВСКИЙ).

**«Тăван ен - Çĕнĕ Йĕлмел».** Историлле-этнографилле очерк. Ульяновск, "Канаш" хаçат библиотеки, 1996, 1 №.

*Автор ку кĕнекере Çĕнĕ Йĕлмел ялĕн иртнĕ кун-çулне тĕпчесе çырса кăтартма тăрăшать, унта пирĕн тăрăха пĕрремĕш çынсем килсе тĕпленнинчен пуçласа паянхи кун пулса иртекен событисене сăнласа парать. Кĕнеке историлле фактсене кăтартакан сăн ўкерчĕксемпе пуян, кĕнеке авторĕ фотокорреспондент пулса ĕçленĕ май вĕсене нумайăшне хăех ўкернĕ. Кунсăр пуçне кĕнекене П. С. Быков, А. А. Казаков, М. А. Александров алçырăвĕсем кĕнĕ. Ялăн 250 çулхи историйĕнче краеведени енĕпе тĕрлĕ материалсем пĕрле пухса пĕрремĕш кĕнеке тухнине шута илсен, вăл питĕ хаклă летопись пулса тăрать.*

35852-чув.
ПРОВЕРЕНО 2010
Национальная библиотека Чувашской Республики

Книга рекомендована к изданию Союзом краеведов Чувашии и Чувашским национальным конгрессом 26 октября 1994 года как учебное пособие для изучения истории родного края в школах Дрожжановского района. Она рассчитана и на широкий круг читателей.



## АВТОР ÇИНЧЕН

Николай Александрович Казаков (Ильмовский) 1959 çулта Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă.

Çĕпрелĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан Чăваш Республикинчи Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумне вĕренме кĕнĕ, ăна пĕтерсе тухсан Мари политехника институтĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Кун хыççăн тĕрлĕ çĕрте вăрман ĕрчетекен техник, вăрманçă пулăшаканĕ пулса ĕçленĕ. 1984-1986 çулсенче çар хĕсметĕнче* тăнă. Çартан таврăнсан Ульяновск облаçĕнчи Тереньга районне пурăнма куçнă, малтан Ясашлă Ташла лесничествинче вăй хунă. 1987 çулта Тереньга рабочи поселокне куçать, унта райхаçат фотокорреспонденчĕ пулса ĕçлет. 1990 çулта Ульяновскра тăван чĕлхепе «Канаш» хаçат тухса тăма пуçласан ăна, активлă ялкора, редакци штатне илеççĕ.

Николай Казаков çырнисем Шупашкарта, Хусанта, Пушкăрт çĕршывĕнче тухса тăракан хаçат-журналсенче те час-часах пичетленеççĕ. Вăл Раççей журналисчĕсен Союзĕн членĕ. Журналист çаплах обществăлла ĕçе те активлă хутшăнать. Ăна Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен И. Я. Яковлев ячĕллĕ культурăпа çутĕç обществин правлени председателĕн çуммине суйланă. 1990 çулхи январьтен - КПСС, хальхи вăхăтра КПРФ членĕ.

Николай Казаков журналист пултарулăхĕнче тăван тавралăх, чăвашлăх ыйтăвĕсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Тăван тымарсем, ăру çыхăнăвĕсем ăна яланах канăç памаççĕ, вĕсен урлă вăл малашлăха ăнтăлать. Çыравçă тĕрĕс çул çинче. Эпир ăна çав пархатарлă çулпа пырса пултарулăх ĕçĕнче малашне çĕнĕрен çĕнĕ шыравсем тума ырă сунатпăр.

*А. ЮМАН,*
***писатель, РФ культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.***

---

*Хĕсмет - военная служба.

# Паллашăр:

## Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ пуçланса кайнăранпа 250 çул çитнĕ тĕле хатĕрленĕ Асăну палли




(П Р О Е К Т)

Проектĕ Н. Казаковăн
Художникĕ В. Кашеев 1993

## Асăну палли çинчен ăнлантарса пани

Çӳл енчи çур ункăра ялăн историри географи вырăнне, аялта вара хальхи администрациллĕ территори тытăмне вырăсла-чăвашла палăртнă. Ункăн чи аялти пайĕнче - çĕр ĕçченĕсемпе рабочисен туслă килĕшĕвне кăтартакан çурлапа мăлатук. Асăну паллин тĕп пайне (варри) икĕ енчен тулли пучахсем илемлетеççĕ.

Çĕнĕ Йĕлмел - чăваш ялĕ, çакна варринчи паллăн çӳл пайĕнче ӳкерсе панă чăваш наци тĕрри туйтарать. Çĕнĕ Йĕлмел Тутарстан Республикине кĕнине Тутарстан Республикин гербĕ çинчи символ - барс - пĕлтерет. Барса тĕнче чăмăрĕ çинче кăтартни Тутарстан Республикине кĕрекен Çĕнĕ Йĕлмел чăваш ялĕ те тĕнчен пĕр пайĕ пулнине сăнарлать.

Вулакансем проекта лайăхлатас енĕпе усăллă сĕнӳсем парас пулсан, автор тем пекех кăмăллă пулĕччĕ.

# Ҫӗнӗ Йӗлмелсен юрри

Сӑвви Николай ЛАРИОНОВӐН
Кӗвви Геннадий КОЛЬЦОВӐН



Шурăмпуç ÿксен Хăла тÿпе çине
Çĕн Йĕлмел ĕçченĕ харăс вăранать.
Савăк кăмăлпа тухать тыр пуссине,
Чăнлă тăрăх çепĕç юрă шăранать.

**Хушса юрламалли:**

Çуралнă ял - Çĕнĕ Йĕлмел,
Эс чĕрере, тăван кĕтес.
Сÿнми çăлкуç, ман тăван ен,
Хавал парса тăратăн эс.

Пучахсем парка ÿсеççĕ пуç тайса,
Тырă тинĕсне пăхсан - чун савăнать.
Тÿпере тăри юрлать каçса кайса,
Ылтăн алăллă ял-йышăн ĕç ăнать.

**Хушса юрламалли.**

Илемли çук хамăрăн тăван ялтан,
Кунсерен ун сăн-сăпачĕ çĕнелет.
Вырмара та вăйăра - эпир малта,
Несĕлсен чысне çĕклетпĕр çÿлелле.

**Хушса юрламалли.**

# Яланах асăмра

Тăван ялăм, питĕ тунсăхларăм,
Сан çинче ман шухăш пĕрмаях.
Çавăнпа-ши сан сăнна, мăнтарăн,
Тĕлĕкре куратăп час-часах.

Вăранап та... иртнĕ кунсем хăвăрт
Асăмра йăлт чĕрĕлеççĕ-çке.
Эх, ачалăх - юмахри пек вăхăт,
Ма-ши пултăн çав тери кĕске!

Манас çук: куç пăвнăн илĕртетчĕ
Симĕс тумлă сарлака урам.
Пархăт пек чĕп курăкĕ çемçеччĕ, -
Куллен кун чупман-и çар уран.

Савнă шкул... Мĕн чухлĕ туптанман-ши
Унта пирĕн ăс-тăн та вăй-хал!
Вĕл-вĕçсе салантăмăр, - ăçта-ши,
Шкулти тантăшсемĕр, эсир халь?

Куç умне тухать, шăп кинори пек,
Çаран-улăх, сар ыраш пусси,
Хăлхарах-çке тăрисен юрри те,
Янăравлă путене сасси.

Эп пĕлетĕп: тулăх колхоз хирĕ,
Тинĕс евĕр хумханать тыр-пул.
Ентешсем, ма савăнас мар пирĕн, -
Çĕнелет ял, уй-хир çулран-çул.

Тăван ял-хирсем пире паман-и,
Çут кун-çул, хивре çунат, ара.

Ачаран юратма пуçăнман-и
Эпир Аслă Çĕршывăмăра.
Ытарми кĕтесĕм, тав сана,
Çав тери эс çывăх ман чуна,
Пурăнап пулин те хулара,
Яланах эс манăн асăмра.

**Гурий АГАПОВ.**



## Çуралнă ялăм

Ешĕл йывăç айĕнче те айлăмра
Манăн тăван ялăм Çĕн Йĕлмел ларать.
Иртнĕ ман ачалăх-яшлăх ку ялта,
Юлнă таврăнми ку тапхăр хыçалта.

Ак, пырса тăрап хыçри çырма хĕрне,
Астăвать вăл ман ача ури йĕрне.
Тунсăх серепи карса илет ăша,
Эп пуtатăп лăпкăн тарăн шухăша.

Умăмра тăрать çатра-çырма, çаран,
Эп кунта чупса çӳренĕ-çке çарран.
Пулнă пулăра, чĕркуç таран лачакара,
Шапарса çӳренĕ çумăр витĕр кăмпара.

Астăвап пĕчĕккĕллех çак хурăна,
Халĕ вăл пушшех илемлĕ курăнать.
Лăпкă çил çинче кăтрисене силлет,
Палласа, мана саламласа илет.

Çеремре чупать ача-пăча лăках
Тунсăхпа ас илтерсе ачалăха.
Çуйхăшса чупса выляççĕ лапталла,
Майĕпен анатăп лапалла.

Малалла утатăп таврана пăхса,
Ман ума тухать пĕр пысăк мар хысак.

Чăнлă шывĕпе тӳр Хурăнвар çырми
Çакăнта тăванлашаççĕ уйрăлми.

Шалалла утса кĕреп хурăнлăха,
Чарăнса тăрататăп пĕр самантлăха.
Кайăксен илемлĕрех кунта юрри,
Танлашма пултараймасть таçти-ютри.

Таврара, ав, илĕртӳллĕ пыл шăрши,
Çакă ырлăха туйман çын та пур-ши?
Ял çине вăл техĕмне вĕçсе сарать,
Ĕç çынни чунне канса савăнтарать.

Эп кĕреп Малтикасса хуллен утса,
Тирĕк йăмрасен айне ларать путса.
Туйăнаççĕ йывăçсем пуç тайнă пек
Пынă чух иртсе эп хамăр енĕпе.

Тӳремре чиркӳ мăнаçлăн курăнать
(Ĕнтешсем çĕкленĕ тепĕр хут ăна).
Йăлкăн купол кармашать ун тăрринче,
Ялăма мерчен сапать хĕвел çинче.

Хам ялта кашни кĕтес çывăх мана,
Чĕрепе - чунпа туйса тăрап ăна.
Инçете кайсассăн та - пин çухрăмра, -
Ялан евĕклĕ йыхравĕ ман çумра.

Мĕнлерех-ши çывăх ялăн çыннисем,
Ачаран паллană чĕрери сăнсем?
Хурăнташ-тăван Йĕлмел çынни мана,
Эпĕ ку ялта ялан кĕтнĕ хăна.

Кирлĕ мар Париж, Венеци, Берн, Дамаск,
Çĕн Йĕлмелĕм тыткăнран чуна ямасть.
Маншăн хамăн ял-сăпка, типми çăлкуç,
Çакăнта çеç телейпе çунать ман куç.

Ку ялта пур эп çуралнă çурт, анне,
Чун туртать ăçта пулсан та ку енне.
Çавăнпа килетĕп хаваспа тăван киле,
Хам савса çуралнă Çĕнĕ Йĕлмеле.

**Н. ЛАРИОНОВ.**

# Тăван ял

Тăван ялăм Çĕнĕ Йĕлмел,
Çавăнта çуралнă эп.
Маншăн вăл ылтăн та кĕмĕл, -
Тунсăхпа аса илеп.

Çуртăм-йĕрĕм çук пулин те,
Тус-тăван унта ман пур.

Чĕререх ял панă витĕм,
Пуç çине çусан та юр.

Умăмрах тăраççĕ чĕррĕн
Пĕлнĕ çывăх сăн-питсем.
Çул выртать çаплах тӳп-тӳррĕн,
Çитĕп пит курас килсен.

Асăмрах çаран та улăх,
Çăлкуç шывĕ, тыр пусси.
Тăван ялсăр эпĕ - тăлăх,
Пурăнни те мĕн усси?

Н. АЛЕКСЕЕВ.

# В Новом Ильмове

Здесь судьба безжалостная ткала
Жизни предков грубое рядно,
Побродил по свету я немало,
Прежде чем увиделся с родней.

Все так просто, и пейзаж неброский,
Как о нем я грезил вдалеке.
Больше слов наскреб бы я в японском
Чем в своем чувашском языке.

То пурга всесветлая клокочет,
То слезится оттепель в ветвях,
Зачастую нужен переводчик
В отдаленных этих деревнях.

Как различна ты, страна большая!
Захожу уж не в избу, в «пӳрт»,
«Есть ли новости?» - здесь вопрошаю
По-чувашски в шутку: «Хыпар пур?»

Путь истории неровный, тряский,
Предназначен каждому свой шлях,
Здесь второй родной язык - татарский,
А не русский, как вон в Алгашах.

Объясняйся в полиглотской смеси
Слов славянских, тюркских - высший класс!
Отвечаю: «Чувашла пельмес» я,
Я прошу всех: «Вырăсла калаç».

Означает речь полунемая
(Что страшней неведанья вериг!):
По-чувашски, мол, не понимаю,
Потому по-русски говори.

Но и то одно уже отрадно,
Что не всеми наш забыт язык,
И не спорят, что его не надо,
Есть другой, могуч он и велик.

Как ему все льстили, угождали,
Кто ж народ любил свой, сердцем чист,
Ярлыком опасным «награждали»:
«Буржуазный националист».

Замолкали саги и сказанья,
Две-три строчки лишь на все про все:
Ханство беспокойное Казани
И булгар родных житье-бытье.

Край мой! По-есенински заброшен,
Смугл ты, твои кудри не из льна,
Но все так же в небе светлой брошью
Радуют нас солнце и луна.

Я не однолюб. В сердечной дрожи
Полюбил деревню не одну,
Но и в самом скверном бездорожьи
Все ж дорогу в Ильмово найду.

Пусть, возделав жизненную пашню,
До иных пределов я дошел,
Пусть не говорю я по-чувашски,
Но чуваш я телом и душой.

Ведь любовь всей жизни есть основа,
Хоть порой грозит десятый вал,
И все это в Ильмове том Новом
Всей душой я глубже осознал.

Заметет поземка путь-дорогу,
Выйду ж в путь я, всем ветрам назло.
Вновь увижу, пусть в пути продрогну,
Ильмово - чувашское село.

В помыслах с тобою нерастанно,
Дочерей твоих красой пленен,
Отыщу на карте Татарстана
Дрожжановский, милый мне район.

**Владимир МИГУШОВ.**




**1993 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче пурӑнакансем, йышлӑ хӑнасем вырӑнти шкула уçнӑранпа 130 çул тата яла никĕсленĕренпе 250 çул çитнине паллӑ тума пухӑнчĕç. Çав ятпа вырӑнти вӑтам шкулта йĕркеленнĕ Ульяновск облаçĕнчи чӑвашсен обществин пуçламӑш организацийĕ пĕчĕк пуху ирттерчĕ.**

**Ял кун-çулĕ çинчен А. А. Казаков (таврапĕлӳçĕ*), Г. Н. Карсаков (ял ĕçтӑвком председателĕ), Л. Н. Мискин (ĕç учителĕ), П. Н. Егоров (шкул директорĕ), Н. П. Мулеев (музыкӑна вĕрентекен учитель) тата ыттисем те сӑмах хускатрĕç.**

---

*Таврапĕлӳçĕ - краевед.

# I. Иртнĕ вăхăт сасси

## 1. Ялăн авалхи историйĕ

Паянхи кун Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 882 çын пурăнать, 317 хуçалăх. Вăл Çĕпрел районĕн центрĕнчен çичĕ çухрăмра вырнаçнă. Тутарстан Республикине кĕрет.

Революцичченхи ял историйĕ авалхи чăвашсен пурнăçнех аса илтерет. Тăван халăхăн ырă йăли-йĕркисене ку тăрăхра урăх вырăнсенчен куçса килнĕ çынсем пуçарса янă. Ку вăл XVII-XVIII ĕмĕрсенче пулма пултарать. Çĕнĕ Йĕлмел ятлă ял халĕ Çарăмсан районĕнче (Тутарстан Республики) те пур. Çĕнĕ вырăна ку ялтан куçса кайнă чăвашсем (Ситуган, Гайдуган, Ильдуган) çак ял ятнех панă. Икĕ районта, ĕлĕкхи чăвашсем пурăннă ялсен пĕр пек ячĕсем паян кунччене упранса юлнă.

Пиншер çул каярах хальхи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ вырăнĕнче тропик вăрманĕсенче ӳсекен йывăçсем ашкăрса ларнă. Климат ăшă пулнă. Тĕлĕнмелле пысăк йывăçсем ӳснĕ. Çурçĕр енчен пăрлăхсем шуса анма тытăнсан, кунта мамонтсем пурăнма куçса килнĕ. Çав пысăк чĕр чунсен шăммисене çырмасенче халĕ те тупма пулать. Мамонт шăлĕсене тата унăн ытти шăммисене эпир шкулта вĕреннĕ чухне М. Н. Егоров учитель-таврапĕлӳçĕ тупни çинчен илтнĕччĕ. Тупăннă чĕр чунсен юлашкисем ку вырăнта вĕсем пурăннине çирĕплетсе параççĕ те. Халĕ çав авалхи чĕр чунсен шăммисем шкул музейĕнче те пур *(сăн ӳкерчĕкре)*.



Ял ячĕ, паллах, çак вырăнта йĕлме (вырăсла ильм, вяз теççĕ) йывăççи питĕ нумай ӳсниппе çыхăннă. Çак вăрман çакăнта пурăнакан халăха хăйĕн пуянлăхĕпе ĕмĕрĕпех савăнтарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ ку тăрăха ытти çĕртен те куçа-куçа килнĕ çĕнĕ йăхсем тымар янă. Çĕр лаптăкĕсем çитмен пирки вĕсем вăрман ăшнерех кĕрсе йывăçсене каса-каса хирсене пысăклатнă.

Малтан килсе тĕпленнĕ чăвашсем ытти халăхсем хĕснине тӳсеймесĕр çак вырăнти чăтлăха тарса пытаннă. Чăнах та, улах вырăн пулнă ĕнтĕ ку. Каярахпа тата ытти çынсен ушкăнĕ, нумай вăхăт вырăн тупаймасăр çӳренĕ хыççăн вăрман варринчи çак уçланках пырса лекнĕ, вырăнти халăхпа пĕрле пурăнма пуçланă. Çĕпрелĕнчен çула тухса ял çывăхне пырса çитсен тин çуртсем пуррине асăрхатăн. Вăл пысăк айлăмра вырнаçнă...

Ĕлĕк-авал халиччен этем ура ярса пусман уçланкăра пуртă сасси

янăраса кайнă, часах вăл ача-пăча, выльăх-чĕрлĕх сассипе тулнă.

Ваттисем каланă тăрăх, ял пулас вырăна чи малтан ултă çемье килсе вырнаçнă. Халĕ ăна Çутă вырăн, теççĕ. Паллах, чи малтан куçса килнĕ чăвашсене кĕмĕл пек таса çăлкуçсем те илĕртнĕ ĕнтĕ. Ун чухнехи ял çыннисем тĕне кĕмен чăвашсем пулнă. Çут текен вырăнтан инçех мар вĕсен Киремет* йывăççи тăнă.

Çынсем малтан çумăртан, çилпе юртан хӳтĕ вырăнсенче - çĕр чавса тунă пӳртсенче пытанса пурăннă. Çурт урайне тир сарса хунă. Çак вырăнта ялан вут çуннă. Ĕç хатĕрĕсем тăвас, апат-çимĕç тупас тата валеçес ĕçсене, çамрăксене сунар ĕçне вĕрентессине ватăсем ертсе пынă. Вĕсем ăрури чи хисеплĕ, ĕçе лайăх пĕлекен çынсем шутланнă. Ял çыннисем, тĕпрен илсен, çĕр ĕçĕпе пурăннă. Çаплах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни вĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Вут çинче хĕртсе тунă тăм савăт-сапара тĕрлĕрен шĕвек япала, тырă усранă, апат пĕçернĕ.

Çиçĕм çиçнĕ, аслати кĕрленĕ. Çынсем унтан хăранă. Турра тата усал-тĕселе ĕненесси шăпах çакăнтан пуçланса кайнă та ĕнтĕ. Ял çыннисем турăсене çынсем е выльăхсем пек пулĕ тесе шутланă. Вĕсем чулран е йывăçран кĕлеткесем касса кăларнă. Кил-çуртра çав кĕлеткесене чи хисеплĕ вырăнта тытса упранă. Йĕрĕх - аслă турă кĕлеткин тути-çăварне юн сĕрнĕ, ку вăл турă парне йышăннине пĕлтернĕ. Вилнĕ çынсен чунĕсем пурăнаканнисен ăрăвне пулăшу парасса, хӳтĕлесе тăрасса ĕненесси пуçланнă.

Часах ку вырăнта ытти чăвашсем те йăва çавăраççĕ. Ăрупа ăру, йăхпа йăх пухăнса уйрăм кил-йышпа пурăнма пуçлаççĕ. Çапла ял хыççăн ял никĕсленет.

Пирĕн тăрăхра тупнă авалхи çынсен йăлара усă курнă япалисем Пăлхар патшалăхĕнчи халăхсен ĕç хатĕрĕсем еверлĕ. Мĕнле майпа лекнĕ вĕсем кунта? Тен, инçетрен куçса килнĕ çын ĕç хатĕрĕсене те хăйĕнчен хăварман?

Мускав патши Хаяр Иван 1552 çулта Хусан ханствине аркатса тăксан, Хусан таврашĕнче пурăннă вак халăхсем, виççĕр çул ытла Тутар патшалăхĕн пусмăрĕнче пулнăскерсем, куннехинче вырăссенчен хăраса, пур пек япалисене лав çине тиесе çак вырăнсене пырса тĕпленнĕ тĕслĕхсем те пур. Çапла вуншар çулсем иртнĕ. Пĕр çурт хыççăн тепри ӳсе-ӳсе ларнă. Ял хăйĕн кулленхи пурнăçĕпе пурăнма пуçланă.

Пирĕн ял чи малтан Кивĕ Йĕлмелĕнчен пуçланса кайнă, теççĕ. 10-12 çул иртсен ял çыннисем çĕнĕ вырăна - хальхи Кивĕ Сатуркка патне куçса килнĕ-мĕн. Паллах, пурнăçĕ çăмăл пулман вĕсен. Иртен-çӳрен вăрă-хурахсем халăхăн пурлăхне çаратнă, тустарнă. Тен, çак сăлтавсене пулах урăх вырăна куçса ларма шутланă пулĕ? Темиçе кил пуçтарăнса пĕр-пĕрне инкекрен хăтарма дружина йĕркеленĕ. Вĕсен пĕрремĕш вырăнĕ - хальхи Тукас урамĕ. Çак урамра Утеев, Изендеев, Еремеев, Симулин, Самойлов йăхĕсем пурăннă. Ял урамĕ ултă çуртран пуçланать. Эссен ятлă пуян çын çак вырăна выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме çĕр лаптăкне йышăнса илет.

---

*Киремет - чăвашсен авалхи Турă ячĕ.

Вăл вăхăтра кунта пурăннă çынсене язычество* тĕнĕн йăлипе пытарнă. XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче - 1750 çулсенче - кунта пурăнакансене православи тĕнне йышăнтараççĕ. Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çынсем çак вăхăтран маларах та пурăнни пирки иккĕленмелли çук.




**Тулли мар сведенисем тăрăх, ялта 1700 çулсенче е маларах та (1550 çулта) куçса çӳрекен халăхсем пурăнма пуçланă. Тĕрĕсрех даннăйсем çук.**

1859 çул тĕлне Çĕнĕ Йĕлмелĕнче 184 кил пулнă, ялта 536 арçын тата 592 хĕрарăм - пурĕ 1128 çын пурăннă пулнă. Вĕсем православи тĕнне ĕненнĕ, çав вăхăтрах язычество тĕнĕн йăли-йĕркисене тытакансем те пулнă-ха. Çав çулсенче, чăвашсене ирĕксĕрлетсе ют тĕне йышăнтарнă хыççăн ялсенче чиркӳсем уçма пуçланă. Ульяновск хулинчи патшалăх тĕп архивĕнчи чиркӳсен ведомоçĕсене уçса пăхар-ха. Мĕн çинчен калаççĕ вĕсем?

«В Ново-Ильмовом Кусте храм деревянный, построен прихожанами в 1891, теплый придел к нему в 1895 г. Церковной земли 33 десятин пахотный. Прихожан в селе 205 дворов, 529 мужчин, 529 женщин...» - тесе çырнă.

Çав çулсенче чиркӳ хуралçинче Василий Быков ĕçленĕ. Чиркӳре штат тăрăх священникпа тияккăн, псаломщик тата просвир пĕçерекен çын ĕçленĕ. Ĕçшĕн священника 300, тияккăна 150, псаломщика 100 тенкĕ шалу тӳленĕ. Çак чиркĕве 1936 çулта пăсса клуб туса лартаççĕ. Пĕр вăхăт хушши кунта тырă склачĕ те пулнă. Çав клуб 1990 çулхи апрельте сунса кайнă. 1991 çулхи октябрь уйăхĕнче чиркӳ çĕнĕрен ĕçлеме тытăннă.

Çĕнĕ Йĕлмел çыннисен пурнăçĕ тата вĕсен йăли-йĕрки çинчен чăваш этнографĕ К. П. Прокопьев (çак ялта çуралса ӳснĕ) çĕр çул каялла

---

*Язычество - тĕрлĕ турра ĕненни.

çапла çырнӑ:

«... В 80-х годах минувшего столетия в с. Ново-Ильмовом Кусте, Симбирской губернии хоронили мою мать-христианку. Поминки по ней были отпразднованы совершенно по-язычески, без малейших признаков христианского поминования, за исключением разве того, что свечи на поминках употреблялись церковные, а не самодельные: так же крошили кушанья и пили пиво с водкой, так же плясали под музыку и пели песни, бабы делали причитания, утром разводили костер и т. д. Только два обряда - «сидение под чурбаном» и «сидение под длинной свечой» - были исполнены в одну ночь. Чурбан был сделан без человеческой фигуры, его не вносили в избу и не возили на кладбище, а всю ночь он стоял на улице перед воротами моего дома. Утром тут же перед воротами около чурбана развели костер и три раза обошли вокруг чурбана и костра с песнями, музыкой и хлопаньем в ладоши. Тут же разбили посуду, употреблявшуюся на поминках: чиляк, чашу и ковш. На могиле вместо чурбана поставили крест. Ни один из моих родственников не подумал, как говорится, перекрестить лба, так совершали тогда поминки в нашем селе, вообще, над всеми умершими...

...Чуваши справляли «Çурта кунӗ» несколько иначе по крайней мере на моей памяти; утренних общих поминок с разведением костра на улице они не делали совсем, а поминали умерших только вечером, каждая семья в своем доме...

...Рано утром на рассвете, из каждого дома выходят на улицу два-три человека, взявши с собой пиво, ватрушек, блинов и крашеных яиц. На перекрестке улиц все жители села вместе разводят один костер из соломы и из изношенных лаптей. Зажигая костер, сельчане приглашают покойников погреться («Вут хурса ваттисене ӑшӑтса парӑр»,- теççӗ). Затем все тут же у костра поминают покойников, делая возлияния и приношения в честь умерших родственников, остатки кушаний доедают сами и расходятся по домам. Несколько родственных семейств собираются в один общий дом, именно в родовой дом (тӗп киле). На конник ставят чиляк с чашкой, перед конником стол с явствами, к стене против конника прилепляют зажженные самодельные свечи, счетом столько, сколько покойников желают помянуть. Одну свечку прилепляют к столбу около печки (сентре юпи çумне) в честь особого духа - покровителя дома (кил пуçне). Эта свечка называется «домовой свечой» (кил çурти). Затем обычным образом поминают всех умерших родственников: сначала поминают домохозяева, потом гости. Когда окончат поминать всех родственников по именам, чуваши из с. Ново-Ильмово Куста поминают наконец «кӑмӑлсӑр вилнӗ çынсене», т. е. таких, обиженных судьбою безродных умерших, которых некому помянуть, или таких, которые умерли неизвестно где.

В память таких лиц хозяйка дома берет три блина и выбрасывает их из двери на двор, говоря: даю безродным, ешьте, пейте, будьте сыты («кӑмӑлсӑррисене паратӑп, ӗçӗр, çийӗр, тутӑ пулӑр»). После этого пьют, едят в этом доме...» («Похороны и поминки у чуваш», Хусан, 1903, 18 стр.; «Брак у чуваш», Хусан, 1903, 35 стр. кӗнекесенчен).

К. П. Прокопьев «Брак у чуваш» (1903) ятлă кĕнекинче «хĕр йĕрри», «хĕрçум юррисем» тата «мăнкĕрӳ такмакĕ», кĕлĕпе пил сăмахĕсене пичетлеттернĕ. Çерçи чӳкĕн кĕллисене Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çырса илнĕ. Унта çапла çырнă: «Çырлах, çĕнĕ тырă пăттипе çерçи чӳкĕ чӳклетпĕр. Çырлахсан - çырлах, çырлахмасан - килес çул чӳклемĕпĕр. Çерçи чӳкне килнĕ хĕрсен йĕтĕнĕсем кăкăр таран ӳсчĕр, пуссисем мăй таран пулччĕр, кантăрĕсем пуç тӳпинчен пулччĕр, хăйсем качча кайса пĕтчĕр, качча кайсан сак тулли ачисем пулччĕр. Ачисем çерçи чӳкне килччĕр».

1852 çулта Константин Прокопьевич çав вырăнта чăвашсем хушшинче хĕр çураççан пуç çапнă чух каланă кĕлле çырса илнĕ. Ваттисем çапла каланă:

- Хĕрпе кĕрĕве, турă, ан пăс,
- Хĕрпе кĕрĕве çын халапĕ хыççăн, турă, ан яр,
- Пĕр кавар, пĕр шутлă пурăнма, турă, пулăш.

Çăлкуç шыв парса тăнă пекех, историе вĕренмелли палăксем авалхи пурнăç çинчен пĕлме пулăшаççĕ. Çавăн пек палăксенчен пĕри вăл - çынсене пытарнă хыççăн вĕсен вил тăприйĕсем çине хунă плитасемпе тимĕр хĕрессем. Волковсен хуçалăхĕнче (вĕсем пурăнакан вырăн ĕлĕк-авал масар пулнă) авалхи палăксем упранаççĕ *(ӳкерчĕкре)*. Вĕсенчен пĕринче çапла çырнă: **«Вь память Осипа Ефремовича, передань земли вь 1872 года 26 февраля».** Чулран касса тунă тăваткал юпа çинче ĕлĕкхи саспаллисемпе çырнă сăмахсене курма пулать: **«1849 года, Галя...»** (ытти сăмахĕсем паллă мар).

Чиркӳ архивĕн хучĕсенчен паллă, масар вырăнĕ хальхи Тукас урамĕнче пулнă.




Революциччен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Упи вулăсне кĕнĕ. Пăвари уес управленийĕ 1797 çултах йĕркеленнĕ. Ялти ĕçсене староста йĕркелесе пынă, арçынсем ăна хăйсен пухăвĕнче (сходкăра) суйланă.

1889 çулта ялта хуçалăхсен шучĕ 227 çитнĕ, унта пурĕ 682 арçынпа 646 хĕрарăм шутланнă. Вĕсем çĕр ĕçĕпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăннă. Çав çулсенче те çĕр пӳртре пурăнакансем ытларах пулнă.

Асăннă вăхăт тĕлне крепосла правăна пăрахăçа кăларнă пулнă ĕнтĕ. Ялти çынсен пурнăçĕнче тĕпрен çĕнĕ улшăнусем пулса иртме тытăннă. Вĕсем темиçе кил пуçтарăнса пĕрлешсе, çĕр обществи туса хунă. Общество членĕсен усă курмалли çĕрсене патшалăхран пысăк укçа тӳлесе сутăн илмелле пулнă. 1861 çулччен ял çыннисем удел хресченĕсем шутланнă.

Пурăна киле яла тĕрлĕ çĕрти чăвашсем куçса пынă. Паянхи кун вара ялта пурте чăвашла калаçаççĕ. Ытти ялсемпе танлаштарсан Çĕнĕ Йĕлмелĕнче чаплă çуртсем ытларах. 1930 çулччenex ял ятне Новоильмовый Куст тесе çырнă.

Революциччен ку вырăнсенче пуян çынсем ытларах пулнă. Уçça Вaçикĕн, Уçça Кирукĕн, Уçça Александрĕн, Уçça Хĕветĕрĕн (вĕсене ял-йыш çапла чĕннĕ) хуçалăхĕсенче лавккасем пулнă, вĕсенче тĕрлĕ йышши тавар сутнă. Вaçикĕпе Кирукĕн пĕрер çил арманĕ те пулнă. Ялти пуянсен шутĕнче Чĕлен ачисем те пулнă. Чĕлен Вaçикĕ лавкка тытнă. Чĕлен Тяпанĕ апат-çимĕç таварĕсене сутнă. Чĕлен ачисен пĕрле 280 теçеттин вăрман, 500 теçеттин çĕр пулнă. Вăрманĕпе çĕрĕ аякра, хальхи Чăваш Республикин территоринче вырнаçнă. Кунсăр пуçне вĕсем выльăх-чĕрлĕх нумай ĕрчетнĕ.

Уçça Хĕветĕрĕ çулсерен пиншер пуç хур пăхса çитĕнтернĕ, мăнтăрлатса пуснă хыççăн ашне тата тĕк-мамăкне Чĕмпĕр хулине кайса сутнă. Йĕлмел ялĕнче çаплах бакалея таварĕсене сутакан лавккасен хуçисем: Лестĕр Хĕветĕрĕ, Выçылкка Михи, Сухуй Люхи, Ухантей Иванĕ, Ухантей Кĕркурийĕ, Клава Симйунĕ, Сĕрип Митти пиншер тенкĕлĕх сутса пысăк тупăш курнă. Вак-тĕвек таварсемпе Караç Хĕвечин ашшĕ Алексей сутă тунă. Армансемпе те пуян пулнă ял. Н. Смоленцовăн, Кĕски Алексейĕн, Уçça Вaçикĕн, Уçça Кирукĕн, Кĕски Тяпанĕн арманĕсемпе ял-йыш пысăк тупăш курнă. Халĕ ялта пĕр арман та сыхланса юлман. Утмăлмĕш çулсенче юлашки армансене тустарсаçĕмĕрсе пĕтернĕ.

Хресчен çынниншĕн чи пĕлтерĕшли çĕр пулнă. Вăл ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă. 1907 çулта патша манифесчĕ пирĕн яла та çитнĕ. Столыпин министр реформи çинчен Якку Казакĕ çапла каланă (вăл темиçе çул хушши хесметре тăнă, хут вулама пĕлекен çын пулнă):

- Хура халăхшăн усси çукпа пĕрех. Çĕр нумай тытса тăракансемшĕн кăна... Пĕчĕкçĕ çĕрсене çирĕплетсе пани хресчене мĕн усси? Асапланса пурăнма тивĕ ял-йыша. Пуянсемшĕн аван ку манифест.

Манифестĕнче ку ялти çĕрсене ĕмĕрлĕхех çирĕплетме ирĕк пани çинчен каланă пулнă. Столыпин реформи тухнă хыççăн ял çыннисене патша çĕрĕсем çине куçса ларма ирĕк панă. Малтан Кăча Хĕветĕрĕ çĕр сутăн илсе çурт лартнă. Унăн ячĕпе çак вырăна Федоровка тенĕ. Ун хыççăн Шăрттан Миккалайĕ, Шакай Хĕветĕрĕ, Ирçе Хвилки, В. Пастухов çĕр ĕçне кӳлĕнеççĕ. Пурнăç майĕпен малаллах шăвать. Хуçалăхри çĕрсене уйăрса пама пуçланă, çĕр чиккисене çирĕплетсе юпасем лартнă.

Çĕр валеçес ыйтăва татса парсан, ялсене çĕрйĕркелӳçĕ* килсе çитет. Кашни арçын пуçне виçшер-пилĕк теçеттин (теçеттин - хальхи виçепе 1,09 гектар) çĕр уйăрса панă. Вăл вăхăтра та ялта виçĕ пусăллă уйпа усă курнă: хура пусă (черный пар), ыраш пусси тата çуртри пусси. Çĕр чиккисене юпасем лартса паллă тунă. Юпа лартас умĕн унăн

*Çĕрйĕркелӳçĕ - землеустроитель.

35852-чув.
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

шătăкне çĕрмен япаласем - чул, кĕленче ванчăкĕсем пăрахнă, юпи çĕрсе пĕтсен, вăл ларнă вырăна çав паллăсемпе уйăрса илме май пулнă.

Пирĕн просветитель И. Я. Яковлев чухăн ачисене çутта кăларас тĕллевпе Çĕнĕ Йĕлмелне пĕр хутчен кăна мар килсе кайнă. Çапла, хăйпе пĕрле П. Миронова илсе каять, каярахпа пирĕн ентешĕмĕр паллă математик пулса тăрать.

Ульяновскри архивран çырса илнĕ документра çапла çырса кăтартнă: «По сведениям на 1900 год в селе Новый Ильмовый Куст значатся две земские школы: мужская, размещавшаяся в собственном здании, и женская, открытая в 1897 г., и размещавшаяся в церковной караулке. В селе в это время было 205 дворов с числом жителей - чувашей мужского пола - 539 и женского пола - 529». (Н. Баженов. «Статописания соборов, монастырей...», 1903 года издания, стр. 154). Манăн умра тата тепĕр документ. Унта çапла çырнă: «К концу XIX в. этот период в деревне, именуемой Новый Ильмовый Куст, было 133 двора с числом жителей мужского пола - 437 и женского пола - 451 человек. В училище обучалось 47 мальчиков и 12 девочек при 2-х учителях мужского пола. Расход на содержание училища в 1886 г. выражался в сумме 582 руб. 15 коп.

Учитель Михаил Григорьевич Асановский, 32 года, сын крестьянина, окончил в 1879 году курс обучения в Симбирской центральной чувашской школе со званием учитель начального училища...»

Ялти ватăсем шкулăн кивĕ çуртне лайăх астăваççĕ. Шкул çурчĕ икĕ пӳлĕмлĕ пулнă пулсан, малти пӳлĕмĕнче - 3-4 классем, иккĕмĕшĕнче кĕçĕн классем вĕреннĕ. 1903-1905 çулсенче шкулти ачасене Тимĕрçен сынни (халĕ Чăнлă районне кĕрет) Иван Семенович Кирпичниковпа унăн мăшăрĕ вĕрентнĕ. Арăмĕ - кĕçĕн классене, Иван Семенович 3-4-мĕш классенчи ачасене тĕрлĕ предметсемпе тарăн пĕлӳ панă.

- Кам вĕренме тăрăшнă, çавă ăнăçлă вĕреннĕ. Пултарайманнисем пĕр çул е икĕ çул çӳресен пăрахнă. Пĕрремĕш класра 30 ача пулнă пулсан, тăваттăмĕш класран 7 е 8 ача çеç вĕренсе тухайнă,- тесе В. Д. Козлов (1979 çулта вилнĕ) каланине эпĕ астуса юлнă.

1928 çулччен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче клуб та, нимĕнле обществăлла организацисем те пулман. 1928 çулта ялта вулав çурчĕ уçăлнă. Унта Василий Николаев ĕçленĕ, вăл ялти чи активлă комсомолец пулнă.

1918 çулта чухăнсен комитетне йĕркеленĕ, унăн председателĕ пулма Н. Т. Антипова çирĕплетнĕ. Ун хыççăн В. Павлов ку ĕçе малалла тăсать. Çак ĕçĕн активисчĕсем: Алексей Алякин, Василий Айметов, Александр Волков тата Федор Амосов пулнă. 1920 çулта Александр Волкова ял Совет председательне, 1929 çулта Кивĕ Йĕлмел çамрăкне Иван Михайлова комсомол ячейкин секретарьне суйлаççĕ.

Вăтăрмĕш çулсем пĕтĕм çĕршывĕпех пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем (колхоз) йĕркеленме тытăннă вăхăт. Çак тапхăр пирĕн ялта та шавлăн иртнĕ. Ленинăн кооператси планне пурнăçласа, хресченсене пĕрлешӳллĕ йыша чăмăртанин пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк пулнă. Ял çынни Аслă революци хыççăн пĕрремĕш хут хăй чăннипех те çĕнĕ пурнăç тума хутшăннине чун-чĕрипе туйса илнĕ. Çав çулсен пуçламăшĕнче ял хăварт ӳссе пынă, пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркеленнĕ. Вăрçă умĕн вăл çирĕп хуçалăх шутланнă. Кун пирки ватă çынсем каласа панинчен çакна астуса юлнă эпĕ.

1930 çул. Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче хресченсен пухăвĕ пулса иртет. Çав пухура вĕсем колхоз йĕркелеме калаçса татăлаççĕ. Федор Амосовпа Егор Ахмуков хресченсем колхоза Ленин ятне пама сĕнеççĕ. Çак сĕнĕве пурте хапăлласа йышăнаççĕ.

Совет государстви Ленин ячĕпе хисепленсе тăракан колхоза ĕмĕрлĕхе усă курма 1300 гектар ытла çĕр çирĕплетсе панă. Ял хуçалăх машинисем туянма укçа-тенкĕ чылай кивçен парса тăнă. Колхоза ертсе пыма Егор Ахмуковпа (председатель) Петр Герасимова (счетовод) суйлаççĕ. Каярахпа пĕр вăхăт хушши колхоз ĕçне Василий Николаев ертсе пырать. 1931 çулта Федор Амосова - колхоз председательне, Александр Кузнецова ял Совет председательне суйлаççĕ. Вырăнти çамрăксен Союзне Кирилл Селендюкова ертсе пыма çирĕплетеççĕ. Çав çулсенче колхозра пĕрремĕшхут бригадăсем йĕркеленеççĕ. Бригадирсем пулма ял çыннисене - Егор Айметовпа Николай Самойлова шанса параççĕ.

Халăх суйласа лартнă çынсем пысăк шанăçа чун-чĕрепе туйса ĕçленĕ, ял çыннисене пĕрлешӳллĕ йышпа ӳсĕмсем тума хавхалантарнă, çитĕнĕвĕсене те, хуйхи-суйхине те пĕрле пайланă. Анчах çĕннине хирĕç тăракансем те, вăл малалла ан кайтăр тесе сăтăрла ĕç тăвакансем те сахал мар пулнă. Тĕпрен илсен, ял халăхĕ Коммунистсен партийĕн вăл вăхăтри политикине пурнăçа кĕртме пĕтĕм ăнланулăхпа хутшăннă. Вырăнти колхоз çинчен çапла çырса кăтартнă документ пур:

«1927 г.- кредитное машинно-тракторное товарищество «Трактор», которое подчинялось Старочукалинскому кредитно-товарищескому обществу, через товарищество купили конные плуги для хозяйства Шагаевых, Амосовых и др. К началу 30-х годов кулачество в селе было ликвидировано, организована партийная ячейка сельских коммунистов, в которую входило 3-4 члена партии. Секретарем был избран Иван Михайлов. В колхозе в это время было 16 хозяйств, а к 1933 году число принятых в колхоз насчитывалось больше половины населения, контора колхоза находилась в том месте, где живет в настоящее время семья Ларионовых.

В 1932 г. начался сбор средств на покупку трактора, что называлось тракторной акцией. В мае этого же года в селе появился первый трактор, водителями которых являлись Григорий Патрин и Василий Кадиров. В молодежном движении села насчитывалось 25 членов. Самыми активными из которых являлись Егор Иванович Еремеев, Павел Дунаев, Федор Чернов, Ананий и Василий Павловы...».

Çапла, çĕнни йывăррăн вăй илнĕ. Ун чухне Çĕнĕ Йĕлмелĕнче 317 хуçалăх шутланнă пулсан, пĕрлешӳллĕ хуçалăха çырăнма кăмăл тунисем малтанлăха 54 хуçалăха кăна çитнĕ.

Çĕнĕ Чукалпа пĕрлешсе пысăклансан колхоз Бауман революционер ячĕпе хисепленсе тăма пуçлать. Вăрçăччен колхозра ултă бригада пулнă. Кашни бригадăн пĕр лаша кӳлсе çӳремелли пĕрер жнейка, лаша кӳлсе авăн çапмалли молотилка, йывăç шăллă сӳресем, колхозĕпе пĕр тимĕрçĕ лаççи тата тăватă çил арманĕ пулнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан, Çĕнĕ Йĕлмелĕнчен 400 арçын Тăван çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайнă, 197-шĕ каялла таврăнайман. Тылра кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшнă çав çулсенче ял-йыш. Вăрçă ял хуçалăхне малалла кайма чăрмантарнă пулин те, колхозри ĕçсене

вăхăтра ĕçлесе пынă.

Килсенче электричество лампочкисем 1967 çулта çеç çуталса кайнă.

Ытти таврари ялсемпе танлаштарсан Çĕнĕ Йĕлмел вăтаммисен шутне кĕнĕ тес пулать. Ял историйĕ пирки Н. И. Егоров тĕпчевçĕ çапла çырать: «Çĕпрел районĕнче Кивĕ тата Çĕнĕ Йĕлмелсем сарăлса лараççĕ. Ячĕсем хăйсемех каласа параççĕ - Кивĕ Йĕлмелĕ маларах пуçланса кайнă, Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ çавăнтан уйрăлса тухнă. Çак икĕ ял пуçланнă вăхăт хушши нумай мар, XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче икĕ ялĕ те пулнă, ун чухне ватăрах ялне «Старый Ильмовый Куст», çамрăкраххине «Новый Ильмовый Куст» тенĕ... Ĕлĕк-авал Çарăмсан районĕнчи Кивĕ Йĕлмелпе Çĕнĕ Йĕлмеле вырăсла «Калмыково» тенĕ. Акă пирĕн умра 1780 çулта çырнă документ. Çав районти ял ячĕсене çапла çырса хăварнă: «деревня Калмыковка, Новый Климовый Куст (Ильмовый Куст) тоже, при реке Большой Кольче». Каярахпа ял ячĕсем кăшт улшăннă, 1859 çулта, сăмахран, çак ялсенех, акă, çапла çырса тухнă: «Новая Ильмова, казенная деревня при речке Сульче».

Çак документпа паллашнă хыççăн çапла çирĕплетсе калама пулать: пирĕн яла Çарăмсан районĕнчи Йĕлмелсенчен маларах никĕсленĕ. **1780 çулта çĕнĕ вырăна куçса кайса çĕнĕ пĕр пек ялсем йĕркеленĕ пулсан, Çĕнĕ Йĕлмелĕнче 1750 çулсенчех пĕрремĕш çынсем пурăнма пуçланă.**



# 2. Легенда, халап е чăн пулни

Çĕнĕ Йĕлмел ял историйĕ çинчен Л. В. Вассияровпа Ф. Т. Айметов ватăсем çапла каласа кăтартаççĕ. Патша вăхăтĕнче Федор Айметов аслашшĕ - В. В. Кузьмин-Аймет 20 çул тиекре ĕçленĕ, ял старости пулнă. Вăл 1936 çулта вилнĕ. Ватă çын аслашшĕ каласа кăтартнисене лайăх астăвать. Вăл каланă тăрăх, 250-270 çул каялла ял вырăнĕнче

вăрман кашласа ларнă. Çырмасем те пулнă. Вĕсен ячĕсем паян кунччене́х сыхланса юлнă: Хурăнвар, Чăнлă, Кĕçĕн Çырма (Чăнлă юппи).

Çырмасем ялăн икĕ енĕпе вырнаçнă. Улхаш енне каякан çырмана Ут лупашки тесе каланă, тет. Çырман икĕ енĕпе - çаран, тен, унта выльăх-чĕрлĕх усрама утă çителĕклĕ пулнăран ăна çапла каланă пулĕ? Акмалли пĕчĕк çĕр лаптăкĕ те пулнă унта. Мĕнех калăн? Меллĕ вырăн.

Историрен çакă паллă: хальхи Чăваш çĕршывĕнче пурăнакан чăвашсене ирĕксĕрлетсе çĕнĕ тĕн йышăнтарма пуçласан, вĕсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме пуçлаççĕ. Шăпах çак сăлтавпа пырса тĕпленнĕ те ĕнтĕ пирĕн мăн асаттесем çĕнĕ вырăна. Чи малтан Изендей, Угандей, Утти, Кадир, Аймет, Шаймет (халĕ Дунаевсем), Шагай йăхĕсем тымар янă. Вĕсем тĕне кĕмен чăвашсем пулнă. Алексей Мискин (сынни вăл тахçанах вилнĕ) каласа панă тăрăх, пирĕн тăрăха куçса килекенсем Хумпуç ялĕнчен пулнă, теççĕ. Халĕ ку ял Йĕпреç районне (Чăваш Республики) кĕрет. Çав ятлă ял Йĕпреç районĕнче халĕ те пур. Вăл ялтан куçса килнисем Сатуркка еннелле вырнаçнă пулнă. Халĕ çав вырăна «Синир лапĕ» теççĕ.

Ял вырăнĕ лайăх пулсан та, пурăнма йывăр пулнă: вăрă-хурахсем тапăннă, куçса çӳрекен тутарсем вĕсене хĕсĕрленĕ: çурчĕсене çунтарса янă, выльăхĕсене хăйсемпе пĕрле иле-иле кайнă, çемйисене вĕлерсе хăварнă, хĕрĕсене чурана илсе кайнă. Çак мăшкăла тӳсеймесĕр чăвашсен ку вырăнтан тепĕр вырăна куçса кайма лекнĕ - Чăнлă çырмин тепĕр енне çуртсем тума пуçланă. Çĕнĕ Йĕлмел ялне XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче тĕрлĕ вырăнтан куçса килнĕ чăвашсем никĕсленĕ.

Патша саманинче хресчен пурнăçĕ япăх пулнă. Тĕрлĕрен хырçă-марçăсем ял çыннисене ура çине тăма кансĕрленĕ. XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче кашни арçын пуçне 70 пус куланай, 40 пус оброк* тӳлеме тивнĕ. Оброкĕ çулсерен ӳссех пынă. Унсăр пуçне ытти тӳлевсем те пулнă. Сăмахран, Киремет, утар вырăнĕсемшĕн куланай илнĕ, авланакан каччăн 3 тенкĕ укçа тӳлемелле пулнă. Хресченсен пысăк ушкăнĕ Эссен ятлă пуян патĕнче ĕçлесе пурăннă. Вăл хальхи Чăваш çĕршывĕнчен кунта куçса килсе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пысăк тупăш курнă. Чăнлă çырми айккинчи çеремлĕ вырăнсенче йывăçран пураласа фермăсем тутарать. Унта выльăх-чĕрлĕх усрама пуçлать. Фермисем тислĕкпе тулса ларсан, тепĕр вырăна куçса кайнă. Тислĕкĕсене тасаттарман. Пушă вырăнсем нумай пулнипе усă курнă пулас.

Унăн вырăнĕ паян пурăнакан Абрамовсем патĕнчен тытăнса Рафик Якурĕ патне çитиччен пулнă. Выльăхĕсене пусса ашне Чĕмпĕре кайса сутнă. Выльăх пусакан вырăнĕ Лянкин Петр Федоровичсен вырăнĕнче пулнă-мĕн. Çав тĕлте пусă та пулнă. Вырăнĕн палли халĕ те пур. Выльăх-чĕрлĕх пăхса, какайĕсене сутса пуçтарнă пысăк укçана лаша çуни çине «чуман» (презент пек шурă пусмаран лаша çуни çине çĕленĕ тăваткал хутаç евĕрлĕ япала) çĕлесе (укçи-тенкине чуман ăшне хунă) хальхи Чăваш çĕршывне илсе кайнă. Эссен ку çĕрсене тара (аренда) илсе, хăй пĕлнĕ пек, никама пăхăнмасăрах пысăк çĕрсемпе хуçаланнă. Нумай вăхăт хушши ĕçлесе пурăннă хыççăн Эссен ачи ăнсăртран чирлесе çакăнта вилет. Çакăн хыççăн çĕрме пуян ялпа сывпуллашса, япалисене пуçтарса хăй ăçтан килнĕ, çавăнта тухса каять.

---

*Оброк - крепостла вăхăтра улпутсем хресченсенчен япалан е укçан илнĕ хырçă-марçă.

Уҫҫа (ялти пуянсенчен пӗри) Эссен ачин хреснашшӗ пулнӑ (Л. В. Вассияровӑн аслашшӗ). Эссен хӑйӗн пуянлӑхне ӑна парнелет.

Изендей йӑхӗ Киремете пуҫ ҫапнӑ. Вӗсен пӗр хӗрӗ кӑлтӑклӑ ҫуралнӑ. Килӗнчен вӑрттӑн шӑрпӑк илсе тухса вӑл хӑй пурӑнакан ҫурта ҫунтарма тытӑннӑ. Кил хуҫисем ҫакна вӑхӑтра сисеҫҫӗ те хӗре ятлаҫҫӗ. Ҫурчӗсене ҫунтарса ярасран хӑраса ӑна килӗнче хупса усраҫҫӗ. Каярахпа темле сӑлтава пула хӗр вилет. Виллине хӗрлӗ таварпа (вӗсем хӑйсен лавккинче хӗрлӗ тавар сутнӑ пулнӑ) ҫавӑрса ҫыхса килӗнчен инҫех мар пытараҫҫӗ. Уретник яла килсен пытарнӑ вырӑнтан виллене чавса кӑларать. Хӗрлӗ таварпа пытарнине курсан Изендейпе арӑмне тытса каять, хӗрне вӗлернӗ тесе айӑплама пуҫлать.

- Христос тӗнне йышӑнмасан тӗрмене хупса лартатпӑр,- тесе хӑратать вӗсене уретник.- Православи тӗнне йышӑнса «шыва кӗрсенех» килӗре яратпӑр.

«Мӗн тумалла?»- шутлаҫҫӗ Изендейсем. Аптранӑ енне ирӗксӗрех ҫӗнӗ тӗне йышӑннӑ вара.

Табак, тӑвар, эрех хаклӑ пулнӑ. Пӗр пӑт тӑвар илме сакӑр пӑта ыхӑн тырӑ сутма тивнӗ. Пурнӑҫ йывӑрланнӑҫемӗн йывӑрланса пынӑ. Хӑш-пӗрисем ытти ҫӗре ӗҫ шырама туха-туха кайнӑ, ҫӗнӗ вырӑна пурӑнма куҫнӑ. Хусана, Чулхулана, Ҫӗпӗре вӑхӑтлӑха ӗҫлеме кайнӑ. 1912 ҫулта Николай Смоленцов, Н. Н. Карсаков, М. Алякин, Д. Козлов вербовкӑпа Ҫӗпӗре тухса каяҫҫӗ. Ылтӑн кӑларнӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. Лена юхан шывӗ патӗнчи пӑлхавра ҫынсене персе вӗлернӗ ҫӗртен Д. Козлов яла аманса таврӑнать. В. Д. Козлов (унӑн ывӑлӗ) ашшӗ каланине астуса юлнӑ. Василий Дмитриевич каланӑ тӑрӑх, ылтӑн кӑларнӑ ҫӗрте ӗҫлекенсене ирхине ирех ӗҫе илсе тухнӑ. Хӑлтӑр-халтӑр пурӑнмалли ҫурчӗсенче (бараксенче) сивӗ пулнӑран нарӑсем ҫинче фуфайкӑсемпех выртнӑ. Апатне начар ҫитернӗ. Яшка ҫинчен хуртсем сике-сике тухнӑ. Хӑш-пӗр чухне пачах та выҫӑ ларнӑ. Ҫӑкӑрпа шыв ҫинче ҫеҫ . Пӗррехинче апатланнӑ вӑхӑтра хурантан кивӗ атӑ туртса кӑларнӑ. Халӑх ҫилли тӑвӑлса ҫитнӗ. Апатланакан вырӑна (столовӑйне) большевиксем пырса кӗнӗ ҫав вӑхӑтра. Забастовка пуҫланни ҫинчен пӗлтернӗ. Мӑшкӑллаттарас мар хамӑра тесе пурте пӗрле хӗрлӗ ялав ҫӗклесе малалла утнӑ... Ак тытӑннӑ вара пеме халӑх ҫине, ниҫта кайса кӗме ҫук. Пульӑсем пуҫ ҫийӗн шӑхӑрса ирте-ирте кайнӑ. Козлов Мӗтри вутӑ купи айне тарса пытаннӑ. Смоленцова та хӑй патне чӗнсе илнӗ. Жандарм вӗсене курса лаша ҫинчен сиксе аннӑ та тытӑннӑ нухайккипе (пушӑпа) хӗнеме. Тӳссе кӑна тӑр! Вырӑсла аван калаҫма пӗлмен пулсан та: «Не бейте, убьете»,- тесе тархасланӑ имӗш ентешсем. Лешӗ икӗ чӑваш тархасланине хӑлхине те чикмен. Хӗнесен-хӗнесен ывӑннӑ пулмалла, пӑрахса кайнӑ. Кун хыҫҫӑн ыттисене хӗнеме тытӑннӑ. Юнланса пӗтнӗ чӑвашсем яла иккӗшӗ те пӗр пус укҫасӑр таврӑннӑ...

Ҫӗнӗ Йӗлмелсем укҫа тупас шутпа таҫта та ҫӳренӗ. Пурнӑҫа кӑшт та пулин сапламалӑх укҫине те тупнӑ. Хӗллесенче вӑрман каснӑ. Тем пек тӑрӑшсан та хресчен кӗсйине укҫа сахал кӗнӗ.

Этем пурнӑҫӗ ҫӗрпе ҫыхӑннӑ. Пирӗн асаттесем сӗм авалтанах ытларах тыр-пул акса тӑвас тесе тӑрӑшнӑ. «Ӗҫле, ан ӳркен, ҫӗр чури, ӗҫлесен тупӑшӗ пулать»,- тесе ҫӗрӗн-кунӗн тертленнӗ ял ӗҫченӗ. Тӑрӑшса вӑй хунӑ хресченӗн ӗмӗрӗ шунӑ май пурлӑхӗ те пуҫтаранннӑ. Ялта пурӑнакан ҫынсене пӗр теҫеттин ҫӗр кӑна лекнӗ. Ҫӗр валеҫнӗ хыҫҫӑн

çуралнă арçын ача 12 çул хушши çĕр илеймен. Хĕрарăмсене çĕр паман. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчех ялта сад ĕрчетесси анлăн сарăлать. Вассияров Корнил (Кармиш) сад ĕрчетме пуçланă. Унăн çурчĕ пахча варринче ларнă. Сад пахчинче тĕрлĕ йышши улмуççисем ÿснĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çимĕç йывăççисем шăнса хăрса пĕтнĕ. Хăй вăл пуян çын пулнă. Суту-илÿ ĕçĕпе Чĕмпĕре тата ытти хуласене кайса çÿренĕ. Революционерсемпе курса калаçнă. Большевиксен организацийĕсемпе тачă çыхăну тытнă вăл. Яла В. И. Ленин кăларса тăнă «Искра» хаçата тата патша правительствине хирĕçле ытти листовкăсене вăрттăн илсе килсе тăнă, вĕсене кунта пурăнакансене валеçсе панă. Революциччен ялта вăл йĕркеленипе патша влаçне хирĕç митингсем irttернĕ. Совет влаçĕ çĕнтерсен Кармиш ялав çĕклесе ытти çынсемпе пĕрле пĕр тан ял урамĕпе утнă. Пуян çĕнĕ влаçа ырă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Анчах та вăтăрмĕш çулсем уншăн синкерлĕ пулнă. Çав çулсенче Çĕнĕ Йĕлмелĕнче те коллективизаци юхăмĕ пуçланнă. Чылай маларах йĕркеленнĕ чухăнсен комитечĕн членĕсем, вĕсен ачисем - комсомолецсем, хăш-пĕр коммунистсем ертсе пынипе хресченсене колхоза кĕме хистенĕ. Çав вăхăтрах пуян хресченсен хуçалăхĕсене туртса илессипе, çемйисене Çĕпĕре кăларса ярассипе хăратнă.

Кулактесе ят панă хыççăн Кармише хăйĕн кил-çуртĕнчен кăларса янă. Çуртне Çĕпрелне илсе кайнă. Каярахпа вăл çуртра военкомат, паянхи кун краеведени музейĕ вырнаçнă. Ялта: «Кармиш сачĕ ăçта?» - тесе ыйтсан пĕлменни çук. Халĕ вăл вырăнта Г. Н. Карсаков тата унăн кÿрши пурăнаççĕ.



**Кармиш хĕрĕ - Нина Корниловна *(виççĕмĕш ретре сылтăмран иккĕмĕшĕ).***

Ялта коллективлă хуçалăх йĕркеленĕ. Уйрăм хуçалăхсен 96 проценчĕ 1936 çулччен ирĕккĕн е ирĕккĕн мар-и,- пĕрлешӳллĕ ял хуçалăх артельне кĕнĕ. Çав çулччен хресченсене колхоза кĕмесĕр пурăнма йывăр пулнă. Кĕменнисене тĕрлĕрен налуксем тӳлеттермелле тунă. Пуянсен çурчĕсене колхоза куçарса кайма е чухăнсен çемйисене пама ирĕк панă. Çав вăхăтра хăш-пĕр пуянсем (Совет влаçне пăхăнманнисем) хăйсен çурчĕсене хăйсемех (никама та ан пулччĕр тесе) вут тивертсе çунтарса яма тăрăшнă. Вĕсен хуçисене Çĕпĕре ăсатнă.

Пурнăçĕ йывăр пулсан та, ял çыннисем тĕрлĕ уявсем ирттернĕ, çамрăксем çуллахи каçсенче çимĕк вăййисене йĕркеленĕ, урама тухса ларнă.

Хĕллехи вăрăм каçсенче çамрăксем улаха пуçтараннă. Камăн та пулин аппĕ-амăшĕ хăнана кайсан е пĕччен хĕрарăм патне вутă, краççын илсе пырса хĕрсем улах каçĕ тунă. Унта вĕсем сӳс е çăм арланă, алса-чăлха çыхнă, тĕрĕ тĕрленĕ. Ĕçленĕ хушăра юрăсем юрланă. Каччăсем килсен вара купăссă (вăййăçă) хĕрсене ташша йыхăрнă...

Йĕлмел хĕрĕсем шурă тутăр çыхса урама тухнă. Тум-юмĕсем чаплă пулман вĕсен, анчах таса та тирпейлĕ пулнă. Урисене шурă пански тăхăннă, калушпа çӳренĕ. Хĕрсен укçа мăйçиххи пулнă. Кĕпепе пĕрле шурă саппун çыхнă. Улаха пиçиххи çине «сарă» (тĕрлесе илемлетнĕ пиçиххине çапла каланă) çĕлесе тухнă. Ана каччă кайман хĕрсем çеç çыхнă. «Сарăна» хĕрсем тĕрлесе илемлетнĕ, вĕçне шăрçасемпе эрешленĕ. Качча кайсан хĕрарăмсем сурпанпа çӳренĕ. Вĕсен хăйсен пичĕсене ют арçынсене кăтартма юраман.

Малалла кĕскен Вассияровсен йăхĕ çинчен. Вассияровсен йăхĕнче пурте пуянсем пулнă. Тĕп тымарĕ - Уçса (Осип). Унăн ывăлĕсем: Якур, Хĕветĕр, Александр, Ваçик, Кирук тата виçĕ хĕр. Ваçикĕн ывăлĕ - Ваçик Ваççилийĕ (Л. В. Вассияровăн ашшĕ). Унăн арăмĕ Александра Ивановна Цыганкова (хĕр чухнехи хушамачĕ). 1933 çулта çĕре кĕнĕ. Халĕ вăл пурăнакан урама Уçса касси теççĕ. Уçса ывăлĕсен те лавккасем пулнă. Уçсапа унăн Ваçик ывăлĕ ватăлса вилнĕ. Ытти ачисене 1929-1937



**Революциччен çак чул çуртра Уççасем Чĕмпĕртен илсе килсе таварсем сутнă. Паян кунта патпалăх усă магазин ĕçлет.**

çулсенче тĕрмере персе вĕлернĕ. Якур тата унăн ывăлĕ Кармиш "Çут лапамра" кирпĕч завочĕ тытнă. Вăл вырăнта халĕ те чул, кирпĕч

ванчăкĕсем тухаççĕ. «Çут лапам» ялтан инçех те мар, аслă çеремре вырнаçнă. Кирпĕччисене хĕвел çинче хĕртсе алебастр шĕвекĕнчен тунă. Кармишĕн икĕ ывăлĕ тимĕрçĕре ĕçленĕ, ăста тимĕрçĕсем пулнă. Талăкне 4-5 сехетрен ытла çывăрса курман вĕсем. Маçтăрсем тунă суха пуç, плугсем ялта хăвăрт саланнă. Хăш-пĕр хуçалăхра вĕсем халĕ те сыхланса юлнă. Кармиш (Калаков Илья арăмĕн ашшĕ), Хĕветĕр (Уççа ывăлĕ), Анатолий Чернов аслашшĕ - Миття, Волковсенчен пĕри, Чăваш çĕршывĕнчен яла килнĕ учитель (ятне пĕлмеççĕ) ялти революционерсем пулнă. Уççан тĕп çуртне, Кируксем патне, çамрăк чухне В. И. Ленин кĕрсе тухнă пулать. Çакăнта пуху тавраш̆ ирттерме Чĕмпĕрти революционерсем килсех тăнă. Вĕсем пĕрле «Интернационал» юрланă. «Кун çинчен Кирук Хĕвечи каласа кăтартатчĕ», - аса илет Л. В. Вассияров.



**Леонид Васильевич Вассияров - Уççа Ваççикĕн ывăлĕ (халĕ вăл вилнĕ).**

«Ваçик ывăлне Ваçик Ваççилине тĕрмере пăшалпа персе вĕлернĕ», - тесе çирĕплетет Никита Казаков. Вăл та унпа пĕр вăхăтра пĕрлех тĕрмере ларнă. Çавăнтах Кармиш та пулнă. Вĕсене иккĕшне те «халăх тăшманĕсем» тесе Хусанта персе вĕлернĕ. Никита Казаков хăй тĕрмере пилĕк çул ларса тухнă хыççăн таврăннă.

Язычество тĕнне ĕненекенсемпе чўк тума ял çыннисем Хурăнвар çырмине çўренĕ. Çав вырăнта кĕмĕл пек çăлкуç юхса выртнă.



**Çак çырмара Киремете пуç çапнă.**

- Çăлкуçне пĕренерен пураса тунăччĕ, - каласа кăтартать Л. В. Вассияров. - Çак вырăнта вăкăр пусса Аслă Турăсене пуç çапнă. Ку вырăн ялшăн чи таса вырăн шутланнă...

Ĕмĕрсем хушши çирĕпленнĕ йăлапа ял урамĕсене унта пурăнакан çынсен ячĕсене панă. Паянхи кун та Уççа, Мĕскĕн, Выçилкка, теççĕ. Çав урамсенче Мискинсен, Высилкинсен, Вассияровсен (Уççа) йăхĕсем йышлăн пурăннă. Пусма-тавар, сахăр, канихфет, пĕремĕк, шăрпăк, краççын, тĕрлĕрен тимĕр-тăмăр таварĕсем илсе килсе сутă тунă вырăна Пасаркасси тенĕ. Ял пасарне çывăхри ялсенчи пуянсем хăйсен таварĕсене сутма илсе килнĕ. Кунсăр пуçне ялта Масаркассипе Тукас урамĕсем пур. Асăннă урамсенчи çуртсем пĕри теприн чен чаплăрах.

1960 çулччен ялта пĕр пӳлĕмлĕ, 2-3 пĕчĕк чӳречеллĕ, улăм витнĕ çуртсем пулнă. Халĕ вара пилĕк стеналлă, 3-4 пӳлĕмлĕ, пысăк чӳречеллĕ çуртсем ытларах.



Çурчĕсем пĕр-пĕринчен илемлĕ те капăр.

Ялта электричество çутисем вăрçă хыççăн кăна çуталса кайрĕç. Вăрçăччен Т. В. Айметов Мускавран кӳрсе килнĕ электростанци (1936 ç.) мазутпа ĕçленĕ. Ăна колхоз территорийĕнче вырнаçтарнă пулнă. Унăн çутипе колхозра, шкулта тата хуçалăха çывăх урамсенче пурăнакансем çеç усă курнă.

Пирĕн урамри (Пасар касси) электричество линине 1967 çулта çеç туса пĕтерчĕç. Унччен каçсерен краççын лампипе лараттăмăр.

Пурăна киле «Тилху лапамĕ», «Маття çулĕ», «Чевкенеç çулĕ» (Маттяпа Чевкенеç - хĕрсен ячĕсем) ятсем манăçа тухма пуçларĕç. Килĕсенчен ашшĕ-амăшĕсенчен юратнă каччисем патне вăрттăн тухса тарнă çулсене çапла каланă. Маття - Сатурккана, Чевкенеç Чукал çулĕпе пулас мăшăрĕсем патне пурăнма тарса кайнă имĕш. «Хăла тӳпе» ятлă çĕр ĕлĕк Çĕнĕ Йĕлмел ялĕн çĕрĕ шутланнă. Ăна Япалака (хальхи Çĕнĕ Чукал) ялне сутнă. «Тилху лапамĕ» - Сатуркка ялĕ енне каякан çул айккинчи çĕр лапамĕ.

# 3. Ял ăçтан тата хăçан пуçланса кайнă?

(Вăкăр Петĕрĕн алçырăвĕ тăрăх)

Ку питĕ кăткăс ыйту. Ăна пĕлес тесе манăн тĕрлĕ архивсенче

ĕçleme тиврĕ, хĕрĕх çула яхăн тавралăх историне тĕпчерĕм. Апла пулин те пурне те пурпĕрех пĕлеймерĕм. Ял хăçан пулса кайни çинчен никам та хут çине çырса хăварман. Ялăн историйĕ халăх асĕнче çеç сыхланса юлма пултарнă.

Хăçан ял пуçланса кайнă? Çакăн çинчен пĕлес тесен çак вырăн историне кĕскен те пулин çырса кăтартмасан вулакана ăнланма йывăр пулĕ. Темиçе ĕмĕр каялла эпир халĕ пурăнакан вырăнсенче пуш хир тăсăлса выртнă. Ăна «Тискер хир» («Дикое поле») тенĕ. Хирте куçса çӳрекенсем (кочевниксем) хуçаланнă. Вĕсем кунта пурăнакан чăваш, ирçе, вырăс халăхĕсем çине тапăнса инкек кӳнĕ. Çавăнпа вырăс патшалăхĕ хăй çĕнсе илнĕ çĕрсем çинче кочевниксенчен сыхланма крепоçсем тума йышăннă.

1654 çулта тин тискер хирте инçетрен куçса килнĕ халăхсене канлĕ пурăнма май тупăннă. Чи лайăх çĕрсене вырăс патшалăхĕ пуянсемпе чиркӳ çыннисене валеçсе панă. Чăвашпа тутар халăхĕ валли вăтам Атăлăн чи çӳллĕ тĕмески кăна юлнă. Çав вырăнсене Хусан ханстви енчен çĕнĕ çынсем килсе тĕпленеççĕ. Вĕсем хăйсем малтан пурăннă вырăнсене кайса парăмĕсемпе налукĕсене тӳленĕ. 1708 çулта Пĕрремĕш Петĕр патша çĕршыва уессем çине пайлама хушакан реформа кăларать. Ăна пурнăçа ку тăрăхра 1797 çулта çеç кĕртеççĕ. Çак вăхăтра Чĕмпĕр кĕпĕрнинче Пăва уесĕ туса хурсан Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ Упи вулăсне кĕрет. Пирĕн енне куçса килекенсем Сĕве (Свияжск) хули çывăхĕнче пурăнакан чăвашсемпе тутарсем пулнă тесе калаçкаланисене эпĕ вată çынсенчен илтнипе астăватăп. Тĕп чăвашран та çак вырăнсенче пурăнма нумай халăх куçнă. Вĕсем халĕ Çĕпрел районĕнчи çурçĕр енчи ялсенче пурăнаççĕ. Сĕве хули енчен куçса килнисем çак районти кăнтăр енчи ялсенче тĕпленнĕ. Çавăнта пурăнакан çынсене иртнĕ ĕмĕрсенче тăхăннă хĕрарăм тумĕсенчен, сăвă каланисенчен, юрăсем юрланисенчен уйăрса илме пулнă. Çак çынсемпе çывăх тăванлашакансем пачах пулман. Ĕмĕртенпех Тимĕрçен, Хулаçырми (Городище) ялĕсенчен пирĕн яла хĕрсем качча килнĕ. Йĕлмел хĕрĕсем те асăннă ялсене качча кайнă. Упи, Тăваньен, Хурăнвар ялĕсенчи каччăсене хĕрсем темшĕн качча тухма килĕшмен, вăл ялсенчен хĕр те илсе килмен. 1927 çулта çеç пирĕн яла Упи хĕрĕ качча килнĕ, вăл Вассияров Кармиш кинĕ пулнă. Пуянлăха хапсăнман пулсан вăл та килмен пулĕччĕ.

Ял ячĕ ăçтан пулса кайнă-ха? Ку вырăнсенче йĕлме хăви ӳснĕ. Ял ятне 1930 çулччен Ново-Ильмовый Куст тесе çырнă. Малтан Йĕлмел ялĕ пĕрре кăна пулнă. 10-12 çул иртсен çынсем çĕнĕ вырăна пурăнма куçаççĕ. Лешĕ вара кивĕ ятпах юлать. Ĕлĕкхи çынсем чи малтан Чăнлă

çырмин тепĕр енне килсе вырнаçаççĕ. Вĕсен малтанхи пӳрчĕсем çурри ытла çĕр айĕнче ларнă (схема çинчи евĕрлĕ), вĕсене «полуземлянка»







(«çурма çĕрпӳрт») тенĕ. Чӳречисем хальхи пек мар, пура пĕренисене 20-30 сантиметр касса тунăскерсем рамкăсăрах пулнă. Хĕллехи вăхăтра вăл шăтăка çурт хуçи пукан чиксе хума пултарнă, çулла уçă тăнă. Хăшпĕрисем ăна выльăх хăмпипе уçă курса карнă. Кăмакисене вĕсем тăмпа

чулран купаласа тунă, мăрьесем пачах пулман. Çăкăр пĕçерме йывăртарах пулнă пирки вĕсем пашалу çикелесе пурăннă. Хĕллехи вăхăтра яшкине пÿртре пĕçернĕ, çулла - урамрах. Çурта хутнă чух алăкĕ уçă тăнă, пĕчĕк ачисене вĕсем сĕтел айне лартса тĕтĕмрен çăлас тесе тĕрлĕ тумтирпе витсе хунă. Кăмакинче вут сÿнсен, тĕтĕмĕ тухса пĕтсен çеç алăкне хупнă. Çынсен пÿрчĕсем ăшă пулнă,чулран тунă кăмака ăшша лайăх тытнă.

Çак вырăнсенче пурăнма,паллах, кансĕр пулнă пĕрремĕшçынсене. Вĕсем çине тĕттĕм каçсенче Сатуркка мишерĕсем киле-киле тапăннă: выльăхĕсене,çапман тыррине вăрласа кайнă. Хуçисем тула ан тухчĕр тесе чÿречерен кашта чиксе хăратнă, алăкĕсене питĕрсе хунă.Хăш-пĕр чухне тăшмансем çурта вут тивертсе çунтарса яма та пултарнă.Хуçисем урама тухма хăранă,ачисем ашшĕпе амăшĕ çумне çыпçăнса ларнă.Нушаллă пурнăç çак çынсене, 7-8 çул çак вырăнта пурăннă хыççăн, çырма урлă каçса тепĕр вырăна пурăнма хистенĕ.Çĕнĕ вырăнта çĕнĕ пÿртсем тума тытăнаççĕ.Хальхинче çурма çĕрпÿртсем мар, хальхи çуртсем евĕрлех, çак вырăнта Тукас урамĕ пулса каять.Авалхи çуртсем пулнă вырăнсенче шăтăк-путăксем халĕ те пур.

Чи малтанхи Тукас урамне Утеев (Утей авалхи чăваш ячĕ пулнă),Изендей (ку та авалхи чăваш ячĕ), Еремеев (çак ăру тĕп чăваш ятне çухатнă,тĕне кĕрсен илнĕ çĕнĕ ят), Симулин (Симулла тутарсем хĕстернипе мăсăльман пулса тăрать, тискер хире пурăнма куçса килсен каллех чăвашсен енне куçать. Ячĕ тутарлах юлать ), Самойлов (йăх тĕп чăваш ятне çухатнă), Сямкин (авалхи чăваш ячĕ) йăхĕсем пырса вырнаçса ларнă. Авалхи Тукас урамĕ урăхларах пулнă, çурçĕр енчи çынсен çурчĕсем хальхи урамăн варрине ларса тухнине эпĕ те аван астăватăп.

Ял пысăкланса пынă, çуртсен шучĕ 50-60 çитнĕ. Çĕнĕ урам - Тÿрĕ Тукас пуçланса каять. Ку урамри пĕр пуян кочевникăн хуçалăхĕнче питĕ нумай выльăх-чĕрлĕх пулнă. Ытти ялти çынсен çурчĕсем пĕр-пĕринчен инçетре ларнă. Вăл вăхăтра Выççилккара никам та пурăнман. Хальхи хăла тÿпе вырăнĕнче вăрман ÿснĕ, чăн та çурт тумалли йывăçсемех ÿсмен ĕнтĕ унта, çăка, ăвăс, хурăн йывăççисемпе хуçалăхра вĕсем усă курнă. Шултра ăвăсран çÿпçесем тунă, çăка йывăçĕ сĕтелсемпе тенкелсем тума кирлĕ пулнă. Çăка хуппи çăпата тума юранă. Ватă çăкаран пĕчĕк ачасем валли сăпка тунă. Ĕçе кĕмен йывăç юлашкийĕсемпе кăмака хутнă. 50-60 çул иртсен ку вăрмана касса пĕтернĕ, 10-20 çултан чавса кăларман йывăç тымарĕсем çĕрсе пĕтнĕ. Сухаласа тырă акмалли хир пулса тăнă, çерем хуçийĕ пулман. Çав вăхăтра Иккĕмĕш Кĕтерне патша çĕрсене пайлама указ кăларнă. Çĕр виçекенсем (землемерсем) пирĕн енне те çитнĕ. Вĕсем кашни ялăн чиккине пайласа уйăрнă. Унччен Çĕнĕ Йĕлмел çыннисем çĕр пирки нуша курман, тырă акма та, выльăхĕсене çÿретме те çителĕклĕ çĕр тесе шутланă. Япалак мишерĕсем апла шутламан. Вĕсем çĕр пайлакана хăна тунă, хăла лаша парнеленĕ. Çакăншăн вăл Çĕнĕ Йĕлмел çыннисен çĕрĕ çинче вырнаçнă хире Япалак ялĕ валли уйăрса панă. Çакна илтсен пирĕн ял çыннисем те «вăранаççĕ», анчах нимĕн те тума пултараймаççĕ. Çапла майпа çак вырăн (хăла тÿпе) 1859 çулта тутарсен аллине лекет.

Авалхи çынсем каланă тăрăх,ял айккинче вырнаçнă «Тĕпсĕр кÿлĕ», чăнах та, тĕпсĕр пек туйăннă имĕш. Шертесем (вĕрлĕк) мĕн чухлĕ

вăрăм пулсан та кӳлĕ тĕпне ҫитеймĕн. Ҫакна кура ăна «Тĕпсĕр кӳлĕ» тенĕ. Кивĕ Сатурккана каякан ҫулăн сылтăм енче пĕр лап пур, ăна «Тилху лапĕ» тенĕ. Эпĕ те астăватăп ку лапран тăм илнине. Ҫак тăмран хылчăк хушса кирпĕчĕ ҫапнă. Кирпĕччи кăмака мăрйисем тума кирлĕ пулнă. Мăрьесем ҫумăрпа исленсен те, юрпа хуплансан та ишĕлмен. Тилху лапĕнче кӳлĕ пулнă. Ҫăлкуҫ унтан тухса Тĕпсĕр кӳлле юхса кĕнĕ. Тĕпсĕр кӳлĕри шыв типнĕшĕн халăх хăй айăплă. Ҫак лапра мĕн авалтанпах хăвасем ӳснĕ, ҫавăнпа вăл ишĕлмен, Тилху лапĕнчен ҫак лапа ҫитиччен сухаламан ҫĕр лаптăкĕ пулнă. Унта вăйлă курăк ӳснĕ, унăн тымарĕсем те ҫĕре ишĕлме паман. Ҫынсем кунта пурăнма тытăнсан хăвасене касса пĕтернĕ, ҫĕрне сухаланă. Ӳсен-тăран тымарĕсем ҫуккипе ҫĕр ишĕлме тытăннă, ҫурхи шывпа ҫĕр пичĕ ҫурăлнă. Ҫĕр ҫул иртсен лапран ҫырма пулса кайнă, «Тĕпсĕр кӳлле» хупланă.

Халăхăн айăпне пула Изендей ҫырми ҫывăхĕнчи виҫĕ кӳлĕри (Виҫкӳль) шыв та типсе ларнă. Сухаласа тырă акнă анасем тăрăх ҫуркунне тата вăйлă ҫумăр ҫунă хыҫҫăн йăрансем тăрăх хура тăпраллă шыв юхса кӳлĕсене хупласа хунă.

Чăнлă, Хурăнвар ҫырмисем хальхи пек тарăн та чăнкă пулман. Пысăк лапсем ҫеҫ пулнă. Ҫырма айккинче хăвасем, вырăнĕ-вырăнĕпе шултра йывăҫсем те ӳснĕ. Ҫынсем кунта пурăнма тытăнсан каллех вĕсене касса пĕтернĕ, хăвисене выльăх-чĕрлĕх таптанă. Ҫырма айккисем ишĕлме пуҫланă.

Ялта вуникĕ тĕрлĕ ана палли пулнă. Вăл вуникĕ хуҫалăх пулнине пĕлтернĕ. 1859 ҫулта - 184, 1913 ҫулта - 259, 1930 ҫулсенче - 360 хуҫалăха ҫитнĕ. Кивĕ Йĕлмелне каякан ҫулăн сулахай енче Пуп ани 33 теҫеттин ҫĕр лаптăкĕ йышăннă.

Хаяр Иван патша Хусан ханствине парăнтарма кайнă чух Улатăра чарăннă. Малалла вăрман урлă кайма шутламан. Вырăс ҫарĕн пĕр ушкăнĕ хальхи чăваш ҫĕршывĕ урлă кайнă, тепĕр ушкăнĕ Барăш, Хулаҫырми, Йĕлмел, Кивĕ Улхаш, Пăва ялĕсем урлă Хусана ҫул тытнă. Пирĕн ялта вырăс салтакĕсем Чăнлă ҫырми урлă каҫма Хăла тӳпе вăрманне касса Тури кĕпере тунă. Вĕсен ҫарĕ малалла хăш ҫулпа утса пынине пăхса тăма Ҫĕпрел тĕмескине хăпартнă (халĕ ҫак вырăн Ҫĕпрелĕнчен 3 ҫухрăмри аэродром тĕлĕнче). Ҫар Йĕлмелĕнчен Кивĕ Улхаш енне каякан ҫерем пе пынă. Салтаксем ҫереме таптаса пынă ҫул нумай вăхăт хушши палăрса тăнă. (Асаилӳсене П. С. Быков Киев хулинче пурăннă вăхăтра 1984 ҫулта ҫырнă).

# 4. 1663 ҫул. Ҫĕпрел тăрăхне пĕрремĕш хут Ахметка ятлă тутар хăйĕн юлташĕсемпе пырса вырнаҫнă

*(Пĕтĕмлетсе калани)*

- Ял хăҫан пуҫланса кайнине пĕлме ҫав тери йывăр,- терĕ мана пĕррехинче Л. В. Вассияров. Чăнах та ҫапла иккен. Темиҫе хутчен те

Ульяновскри тата Шупашкарти архивсенче пулса Çӗнӗ Йӗлмел ялӗ пуçланса кайни çинчен калакан хутсем (документсем) тупӑнмарӗç. Кӗнекере авалхи предани (халап, халӑх сӑмахӗ) çине таянса тата çынсем каласа панипе çеç усӑ курса çырнӑ. Ял тымарӗ сӗм-аваллӑх патне туртӑнать. Свияжск уесӗн кӗнекинчи 1565-1567 çулсенчи кӑтартусене илсен çакӑ паллӑ, чӑвашсен 40 процентӗ ытла унта пурӑннӑ. Летописçенче этноним «чӑваш» тени пӗрремӗш хут 1521 çулта тӗл пулать.

Ӗлӗк чӑвашсем халӑхи пек çурт-йӗр çавӑрса пӗр вырӑнта тӗпленсе пурӑнман. Вӗсем вӑрманлӑ, улӑх-çаранлӑ, тыр-пул çитӗнтерме меллӗ вырӑнсем суйласа илме тӑрӑшнӑ. Пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куçса çӳресех иртнӗ вӗсен ӗмӗрӗ. XVII ӗмӗрӗн вӗçӗнче Свияжск уесӗнчи хресченсен пурнӑçӗ питӗ йывӑрланса çитнӗ. Ку паллах, Алексей Михайлович патша кӑларнӑ Соборнӑй Уложени ятлӑ саккунпа та, Степан Разин пӑлхавӗ хыççӑн хытарнӑ указсемпе те çыхӑннӑ. Çавӑнпа та вӗсенчен ытларахӑшӗ нушаран ирӗке тухас тӗллевпе халхи Çӗпрел тӑрӑхне килсе пурӑнма пуçланӑ. Пӗрисем маларах, теприсем каярах çӗнӗ вырӑна килсе ялсем пуçарса янӑ. Вӗсенчен маларах çак вырӑна Ахметка ятлӑ тутар пырса çитнӗ: **«1663 год - Казанские служилые татары Ахметка с товарищами в числе 25 человек водведены в Симбирском уезде на верховьях реки Цильна, где им были отведены пахотная земля и сенные покосы».**

(Москва, архив Министерство юстиции, 3 отдел, Казань, отказный старых лет, книга 2, дело N 151).

Вӑрӑ-хурахсенчен пытанас шутпа вӗсем аслӑ çулсенчен аякрах пӑрӑнса вӑрманлӑ вырӑнсенче пурӑннӑ. XVIII-XIX ӗмӗрсенче вак халӑхсем пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куçса çӳренинчен пӗрре те тӗлӗнмелли çук. Паянхи кун та çаплах куçса çӳресси чарӑнман. 1989 çулхи СССРти перепись тӑрӑх чӑвашсен хисепӗ 1842346 çын шутланнӑ, вӗсенчен 906992-шӗ Чӑваш Республикинче пурӑнаççӗ, ыттисем вара ун тулашӗнче (ӑна диаспора теççӗ).

Ял историне, унта пурӑнакан çынсен йӑх-несӗлӗсене аван пӗлни, ӑрусен çыхӑнӑвне çирӗплетме пулӑшать, ӗлӗк-авалран пыракан йӑла-йӗркесене паянхи кун та кирлӗ пек тытса пыма май пулса тӑрать.

Çӗнӗ Йӗлмел ялӗн историйӗ пирӗн вӑхӑтран пуçласа 250 çул каярахри тымарсенчен пуçланнӑ.



# II. П. С. Быков алçырӑвӗсем

Пирӗн ентеш П. С. Быков 1973 çулта тӑван ялӗнче, Çӗнӗ Йӗлмелте хӑнара пулнӑ чухне çакӑн пек асаилӳ çырса хӑварнӑ:

«Хам çуралса ӳснӗ ялӑн историне çырма пуçларӑм. Çӗре кӗриччен вӗçлесчӗ çак пысӑк ӗçе. Çырса пӗтерсен пичетре пичетлеме май пулмасан та, алӑпа çырнӑ кӗнекене асӑнмалӑх ял çыннисем валли хӑварасшӑн. Кам та пулин упрӗ, темиçе çул иртсен, тен, асӑнӗç те. Самана пӗр вырӑнта тӑмасть, улшӑнать, тен, алçырӑва пичетлесе кӑларакан та тупӑнӗ», - тенӗ вӑл унта.

Çак йӗркесене вуласан П. Быков çырнӑ алçырӑва шыраса тупма шутларӑм. Петр Сергеевич ӑна Çӗнӗ Йӗлмелӗнче пурӑнакан тӑванӗсем патне ярса панине пӗлтӗм. Ялта отпускра пулнӑ чухне ентеш çинчен ытларах пӗлме тӑрӑшрӑм, унӑн биографине тӗпчерӗм. Вӑл тӗрлӗ çынсем патне çырнӑ, халӗ ял музейӗнче упранакан çырусене тишкертӗм. Çав çырусем çине таянса та пулин, Çӗнӗ Йӗлмел историне кӑштах пӗлтӗм. Чи малтан П. С. Быков çинчен асӑнса хӑварасшӑн.

«Петр Сергеевич 1913 çулта Çӗнӗ Йӗлмелӗнче çуралнӑ, мӗн çӗре кӗриччене Киев хулинче пурӑннӑ. Унӑн çамрӑклӑхӗ тӑван ялӗнче иртнӗ: вӑрçӑччен Çӗнӗ Йӗлмел ял Советӗнче, Чӑнлӑ район Совет ӗçтӑвкомӗнче (Аслӑ Нагаткин ялӗнче) ӗç хучӗсемпе ӗçлекен (делопроизводитель), Бауман тата М. Горький ячӗсемлӗ колхозсенче бухгалтер пулса вӑй хунӑ. Вӑрçа хутшӑннӑ, аманнӑ хыççӑн госпитальте сипленнӗ. 1944 çулта ӑна çар медицина училищине вӗренме яраççӗ. Кунтан вӗренсе тухсан шӑпа Петр Сергеевича Киева илсе çитерет, унта вӑл медицина институтӗнче вӗренсе пӗлӳ илет», - тесе çырса кӑларнӑччӗ ун çинчен

Çĕпрел районĕн хаçатĕнче Р. Низамов.

П. Быков чылай çулсем хушши ял историне тĕпченĕ, архивсенче пулса паха документсем пухнă. Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ тата унти çынсем çинчен «Пурнăç вăл - пурнăç» ятлă кĕнеке çырма ĕмĕтленнĕ. Пичетре пичетлеттерес ĕмĕтпе мар, ял çыннисем, çамрăксем вуласа ял историне пĕлччĕр, тесе.

Музейри çырусене тĕплĕн вуласа тухрăм. Вĕсене çырнă чухне П. Быков 60 çулта пулнă. Кашниййĕнчех ял пуласлăхĕ пирки пăшăрханса çырать вăл: «Çак çула çитрĕм ĕнтĕ, вăхăт шăвать, тăван яла пырса курма йывăр, унта пыма асфальт та çук...»

Çырусене вуланă хыççăн куç умне ялăн авалхи пурнăçĕ тухса тăрать.

«Чăвашсен мăн аслашшĕсем Атăл тăрăхĕнчи вырăнти халăх пулнă, каярах тăван чĕлхине çухатса хăйсене пăхăнтарнă пăлхарсен чĕлхине йышăннă. Çавах та вĕсем пăлхар пулса кайман, пăлхар чĕлхипе калаçма тытăннă çеç», - тет ватă таврапĕлÿçĕ пĕр çырăвĕнче.

«Историрен çакă паллă, - хушса хурать вăл малалла, - Атăлăн сылтăм енче XIII-XIV ĕмĕрсенчех пăлхарсемпе тăванлă сăвар халăхĕ пурăннă. Вăл пăлхарсемпе пĕр вăхăтрах çĕнĕ вырăна куçса килнĕ халăх ушкăнĕ...

IX ĕмĕр вĕçнелле - X ĕмĕр пуçламăш патнелле Вăтам Атăл тăрăхĕнче Пăлхар (Волжская Болгария) патшалăхĕ пуçланса каять. Ăна йĕркелесе яракансем Шилка патшапа унăн ывăлĕ Алмуш. Унăн территорине Самара, Ульяновск облаçĕсем, кăнтăр - хĕвеланăç Тутар, Атăл, леш енчи кăнтăр çĕрĕсем тата Чăваш Республикин кăнтăр - хĕвелтухăç пайĕ кĕнĕ. Пăлхарсемпе сăварсем (болгары и сувары) çĕр ĕçĕпе пурăннă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, сунара çÿренĕ. Сăвар пулас чăваш халăхĕн центрĕ шутланать. Чăваш сăмах та сювαз (сувар) сăмахран пуçланса каять. Вырăс летопиçĕсенче малтан чăвашсене «горные черемисы» (черемисы - мари) тенĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Атăлăн сылтăм (çÿллĕ) енче пурăннă.

Преданисем авалхи чăвашсен пурнăçне тĕрлĕ енлĕ кăтартса параççĕ: вĕсен нушине, ирĕклĕхшĕн кĕрешнине тата ыттине те.

1236 çулта Батый Орди Пăлхар патшалăхне аркатса тăкать. Калас пулать, вырăс княжествисем çине тапăниччěнех тутар-монголсем кун-та пулнă. 10 çул ытла парăнтарасшăн тăрăшнă. Вырăнти халăх питĕ çивĕч хирĕç тăнă, çĕнтернĕ хыççăн та час-часах пăлхавсем çĕкленĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ 1241 çулта тутар-монголсем кунта тепĕр хут килсе пăлхарсемпе сăварсене (пулас чăваш халăхне) татăклăн пăчлантарнă. Тепĕр икĕ çултан Ылтăн Орда йышне кĕнĕ.

1437 (38) çулта Орда саланнă хыççăн пăлхарсем вырăс халăхĕпе пĕрлешиччěнех (16-мĕш ĕмĕр çурринчен) Хусан ханстви пусмăрĕнче пурăннă.

Çак вăхăталла вĕсем Сĕвен çÿлти тата вăтам тăрăхĕнчен «Тискер хире» пурăнма вырăн шырама килеççĕ.

1648 çулта пирĕн тăрăхра Чĕмпĕр хулин çар укреплениййĕсем вырнаçнă май пĕчĕк ялсем йĕркеленме пуçлаççĕ. Çеçен хирти пушă вырăнсене халăх килсе тĕпленме тытăннă тапхăр çакă. Пирĕн района чăвашсем малтан 1670-1700 çулсенче килсе вырнаçма пултарнă. Пурнăç урапи малалла шунă май ялти халăх йышĕ те ÿснĕ. Çĕнĕ Йĕлмелĕнче

çуртсен шучĕ 1859 çулта - 184, 1889 çулта - 227, 1913 çулта - 259 пулнă. 1861 çулта ялта чиркӳ уçнă. 1895 çулта чиркĕве çĕнĕрен хушса пӳлĕм тунă. Пуп, дьякон, псаломщик ĕçленĕ унта. Чиркӳ 33 теçеттин çĕр йышăннă. Çак чиркĕве Çĕнĕ Йĕлмел, Кивĕ Йĕлмел, Чăваш Çĕпрел, Хăймалу ялĕсенчен çынсем кĕлĕ тума çӳренĕ. Çав çулсенче ку тăрăхра çĕр улми лартма пуçланă, ун чухне ăна «шуйттан улми» тесе каланă халăхра. Пирĕн ял пуçланса кайнă вăхăтра - XVII ĕмĕр пирки истори кĕнекисенче çапла çырни пур: «Территория нынешней Чувашии входила в Чебоксарский, Свияжский, Цивильский, Ядринский, Козьмодемьянский и Алатырский уезды». Çакăнтанах паллă, вăл вăхăтра Пăва уесĕ пулман. Çак сакăр уесран пирĕн яла пурăнма хăшĕнчен çынсем куçнă-ха? Паллах, пĕлме йывăр. Чăвашсен вăл вăхăтра хушамачĕсем те пулман. Пĕр çемьери çынсемех тĕрлĕ хушаматсемпе çӳренĕ. Сăмахран, манăн тете Павел Тихонович Гавриловччĕ. Мана çуралсан чиркӳ кĕнекине Петр Сергеевич Тихонов хушамат çырса хунă. Аттен хут çинче - Сергей Тихонович Гаврилов, ялта вăл Быков хушаматпа çӳретчĕ. Çӳлерех асăннă уессем Хусан керменĕн приказне (Приказ Казанского дворца) кĕнĕ. Вырăнсенчи влаç вăйпутсен (воеводăсен) аллинче пулнă. Пирĕн вырăна пурăнма хăш вăйпут патĕнчен çынсем куçса килнĕ-ши? Чи малтан пирĕн тăрăха тĕпленсе ларакансем Сĕве (Свияжск) вăйпутлăхĕнчен (воеводствинчен) куçса килме пултарнă».

Тепĕр çырăвĕнче П. Быков Сĕве енчен килсе тĕпленсе ларнă чăваш ялĕсем Тимĕрçен, Пухтел, Улхаш, Хулаçырми, Йĕлмел, Çĕпрел, Аксу ятлисем пулни çинчен çырать. Тĕп чăвашсенчен куçса килнисем Паснапуç, Пашьел, Асанкасси, Саплăк, Хурăнвар, Упи ялĕсене никĕслени пирки те асăнать вăл. «Çак ялсенче пурăнакансем пĕрпĕринчен юррисемпе, ташшисемпе, чĕлхи-тумĕпе те кăштах уйрăлса тăнă. Çĕнĕ çĕре куçнă çынсем учетра тăман, налук тӳлемен. Мĕнле те пулин хут кирлĕ пулсан çуралнă тăрăхне кайса илнĕ, унтах налукне те тӳлесе хăварнă.

1650 çулта Чĕмпĕр уесĕ йĕркеленнĕ. 1708 çулта Пĕрремĕш Петр патша реформи хыççăн Чĕмпĕр кĕпĕрни пулса тăнă. Каярахпа Çĕнĕ Йĕлмел ялне Пăва уесĕнчи Упи вулăсне çирĕплетнĕ».

Тата тепĕр çырăвĕнче П. Быков И. Я. Яковлев Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкулта пулса курни пирки çырса кăтартать. "...Вăл вăхăтра ялта земски управлени шкулĕ (унта арçын ачасем вĕреннĕ) тата чиркӳ хурал пӳртĕнче хĕрачасен шкулĕ пулнă. Шкул 1890 çулта уçăлнă, унта Кивĕ Йĕлмелĕнчен, Чăваш Çĕпрелĕнчен, Хăймалуран ачасем çӳренĕ. Шкулта икĕ пӳлĕм пулнă. Эпĕ вĕреннĕ вăхăтра (çирĕммĕш çулсенче) икĕ класа хăмапа çеç уйăрнăччĕ. Çакăнтах ял пухăвĕсем иртетчĕç, кинофильмсемпе спектакльсем те çакăнтах кăтартнă. Кунсăр пуçне ялта тепĕр шкул çурчĕ пурччĕ. Вăл Шуркинсемпе Евграфовсен çурчĕсем хушшинче вырнаçнăччĕ, 1921 çулта çунса кайрĕ. Пĕрремĕш класра Мария Васильевна Егорова вĕрентрĕ. Анат Тимĕрçен çынни, Иван Семенович Кирпичников арăмĕпе пĕрле вĕрентнине астăватăп. Шкулăн пĕр пӳлĕмĕнче çемйипе пурăнатчĕ вăл. 1924 çулта вĕсем хăйсен ялне ĕçлеме куçса кайрĕç.

Каярахпа, 1925-27 çулсенче шкулта Александр Никифорович

Никифоров учительте ĕçлерĕ. Вăл манăн асаттене лайăх пĕлнĕ, çавна май эпĕ темиçе хутчен те пулнă ун патĕнче. Унăн кĕнекесем нумайччĕ. Вулама паратчĕ. Çав вăхăтра ĕнтĕ эпир, шкул ачисем, спектакльсем лартма пуçларăмăр. А. Никифоровах ялкорсен кружокне йĕркелерĕ. Хусанта, Шупашкарта тухакан хаçат-журналсенче те пичетленетчĕç пирĕн заметкăсем. Ялти активистсене пухса лекцисем вуласа паратчĕ Александр Никифорович. Ялтан сасартăк, никама систермесĕр тухса кайрĕ вăл. Каярах ăна «чăваш националисчĕ» тесе айăпланă текен хыпар тухрĕ. Тĕрмере те ларнă, терĕç. Унтан айăплă мар тесе кăларнă, тет.

Çичĕ класлă шкул пирĕн ялта колхоз йĕркеленсен çеç, вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче уçăлчĕ. Çав çулсенче çĕнйĕлмелсем Пухтел районне (Ульяновск облаçĕ) куçас тесе пуçару тунăччĕ. Ял çыннисем çакăн пирки çырнă хутсене Мускава, Хусана, Ульяновска ярса пачĕç. Ятарласа йĕркелӳ комиссине тунăччĕ. «Пухтел районĕпе пĕрлешессишĕн» ятлăччĕ вăл. Националистсем тесе айăплама пуçласан пĕрлешӳ саланса кайрĕ, чылайăшне Çĕпĕре ячĕç".

Тепĕр çырура çак йĕркесене вулатпăр:

«... Ялти чи пирвай вĕреннĕ çынсенчен пĕри - Константин Прокопьевич Прокопьев И. Я. Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Ĕпхӳ кĕпĕрнинче священникре ĕçленĕ. Захар Пастухов питĕ илемлĕ почерклă, вĕтĕ саспаллисемпе çырма пĕлекен ăстаçăччĕ. Революциччен ун патне таврари ялсенче пурăнакансем пырса тĕрлĕрен документсем, ытти кирлĕ хутсем çырма ыйтнă. Хут ĕçĕнче вăл ялти маçтăрсенчен пĕри пулнă, çирĕммĕш çулсенче çĕре кĕнĕ.

Тĕп Тукас кассинче вăтăрмĕш çулсенче Семен Казаков, хăй вăхăтĕнче Хулаçырми вулăс пуçлăхĕнче ĕçленĕскер, пурăнатчĕ. Ял çынни Улькин Мускавра метро тунă çĕрте инженерта ĕçлени çинчен илтнĕ эпĕ.

Малти кĕпертен каçсан, Выçилкка урамĕнче, ватă фельдшер пурăнатчĕ. Вăл 1904 çулта Яппун вăрçинче те фельдшер пулнă. Инçетри ялсенчен те чирлисем йышлăн килетчĕç ун патне, пурне те пулăшма хатĕрччĕ. Культура шайне илсен те, пĕлĕвĕпе те вăл ял çыннисемшĕн тĕслĕх пулнă. Авалхи сĕтел-пуканччĕ унăн пӳртĕнче. Вăл та çирĕммĕш çулсенче пурнăçран уйрăлнă ахăр.

Архипов ывăлĕ Николай халĕ те ырă-сывă пурăнать пулмалла. Шăллĕ пултаруллă художникчĕ, вăл ялти пуян çынсен сăнĕсене ӳкернĕ. Вăтăрмĕш çулсенче, коллективизаци тапхăрĕнче çав картинăсем çухалчĕç. Ялтан тухса кайнă хăй. Мускавра курнă тенине илтнĕччĕ. Вăл ӳкернĕ чăваш хĕрарăмĕн сăнне вăтăрмĕш çулсенче тухса тăнă «Сунтал» журналта курнăччĕ эпĕ.

Федор Утеев аслашшĕ çыру ĕçне пĕлмесен те ялта налук пуçтарнă, тетчĕç. Кам мĕн чухлĕ тӳлемеллине вăл патаксем çине картса пынă имĕш. Ваттисем каласа панă тăрăх, нихăçан та йăнăшман.

Кирилл Изендеев - чаплă сĕрме купăсçă. Васияровсен пĕр ывăлĕ патша вăхăтĕнче старшина пулнă. Федор Бахтин ашшĕ ялти чи пирвайхи тимĕрçĕччĕ, вăл тимĕрçĕ лаççине уçнă».

Тепĕр çырура П. С. Быков ял çыннисене тĕне кĕртес ĕç мĕнле

пулса иртни пирки асăнать:

«... 1750 çулта Çĕнĕ Йĕлмелĕнче пурăнакансене тĕне кĕртме икĕ пуп, писарь, 5-6 чиновник, 30 яхăн салтак килнĕ.

Учук лапĕ ял çыннисемшĕн сăваплă вырăн пулнă. Кунта авалхи çынсем уй чўкĕ тунă, православи тĕнне йышăнсан та ĕлĕкхи йăласене манман вĕсем. Эпĕ астăвасса çирĕммĕш çулсенче те Учук лапĕнче пуçтарăнса кĕлĕ ирттеретчĕç».

Революциччен пирĕн ялта народоволецсем* пулни паллă. В. В. Вассияровпа К. В. Вассияров пĕр тăвансем пуян йăхĕнчен пулсан та, революци юхăмне активлă хутшăннă. П. С. Быков асаилĕвĕнче вĕсен пирки çапла калани пур: "В. В. Вассияровăн рысак лаши пурччĕ, вăл таврара хăвăрт чупнипе палăрнăччĕ. «Искра» ятлăскер. Корнил Вассияров 1917 çулта, Октябрьти революци хыççăн, Ленин правительствине ырласа шкул умĕнче Хĕрлĕ ялавлă демонстраци йĕркелерĕ. Ана эпĕ хам та лайăх астăватăп. Асатте патĕнче хăнараччĕ. Йĕлмелсем Совет влаçне уçă чунпа кĕтсе илнĕ".

"...Пирĕн ялта колхоз йĕркелекенсенчен пĕри Ф. А. Амосов пулни çинчен калаçатчĕç ватăсем. Ана çак ĕçе пуçарса яма чи малтанхи активистсем - П. Герасимов, И. Герасимов, Е. Ахмуков, Т. Айметов, Е. Айметов, Н. Наумов, А. Казаков, Селендюковсем, Çарран Ваççи, К. Пришельцев, Палля Петĕрĕ - пулăшнă.

Ялти хăш-пĕр вырăнсем аваллăха аса илтереççĕ. Кивĕ Йĕлмелпе Çĕнĕ Йĕлмел хушшинче «пуп хирĕ» текен вырăн пур. Унта Василий Иванов священник тырă акса тăнă тет. «Хăла тўпе» ятлă хир 1859 çулта Япалак ялне куçнă. Çĕрвиçевçĕ тĕрĕс мар виçнипе (хăш-пĕрисем Япалак çыннисем укçа чышнипе те тесе калаççĕ) Çĕнĕ Йĕлмелсем паянхи кунччен асап кураççĕ, мăн асаттесен çĕрĕ çапла майпа тутарсен аллине лекнĕ».

П. С. Быков çырăвĕсенче ялти тĕн тата халăхăн авалхи йăли-йĕркисене чылай уçса панă, авалхи пурнăçа аван сăнарланă. Петр Сергеевичăн пурнăçĕ ял историне тĕпчес ĕçре паллă вырăн йышăнать. Вăл çырса хăварни - хамăр ял историне пĕлме пулăшакан çăлкуç.

# 1. Вăкăр Петĕрĕ: "Пурнăç вăл - пурнăç".

## (ТАВРАПĔЛЎÇĔ АСАИЛĔВĔСЕНЧЕН)

Çапла ят панă вăл хăйĕн алçырăвне.

... Акă эпĕ те ватăлтăм. Пенсие тухнăранпа та темиçе çул иртрĕ. Пурăннă пурнăçа каялла çаврăнса пăхрăм та хамран хам тĕлĕнсе кайрăм. Шухăша путрăм. Чăнах та, пурнăçра эпĕ сахал мар нуша курнă иккен. Кĕске пурнăç пурăнса ирттернĕ тесе те калаймăн, хамăн ĕмĕрте эпĕ çĕршывăн тĕрлĕ кĕтессине çитсе куртăм, пысăк вырăнти çынсемпе курса калаçрăм, тĕрлĕ вĕренў заведенийĕсенче вĕрентĕм, чиперех вăрçăран таврăнтăм.

Эпĕ Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 1913 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче çуралнă. Ача чухне трахома чирĕпе йывăр чирлерĕм, аран вилĕмрен çăлăнса юлтăм. Пăртак ўссен, кашни кунах хурсемпе вылььăхсене пăхма кĕтĕве çўренĕ.

---

*Народоволец - "Народная воля" партин членĕ.

1920 çулта ялти шкула вĕренме кайрăм, 1927 çулта Кивĕ Улхашри шкултан вĕренсе тухсан Амус Хĕветĕрĕ мана ял Советне ĕçлеме илчĕ. Хăй уйăхне 14 тенкĕ шалу укçи илетчĕ, мана 5 тенкĕ тӳлемелле турĕç (пĕр пăт тырă 20 пус пулнă). Пурнăç çулĕ çине тухма Амус Хĕветĕрĕ пулăшрĕ, вăлах мана ĕçлеме, çынсене хисеплеме вĕрентрĕ. Пуянсене çурчĕсенчен ирĕксĕрлесе хăваласа кăларма тытăнсан мана анне ял Советне ĕçлеме ямарĕ. «Сансăр пуçне те ĕçлĕç унта, килĕрен - киле çӳресе пуянсен пурлăхĕсене çаратма ирĕк памастăп», - терĕ.

Пухтелĕнче, Нагаткинăра пĕр вăхăт хушши ĕçлерĕм. Япалакри "Горняк" колхозра счетовод ĕçне вырнаçрăм (1935 çул).

Счетовод пулса ĕçленĕ вăхăтра ял пичетне ăсталарăм, ăна чăн пичетрен пĕртте уйăрса илме çукчĕ. Ял çыннисене справка хучĕсене çырса парса пичетне хамах лартса параттăм. Пĕррехинче мана Козлов Ваççи пичетлĕ хут кирлĕ тесе ыйтрĕ. Вăл пирĕн çывăх тăванччĕ те. Эпĕ ăна шантăм. Вăл манăн пичете милици уйăмне леçсе панă. Тепĕр куннех мана тытса кайрĕç...

Вăрçăччен эпĕ Аслă Аксури колхозра бухгалтер пулса ĕçлерĕм. Авлантăм. Вăрçă пуçлансанах мана фронта илсе кайрĕç. Чи малтан Владимир хулине лекрĕм. Çар ĕçне вĕренсе тухсан Сталинград хулине фашистсенчен хӳтĕлеме ячĕç. Йывăр амантăм, Сызрань хулинчи госпитальте сиплентĕм, унтан каллех фронта ячĕç. Орел хулине фашистсенчен хăтарнă чухне икĕ урана та амантрĕç. Тĕрлĕ хуласенчи госпитальсенчен выртса тухсан тăван яла таврăнма ĕмĕтлентĕм. Урасăр тăрса юлнине илтсен арăм мана йышăнмарĕ. Ялта атте çурчĕ çук, йămăк сутнă. Ăçта каймалла?

Урасăр тăрса юлсан та пурăнмалăх укçи-тенкине ĕçлесе илĕп-ха, выçă лармăп тесе хама-хам лăплантартăм.

Яла таврăнмарăм. Госпитальтен сиплесе тухсан тӳрех Свердловск хулинче вырнаçнă çар медицини училищине вĕренме кĕтĕм. Малтанласа патак çине таянса утаттăмччĕ, кайран патаксăрах утма вĕренсе çитрĕм. Вĕренсе тухсан мана Киев хулине ĕçлеме ячĕç. Вăрçă хыççăнхи хулара пурăнма йывăртарах пулнипе çывăхри яла кайрăм. Çавăнта тĕплентĕм. Тепĕр хут авлантăм. Ялта фельдшер пулса ĕçлеме тытăнтăм. Ваттисем каларăшле, ура çине çирĕп тăрсан хулана пурăнма куçрăм. Çӳрт туянтăм. Больницăна ĕçлеме ĕçе кĕтĕм. Çав вăхăтрах заочно медицина институтĕнчен вĕренсе тухрăм. Врач-инфекционист ĕçĕнче ĕçлесе пенсие тухрăм.

... Çĕнĕ Йĕлмелре хăнара пулнă чухне пĕр ватă хĕрарăм çапла каларĕ: «Эсĕ ялăн аваллăхне пĕртте манман иккен». Пирĕн калаçăва итлесе ларсан вăлах çапла ыйтрĕ: "Эсир мана пĕлместĕр пулĕ, эпĕ çавăн (хушамачĕпе ятне каларĕ) арăмĕ, эсир ăна пĕлме тивĕçлĕ мар".

- Эпĕ вĕсен çемйине питĕ лайăх астăватăп, - терĕм эпĕ, - вĕсем виçĕ пĕр тăванччĕ, иккĕшĕ колхоз йĕркеличчен ялта кооперативлă лавккасенче сутуçă пулса ĕçлерĕç. Тата çакна та астăватăп, вĕсем пӳрт ăшчиккине шпалер вырăнне клеенкăпа çыпăçтарнине те.

- Ай, эсĕ нумай пĕлетĕн иккен, - терĕ çак хĕрарăм мана пӳлсе.

Пăртак калаçса ларса вăхăт иртсен вăлах виçĕ пĕртăван вăрçăран

тавранайманнине пĕлтерчĕ.

... Чим-ха. Нумай пĕлетĕн тетĕр-и? Тĕрĕс-и-ха вăл? Нумай пĕлетĕп тени мухтаннă пек пулать. Çук. Мухтанмастăп. Çак калаçу вара мана Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ çинчен асаилўсен тетрадьне çырма хистерĕ. **Алçырăва эпĕ Çĕнĕ Йĕлмел çыннисене асăнмалăх парнелетĕп.**

Юлашки вăхăтра урасем хама итлеми пулчĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи сурансем ыратма пуçларĕç. Çĕнĕ Йĕлмел ялне виличчен тепре курма килесчĕ-ха. Сывлăх аптратмасан тепĕр çул çула тухма ĕмĕтленетĕп.

Çакăнпа çырăва вĕçлетĕп. Сывă пулăр. Çырура йăнăшсем пур пулсан, тархасшăн каçарăр!

Эпĕ аллă çула яхăн чăваш чĕлхипе çыру çырман, вулама та сахал вуланă. Кунта пурăнакан чăвашсем хайсен чĕлхине питĕ хăвăрт манса каяççĕ.

Ют çĕрте пурăнсан та эпĕ тăван чĕлхене ниепле те манма пултараймастăп.

(Киев, 1985 çул.)

# 2. Утьти паллисем

Шкула уçиччен ялта çыру пĕлекен çын пулман. Патшалăх валли налук пуçтарма, выльăх-чĕрлĕх шутне пĕлекен çын кирек хăш ялта та кирлĕ пулнă. Анчах хут пĕлекен çынна ăçтан тупмалла пулнă-ха? Вăл вăхăтра Чĕмпĕрте чăваш шкулĕ пулман-çке?

Çавăн пек çынсенчен пĕри авалхи Çĕнĕ Йĕлмелĕнче Утьти пулнă, тет. П. С. Быков, тĕслĕхрен, хайĕн алçырăвĕсенче ун пирки çапла çырать: «Утьти вулама-çырма пĕлмен пулсан та, нихăçан та, никамран та пĕр пус укçа ытлашши илмен, яланах тĕрĕс шутланă. Мĕнле майпа укçа шутне пĕлме пултарнă-ха çак çын? Унăн вăрттăнлăхне çапла ăнлантарса пама пулать: камăн мĕн чухлĕ патшалăха налук тўлемеллине тата мĕн чухлĕ тўленине патак çине çĕçĕ вĕçĕпе касса паллă тунă вăл. Акă унăн хăш-пĕр паллисем:

- ▮ - пĕр тенкĕ;
- ▪ - вунă пус;
- ● - пĕр пус.

Вăл вăхăтра хĕрарăмсене çĕр паман. Арçынсем кăна çĕр илме пултарнă. Саккун тăрăх, пĕр çынна пĕр теçетке (1,09 гектар) çĕр уйăрса панă. Ял-йыш виçĕ пусăллă хирпе усă курнă (ыраш пусси, тырă пусси, хура пусă).

Кашни хуçа хайне уйăрса панă çĕрне шыраса тупма çăмăл пултăр тесе тĕрлĕрен паллăсемпе усă курнă. «Ана палли» тенĕ вĕсене ял-йыш. Асăннă паллăсене патак çине çĕçĕпе картса лаптăкăн тăватă енчен вырнаçтарса картнă. Ана паллипе çыннăн хушаматне те пĕлме пулнă, кирлĕ хутсем çине паллăпах алă пусса çирĕплетнĕ, акă хăш-пĕр ана паллисем (249-мĕш стр. пăхăр):

Утьти «патакĕ» хальхи линейка евĕрлех. Вăл икĕ енлĕ. Пĕр енне сылтăмра, тепĕр енне сулахайра пурăнакан хуҫалăхсен анисене паллă тунă.



Палласем ҫакна пĕлтереҫҫĕ:



- хуҫалăхăн 3 тенкĕ те 23 пус,
- хуҫалăхăн 2 тенкĕ те 44 пус,
- хуҫалăхăн 4 тенкĕ те 26 пус укҫа-тенкĕ тӳлемелле пулнă тата ытти те.

Хăш-пĕр хуҫалăх налукне вăхăтра тӳлеймесен тепĕр ҫул валли парăмĕ юлнă. Ун чухне Утьти уйрăм ҫынсен парăмне ҫĕнĕ патак ҫине ҫырса хунă.





- ку хуҫалăхăн 1 тенкĕ те 23 пус укҫа тӳлемелле.
- хуҫасен парăмĕсем ҫук.

Налуксене тӳлесе пĕтерсен Утьти ҫапла паллă туса хунă.



 - хуҫан парăмĕ 1 тенкĕ те 23 пус пулнă пулсан, налук 3 тенкĕ те 23 пус тӳлемелле. Ку хуҫа парăмне 1 тенкĕ те 23 пус тӳлет, каярахпа налукне 2 тенкĕ те 11 пус укҫи тупăнсанах юлнă парăмне тӳлесе татать. Пурĕ 4 тенкĕ те 46 пус укҫа тӳлемелле пулать.

 - хуҫа пирвайхи хут 1 тенкĕ те 21 пус, каярахпа - 2 тенкĕ те 24 пус тӳлет.

 - хуҫа налукне вăхăтра тӳлесе татнă.

Паллăсенчен хăш-пĕрисем паянхи кунччен те сыхланса юлнă. Пирĕн ҫемьен ана паллийĕ хĕрес евĕрлĕ пулнă (+).

Шăтăкран е тĕпсакайĕнчен миҫе витре ҫĕр улми кăларнине пĕлес тесен патак е хăма ҫине пăнчă лартса шутласа пынă. Вунă витре кăларсан  ҫакăн пек паллă тунă. Ялта халĕ те ҫак авалхи паллăпа усă кураҫҫĕ-ха.

Утьтин паллисем авалхи Ҫĕнĕ Йĕлмел ялĕнче хисепре пулнă. Ахальтен мар ăна ял-йыш хисеплесе «Ҫĕнĕ Йĕлмел Архимечĕ»,- тенĕ. Ҫак хисепе вăл чăннипех тивĕҫлĕ ĕнтĕ. Вĕреннĕ пулсан, тен, паллă математик та пулма пултарнă. Анчах...

# 3. Ҫĕнĕ тĕне йышăнни

1750 ҫулта православи тĕнне ирĕксĕрлесе йышăнтарма Ҫĕнĕ

Йĕлмел ялне икĕ священник, писарьсем тата 30 яхăн салтак пырса çитнĕ. Патша правительстви вырăнти халăхсене çирĕп тытас тĕллĕпе Çĕнĕ тĕне хăвăртрах сарма тăрăшнă. Чиркӳ çыннисене тата тĕне йышăнакансене патшалăх тĕрлĕ енĕпе хавхалантарнă: çĕр уйăрса панă, налуксенчен хăтарнă.

Инçетрен килнĕ хăнасене ял куштанĕсем хапăлласа кĕтсе илнĕ. Вĕсем ял-йыш куçĕ умĕнче чӊ малтан хăйсен ирĕкĕпе тĕне кĕнĕ. Ял варринче лартнă пичĕкери шыва пуçĕсене чиксе кăларнă, священник вĕсене çийĕнчех хĕрес çакса янă. Çак çынсем тĕне кĕртекен комиссие пысăк пулăшу панă. Хĕрессене мăй урлă çакса янă та лашасем çине утланса ларса ял тăрăх чуптарса çӳренĕ, çынсене вăйпа хăваласа килнĕ. Малтанах хатĕрлесе хунă пысăк пичкере çамрăкне те, ваттине те шыва кĕртнĕ.

Пĕр ватă çын священник патне çаппа-çарамас пырса тăрать. Лешĕ ку çынран ятне ыйтать. Хăранипе вăл хăйĕн ятне манса кайнă, чĕтресе тăрать, пичкене кĕме килĕшмест.

- Что ты представляешь себя Афинским богом! - тесе кăшкăрса каланă пулать священникĕ.

- Ну и запишем Афиногентом,- тенĕ писарĕ.

Çапла вара тĕне кĕнĕ çын Афиногентов хушаматлă пулса тăрать.

Çавăнтанпа ял-йыш христиан тĕнĕпе пурăнма пуçлать.. Священниксем ялтан кайсанах тĕн йăли-йĕркисене тытса пыма ял куштанĕсене уйăрса хăварнă. Вĕсен кашни уйăхрах вулăса кайса ялти ĕç-пуçсем çинчен каласа памалла пулнă, çакăншăн вĕсене шалу укçи тӳленĕ, налукран хăтарнă, тӳлевсĕр çĕр уйăрса панă, ял çыннисем вĕсенчен хăранă, хĕрес çакса çӳремесен кӳрши е урăх çын кайса элеклеме пултарнă. Ял куштанĕ вара айăплисене килĕнчен урама çарамаслантарса илсе тухса пушăпа хĕненĕ. Хĕреспе çӳремесен штраф тӳлеттернĕ.

Авалхи чăвашсене ирĕксĕр тĕне кĕртнĕ пулсан та, ял-йыш хăйсен авалхи, мăн асаттесен туррисене манма пултарайман. Пĕр-пĕр пӳрте вăрттăн пуçтарăнса чӳк ирттернĕ. Тĕне кĕнĕренпе 170 çул ытла иртнĕ пулсан та Çĕнĕ Йĕлмелĕнче пурăнакансенчен хăшĕ-пĕрисем авалхи йăлана 1921 çулччченех тытса пыма пултарнă.

«...хĕнесе, пăшалпа хăратса ирĕксĕр Çĕнĕ Йĕлмелсене тĕне кĕртнине хальхи вăхăтра çынсем маннă курăнать. Çĕнĕ Йĕлмелĕнче чĕркуçленсе ларса турăш умĕнче сăхсăхса пуç çапаççĕ, - тесе çырать. П. С. Быков хăйĕн асаилĕвĕнче.- Паянхи кунччченех ялта турра ĕненекенсем çаплах нумай. Кӳршĕ ял çыннисем хушшинче те пайтах вĕсем, çав шутра ман тăвансем те пур. Анчах эпĕ турра ĕненмен пирки мана вĕсем юратмаççĕ... Çапла, турă ячĕпе священниксем халăха улталаса, пуйса пурăннă...».

(1985 ç. Киев хули.)

# 4. Юлашки учӳк

1921 çул. Ун чухне çĕр çине çу каçиччен çумăр тумламĕ ӳкмен.

Тырă кăна мар, курăк та ӳсмен. Ял халăхĕшĕн çав çул трагеди пулса тăнă. Выçăпа аптăраса ӳкнĕ халăх авалхи чăваш йăлисене астуса учӳк ирттерме шухăш тытнă. Турă халăх нушине ăнланĕ тесе шутланă пулмалла. Анчах... Икĕ тĕне ĕненекенсен те ĕмĕчĕсем пурнăçланайман.

Учӳк ирттерес умĕн ял пухăвĕ пуçтараннă. Çав пухура учӳк ирттерме Хохлов Микиттине (вăл ялти мăчавăр пулнă - **Н. К.**), Патрин Петрушкине (ăна пулăшаканĕ - ĕмпӳ - **Н. К.**) суйланă. Вĕсем килĕрен килле çӳресе тырă пуçтарнă. Çав тырăпа пĕр Япалак мишерĕнчен вăкăр туяннă. Ялти ватăсем Хурăнвар çырминче учӳк ирттермелли Киремет вырăнне тирпейлесе тăнă. Паянхи кунччен те çав çырмара учӳк лапĕ, унта Кирук çăлĕ пур. Ку лапра Йĕлмел халăхĕ авалтанпах учӳк ирттернĕ. Юлашки хут вăл шăпах 1921 çулта пулса иртет. Мĕнле пулса иртнĕ-ха вăл? Çакăн çинчен П. С. Быков алçырăвĕсем каласа параççĕ.

Каларăмăр ĕнтĕ, вăл вăхăтра ялта виçĕ пусăллă хир пулнă. Япалакпа пирĕн ял хушшинче - хура пусă. Кивĕ Йĕлмел ялĕ çывăхĕнче вырнаçнă хир çурхи пусă шутланнă. "Учӳке каякансем тырра ан таптаччĕр тесе ял пухăвĕнче унта Кивĕ Чукал çулĕпе кайма йышăннă, Аслă çерем çулĕпе çӳреме чарнă. Тимĕркка Ваççине хурала лартнă. Эпир аттепе пĕрле учӳк тума Киремет вырăнне кайма çула тухрăмăр. Хальхи колхоз правленийĕн çурчĕ умне çывхарса пынă чухне (вăл вăхăтра кунта çил арманĕ пурччĕ) пĕр çын çапларах каларĕ:

- Унта Тимĕркка Ваççи юланутпа хуралта тăрать, аслă çерем çулĕпе никама та ямасть.

Атте аллипе сулчĕ те, иксĕмĕр аслă çерем çулĕпе малалла утрăмăр. Масар патĕнчи çырма вĕçĕнчи çул çинче Тимĕркка Ваççине асăрхарăмăр. Аллинче пушă. Вăл пире нимех те каламарĕ, ирттерсе ячĕ. Манăн аттерен хăрана пулмалла, пирĕн хыççăн пыракан хĕрарăмсене урăх çулпа кайма сĕннĕ.

Каярахпа çакăн çинчен ялти пĕр ватă çынна каласа кăтартрăм. Вăл çапла каларĕ:

- Çук, Тимĕркка Ваççи сан аçуна тивме пултарайман. Тивсен аçу Ваççана юланут çинчен сĕтĕрсе антарма та пултарнă.

Учӳк тăвакан вырăна çитрĕмĕр. Вырăнне халăх йышлă пуханнă. Вăкăра çăл патне илсе пычĕç. Çăлран витрепе шыв ăсса илсе вырьăх çине сапма тытăнчĕç. Вăкăр ик-виç витре шыв сапсан чĕтресе илчĕ. Халăх хĕпĕртерĕ.

- Вăкăр чĕтрерĕ, çумăр пулĕ тинех! - терĕç халăх хушшинче.

Çакăн хыççăн вырьăха пусрĕç, ашне пысăк хурансенче пĕçерчĕç. Мăчавăрĕ çав вăхăтра кĕлĕ ирттерчĕ (Киремет умĕнче каланă кĕлĕсемпе кĕнекен юлашки страницисенчен пĕринче паллашма пулать - **Н. К.**). Апат пиçсе çитсен ашĕпе шӳрпине хурантан çăпалапа ăсса илсе халăха валеçсе пама пуçларĕç. Кунта килекенсем хăйсемпе пĕрле чашăкпа кашăкне те илс• килнĕччĕ. Ваттисем кĕлĕ вуларĕç. Киремете парнесем пачĕç. Çăлкуç умне çăмарта, чăкăт, çăкăр таткине Аслă Турра кĕл туса хурса хăварчĕç. Халăх яла таврăнчĕ.



# 5. Çĕнĕ масар пуçланса кайни

Чи малтан ку вырăна Карсак Петин (Карсаков Кузьма ывăлĕн) хĕрне пытарнă.

Кĕтӳ аннă вăхăтра кил хуçи арăмĕ килĕнчен васкаса чупса тухнă, выльăха картишне кĕртес тесе хапха алăкне уçса хăварнă. Çав вăхăтра вĕсен пĕчĕкçĕ хĕрĕ Наçтук амăшĕ хыççăн упаленсе тухнă та алăк патĕнче тăнă. Çак самантра ĕне картишне хăвăрт чупса кĕнĕ, хĕре пуçĕнченех таптаса кайнă. Амăшĕ чупса çитнĕ çĕре ача вилсе те кайнă. Кивĕ масарта пытарма вырăн пулман. Çĕнĕ çĕре масар уçас тесен чи малтан чирлесе е ăнсăртран вилнĕ ачасене пытармалла иккен (йĕрки çапла пулнă). Наçтука çĕнĕ вырăна пытараççĕ. Трагеди 1905 çулта пулса иртнĕ. Çакăн çинчен мана Е. Н. Мартынова каласа кăтартрĕ.

Паян кунччченех вилнĕ çынсене çакăнта пытараççĕ. Масар ял хĕрринче, Чăнлă çырми çывăхĕнче вырнаçнă.

Масара тирпейлесе тăрас ĕçе Г. И. Чашкинпа М. П. Мискин пуçарса янă. Вĕсем ял пуçлăхĕнче ĕçленĕ вăхăтра масар йĕри-тавра карта пӳлсе илтернĕ, çынсен вил тăприсене чечексемпе тата йывăçсемпе илемлеттернĕ. Паян çак вырăна Л. В. Вассияров тирпейлесе тăрать. Ял пуçлăхĕсем те çак ĕçрен пăрăнмаççĕ.

Кашни çулах, çимĕкре, ĕмĕрлĕхех кӳçĕсене хупса лăпкăн çывăракан тăван-пĕлĕшĕсене асăнма масар çине çӳреççĕ. Юлашки çулсенче кунта пухăннă халăхпа пĕрле Асăну кунне иртерме тытăнчĕç. Чăвашсен ĕлĕк-авалхи йăли-йĕркисене пăхăнса кĕлĕ вулама пуçларĕç. Асăну мероприятийĕ вăхăтĕнче ял-йышран ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă хисеплĕ çынсен ячĕсене асăнса чыс тăваççĕ. Çакăн хыççăн кашни çын хăйсен тăванĕсен вил тăприйĕсем патне кайса асăнса апат-çимĕçпе сăйланаççĕ, эрех ĕçеççĕ.

1993 çулта çырса илнĕ.

# 6. Тумхахлă* çул

## (Чăн пулни)

Аса илер-ха чуна ыраттаракан çак историе. Сусăр-чăлах çуралнă ачана хулари çӳп-çап купи çине тухса пăрахнă. Ара, вăл часах бульдозер айне лексе çĕрпе хупланасса шаннă ĕнтĕ. Телее, ача çак вилĕмрен çăлăнса юлнă, мĕншĕн тесен вăл упаленме вĕренсе çитнĕ пулнă ĕнтĕ. Çапла вăл çӳп-çаппа пĕрле тухса пăрахнă апат-çимĕç юлашкийĕсемпе тăранса пурăннă, сивĕрен ăна çĕрсе пыракан купа ăшши хăтарнă, çумăрпа юртан вара вăл тимĕр-бетон япаласен пысăк катăкĕсенчен купаласа тунă шăтăк еврĕрлĕ хӳшĕре пытаннă. Тĕлĕнмелле пулин те, ача ӳссе çитĕннĕ. Каçсерен çак çăмламас тĕлĕнтермĕш çӳп-çап вырăнĕнчен тухса ку тĕлтен сайра-хутра иртсе çӳренĕ çынсене хăратнă. Пĕррехинче тасамарлăхпа çӳп-çап пăрахакан вырăна çунтарса яма шутлаççĕ. Шăпах çав вăхăтра пĕр кĕтмен çĕртен темĕнле çăмламас кĕлетке сиксе тухать те хыттăн мĕкĕрсе рабочисем умĕнчен тӳрех çулăм çинелле ыткăнать. Хăй пурăннă «килĕ» патне темиçе метр çеç чупса çитеймест. «Килĕ» вара унăн чăннипех те хăтлă пулнă. Ăна пушă консервă банкисенчен, ванса пĕтнĕ тĕрлĕ тĕслĕ кантăксенчен эрешленĕ япаласемпе илемлетнĕ. Мĕншĕн сикнĕ-ха вăл вут-кăвар ăшне? Ара, çӳп-çап вырăнĕ унăн тăван килĕ пулнă-çке-ха, кунта вăл ӳссе çитĕннĕ. Унран хакли, ăшăраххи ачашăн нимĕн те пулман. Çак вăхăтрах юнашар ларакан çуртăн пиллĕкмĕш хутĕнчи чӳречерен хĕрарăм ӳксе вилет. Вăл çак ачан амăшĕ пулнă.

Çак йĕркесене вуласа тухнă хыççăн тарăн шухăша путатăн. Мĕнле-ха, хальхи вăхăтра çапла пулма пултарнă?

«Çитĕнекен ăру мĕнле пуласси чи малтанах ашшĕ-амăшĕсенчен килет. Çӳп-çап хушшинче ӳссе çитĕннĕ кĕлетке евĕр çын пулĕ-и е анлă тавракурăмлă, пысăк çынсем пулса çитĕнĕç-и - куншăн эпир яваплă. Этем сăн-сăпатне çухатас марччĕ»,- çапла çырать П. С. Быков асаилӳсен тетрадĕнче.

Шăпах çак тĕслĕхе хаçатсенчен илсе кăтартнинчен пуçласа çыратăп «Тумхахлă çул» тĕрленчĕке.

Тимĕртен тунă хĕрес умне сăнĕсемпе ватах мар арçынпа хĕрарăм пырса тăчĕç, васкамасăр тимĕр калинккене уçса кĕрсенех арçынни амăшĕн вил тăпри çине тĕршĕнчĕ. Çĕр тĕмескине ыталаса илчĕ те куççуль кăларса йĕрсе ячĕ.

Кăштах вăхăт иртсен вăл сăмса тутри кăларса, хĕрес çинчи тусана шăлса илчĕ. Унтан каллех амăшĕн вил тăпри умне пырса ларчĕ. Хурлăх куççулĕ каллех тапса тухрĕ. Юнашăр ларакан арăмĕ сăмса тутрипе мăшăрĕн куççульне шăлса илчĕ.

Хĕвел анса ларчĕ. Таврана тĕксĕм сăн çапрĕ. Каç та пулчĕ. Масар алăкĕнчен ерипен тухса вĕсем ял еннелле утрĕç.

Çур ĕмĕр ытларах (1942) пулса иртнĕ трагеди халĕ те пирĕн чĕресене ыраттарать-ха...

Евтук ашшĕ Кĕркури Агапов Сымккапа пĕр тăвансем. Хĕр çитĕнсе

---

*Тумхахлă - чăрмавлă, йывăр...

çитсен Хулаçырми каччине Артамонов Ивана качча тухать. 1937 çулта вĕсем Саратов хулине пурăнма куçаççĕ. Çавăнта çамрăксен икĕ ача çуралать: Валентин тата Анна. Упăшкине Совет Çарне илсе кайсанах Аслă вăрçă тытăнать. Çемье йывăр пурнăçа кĕрсе ӳкет. 1941 çулта Евтук икĕ ачипе хăйĕн килти япалисене илсе тăван ялне Елинкка ятлă аппăшĕ патне таврăнать. Ял-йыш çамрăк хĕрарăма шеллесе пурăнма тăм пӳрт тупса парать. Выçлăх çулĕсем пуçлансан амăшĕ ачисене хăтарас тĕлĕшпе пур пек япалисене апат-çимĕçпе улăштарать, сутса ярать. Ялта выçлăх çулĕ пуçланать.

Пĕррехинче вăл юлашки япалисене сутма каять. Хĕвел хĕртсе пăхать. Ăшă та лăпкă çил вĕрет. Тӳпе янкăр уçă. Инçетре тăри юрлани илтĕнсе тăрать. Çанталăк та хĕрарăмпа пĕрле савăнать, тейĕн. Килĕнче выçăпа аптăраса шыçса пĕтнĕ икĕ ачи ура çине тăраймасăрах выртаççĕ. Вĕсене вилме парас марччĕ. Анчах, мĕн тăвăн-ха, çимеллине ăçтан тупăн? Ялĕпех выçă. Унталла-кунталла пăхатăн та пурте выçăпа аптăраса вăйсăрланнă. Çул çинче, пӳртсен умĕнче ларнă çĕртех вилсе каякансем те пулнă-çке.

Ырă шухăшпа килекен хĕрарăма анкарти хуçисем - вахтă хĕрарăм тата Аниçça ятлă хĕрĕ - ăна çĕр улми вăрлама килнĕ тесе кĕтмен çĕртен хĕнеме тытăнаççĕ. Кӳршĕ çыннисем çак тискер ĕçе курсах тăнă, анчах чарман! Евтук: «Эпĕ нимĕн те илмен!» - теме пăхать. Ăна çав вăхăтра аллинчен кĕвентепе çапаççĕ. Вăл тепĕр аллипе хăй айăплă маррине ĕнентерсе Тură умĕнче сăхсăхса кăтартма тытăнсан тепĕр аллине те çапса хуçаççĕ. «Ан хĕнĕр-ха, эпĕ вăрă мар»,- тесе йăлăнать хĕрарăм. Урса кайнă хĕрарăмпа хĕрĕ унăн çурăмĕпе хырăмне амантаççĕ, пилĕкне çапса хуçаççĕ. Вăл ăнсăр пулса выртать. Кайран ăна килне хĕнекенсемех кайса пăрахаççĕ. Хĕрарăм сумкинче пĕр çĕр улми те пулман.

Çан-çурăмĕ хытă ыратнипе хĕрарăм çĕрĕпе нăйкăшса выртнă. Ачисене хăй çумне ыталама та вăй-хал çитереймен. Юлашки сăмахĕсене каласа ĕлкĕрейместерех вăл ирхипе, çынсем тăнă çĕре вилсе кайнă. Ывăлĕ вилнĕ амăшне аркинчен сĕтĕрсе те пăхнă, анчах та амăшĕ чĕнмен. Выçăпа аптăранă ывăлĕ хытнă çăкăрпа курăк çулçисене çикеленĕ. Йăмăкĕ çиме пултарайман. Валентин мĕн пулса иртнине ăнланмасăрах урама выляма тухса чупнă. Кӳршисем килсе пăхнă çĕре Анна урайĕнче выртакан вилнĕ амăшĕн кăкăрне çăварĕнче хыпса выртнă. Ăна вырăн çине илсе вырттарасшăн пулаççĕ, анчах ача вилнĕ иккен. Вĕсем ял Советне кайса пĕлтереççĕ. Унăн председателĕ Алексей Николаев тăрăшнипе хĕрарăмпа хĕрне тирпейлесе пытараççĕ. Шăтăка тупăкпа мар, çĕтĕк кавирсемпе чĕркесе хураççĕ. Вилĕмрен сывă юлнă Валентина Елинкка хăй патне пурăнма илет. Каярахпа ăна Чăваш Çĕпрелĕнчи ачасен çуртне параççĕ. Арăмне вĕлернĕ хыççăн 7 уйăхран мăшăрĕ - Иван вăрçăран яла контузи пулса таврăнать, вĕлерекенсене суда парать. Арăмĕн вил тăприне чавса кăлараççĕ, тĕрĕслеççĕ. Хĕнекен хĕрарăма суд айăплă тесе йышăнсан 6 çула тĕрмене хупаççĕ. Иван хăй те 1944 çулхи июнь уйăхĕнче вилет. Ăна Хулаçырминче пытараççĕ.

Халĕ Артамонов Валентин Иванович Лаишевкăра (Ульяновск районĕ) пурăнать. Авланнă, мăшăрĕ Тоня ятлă. Вĕсен икĕ ачи Уль-

яновскра пурӑнаҫҫӗ. Кашни ҫулах вӗсем ҫимӗкре амӑшӗн вил тӑпри патне пырса асӑнаҫҫӗ.

Ҫакӑн пек хӑрушла ӗҫсем ялта вӑл вӑхӑтра сахал мар пулнӑ. Хӑш-пӗр чухне вара ҫын тискер чӗр чунран та хӑрушӑ-ҫке? Ахальтен мар ӗнтӗ П. С. Быков хӑйӗн алҫырӑвӗнче ҫакӑн ҫинчен ҫырса кӑтартма тӑрӑшнӑ. Акӑ вӑл мӗн ҫырать: «Хӗл варринчи пӗр сивӗ кун пире, ачасене, аслисем урама кӑлармаҫҫӗ. Мана анне Маҫик Микӗти патне кайма ирӗк парсан, эпӗ вӗсем патне хаваспа чупса кайрӑм. Микӗтепе пӗрле пӑрпа шӑнса ларнӑ чӳречерен (вӗсем икӗ хутлӑччӗ, ялта вӗсен кӑначчӗ) урамалла пӑхасшӑн тӗрмешетпӗр. Анчах нимӗн те курӑнмасть. Пӑрланса шӑннӑ чӳречене ҫӑварти пӑспа вӗрсе ӑшӑтнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ пӑртак курӑнма пуҫларӗ. Пирӗн Тукас урамӗ енчен питӗ нумай ҫын утать. Тулта сивӗ пирки ҫынсем тӑлӑп, чаппан тӑхӑннӑ. Чи малта пӗр ҫын, пысӑк пӳлӗллӗ, хӑй ҫара пуҫ, ҫарамас, йӗмпе ҫеҫ, ҫара урипе юр ҫине пусса малалла утать. Хыҫалтан пыракан ҫынсем ҫак ҫынна тем каласа вӑрҫаҫҫӗ, чышкисемпе юнаҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра пӗри ун патне чупса пырса ӗнсинчен ҫапса юр ҫине ӳкерет. Ҫарамас ҫын ури ҫине тӑриччен ӑна тепри те... Пурте ҫак ҫынна хӗнеҫҫӗ. Тӳрӗ Тукас урамӗпе пӑрӑнса вӗсем малти касӑ енне кайса ҫухалчӗҫ... Ҫак ҫын ял-йыш умӗнче айӑплӑ пулнӑ». Выҫилкка урамӗнче пулса иртнӗ ӗҫ те ҫавнашкалах. «Лавккана (халӗ вӑл ҫук - **Н. К.**) хирӗҫ пусӑ умӗнче выртакан ватах мар хӗрарӑма ҫынсем пусӑран шыв кӑларса витрепех сивӗ шывпа сапаҫҫӗ. Тӑна кӗрсенех каллех ӑна хӗнеме тытӑнчӗҫ. Хальхи пекех аван астӑватӑп, пӗр ҫын вӗҫне сӑнчӑр ҫыхнӑ пушӑпа хӗненине. Юнланса пӗтнӗ хӗрарӑм тӑнне ҫухатсан тин ҫакӑнта пухӑннӑ халӑх килӗсене саланчӗ».

Мӗнпе айӑпа кӗнӗ пулнӑ ҫак хӗрарӑм ял-йыш умӗнче? Ку хӗрарӑм пӗр кил-йышӑн урамра ҫакӑнса тӑракан ҫунӑ кӗпе-йӗмӗсене вӑрланӑ иккен. Ҫын япалине вӑрлакана Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнче ӗлӗкхи вӑхӑтра ҫапла майпа халӑх хӑех суд тунӑ. Ҫакӑнта ҫырса кӑтартнӑ хӑрушла ӗҫсем 1919 ҫулсенче пулса иртнӗ. Акӑ тепӗр тӗслӗх.

«Шкултан таврӑннӑ чухне, ялти пасар пулнӑ вырӑн тӗлӗнче, юр ҫинче ҫара уран ҫӳренӗ ҫын йӗрне асӑрхарӑм. Ура йӗрӗсем Хӗвелкке Ваҫҫин пулнине тавҫӑрса илтӗм. Вӑл Совет влаҫне хирӗҫ киревсӗр ӗҫ илсе пыракансенчен пӗриччӗ. Ялти активистсен ҫурчӗсене ҫӗрле вӑрттӑн вут тӗртсе ҫунтарнӑ, выльӑхӗсене вӑрласа илсе тухса кайнӑ. Ҫывӑх вӑрманта пытанса пурӑннӑ вӑл. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, ҫак ҫынсен ушкӑнӗ каҫхине пӗр ҫыннӑн хуҫалӑхӗнчен ӗнен урисене ҫӑпата сырса выльӑха вӑрласа илсе тухса кайнӑ. Хӗвелкке Ваҫҫи хӑйӗн ывӑлӗпе, Микалайпа, ялти пурнӑҫа пӑтратма шутласа, колхоз витинчен лаша вӑрлаҫҫӗ. Юлашкинчен пӑлхав пуҫлӑхне тытаҫҫӗ, тӗрмене хупаҫҫӗ. Яла вӑл тӗрмерен таврӑнаймасть. Ӑна персе вӗлереҫҫӗ.

Ҫамрӑклах эпӗ ӗҫе кӳлӗнтӗм. Ҫуллахи ӑшӑ кунсенчен пӗринче Аслӑ ҫеремрен ирхине выртмаран таврӑнтӑм. Апатлансан лаҫҫа ҫывӑрма тесе кайрӑм. Ҫав вӑхӑтра урамра халӑх шавлани илтӗнсе кайрӗ. Тӗлӗнсе чӳречерен сӑнаса пӑхатӑп. Тӳрӗ Тукас енчен правкапа пирӗн урампала нумай халӑх утать, малта Ненюк Митти, унӑн ҫурӑмӗ ҫинче мишук (мишукӗнче пӗр витрене яхӑн ҫӑнӑх). Ҫарран Ваҫҫана хӗненӗ пек ҫак

çынна та хĕнеççĕ. Ненюк Митти халăх умĕнче акă мĕнле айăпа кĕнĕ. Пасар кассинче (халĕ Миронов урамĕ - **Н. К.**) Смоленцевăн чусран çапса тунă çил арманĕ пулнă (ăна эпĕ те астăватăп Козлов арманĕ тетчĕç - **Н. К.**). Çав армантан çăнăх вăрланине унăн хуçиййĕ çиййĕнчех тавçăрса илет. Арман çывăхĕнчи курăк ăшĕнче вăл паллана çыннăн «заступне»* курнă. Тепĕр кун хирте вăл Ненюк Миттине хирĕç пулсан: «Çул çинче «заступ» тупрăм, камăн-ши вăл?» - тесе ыйтнă. Хайхискер,- ку вăл манăн, эпĕ ăна çухатрăм, тет.
Смоленцев ял старостине çакăн çинчен каласа парать. Вĕсем Ненюк Митти патне пырса анкарти вĕçĕнчи мунчаран çăнăх мишукне тупаççĕ. Ял пухăвĕнче Миттяна ял тавра çăнăх йăттарса çӳретсе хĕнеме йышăнаççĕ».

Халăх çав çулсенче вăрлакан çынна хăех суд тунă. Вулăса, каярахпа ял Советне, кайса пĕлтермен. Ял саккунĕ çапла пулнă: халăхăнне вăрларăн-тăк - явапне те тытма пĕл. Айăплă çынни вара хăйне йывăр хĕнесе пăрахнă пулсан та, ниçта та кайса каламан. Хăйĕн айăпне ăнланса илнĕ, урăхран халăхăнне вăрлама хăю çитереймен. Çакна вăл мĕн виличчен асра тытнă. Çамрăксене те асăрхаттарнă.

Паянхи кун апла мар. Çак тискер йăлана вăрçă хыççăн тĕпĕ-йĕрĕпе кăкласа пăрахнă. Çакă та вăл ял историйĕн пĕр пайĕ.

Кам айăплă çакăншăн? Общество е çемье? Мĕнле пулма пултарать-ха çапла? Çын вăл ытти чĕр чунсенчен ăслă пулнипе уйрăлса тăрать-çке. Хăш-пĕр чухне вара тискер кайăкран та тискертерех. Чиппипер çын сасартăк, пĕр сăлтавсăрах тӳрлетме çук йывăр йăнăш туса хурать. Çакăн пек тĕслĕхсем пирĕн тăрăхра сахал мар тĕл пулкалаççĕ-ха.

Çакăнта çырса кăтартнă тĕслĕхсем хальхи пурнăçпа çыхăннă. Çавăнпа автор вĕсен ячĕсене улăштарнă.

## «Каçар, пепкем, аннӳне»

«Усал хыпар утпа çӳрет»,- теççĕ. Чăн та çапла, иккен. Нинăпа Володя пĕрле çӳреме пуçланăранпа нумай вăхăт та иртмерĕ. Володя хулари завода ĕçлеме кĕчĕ. Нина ялта ашшĕпе-амăшĕ патĕнче пурăнать, аслă класра вĕренет. Ялта ун пек телейлĕ çын çукпа пĕрехчĕ. Ашшĕ-амăшĕ те телейлĕ пуласса шанса пурăннă.

Анчах... Нина шкултан вĕренсе тухсанах кӳршĕ ялта ĕçлеме пуçларĕ. Пăртак вăхăт иртсен тăван килне те çӳреме пăрахрĕ, хырăмĕ ӳснине туйма пуçларĕ... Мĕн тумалла? Хăй шухăшне Володьăна пĕлтерчĕ, анчах ашшĕ-амăшĕпе канашламарĕ.

Ача çуратма вăхăт çитсен Нина паллакан юмăç карчăк патне çул тытрĕ. Вăрттăнлăхне никама та пĕлтерме хушмарĕ. Çакăншăн, паллах, Нинăн укçа тӳлеме тиврĕ. Кашни уйăхрах (ĕлĕкхи укçапа) 60 тенкĕ тӳлесе тăчĕ.

Володя çак вăхăтра таçта кайса çухалчĕ. Нина темиçе хутчен те ăна качча илме ӳкĕтлерĕ. «Ачана пĕрле пăхса ӳстерессчĕ, ют упăшка пăхас çук»,- шухăшларĕ вăл. Володя Нина çине çаврăнса та пăхмарĕ.

Юмăç карчăк патĕнче Нина çав каç пĕртте куçне хупмарĕ. Темле

* Заступ - тимĕр кĕреçе.

шухăшта пуçне пырса кĕчĕ. Пурăнас ĕмĕчĕ те пĕтрĕ. Вилме те шутланăччĕ, анчах... Çурçĕр иртсен юмăç карчăк ăна ача çуратма пулăшрĕ.

Нина ачине çуратсанах чăркарĕ та палламан çулпа (каçхи уйăх çутипе) урăх яла тухса утрĕ. Çул хĕррипе утса пынă чухнех пуçĕнче хăрушă шухăш çуралчĕ. Ачине палламан çынсем патне пăрахса хăварма шутларĕ вăл. Акă ял хĕрринчи çурт тĕлне çитрĕ. Пахча алăкне ерипен уçса кĕчĕ те тӳрех улăм купи патне пырса тăчĕ. Уйăх çутипе усă курса ачи çине пăхса тăчĕ те улăм ăшне меллĕн вырнаçтарса хучĕ. «Каçар, пепкем, аннӳне, тен, хуçисем япăх та пулмĕç, пăхĕç»,- тесе Нина хăй пурăнакан яла уттарчĕ. Нимĕн пулман пекех çемçе вырăнĕ çине кĕрсе выртрĕ...

Çав вăхăтра ĕне сума тухнă хĕрарăм ача йĕнĕ сасса илтрĕ. Мĕн пулса иртнине тавçăрса илейменнипе упăшкине чĕнсе тухрĕ. Кӳршĕ йытти ача выртакан улăм купине чакалать. Малти урисемпе ăчана чăрканă пусман пĕр кĕтесне туртса кăларнă пулнă. Кил хуçисем çийĕнчех чупса пыраççĕ те улăм ăшĕнчен ачана туртса кăлараççĕ, пӳрте илсе кĕреççĕ. Упăшки районти больницăна шăнкăравлать, васкавлă пулăшу машини килсе çитет. Вăхăт иртет. Ача çак çемьерех ӳссе çитĕнет. Нумай вĕренет. Çуратнă хĕрарăм-амăшĕ нумаях та пурăнайман иккен, вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ. Юмăç-карчăк тĕрĕс мар сипленипе юнĕ пăсăлнă.

Володя та нумай пурăнаймасть. Çамрăклах çĕре кĕрет.

**(«Канаш» хаçатран.)**

# Хĕрӳ çамрăклăхри йăнăш

Ялти шкулта вĕреннĕ чухнех Зоя кăмăлĕпе те, чĕлхипе те ытти хĕрсенчен чылай уйрăлса тăнă, хăй патне каччăсене йыхăрнă. Çи-пуçĕ те яланах илемлĕ те тирпейлĕ пулнă унăн. Вăл ял урамĕ тăрăх илемлĕн утса пынине курсан мĕнле каччăн чĕри хытăн тапма пуçламĕ, кăмăлĕ çĕкленмĕ!

Шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан Зоя Шупашкара çул тытрĕ, ĕçе вырнаçрĕ. Часах юлташсем тупăнчĕç. Рита унăн чи çывăх хĕртантăшĕ пулса тăчĕ. Чăваш хĕрĕсем пĕр пӳлĕмре пĕр çемьери пек пурăнма тытăнчĕç. Хулара пурăннă май, хĕрсем модăран юлас мар тесе хăйсене валли çĕнĕ кĕпесем те çĕлеттерчĕç.

Хулара пурăннă май, Зойăпа паллашас текен каччă сахал мар пулчĕ. Анчах та хĕр пĕринпе те çывăхланмарĕ. Хулара Ваньăпа çӳрекелетчĕ вăл. Пĕвĕпе çӳллех мар каччă унăн кăмăлне каятчĕ. Ваня вара ăна юратсах пăрахрĕ, пĕрле пулма ӳкĕтлерĕ. Рита темле ӳкĕтлесен те Зоя нимĕн те чĕнмерĕ. Унтан темшĕн Ваньăпа çӳреме пăрахрĕ.

- Мана ялта савни кĕтет,- терĕ хĕр куççульне шăлнă май.

Çуралса ӳснĕ ялĕнче Зойăна чăнахах та Виктор кĕтет-мĕн. Вăл вырăнти колхозра ĕçлет. Механизатор. Мĕн пĕчĕкрен ашшĕ-амăшĕ япăх воспитани панăран Виктор хăй тантăшĕсемпе те, ялти ытти çынпа та йĕркеллĕ калаçма вĕренеймен. Ĕçкĕпе те иртĕхет, çапăçкаланисем те пулкаланă. Çакна Зоя пĕлнĕ-ха. Ашшĕ-амăшĕ те Виктора юратнишĕн ăна пĕр хутчен çеç ятламан.

- Улми йывăççинчен аякка ӳкмест, теççĕ. Тĕрĕсех ку. Ывăлĕ те ашшĕ-амăшнех хывнă,- тесе ятланă Зойăна амăшĕ, Екатерина Ива-

новна. Ашшĕ те унпа килĕшнĕ. Аппăшĕ те ÿкĕтленĕ. Хăй телейлĕ пулманнипе (Зойăн аслă аппăшĕ упăшкинчен уйрăлнă) Викторпа пĕрлешсен йăмăкĕн пурнăçра телей пулмасса вăл туйса илнĕ тейĕн. Анчах та усси пулмарĕ. Зоя ăна та итлемерĕ. Хĕр вăрттăн пÿлĕме кĕрсе куççуль юхтарсах йĕчĕ. Ашшĕнчен те, амăшĕнчен те пытарчĕ вăл вăрттăнлăхне, тăван аппăшне те каламарĕ. Ун пурнăçĕнче мĕн пулса иртнине тепĕр виçĕ çултан çеç пĕлчĕç вĕсем.

Пĕррехинче кĕтмен çĕртен Зоя пурнăçĕнче инкек сиксе тухать. Маларах асăннă ял каччи, хĕре алăран вĕçертес мар тесе (хулара пурăннă вăхăтра Зойăна пысăк вĕреннĕ çынсем пăхкаланине илтсен) пĕр каçхине вăрттăн чĕнсе тухса тăван килĕ умĕнчех мăшкăллать. Çакă кĕтмен çĕртен пулнипе хĕр хăйне çĕр айне анса кайнăнах туять. Намăс пулнипе качча хирĕç нимĕн те чĕнмест. Сасси те таçта кайса çухалать. Каччăн вăйлă аллисем вара хĕре вырăнтан та хускалма памаççĕ.

«Мĕнле тÿссе ирттермелле ку намăса?» - çак шухăш хĕре пĕр самант та канăç паман. Шăпах çак сăлтава пула ĕнтĕ Зоя хăй савнă каччине пăрахать. Чĕрине кĕрсе ларнă пысăк хуйхă пурнăç телейне ăнсăртран тататъ. Кун пек пулса тухман пулсан Зоя кермен пек пысăк çуртра упăшкипе шăкăл-шăкăл калаçса çеç ларнă пулĕччĕ. Усал шухăш çак телее татрĕ.

Çапла вара Зойăн хăйне ирĕксĕрленĕ каччах качча каймалла пулчĕ. Лешĕ кашнинчех: «Мана качча тухмасан мĕн пулса иртни пирки аçу-аннÿне каласа паратăп»,- тесе хăрататчĕ. Хĕрĕн ăçта кайса кĕмелле-ха? Ашшĕ-амăшĕнчен аван мар, ял-йыш пĕлсен тата мĕн калĕ? «Юратнă каччă эпĕ хĕр пулманнине пĕлсен мана çылăх,- шутларĕ Зоя.- Ăна улталас мар...».

Халиччен каччăн киревсĕр ĕçĕ çинчен никам та пĕлмен. Кун çинчен Зоя никама та, тантăш хĕр-юлташĕсене те каласа паман. Тен, маларах ашшĕ-амăшне, тусĕсене каласа кăтартнă пулсан пурнăç кун пек хĕсĕк пулса тухман пулĕччĕ?

Унтанпа виçĕ çул иртрĕ. Юратман упăшкапа пурăнма епле хĕн иккенне çырса кăтартмасан та паллă ĕнтĕ. Туй умĕн амăшĕ темĕнле ÿкĕтлесен те Зоя малтанхи киревсĕр каччăпах пĕрлешме шутларĕ. «Тен, пĕрле пурăнса кайăпăр-ха. Кайран пĕр-пĕрне хăнăхса çитсен çынсем пекех пурăнма пуçлăпăр-ха»,- шухăшларĕ хĕр. Çук иккен. Пурнăçаниепле те улталама çук. Тата юратман çынпа епле пурăнăн-ха? Пĕрлешсен малтанхи кунсенчен пуçласах мăшăрĕ Зойăна хĕнеме пуçларĕ. Нимĕн ĕçлемесĕрех арăмĕн ĕнси çинче ларма килĕштерчĕ вăл.

- Эпĕ пĕрре ларса пĕр литр эрех ĕçсе яма пултаратăп,- текеленĕ вăл паттăрланса.

Çапла вара пуçланчĕç Викторăн киревсĕр ĕçĕсем. Вăл çамрăк арăмĕн сăмахне нимĕн вырăнне те хумарĕ. Мăшкăлларĕ ăна, вĕлерессипе хăратрĕ.

- Ку арçын çумне шуйттансем çыпçăннă пулĕ,- теççĕ аптăранипе ялта пурăнакан çынсем.

Виктор мĕнле хĕнесен те Зоя чăтрĕ мăшкăла. Ара, упăшки арăмне кун пирки ашшĕ-амăшне калама хушман-çке! Хăратнă. Çын умĕнче вăтанма хăнăхнă хĕрĕн тÿсмех тивет арçын чышкине. Юлашкинчен Виктора ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн ĕçрен кăларса ячĕç. Çакăн хыççăн вăл арăмне пушшех те пусмăрлама пуçларĕ. Тертленсе пурăннăран

çамрăк хĕрарăм сăн-питрен те улшăнса кайрĕ. Начарланчĕ, килĕнче те ĕçлес килмерĕ унăн. Пĕррехинче вара упăшки валли апат пĕçерме хатĕрленĕ çĕр улмине витрене каялла хучĕ те тăван килне тухса утрĕ.

Кашни çыннăнах хăйне евĕр пурнăç шăпи, телейĕ. Мĕншĕн Зойăн çапла пулса тухрĕ?

Хĕр чухне тунă йăнăшсем никама та канăç памаççĕ çав.

**«Тантăш» хаçатран.**

# 7. Ĕлĕкхи йăла-йĕркесем тата вăййăсем

Ĕлĕкрех чăваш ялĕсенче мăн асаттесен йăли-йĕркисене тытса пынă, вăййăсем вылянă. Шел, халĕ нумайăшне манса пыратпăр. Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çуралса ӳснĕ П. С. Быков, Киевра пурăннăскер, тăван ял пурнăçĕпе питĕ кăсăкланнă, тăванĕсем патне килсен, курни-илтнине çырса пынă. Унăн алçырăвĕсем сыхланса юлнă. Вулакансене манăн вĕсемпе паллаштарас килет.

## Улах ларни

Çитĕннĕ хĕрĕн ашшĕпе-амăшĕ каç выртмалла хăнана кайсан, вĕсем патĕнче улах ларнă. Кунта тĕрлĕрен вăййăсем вылянă, купăс каласа ташланă. Хĕрсем çав вăхăтрах арланă, çыхнă. Хăш чух улах тума ялти пĕччен пурăнакан ватă хĕрарăмсемпе те калаçса татăлнă. Хĕрсем улах ларакан пӳрт хуçине уншăн мĕнле-тĕр ĕç туса панă: кунĕпех авăн çапнă, анкартинчи çĕр улмине чавса панă.

Улах çĕрĕпех тăсăлма пултарнă. Тата çакăн пек улахсем те пулнă. Ашшĕпе амăшĕ хăнана кайсан хĕрĕ хăйĕн чи çывăх тусне кăна чĕннĕ. Вĕсем патне вара савнă каччисем çеç пынă.

Хĕллехи вăрăм каçсенче хĕрĕн çип арламалла пулнă. Ялан пĕр вырăнта ларса ывăнтарнă, çавăнпа çамрăксем çакăн пек меслет шыраса тупнă. Хыçалти пӳлĕмре ватăсем çывăрнă, малтинче хĕрсем çăм арланă. Кичем ан пултăр тесе, каччисене - хăйсен тантăшĕсене чĕннĕ. Вĕсене чӳречерен вăрттăн кĕртнĕ.

П. С. Быков ăнлантарнă тăрăх; ун чухне хĕрсем те, йĕкĕтсем те тирпейлĕ пулнă, ашшĕсĕр ачасем çуралман.

## Ларма хĕр

Ĕлĕкрех килти хĕрарăм çемйине веçех хăй арласа, тĕртсе тумлантарнă. Хăйне пулăшма амăшĕ хĕрне те явăçтарнă. Ăна алă ĕç тума хăйсен тăванĕсем патне янă. Килти хуçалăхра вăл урăх нимĕнех те туман, çавăнпа та ăна «ларма хĕр» тенĕ.

## Ярăну

Çĕнĕ çул иртсен, çăварни çитиччен, малти кĕпер патне кашни каç ял çамрăкĕсем пухăннă. Кашни каччă çырмара çуна ярăнма илсе пынă, хăйĕн юратнă хĕрне ун çине лартса ярăнтарнă. Çамрăкраххисем хĕрсĕр ярăннă.

## Хĕр вăрлани

Хĕр йĕкĕте качча кайма килĕшмесен, лешĕ ăна вăрласа кайма та пултарнă. Пĕррехинче çырмара çунапа ярăнаттăмăр. Унччен те пулмарĕ,

Выҫилкка урамĕпе лав курăнчĕ. Ун ҫинче иккĕн ларнă, пĕри тăлăп, тепри - чаппан тăхăннă. Ярăнакансем хушшинче: «Лаша килет, ярăнма чарăнăр»,- тесе кăшкăрса ячĕҫ. Эпир пурте лашана ҫул парса пăрăнса тăтăмăр. Пирĕнпе танлашсан, лав ҫинчи икĕ ҫамрăк урамра утса пыракан пĕр хĕре ҫуна ҫине йăтса пăрахрĕҫ. Хăвăрт кăна лашине пушăпа ҫапрĕҫ те хыҫалтан юр кăна ҫĕкленсе юлчĕ, ҫуна курăнми пулчĕ. Кайран ҫĕр варринче пачăшкă патне пырса чиркӳ уҫтарнă, венчете тăратнă. Ун хыҫҫăн уйрăлма юраман пулнă.

## Ҫерҫи пăтти

Тырă вырма тухас умĕн хĕрарăмсем пĕр-пĕр ҫырмара пуҫтарăнса пăри пăтти* пĕҫернĕ. Каччăсем пăтă пиҫсе ҫитсен ăна вăрланă, пĕр вăрттăн вырăнта ҫинĕ. Ҫакăн пек йăла та пулнă. Кайран вара пурте пĕрле ларса апатланнă. Ҫак уява ҫерҫи пăтти тенĕ.

## Ҫăмарталла выляни

Ку вăййа ҫамрăксем вылянă. Кашни вылякан ятарласа тунă ҫĕр ҫинчи пĕчĕк шăтăка пиҫнĕ ҫăмартана хунă. Ҫăмартасен шучĕ вуннăран ытла та пулма пултарнă. Темиҫе хăлаҫ виҫсе кайсан, ҫăмартасем выртакан еннелле кивĕ япаларан ҫĕленĕ пӳске кустарнă. Унпа ҫăмартана хускатсан, вăл санăн пулать, хускатаймасан - ҫĕнĕрен черет йышăнатăн. Пĕрре те лектерейменни каярахпа вăййаран тухнă. Ҫăмартасем сахалланнă май вылякансем те чакса пынă.

## Ҫăварни

Ку уява каччăсем малтанах хатĕрленнĕ. Юратнă хĕрĕ урăххисемпе катаччи ан чуптăр тесе, унăн тутăрне хăш-пĕр чухне каччи вăйпах тăпăлтарса илнĕ. Апла пулсан та хăш-пĕр хĕрсем пурпĕрех ытти каччăсемпе лаша урапи ҫине ларса ҫӳренĕ. Ҫăварни кунĕ хĕрсен тутăрĕсене лаша пĕкки ҫине ҫыхса ял тăрăх ҫамрăксем ярăннă. Лаша урапи варринче хĕрсем ларса пынă, икĕ айккипе - каччăсем. Мăшăр е тройка кӳлнĕ лашасен тилхепине ятарлă ҫын тытса пынă. Шăматкун тытăнса вырсарникун каҫченех ҫăварни уявлатчĕҫ. Ҫăварни иртсен хĕрарăмсем хĕлĕпе авăрланă, ҫипрен пир тĕртме тытăннă.

## Мункун

Шăматкунхи каҫхине чиркĕве кайнă, унта пуп тул ҫутăличченех кĕлĕ иртгернĕ. Ҫамрăксем хĕрсемпе пĕрле чиркӳ ҫывăхнелле пырса ларнă. Ирхине халăх саланать. Виҫĕ кунччен чан ҫапнă. Чан патне пурте хăпарма пултарнă, анчах пурте ăна ҫапма пĕлме пултарайман. Ҫавăнпа та ятарласа «чан ҫапакан» ҫын пулнă. Мункун кунне кашни урамра ярăнмалли таканкка лартнă. Ун валли ҫичĕ вăрăм кашта тата вĕрен кирлĕ пулнă. Хĕрсемпе каччăсен ушкăнĕ кашни урамри таканкка патне ҫитсе курнă, ярăнса пăхнă. (Ҫак ырă йăла юлашки ҫулсенче ҫеҫ пĕтсе ларчĕ. Шкулта вĕреннĕ чухне эпир те таканккапа ярăнма ҫӳренĕ. - **Н.К.**).

## Юлашки каҫ

Мункун иртнĕ, тырă акнă, ҫурхи ĕҫсем вĕҫленнĕ. Хĕрарăмсем пир тĕртсе пĕтернĕ. Пушă вăхăт кăштах тупăнсанах хĕрсем улаха ҫӳренĕ, каҫхине вĕсем кашни урамрах, пĕренесем ҫине ларса, хăйсем сăвăланă

*Пăри пăтти - полбенная каша.

юрӑсене юрласа кӑтартнӑ. Ҫав вырӑна каччӑсем те пухӑннӑ, анчах та вӗсенчен сӑвӑ калама хутшӑнакансем сахал пулнӑ. Ҫимӗк умӗнхи эрнекун сӑвӑ калама юраман. Кӗҫнерникун каҫхине ҫамрӑксем пуҫтарӑнса уяв ирттернӗ. Ӑна вӗсем юлашки каҫ тенӗ. Авалтанах чӑваш халӑхӗ эрнекуна хальхи вырсарникун пекех шутланӑ, нимӗн те ӗҫлемен, каннӑ. Ҫӗнӗ тӗне йышӑнсан ҫеҫ ҫак йӑлана маннӑ. Ҫамрӑксем ҫав кун чи лайӑх тумсем тӑхӑнса тухнӑ. Хӗрачасем кӗмӗл укҫаран тунӑ мӑй ҫыххисене ҫакнӑ. Ҫак каҫ мӗнпур ҫамрӑксем купӑс йӑтса малти кӗпер урлӑ каҫса ҫереме пухӑннӑ. Унта кашни урам хӗрӗсем, уйрӑм ушкӑна пуҫтарӑнса, ӑмӑртмалла вӑйӑсем вылянӑ: арҫын ачасем такмак каланӑ, хӗрачасем каччӑсен йӗри-тавра ҫаврӑнса юрласа ҫӳренӗ. Хӗрсем аларан-алла тытса тунӑ ункӑ ӑшне никам та кӗме пултарайман, ирӗксӗр кӗрсен вӑйӑ тусма пултарнӑ: юлашки каҫ ҫапла пулса тухсан ҫулталӑкӗпех начар пурнӑҫ пулӗ тесе шутланӑ вӗсем. Кам та пулин ункӑ ӑшне кӗме шутласан, ҫапӑҫусем те сиксе тухма пултарнӑ. Ҫутӑлас умӗн хӗрсемпе каччӑсем ҫырмана анса питне-куҫне ҫунӑ, ҫумасан куҫ пӑсӑлать, тенӗ. Ирхине ҫеҫ вӗсем килӗсене саланнӑ. Тепӗр кун пурте ӗмӗрлӗхех куҫӗсене хупнӑ тӑванӗсене асӑнма масар ҫине пуҫтарӑннӑ. Тӗне кӗнӗ хыҫҫӑн унта вырсарникун ҫӳреме пуҫланӑ. Ҫимӗк кунӗнче ваттисем пӗр-пӗрин патне хӑнана ҫӳренӗ, ҫамрӑксем урамра е ҫырмара вӑйӑ вылянӑ.

## Выльӑхсене уя кӑларни

Юр айӗнчен ҫерем тухма пуҫласанах ял ҫынни кӗтӳ кӑлариччен выльӑхсене ҫав вырӑнсене ҫитерме илсе ҫӳренӗ. Унта вӗсене туратлӑ хулӑпа хӑваласа тухнӑ. Турачӗсем мӗн чухлӗ нумайрах, выльӑх ҫавӑн чухлӗ ытларах ӗрчет тенӗ. Ҫерем ҫине ҫитсен: «Ҫак ҫӑмарта пек тутӑ пулччӗр», - тесе ватӑ выльӑхсем хушшинелле, хӗвелтухӑҫ еннелле, пӗҫернӗ ҫӑмарта кустарса янӑ. Ҫерем ҫине ҫитсенех выльӑхсене ҫитерме илсе тухнӑ ҫынсем пурте ларнӑ. Ларсан выльӑха канӑҫлӑ пулать тенӗ. Ҫӑмартисене выльӑх пӑхма юлакан ҫын илсе ҫинӗ. Выльӑхсене хӑваласа кӑларнӑ хулӑна хире пӑрахса хӑварма юраман, ӑна киле илсе таврӑнса пуҫтарса хунӑ.

Кӗтӳ хӑваланӑ кун та выльӑхсене хулӑпа хӑваласах тухнӑ. Каярахпа, Христос тӗнӗ сарӑлсан, кӑчкӑ турачӗпе хӑвалама пуҫланӑ.

Кӗтӗве кирек камӑн та хӑваласа тухма юраман. Ытларах чухне йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑма хушнӑ, выльӑхсем хӗсӗр ан пулччӗр, хунаса пыччӗр тесе ҫапла тунӑ. Пускилтен пускиле вӑхӑт ирттерсе ҫӳрекен хӗрарӑма кӗтӳ хӑвалама яман, выльӑхсем тӗлли-паллисӗр ҫӳресрен шикленнӗ.

Кӗтӳ тухнӑ ҫӗре ҫитсен выльӑх хӑвалакансем тӳрех килӗсене кайман, пурте пухӑнасса кӗтнӗ. Унтан вӗсем кӗтӳ ачисене: «Ҫӑмарта пек мӑнтӑр, ҫӑкӑр пек тутлӑхлӑ пулччӗр», - тесе ҫӑмартапа ҫӑкӑр панӑ.

Выльӑхсене пурте хӑваласа тухсан кӗтӳ чӳкӗ ирттернӗ. Пуҫласа кӗтӳ апачӗ паракан ҫын ҫӑкӑр тата пысӑк чӑкӑт илсе пынӑ. Вӗсене кӗтӳ кӑларма тухнӑ ҫынсене вакласа панӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн кӗлӗ пуҫланнӑ. Пӗр-пӗр ватӑ ҫапла кӗл тунӑ: «Турӑ. Мӑн Турӑ! Кӗтӳ кӑларатпӑр. Пӑхуллӑ,

кĕтӳллĕ усра пире. Кăткă мĕнле саланать - ҫавнашкал пирĕн выльăх-чĕрлĕх те уйра саланать: кăткă мĕнле пуҫтарăнать - ҫавнашкал пирĕн выльăхсем пĕр ҫĕре пуҫтарăнаççĕ. Турă, пăхса пуҫтарса усра, пĕр вĕҫĕ уйра, тепĕр вĕҫĕ урам хушши пуҫланнă ҫĕрте пултăр. Ҫултан ҫул пирĕн кĕтĕве хушса пыр...».

## Кĕрхи сăра ларни

Тырăсене пуҫтарса кĕртсен, выльăхсене ҫитерме улăм, утă хатĕрлесе ҫитерсен, хĕл касма ĕҫме-ҫиме хатĕрленĕ хыççăн чăваш ялĕсенче Кĕрхи сăра уявĕ пуҫланнă.

Кашни урамри хĕрсем пĕрле пухăнса уяв тăвасси ҫинчен калаҫнă. Чи малтан хĕрсем уяв ирттерме пушă ҫурт тупаççĕ, унăн хуҫипе курса калаҫнă хыççăн ăна килти ĕçсене туса параççĕ. Пичĕкепе сăра тума лартаççĕ. Хĕрсен амăшĕсем те уяв ирттерме пулăшнă. Уяв кунĕ сăрана ҫак ҫурта илсе пынă, ĕҫме куркасем, стакансем тупса хунă, укҫалла вăйҫă тытнă. Каҫ пулсан ҫамрăксем ҫак пӳрте пуҫтарăннă, сĕтел ҫине витрепе сăра лартнă. Хĕрсем пĕринчен тепри лайăх тумланма тăрăшнă, хулпуççи урлă кĕмĕл укҫасем ҫакса урама тухнă. Каччăсем ушкăнпа ҫурта пырса кĕрсен хĕрсем вĕсене сĕтел хушшине ларма чĕннĕ. Хĕрсенчен асли кашнине сăра ярса панă. Пăртак вăхăт иртсен каччăсем сĕтел хушшинчен тухса ташă ташланă, хĕрсем вĕсене алă ҫупса такмак каланă. Такмак каласа ташлаканне хĕрсем мухтама та, хурлама та пултарнă. Купăççăна ҫамрăксем сăра ĕҫтерсе пуҫтарнă укҫине панă. Йĕкĕтсем ҫак ҫуртран тухса кайса тепĕр урамри хĕр сăрине кайма та пултарнă. Ҫамрăксем ирччен савăннă. Хĕр сăрисене курма кӳршĕллĕ Кивĕ Улхашран, Пухтелĕнчен, Аксуран ҫамрăксем йышлă килнĕ. Пирĕн ял ҫамрăкĕсем те ҫак ялсене Хĕр сăри ларма ҫӳренĕ. Ҫапăçса, ĕçсе ҫӳрекенсем пулман. Кӳршĕ ял ҫамрăкĕсемпе туслă пурăнма тăрăшнă. Ҫак уява ял-йыш Хĕр сăри тесе каланă.

## Лашасем чуптарни

1920 ҫулсем иртсен ял халăхĕ лайăх пурнăҫпа пурăнма пуҫланă, ҫĕнĕ ҫуртсем ӳссе ларнă. Ҫав вăхăтра ялта 7-8 рысак лаша пулнă. Лашасен хуҫисем кашни вырсарникун тенĕ пекех малти ҫеремре пĕр-пĕринпе ăмăртса чупнă. Кая юлаканни ыттисене пулăштух илсе пырса хăналамалла пулнă. Хăш-пĕр чухне рысаксемпе ял тăрăх та ăмăртмалла чупса ҫӳренĕ. Ҫĕнтерӳҫĕсене каллех - пулăштух ĕҫтермелле пулнă.

# 8. «Санра вăкăр вăйĕ»

**«Ҫып йĕрĕ ҫĕр ҫинче юлма тивĕҫлĕ»**
**(Ваттисем каланинчен.)**

Манăн мăн асатте Кавĕрле ятлă пулнă. Вăл Уҫҫа Ваҫикĕ пурăнакан ҫурта хирĕҫ (халĕ унта Евграфовсем пурăнаççĕ) ҫуртра ҫуралнă. 1860 ҫулта мăшăрлансан вĕсем шкул ҫывăхĕнчи пĕр ҫурта уйрăлса тухнă. Асаттен ҫамрăк чухнехи пурнăҫĕ ҫак ҫуртрах иртет. Пĕчĕк чухне вăл Алаксагаров священник (ҫав ҫулсенче яла вырăс священникĕ пурăнма ҫемйипе килнĕ пулнă, чăвашла вăл калаҫма пĕлмен) ачисемпе пĕрле выляна, вырăсла калаҫма вĕренсе ҫитет. Ялта вăл вăхăтра никамах та

вырăсла калаçма пĕлмен.

Мăшăрлă пулсан, асатте çемйине укçа-тенкĕпе пулăшас тесе Чĕмпĕре тырă сутма çӳреме пуçланă. Унпа пĕрле 7-8 çын хутшăнса хулана çӳренĕ, ăна сутма пулăшнă. Асатте вырăс купцисемпе вырăсла калаçма пултарнă.

...Пĕррехинче çапла пулса иртет. Чĕмпĕре çитсен тырра купцана сутаççĕ. Черетсĕр лав çинчи тырра пуян кĕлечĕ патне пырса пушатма никам та ирĕк парасшăн пулман.

- Лашана йĕвенрен çирĕпрех тыт, ман хыççăн пыр,- тенĕ вăл пĕр Йĕлмел çыннине.

Кĕлет патне çывăхах пыма вĕсене пĕр лав кансĕрленĕ. Асатте лава айккинерех пăрса хурасшăн пулнă. Çакна унăн хуçи курать те асаттене вырăсла вăрçса ĕнсинчен хытах çапнă. Ним тума аптăранипе вăл (вырăса тивместь) унăн çунине хыçалтан йăтса тепĕр çуна çине улăхтарса хунă, тет. Çуна çинче çирĕм пăт тырă та пулнă. Унтан виçсе сутакан (весовщик) патне пырса икĕ пăтлă кире пуканне илсе:

- Где он, я его убью,- тесе хăратса илнĕ имĕш. Вырăсĕ çав вăхăтра хăранипе тарса пытаннă.

Асаттепе çумлăн тăракан тепĕр вырăсĕ кушанланса икĕ пăтлă кире пуканне йăтса хăйĕн вăйне кăтартасшăн пулнă. Икĕ-виçĕ хут йăтсанах хайхискер пукана çĕре ӳкернĕ. Çакăн хыççăн вăл асатте патне пырса çурăмĕнчен тĕртсе илсе ерипен çапла каланă пулать: «У тебя бычья сила, ты молодец».

Ялта унтан вăйли пулман. Çакна шута илсе асаттене Быков (вăкăр пек вăйлă пулнине палăртса) хушамат панă.

# 9. Чиркӳ хуралĕнчи пăтăрмах

Асатте ватăлсан, 1918-1919 çулсенче чиркӳ хуралĕнче тăнă. Хуралçăн тивĕçĕ çапларах пулнă: тĕттĕм каçсенче кашни сехетрех чан çапмалла, чиркĕве вăрă-хурахсенчен сыхламалла, ялта пушар тухсан çийĕнчех чан çапса ял-йыша систермелле. Хурал пӳртĕнчи сехет («часы-ходики») ялта пĕртен-пĕр тĕрĕс çӳрекен сехет шутланнă.

Пĕр каçхине асатте çур çĕр иртсен хурал пӳртĕнчен тухнă та чиркӳ картишĕнче икĕ палламан çынна асăрханă. Ырă çынсем мар ĕнтĕ кусем тесе шутланă пуль. Çавăнпа васкаса чанне çапнă. Халăх çийĕнчех чиркӳ çывăхне пухăннă. Хуралçăран мĕнле инкек пулса тухни çинчен ыйтнă. Лешĕ хăй мĕн курнине ним пытармасăр каласа кăтартнă. Халăх ĕненмен. Вăкăр Васикĕ ӳсĕр пулнă та куçне вăрă-хурахсем курăннă теме пуçлаççĕ.

...Темиçе çул иртсен, пĕр каçхине асатте малти касăпа утса пынă. Ăна Головин Якурĕ (вăл çак урамра пурăннă) асăрханă. Хăнана чĕннĕ. Лешĕ ăна эрехпе хăналанă. Кайран Якур асаттене кăкăрĕ патĕнчен кĕперен аллипе ярса илнĕ те чăмăрĕпе юнанă: «Эсĕ кĕркунне чан çапса халăха пуçтартăн... йĕксĕк... çакăншăн сана каçармăп, пĕт çакăнта...».

Пĕр сăлтавсăрах Якур асаттене хытă хĕненĕ. Мĕншĕнне, вулакан хăех тавçăрса илĕ. Чиркӳ картишĕнчи палламан çынсенчен пĕри... Якур пулнă-мĕн. Çакăн хыççăн асатте нумаях пурăнаймарĕ. Вилчĕ. Тăвансем Головин Якурне хирĕç тăма пултарайман. Вăл вăхăтра ялта пуянсем хуçаланнă. Чиркӳ çыннисем те, халăх та вĕсем майлах пулнă. Асатте

çакна ăнланнă та тĕрĕсмарлăха тӳснĕ.

# 10. Муллана арестлени

1929 çул. Уçça Александрĕн хĕрĕпе Ульянапа Уçça Ваçик Петин килĕ умĕнче лараттпăр. Малти урампа утлă çар (кавалери) килет. Лаша кӳлнĕ лавсем çинче хĕç-пăшаллă салтаксем ларса пыраççĕ. Пурте салхуллă.

Çĕпрелĕнчи ОГПУ начальникĕ Япалак ялĕнче пурăнакан (ялĕ Çĕнйĕлмелрен виçĕ çухрăмра вырнаçнă) муллана арестлеме килнĕ. Çĕнĕ Йĕлмел халăхĕ çакна вăхăтра сиснĕ те пуртă, сенĕк, çава йăтса унăн килĕ умне пухăннă. Муллана ирĕке яма ыйтаççĕ.

Пăлханăва лăплантарас, хальхинче муллана ниепле те арестлеме çуккине ăнланса илсен, пуçлăх ăна вăхăтлăха ирĕке янă. Халăха çапла чĕнсе каланă: «Юлташсем, лăпланăр, кунта йăнăш пулса тухрĕ, çакăншăн ял старости айăплă»,- тет чееленсе.

Старостăна арестленĕ. Халăх лăпланнă. Килĕсене саланнă. Çын умĕнче айăпланă çынна лав çине лартса, аллисене вĕренпе çыхса хурса Çĕпрелне илсе çитереççĕ.

Çĕпрелĕнче ОГПУ пуçлăхĕ хуралçăсене старостăна ирĕке яма хушнă.

- Сана Йĕлмелре хăварма хăрарăм, халăх çилĕллĕ, тем те тума пултарĕ. Лăплансан яла таврăнăн, - тет ăна.

Муллана сыхлама ял çыннисем суткапах хурал тăратнă. Ăна арестлеме ял халăхĕ ирĕк паманнине тавçăрса илсе пуçлăх салтаксенчен пулăшу ыйтнă. Каçхине хĕç-пăшаллă утлă çар Япалак ялне йĕритавра çавăрса илнĕ. Яла никама та кӳртмен, никама та кăларман. Халăх мечет патне пухăннă. Салтаксем вĕсене килĕсене хăвалама тытăнсан, çынсем вĕсем çине чулпа, тăпрапа, тимĕр таткисемпе пенĕ. Çара хирĕç ял халăхĕ сенĕкпе, пуртăпа тăнă. Анчах нимĕн те тума пултарайман. Малтан салтаксем халăха хăратмалла çӳлелле пенĕ. Пурпĕрех халăх лăпланман. Ирĕксĕрех вĕсен пăшалпа халăх çине пеме тивнĕ. Çынсем каялла чакнă. Çапăçура çар командирне йывăр амантаççĕ. Аманнă е вилнĕ çынсен йышĕ çĕре яхăна çитнĕ.

Мечет картишĕнче хуралçăра хĕрарăмсем тăнă. Вĕсене çакăнтан хăваласа яма салтаксене йывăрах пулман. Пăшалпа çӳлелле хăратмалла персе илсенех хăйсемех тухса тарнă. Мечет алăкĕсене çĕмĕрсе çар çыннисем шала кĕнĕ. Муллана арестленĕ. Унпа юнашар тăракан хĕрарăмсене килĕсене саланма хушнă. Хурлăх куççулне кăларса вĕсем килĕсене таврăннă.

Ялăн кашни урамне сыхлама патрульсем тăратнă. Никама та ниçта та ялтан кăларман, кӳрши патне, пусăран шыв ăсма иккĕн пыма юраман. Яла никама та кӳртмен.

Комендант вăхăчĕ пĕр уйăха яхăн тăсăлнă. Халăх лăплансан тин салтаксем ялран тухса кайнă. Муллана Çĕпрелĕнчен çав вăхăтра тĕрмене ăсатма ĕлкернĕ. Унăн арăмĕсене (пурĕ 7 арăм пулнă) ялта пурăнма ирĕк паман. Мулла пурăннă çуртра ял Совечĕн кантурне тунă, вăл каярахпа вулав çурчĕ пулса тăнă.

# 11. Çĕнĕ самана йывăрлăхпа килчĕ

Граждан вăрçин вут-çулăмĕ пирĕн яла та çитнĕ. Шурă гвардин çарне хирĕç тăма ял айккипе оборона тытнă. Тăшмана хирĕç тăмашкăн пулемет точкисене чиркÿ, шкул, Чăнлă çырми айккинче вырнаçтарнă пулнă. Çакăн çинчен эпĕ В. Д. Козлов каласа панисенчен астуса юлнă. П. С. Быков хăйĕн асаилĕвĕсенче шурă гвардеецсен пĕр ушкăнĕ Йĕлмелĕнчен иртмелле пулнă мĕн, - тесе çырать. Паллă мар сăлтавсене пула тăшман çарĕ урăх çулпа кайнă.

Патша тата граждан вăрçинче Утьти Петян ывăлĕ Вăйçă Кирук, Черти Симўн ывăлĕ пулнă. Уççа Ваçикĕпе Кармиш ял-йыша çĕршывра пулса иртекен хыпарсемпе паллаштарсах тăнă.

... Çĕнĕ экономика политики (НЭП) вăхăтĕнче ялти пуянсем куçĕсене уçрĕç. Пурнăç лайăхланма пуçларĕ. Вĕсем çĕнĕ çуртсем тума пуçларĕç, лавккасем уçрĕç, суту-илÿ ĕçĕ çĕнĕрен вăй илчĕ. Ял паллама çук улшăнчĕ. Вырсарникунсенче юрă-ташă çур çĕре çитиччененех янăрарĕ.

... Тăван ял çыннисенчен те, кунта Украинăра пурăнакансенчен те ыйтатăп: колхоз саланса кайсан, сана çĕр парсан, хăвăр пĕччен çĕр çинче ĕçлеме килĕшетĕр-и?

- Çук. Мĕне кирлĕ вăл çĕр мана, колхозра ĕçлеме питĕ те аван...

Колхозсене йĕркеленĕ вăхăтра халăх çапла шутламан, çĕнĕ хуçалăха кĕме хăранă. 1929-30 çулсенче пуянсен çурчĕсене, вĕсен выльăх-чĕрлĕхĕсене,кĕлечĕсене туртса илсе килсе лартса ялта çĕнĕ хуçалăх пулса кайнă. Активистсем колхоза кĕменнисен хуçалăхĕсенчи витесене ирĕксĕрлесе тустарса, хуçалăха кĕнисем хăйсен выльăх-чĕрлĕхĕсене илсе килсе панă. Ялта колхоз йĕркелесси йывăрлăхпа пулса иртнĕ. Çак çулсенче, Çĕпрел районĕ йĕркеленнĕренпе, икĕ хутлă райĕçтăвком çуртне тунисĕр пуçне ытти кантурсем ялти пуянсен çурчĕсем пулнă.

Пуянсен çурчĕсенчен илсе тухнă хаклă япаласене ял кушталĕсем Чукал пасарне илсе кайса сутнă. Унтан таврăнсан вĕсемех çĕрĕпе ĕçкĕпе иртĕхнĕ (П. Быков хăйĕн алçырăвĕнче вĕсен хушамачĕсене асăнать - Н.К.). Çав çулсенче пуян хĕрĕсен тухйисем, кĕмĕл укçаран тунă тĕрлĕ хаклă япаласем, хушпусем нумай çухалнă. Пуян хĕрĕ икĕ-виçĕ кĕпе тăхăннă пулсан, ăна хывăнтарнă. Каллех вĕсен хаклă япалисене пасарта сутнă. Коллективизаци тапхăрĕнче çапла майпа ял активисчĕсем пуйма шутланă. Çўлтен тĕрĕслев пулманнипе çапла пулса тухнă. Хуçаланма вĕсене вырăнти пуçлăхсем ирĕк панă.

Ялти потребительсен* обществи 1927 çулта йĕркеленнĕ. Кантурĕ Курень пурăннă çўртраччĕ. Çак вырăнтан инçех те мар лавкка та пулнă. Çакăнта бухгалтер пулса Энтўк Якурĕ ĕçлерĕ. Асан Кавĕрли хуралçăра тăнă. Çав çулсенче ялтаултă арман, виçĕ аптиркка, пĕр шерсточесалка (çăм арманĕ) пулнă, кайран вĕсем колхозăн харпăрлăхне куçнă.

# 12. Вĕсем пуянсене Çĕпĕре ăсатнă

П. Быков Палля Петерĕ çинчен çапла çырать: "Пуянсене Çĕпĕре ăсатнă чухне вăл хăйĕн активлăхĕпе палăрчĕ. Кармише тĕрмене хупса лартсан Петĕр хăйĕн ватă амăшĕпе пуян çуртне пурăнма куçрĕ... хăйĕн айăпне пула вăхăтсăр вилчĕ..."

---

*Потребитель - тавар илекен çын.

1929-30 çулсенче Çарран Ваççи колхоза кĕмен çынсенчен налук пуçтарнă. Патшалăха хресченсем тырă парса тӳлемелле пулнă. Парăмĕсене вĕсем вăхăтра тӳлеймесен колхоза витине е çуртне тустарса илсе кайнă. Ваççа пуянсенчен юлнă çуртра пурăннă. Хĕрĕх çула çитсен вилнĕ.

Ахмук Якурĕ те пуянсене çуртран хăваласа кăларас ĕçре тăрăшулăхĕпе палăрнă. Ял-йыш умĕнче вăтанмасăрах пуянсенчен тăпăлтарса илнĕ кĕрĕкпе çӳренĕ.

Пуянсене Çĕпĕре ăсатма НКВД органĕсене Шантар Вани пулăшнă. Вăл колхоза кĕменнисен тыррине, выльăх-чĕрлĕхне, кĕлечĕсене тустарса вăйпах илсе каякансенчен пĕри пулнă. Активистсене ялта çĕнĕ йĕрке тума пулăшнă. Вулама-çырма пĕлнĕ. Вăлах чиркӳ тăрринчи хĕресе, чана илсе аннă. 1935 çулта Мускавра вилнĕ.

П. Быков алçырăвне вулакансем Наумов Никандр, Якур, Уксах Микĕте, Шеп Элекçейĕ, Василий Алякин, Кукăр Якку çинчен пĕлме пултараççĕ.

Амус Хĕветĕрĕ çинчен Петр Сергеевич çапла çырнă: «Эпĕ унпа пĕрле ял Советĕнче ĕçлерĕм. Вăл çынсем çине хаяр чĕлхепе кăшкăрнине илтмен. Çамрăксемпе те ватăсемпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлнĕ. Вĕсене, хăйне кирек мĕнле йывăр пулса тухсан та, сăмахпа çеç  мар, ĕçпе пулăшнă. Çынпа тавлашăва кĕмен.

Вĕсен савăнăçĕпе савăнма, хуйхи-суйхине ăнланма, кашнин валлиех вăл ăшă сăмах тупма пĕлнĕ. Çынсем ăна хисепленĕ, ун патне ырă канаш ыйтма пынă.

Ялти пуçламăш шкултан кăна вĕренсе тухнă пулсан та вăл хут ĕçне лайăх пĕлнĕ. Ун пек хут пĕлекен çын ялта тата Егоров Никифор пулнă. Вăл Пăвара бухгалтерта ĕçленĕ. Яла шăматкун çеç килнĕ.

Амус Хĕветĕрĕ колхоза йĕркелесе яракансенчен пĕри пулнă...»

Çак йĕркесемпе вĕçленеççĕ П. С. Быков çырнă «Пурнăç вăл - пурнăç» ятлă алçыру. Автор вăл вăхăтри ялти пурнăçăн чи йывăр тапхăрĕсене çырса кăтартнă. Ял историне тĕпчекенсемшĕн хаклă çăлкуç пулса тăчĕ. «Пулса иртнĕ киревсĕр ĕçсене çĕнĕ ăру пĕлмеллех. Унсăрăн пирĕн пуласлăх çук. Историе пĕлмен çын малашне те çавăн пек йăнăшсем тума пултарĕ. Ан тив, çамрăксемшĕн ку пурнăç урокĕ пулса тăрĕ, - тет Вăкăр Петĕрĕ.

Ял историне çырма мана таврапĕлӳçĕн алçырăвĕ хистерĕ. П. С. Быков Киев хулинче пурăннă пулсан та тăван ялпа çыхăну тытма пăрахман. Архивсенче ĕçлесе тата ялти ватă çынсемпе тĕл пулса калаçса авалхи легендăсемпе историлле материалсем нумай пухнă. Анчах вăл хăйĕн алçырăвне пичетлесе кăларма пултарайман. Çитмĕлмĕш çулсенче манăн унпа тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Çавăн чух вăл мана хăйĕн алçырăвĕпе паллаштарчĕ, хăй пуçарнă кирлĕ ĕçе вĕçне çитерме тархасларĕ. Кайран эпир пĕр-пĕринпе çыру та çӳретрĕмĕр. Шăпах çавăн чух эпĕ ватă ентеш халалне пурнăçлама тупа турăм, хамăн ума çавнашкал тĕллев лартрăм. Тăван ялăн иртнĕ кун-çулĕ тĕнчене килекен çĕнĕ ăру çыннисем валли кирлĕ-çке? Унăн историне эпир çырмасан тата кам çырĕ. Паян тумасан çак ĕçе вăл ыран манăçма пултарать. Ĕлĕкхине лайăх пĕлмесĕр ыранхи пурнăça кирлĕ пек йĕркелесе пыма çук. Акă мĕншĕн таврапĕлӳçĕсен (краеведсен) ĕçĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланать.

# III. Свидетельствуют архивные документы

**«Произносили Вы тост с поднятием стакана против Сталина?»**
(Из протокола допроса Михаила Александрова)

В 1918 году в июне я женился на учительнице Старо-Чекурской начальной школы Николаевой Александре Васильевне. Тогда ей исполнилось 22 года, а мне 25 лет. У нас было достаточно времени познакомиться.

Закон об отделении церкви от государства еще не был принят, наше бракосочетание было совершено по существующим законам. В церкви стояли под венцом и повторяли слова священника: " Да повинуется жена мужу". Хотя эти слова не имеют в жизни никакого значения. Вся свадьба наша заключалась в скромном обряде, свидании с родными невесты за круглым столом в доме родителей Василия Ивановича Николаева. С моей стороны на свадебных торжествах были учителя из М. Аксы Ф. Н. Дубанов и Ф. В. Теняев.



**На снимке:** М. Александров в молодые годы.

После свадьбы почти в каждую неделю ходили пешком мы на родину Александры Васильевны, хотя расстояние было немалое - 15 км. У А. В. Николаевой родители жили в с. Новое Ильмово Дрожжановской волости (по словам автора - **Н. К.**). У нее было три сестры - Анастасия, Мария, Федосия и три брата - Петр, Николай и Веня. (Петр был участником гражданской войны и не вернулся с фронта).

Родители жены отличались исключительным гостеприимством, в селе родни у них было много. Через некоторое время Мария и Федосия вышли замуж, мы были участниками этих семейных праздников.

Экономическая жизнь страны в годы гражданской войны была скудная, тяжелая. Положение учителей было не важное, работы было очень много, по два часа после занятий в школе занимались по ликвидации неграмотности населения. За труд учителям платили от государства жалование и по 8 пудов хлеба в месяц в качестве натуральной оплаты.

Через год у нас в семье родился первый ребенок. Справляли рождение Зои в июне 1919 года. Собрали гостей из Ильмова (приехали родители жены, Анастасия с мужем Алексеем, сноха - жена Петра). В 1921 году родилась вторая дочь - дали ей имя Валентина, но она скоро померла от тяжелой болезни, тогда свирепствовал в Малой Аксе тиф.

В августе 1925 года перевели меня на работу в Ново-Ильмовскую начальную школу. В школе до меня работали учителями И. С. Кирпичников и его жена, но они вскоре уехали. Я принял школу от учителя Салмина... (инициалы не помню).

Школьное здание было построено по типу земских школ - однокомлектное с квартирой для учителей. Заботами учителя Салмина был создан при школе сад. По обеим берегам оврага (школа находилась возле оврага) были посажены плодоносящие деревья и декоративные кустарники. Овраг превратился в приличный сад. Рядом со школой была расположена церковь, названная в честь святого Д. Салунского.

Село Новое Ильмово расположено по обоим берегам реки Цильна и имеет несколько улиц п переулков. Главная улица выходит в сторону с. Старое Ильмово, а другой конец - Старые Алгаши. Недалеко от села расположены Старые Алгаши, Старые и Новые Чукалы, Богдашкино, Задоровка. Вблизи лесов нет. Жители деревни заняты в основном сельским хозяйством. Зажиточных крестьян в деревне к 1925 году было не более 20 дворов, из них торговцев - 3 двора.

Зажиточные крестьяне - Вассияровы (Василий Осипович и его сын Василий Васильевич) имели магазин, который был построен из красного кирпича. Подвальное помещение магазина было отведено под магазин мануфактуры. Григорий Осипович вел переговоры с торговыми промышленниками г. Симбирска. Серафим Вассияров занимался бакалейной торговлей. Николаевы имели магазин, который был расположен возле своего дома. К. Е. Вассияров владел землей, где вел садовое хозяйство, открыл кузницу. При советской власти он несколько раз был премирован за передовой опыт по выращиванию кустарниковых пород. Жил зажиточно, после революции он вместе со своими сыновьями (Никодимом и Ильей) работал в своей кузнице.

В селе было развито племенное коневодство. Почти все богатые имели рысаков орловской породы. Земля, возделываемая крестьянами, была плодородная (чернозем), сельчане засевали озимую рожь, яровую пшеницу, овес, гречиху, полбу (пӑри), просо. На душу населения после Октябрьской революции приходилось 0,20 га земли.

В селе была деревянная церковь, где священнослужителем работал В. И. Иванов. Благодаря ему был и создан в селе образцовый сад. Василий Иванович был известен в оруге не как святой отец, а как опытный садовод.

Из истории мне было известно, что до Октябрьской революции имелись в селе революционные вспышки, за что были арестованы учитель Петр Алексеевич Алексеев (1905 г.), Корнил Егорович Вассияров и отправлены на ссылку на временное проживание в Яльчикский уезд Казанской губернии. До моего приезда в село был арестован учитель Салмин за агитацию, якобы в пользу Чувашии при территориальном районировании между Чувашской Республикой и Татарстаном в 1924 году. О приближении бури сталинского перелома мне ничего не было известно. Политическая почва здесь была ненадежна, так как в деревне были следы и признаки классовой борьбы (богатые и бедные). Комиссары с учителями по политическому воспитанию не занимались, была лишь методическая работа среди учителей.

Сентябрь 1924 года. Меня назначили заведующим школой. Избрали в ревизионную комиссию потребительской кооперации. В школе классное помещение было разделено на две большие комнаты. Занимались в одну смену по два класса (вела уроки Васильева), 2-4 классами занимался сам. В 1927 году перевели из С-Чекурской начальной школы мою жену. Квартира наша была при школе. В нашем хозяйстве имелись одна корова, телка и жеребенок, которого назвали Чайкой. Жизнь шла своим чередом.

Подходило время перелома - ликвидация кулачества как буржуазного класса и перехода из формы единоличника к колхозной форме хозяйствования. 30 января 1930 года я был арестован.

Карательные операции в селе начались в начале 30-ых годов. Тогда в Ильмово были арестованы все записанные в кулаки и буржуазные элементы. Тогда могли арестовать любого честного гражданина села по ложным показаниям отдельных сельчан.

После ареста кулаков в деревни и села района выезжали из Казани уполномоченные ОГПУ, возглавляемые старшим следователем Царевским и его помощником Карауловым.

В селе отношения сельчан с некоторыми активистами обострились на почве классовой борьбы. Председатель райисполкома с. Ст. Дрожжаное Абдульханова имела на меня зло, за то, что я ее разоблачил за бесхозяйственность. Вообще я был не в ладу с работниками местной власти Дрожжановского района. В газете «Красная Татария» была напечатана моя разоблачительная статья на секретаря райкома Бикметова (инициалы не помню). Она была написана при участии граждан села и была заверена печатью Сельского Совета. Меня вызывали к следователю в качестве свидетеля. Следователь Караулов (35 лет) с ромбами на шинели, прежде чем спрашивать меня предупреждает: в случае ложного показания Вы будете судимы по ст. 95 УК. РСФСР. После чего он зачитывает шаблонное показание подготовленное для всех свидетелей: «Кулаки села Ново-Ильмово всячески издевались над бедняками, убивали их, а потом трупы бросали в колодцы...»

Я говорю следователю, что не знаю об этом и не слышал, ибо я тогда не работал в селе. Что было до Октябрьской революции мне неведомо. После непродолжительного допроса отпустили, но, оказалось, не надолго. Через неделю меня с районного учительского совещания милиционеры увезли в районный домзак. В это время один из милиционеров выезжает в село Н. Ильмово на мою квартиру с обыс-

ком. Дома жены не было, она уехала в Буинск по семейным делам. Обыскали мои вещи, чтобы найти компромат на меня. Ничего не обнаружив милиционер приезжает в район. Хотя всем было известно, что я не антисоветчик и никакой не шпион иностранной разведки. Все же на другой день меня отправляют в Буинск на конфискованной лошади В. В. Вассиярова вместе с секретарем комсомольской ячейки села Михайловым. Всю дорогу я был формально на свободе, но разговаривать с секретарем комсомола было строго запрещено. Был-ли у него в руках ревельвер - не знаю. На пути в Буинск (около деревни Чепкес-Никольское, не доезжая до Убей) я встречаюсь с женой и говорю: арестовали по чьей-то указке...

Приехали в Буинск к главному управлению ГПУ. Меня ведут в тюрьму. Я говорю следователю, чтобы они не посадили меня в одну камеру с кулаками из Ильмова. Кулаки в тюрьме были озлоблены на учителей, они в большинстве случаев являлись свидетелями по делу так называемых врагов советского народа.

В камере было битком набито народу. Вместе с уголовниками находились и политические заключенные. Как узнали, что я учитель из деревни, стали кричать: "Ах, вы, предатели! Сволочи! Вас всех вешать надо... Придет время Вы будете отвечать за злодеяние... перед Богом и народом... Вы будете судимы господом..." Другие: «Не трогайте его, он попал сюда, значит, есть грешки».

Душно в камере, пахнет парашей и потом, сижу возле решетчатого окна и думаю: «За что меня посадили, что я сделал против Советской власти...»

В ночь перед допросом вижу сон: на столе горят пять свечей, что это означает? Неужели дадут 5 лет? За что?..

Перед отправкой в Казань ко мне в Буинск приехали на свидание жена и дети. Их привез по пути Д. А. Мартынов из Н.-Ильмово в Чувашию. Встречаться с ними мне было строго запрещено. Тогда у меня в голове появилась идея. Отпросился в больницу, якобы болею желудком, хотя бы таким образом встретиться с родными и близкими. Просьбу мою удовлетворили. Вот тогда только я мог иметь возможность свидания с семьей.

Допрос проводил старший следователь Царевский:

- Ваш дедушка И. Н. Николаев (это по жене) был помещик и член Земской Управы? Ходили к ним в гости?

- Тесть Ваш имел торговлю?

- Вы имели рысака и кто обучал его выезжать на бега?

- Собирали ли Вы гостей-кулаков и ходили ли сами к ним?

- Выступали ли на совещании Селького Совета в 1929 году против мероприятий уполномоченного Бикмухаметова по хлебозаготовке?

- Произносили Вы тост с поднятием стакана против Сталина?

- Имели ли участок земли в аренду для содержания рысака?

Главным обвинительным вопросом он поставил хлебозаготовку. По этому вопросу я дал разъяснение. Уполномоченный Бикмухаметов совершил перегиб в селе при выполнении плана хлебозаготовки. У крестьян собрали все, что они имели в амбарах - до последнего зернышка. Я был против такой политики обнищания народа. Разоблачительную статью на высших руководителей района я написал в газете «Новая деревня», которая выходила в г. Казани.

Выслушав мои доводы по всем заданным им вопросам, следова-

тель оставляет меня в кабинете на раздумье, а сам уходит в баню. На столе лежит кусочек хлеба, оставленный для меня следователем...

Читает старший следователь заключение. Вот содержание: «Кулаки села Новое Ильмово под руководством учителя М. А. Александрова воспрепятствовали мероприятиям по хлебозаготовкам, уполномоченному Бикмухаметову не давали провести продразверстку* в селе Новое Ильмово.

Судили нас открытым судебным заседанием. Кроме нас на суде было 12 человек.

Перед отправкой в лагерь нас сфотографировали, сняли отпечатки пальцев. На случай бегства.

Весна 1930 года. Из Буинского домзака отправили нас в Казань. По пути к месту назначения мы останавливались в татарских селениях и деревнях. Повсюду люди нас, арестантов, встречали хлебом и солью. Об этом знали в руководстве НКВД г. Казани, никаких запрещающих мер они не предпринимали. Женщины шли с нами рядом: угощали нас молоком, творогом, домашним хлебом... кто чем мог. Я давно знал, что татары - гостеприимный народ.

Мы шли пешком. Сопровождали этап (так называли группу арестантов) пять подвод с грузом - вещами арестованных. Отношение с солдатами и начальством было мирное.

В Казани нашу партию поместили в пересылочный домзак, где когда-то находился В. И. Ленин. Заключенные стали писать письма в вышестоящие организации, но помощи они не дождались.

Через неделю нас перебросили из пересыльного домзака в Центральный домзак. Сюда приехали ко мне родные.

В тюрьме запрещали нам читать и писать письма. Газет и журналов не было. Я написал письмо в «Учительскую газету», И. В. Сталину, Пешкову о пересмотре моего дела. Ответа не было. Тогда я и мои товарищи-коммунисты объявили голодовку. Через сутки к нам пришли военные в форме НКВД и объявили о решении открытого судебного заседания (нас обвиняемых не вызывали на суд).

По ст. 58$^{10}$, 58$^{11}$ заключили меня в концлагерь на пять лет. Столько же дали Николаевым: Степану и Егору Ивановичу, Казакову Никите, М. Симулину, а А. Карсакову - три года. В. В. Вассиярову дали расстрел. П. И.Николаеву - десять лет Соловецких лагерей.

2 сентября 1930 года. Нас ночью выстроили около домзака и повели на станцию. Посадили в Столыпинские вагоны и отправили на север страны.

В Мурманске проверяли наши вещи, документы. Изъяли все, что у нас было в кармане, и сказали, что они теперь нам не нужны. В тот же день нас отправили в Зеленый мыс. Заключенные работали с утра до вечера по добыче камней. От тяжелой работы многие не выдерживали. Погибали. И тут же их хоронили в глубокой яме. Через несколько дней пребывания здесь нас отправили дальше. В Холдеев мысе арестованных поместили в здании бывшей деревянной церкви. Прежде чем отправить на работу у всех проверяли состояние здоровья с целью определения годности к физическому, тяжелому труду. Состояние моего здоровья определили по второй категории. Это означает, что я должен выполнить полнормы. Здоровые должны были копать

---

***Продразверстка - обязательная сдача крестьянами государству по твердым ценам всех излишков хлеба и других продуктов.**

торф в объеме одного кубометра в сутки (это была норма), а мне - полкубометра. Кормили нас утром в 6.00, обед в 13.00 и ужин в 18.00 часов. Питание было достаточное и жирное. Кормили оленьим мясом. Среди заключенных в камере выбирали старших и воспитателей. «Авторитеты» и «блатные» тоже были. Меня назначили учителем. Занимался я с малограмотными заключенными после рабочего дня. Начальство лагеря меня использовало больше всего дежурным по кухне.

Издавалась газета «Перековка». Небольшие мои заметки публиковались в этой многотиражке. Стал общественным корреспондентом.

В феврале 1931 года была создана комиссия с целью освобождения лагеря от неработоспособных заключенных. Негодных к тяжелому труду отправляли в ссылку в другие лагеря. Было такое решение лагеря: выбраковывать негодных к тяжелому труду осужденных.

Негодных к труду отправили в Котлас. Прибыло сюда 15 вагонов с людьми. В основном были инвалиды и старики. Выстроили всех прибывших в один ряд и распределили по специальностям: кто на что способен. Меня записали счетоводом и оставили в Котласе, а остальных, не имеющих специальность и профессию, отправили дальше на катерах и пароходах в Сыктывкар в Коми АССР. Туда попали из Ильмова Николаевы: Степан и Егор, Алексей Карсаков, Семен Симулин.

Каждый ссыльный должен был найти себе работу, нужно было подыскать квартиру самостоятельно (без квартиры работу не давали, было строго запрещено). Меня приняли на работу в Котласский маслопром счетоводом. Около года я там проработал, а потом пригласили меня бухгалтером раймелкомбината. Хозяевами ссыльных был оперсектор ГПУ со своим штатом уполномоченных. Ссыльным они не давали покоя. По ночам делали облавы. Не работающих заключенных отправляли на лесосплав или лесоразработку.

Проверяли НКВДшники почти каждый день документы заключенных. На дому они устраивали обыски, чтобы знать, чем занимается ссыльный. Однажды у моего приятеля Колосовского нашли листовку пропагандистского направления и посадили нас всех троих в оперсектор - тюрьму и продержали около трех месяцев.

В 1933 году была страшная облава на людей. Всех стариков и инвалидов (работающих в том числе) собрали на бирже и отправили в Сыктывкар. Слышал, многие тогда погибли от голода и холода. Говорят, ели лягушек, дохлых собак и кошек. Я чудом остался в Котласе.

Досрочно начали выпускать ссыльных на волю в начале 1934 года. Меня освободили в феврале, но документы выдали только в мае того же года. Я прибыл в Чувашию в конце мая. В это время жена работала учительницей в д. Кашмаши Моргаушского района. Меня встретили дети - Зоя, Веня, Маргарита.

После заключения меня в тюрьму, нельзя было оставаться жене в с. Новое Ильмово, а нужно было эвакуироваться в Чувашию, на мою родину.

Семья прибыла в Киняры. Их устроили на квартире у Гаврила Карзакова. Сестра Евгения повседневно помогала Александре Васильевне в домашних хлопотах. Так они жили в трудных условиях, а главное - дождались меня.

* * *

Судебное церковное дело в селе Н. Ильмово было начато в день престольного праздника 26-го октября 1929 года. Церковь фактически не была тогда закрыта, хотя священника В. И. Иванова не было. Он был арестован и отправлен на принудительную работу.

По этому поводу начались волнения сельчан. Требовали вернуть священника. Тогда местное начальство решило пригласить священнослужителя Г. Е. Ефремова из с. Кайсарова для временного успокоения верующих.

Церковь открыли. Ключ хранился у церковного старосты Никиты Казакова. Состоялась служба, но не надолго. Позднее все участники событий были арестованы и отправлены в трудовые сталинские лагеря. Дело имело политический характер.

(Из воспоминаний М. А. Александрова).

* * *

## Список лиц арестованных по постановлению тройки НКВД в начале 1930 года.

1. Александров Михаил Александрович;
2. Вассияров Василий Васильевич;
3. Вассияров Григорий Осипович;
4. Вассияров Корнил Егорович;
5. Вассияров Владимир Александрович;
6. Николаев Павел Иванович;
7. Николаев Степан Иванович;
8. Николаев Егор Иванович;
9. Казаков Никита;
10. Иванов Василий Иванович;
11. Симулин Семен;
12. Карсаков Алексей;
13. Ефремов Григорий Ефремович.

* * *

СССР
Министерство
государственной
безопасности
г. Москва

Справка N 1019
о снятии судимости

**АЛЕКСАНДРОВ**
**Михаил Александрович**

1893 года рождения, уроженец с. Анат-Киняры Ишлейского района Чувашской АССР был осужден 31 июля 1930 года по ст. 58-10-11 УК РСФСР, к заключению в ИТЛ сроком на пять лет.

По постановлению Особого Совещания при Министре Государственной Безопасности Союза ССР от 27 сентября 1952 г. указанная судимость, вместе со всеми связанными с ней ограничениями с Александра М. А. снята.

**Зам. начальника отдела**
**«А» МГБ Союза ССР** (подпись)
**Начальник отделения** (подпись)

«10 октября 1952 г.»
3588н.

* * *

# *«Рассказываю о себе...»*

## (Из биографического очерка учителя Новоильмовской начальной школы Михаила АЛЕКСАНДРОВА)

## Школьные годы

Я родился 4 ноября 1893 года в с. Анат-Киняры Сундырской волости Козьмодемьянского уезда Казанской губернии седьмым ребенком. Отца звали Александр Алексеевич, по фамилии Алексеев. Мать - Елена Никитична была домохозяйкой, по характеру настойчивая и требовательная. В доме все делалось по ее инициативе. Она по снам могла предсказать будущее. Помню к ней приходили из соседней деревни женщины и заказывали... сны. Они оставляли свои вещи, якобы, они помогают матери видеть во сне по ним их будущее. Возможно она обладала предвидением. Не знаю. От матери передалось и мне такое наследство. Потом я в своем жизненном пути много раз убедился в том, что в снах есть доля правды и предвидел свое будущее. По науке это не подтверждается, говорят, сны являются продуктом пережитых впечатлений человека, но это не совсем правильно. Ученым предстоит в этой области открывать тайны мозга.

Всем известно, что в 1914 году началась война. За месяц до событий я вижу сон: в церкви народу полно, у всех на руках свечи, они гаснут, становится темно-темно... Утром просыпаюсь и рассказываю матери. Она говорит: «Это означает начало войны». А в феврале перед свержением царя Николая Второго вижу сон: в моей комнате за столом сидят царь Николай, жена его. Они оба в лаптях и одеты по-деревенски... На другое утро в церкви священник читает манифест об отречении царя...

По социальному происхождению и положению наша семья была из крестьян и по национальности из чуваш. Отец владел разными ремеслами: плотничал, рыбачил, занимался на кузнице ковкой металлов, в то же время играл на разных музыкальных инструментах. Очень любил музыку. Я помню как отец играл на балалайке, а Любовь Ивановна (моя первая учительница) плясала. Вообще мой отец был самородок по музыке: он сам мастерил балалайки, гусли и сам играл на них. Любовь к музыке передалась от отца. И до конца жизни я сам играл на различных музыкальных инструментах.

Отец и мать были неграмотными, несмотря на это они старались дать детям образование. Старшие сестры Анна и Фекла не сумели учиться в школе, они нужны были дома. Помогали родителям. А остальные получили первоначальное образование.

Я закончил 2-х классную Анат-Кинярскую школу в 1909 году.

Из детства особенно мне запомнилась ночная пастьба лошадей. Соревнования на лошадях проводились накануне праздника Троицы («Çимĕк каçĕ»). Выезжали верхом на конях на большую дорогу и соревновались, чья лошадь бежит быстрее. Самыми запоминающимися днями в детстве был выезд на сенокос, всей деревней на две недели. Каждая семья устраивала ночлег в палатке, которую накрывали свежей скошенной травой. Вечером разводили костер, на котором варили суп, кипятили чай. Мы ухаживали за лошадьми, водили животных на

пастьбище, на водопой. После работы молодежь устраивала гулянье. В это время в деревне оставались только старушки да маленькие дети. Так мы проводили летние каникулы.

В школе нас учила Л. И. Половинская. Она была русская, приехала вместе со своими родителями из итальянского города Генуи, по происхождению из дворян. Чтобы оценить ее по достоинству, у меня не хватит ни слов, ни воспоминаний о ней, ни благодарностей... Занималась она с двумя классами. В первые годы работы Любовь Ивановна не вполне усваивала чувашский язык, поэтому она пользовалась переводчиком. Услугу оказал ей школьный сторож М. Потянов (мы звали его дядей Мишей). На его квартире учительница собирала по субботам местное население и читала им лекции о вреде курения и алкоголизма. Любовь Ивановну в селе любили и уважали за ее справедливое отношение к людям. Она всегда защищала простых крестьян, пользуясь своим авторитетом у власти. По ее настоянию отменены несколько судебных дел, поданных земскому начальству.

Для школы она приобрела много наглядных пособий. У нее в классе находился шкаф-музей, где были все необходимые физические приборы. Уроки Л. И. Половинская проводила очень интересные, она всегда пользовалась наглядными пособиями и разными учебниками.

В 1904 году построили в деревне новое здание школы. Занятие проходили по новой программе Министерства просвещения. Обязательным предметом считался закон Божий. С чтения «Боже царя храни» начинался первый урок и заканчивался молитвой «Спаси Господи, люди твоя». На уроках мы научились читать на славянском языке евангелии и псалтырь. По праздникам мы посещали церковь. Любовь Ивановна расставляла нас по рядам перед иконой Божьей матери и следила за порядком. По христианским законам каждый учебный год ученики должны были исповедаться и причищаться у местного священника. На празднике «Рождество Христова» мы рано утром ходили по дворам и славили Христа. Это считалось тогда благородным делом.

Любовь Ивановна сама не вела уроки пения, учителя музыки не было. Поэтому она обратилась с просьбой в уездное земство, чтобы прислали учителя-музыканта. По ее настойчивой просьбе к нам направили выпускника Симбирской Учительской чувашской школы Т. С. Малышева. Он был родом из д. Елаур Сенгилеевского уезда Симбирской губернии.

По прибытии Т. С. Малышева в нашу школу многое изменилось, мы начали изучать нотную грамоту, изучали духовные песни и стали петь в церковном хоре. Под его руководством родился в школе ученический хор. После Октябрьской революции хор пел революционные песни. Мы разучивали песни на скрипке и на других музыкальных инструментах.

В 1907 году я закончил начальную школу с похвальным листом. Преподавание в школе за весь период обучения проходило на русском языке, что помогло усвоить практически русский язык.

После окончания 2-х классного училища в мае 1910 года стал

вопрос: куда пойти учиться?

## Учеба в Симбирской чувашской школе

В газете (название не помню) было объявление о дополнительном наборе в Симбирскую Чувашскую учительскую школу. В конце августа я выехал в Симбирск сдавать экзамены для поступления в школу. На дальнюю дорогу провожали меня учителя (Л. И. Половинская и Т. С. Малышев) и родители. Они дали мне на дорогу рубль серебром. Тимофей Степанович написал своему товарищу Ф. И. Поручникову письмо, в котором он просил способствовать мне к поступлению в школу.

26 августа 1910 года я прибыл в г. Симбирск с сундуком на плече (в сундуке были две пары белья и верхняя одежда). Поднялся с пристани и дошел пешком до школы.

На территории школы я заметил новое 2-х этажное кирпичное здание, построенное каким-то графом Шатровым, еще не убранное от щебней, древесных щепок и всякого строительного мусора.

Прибыло очень много деревенских ребят. Из сорока человек выбрали всего лишь одну группу. Сдавали экзамены по русскому языку (изложение) и арифметике (устно и письменно). Проверили голос. До начала учебных занятий мы работали на территории школы. Убирали мусор вокруг недавно построенного здания.

Учеба началась первого сентября. В нашей группе были только мальчики (25 учеников). Мы не знали, по какой программе будем учиться, что будут преподавать и какая эта группа. Слухи порождали разные сплетни. Только в процессе учебы мы узнали, что из нас готовят клиросных служителей (псаломщиков). Без нашего согласия Иван Яковлевич распоряжался по-своему. Была у него договоренность с епархиальным начальством готовить в срочном порядке младших служителей культа. Об этом Министерство просвещения не знало. Таким образом при чувашской школе были организованы годичные курсы по подготовке священнослужителей.

Нам стали преподавать церковно-славянский язык, русский язык, церковное пение, катехизис, священное писание. Занимались с нами 3 священника: Никифоров, Дормидонтов и Лебяжьев (позже его перевели на другую работу). По русскому языку преподавал В. Н. Орлов, по пению И. М. Димитриев (близкий друг Т. С. Малышева), но он заболел и умер. Приходил на уроки и Иван Яковлевич Яковлев. Он читал нам лекции по педагогике.

Питание было за счет школы и вполне приличное, как говорил Виктор Никифорович: «Такого питания вы не увидите дома». Меню было разнообразное: щи с мясом, рисовая каша, молоко, какао. На масленице кормили блинами, на пасхе куличами, пасхальными яйцами.

С поступающих в школу брали залог по 5 руб. Мне пришлось отдать золотую монету, хотя в течение учебного года никакого ущерба школе не делал, а залог не вернули.

В мае нас формально экзаменовали. Форму заявления - разрешения на сдачу выпускных экзаменов написал на классной доске

учитель С. М. Максимов, впоследствии ставший директором музыкального училища в г. Чебоксарах.

Экзамены были по русскому языку, по церковно-славянскому языку, церковному пению, катехизису. Об окончании курса документы не выдавали. Плату за обучение и питание за нас удержали по 50 рублей и без нашего ведома через консисторию*. Ничего не зная об результатах экзаменов, мы разъехались по домам.

В июле 1911 года я получаю письмо из Симбирской консистории, где сказано о назначении меня псаломщиком в с. Старо-Шаймурзино Симбирского уезда.

Приличной одежды у меня не было, а надо выходить в народ. Родители купили сапоги, пиджак и брюки. И я выехал на место назначения.

## Мечтал быть учителем, а стал псаломщиком.

Прибыв в город Симбирск, я разыскал попутчика в ту сторону. Неожиданно встретил сокурсника С. П. Петрова. Он довез меня до места назначения.

В Шаймурзине было 3 мечети и одна православная церковь. До моего приезда в деревне шла борьба между религиозными представителями мусульман и православных, за завладение некрещенными чувашами.

Настоятель церкви К. Г. Герасимов (выпускник Казанской духовной семинарии) принял меня холодно. Ему не хотелось иметь штатного служащего, а обходился местным гражданином М. А. Андреевым, которому платил копейки из церковных доходов.

На работу он меня принял, хотя был недовольным. Я стал привыкать к церковной службе. Собрал хор из сельской молодежи. Вместе с ними разучивали богословные песни и молитвы.

По прибытии на место я должен был явиться к благочинному. Благочинный Гневушев жил в с. Ст. Бурундуки. Поехал к нему на лошади хозяина квартиры. Получив от него благословение я приступил к своим обязанностям.

С детства я мечтал быть учителем и всегда думал о том, как мне сдать экстерном экзамены на звание учителя. И стал постепенно готовиться. И моя первая учительница Любовь Ивановна хотела, чтобы я выучился на учителя и продолжал славные традиции, начатые ею в школе.

В деревне было скучно. Мало было молодежи. Чтобы провести время весело, я купил скрипку и выписал по почте книгу «Самоучитель». И стал заниматься самостоятельно. У местного скрипача Андрея (фамилии не помню, он был в годах, оба глаза его не видели, частенько развлекал в деревне молодежь) я научился на гармошке играть вальс, польку, краковяк, местные чувашские мелодии и плясовые.

В марте 1915 года я подал заявление в консисторию с просьбой перевести меня в с. Шемалаково. Там не было священника и меня

---

***Консистория - орган церковного управления при епархиальном архиерее в русской православной церкви дореволюционного периода.**

временно устроили псаломщиком в русском селе Энбулатове.

В Шемалакове я создал хоровой коллектив. Мы исполняли церковные песни.

Во время церковной службы я два раза был призван в армию. Если в 1914 году меня забраковали по болезни, то через год я оказался в рядах действующей армии. Служил в 240-м пехотном запасном полку. Прошел курсы младших командиров, присвоили воинское звание ефрейтор, но на фронт не отправили. По близорукости меня взяли в госпиталь. Оттуда я был уволен со службы.

## Наконец, я - учитель



**На снимке:** М. А. Александров (второй слева) с женой и односельчанами (1927).

Выехал в начале 1917 года в г. Симбирск и сдал экзамены на звание учителя начальной школы.

В сентябре 1917 года я подаю заявление в Буинскую Земскую Управу с просьбой назначить меня учителем в какую-нибудь школу. Получив назначение в Больше-Аксинскую школу, я приступил к своим обязанностям. Оттуда меня перевели в Мало-Аксинскую начальную школу.

М.-Аксинская школа до меня была однокомплектная, а в октябре 1917 года открыли второй комплект. Я был назначен вторым учителем. Заведующая школой С. Е. Иванова была русская, знала неплохо чувашский язык. Встретила она меня с радостью. О чем я мечтал с детства, наконец сбылось. Я стал учителем. Какое счастье для меня?!

Школу посещали дети только из деревни Малая Акса, в которой бедняцкое население составляло около 60 процентов. Мало было и

зажиточных крестьян, кроме А. В. Васюнова, который имел ветряную мельницу.

Малая Акса составляет часть большого населенного пункта, объединяющий татарские деревни Нижний и Верхний Чекурск и чувашскую деревню Старо-Чекурск. В Ст. Чекурской начальной школе работала учительницей Николаева Александра Васильевна, окончившая чувашскую школу в Симбирске в 1916 году.

В школе мы разучивали некоторые революционные песни. На помощь к нам прислали агитатора из Городищенской волости М. Н. Ишмурова-большевика. Он на собрании учащихся и граждан объяснял о том, что такое Советская власть и кто возглавляет Октябрьскую революцию.

Готовились к Учредительному собранию. Составляли списки избирателей. На выборах мы свои голоса отдали за местных кандидатов: Д. П. Петрова, С. Н. Николаева, ...Амонова.

Выборы состоялись, но итоги нам не были известны. Почему - не знаю. Политически учителя недостаточно были осведомлены. Мы тогда не знали, что происходило в стране. В народе шло какое-то неясное представление о новой революционной власти.

Занятия в школе не отменили, хотя шла гражданская война в стране. Уроки пения проходили по другой программе. Из музыкальных инструментов в школе была скрипка.

Уроки проходили в одно время у обоих учителей в одном классном помещении. Отделение церкви от государства законом не было принято, но в школе закон Божий, как предмет, не учили, хотя в школе иконы были.

Жил я на квартире В. З. Тютюркина. Праздники проходили весело, но без спиртного. Часто я ездил в Старо-Чекурскую школу, где встречался с М. Ф. Веденским и его женой, учительницей Николаевой А .В. Там я познакомился со своей будущей женой.

Укреплялась власть Советов в деревне. По итогам выборов я был избран депутатом в местный Совет. Приступили к ликвидации неграмотности среди населения, тогда больше половины сельчан не умели писать и читать. Проводили собрания граждан, разъясняли новые законы. Организовали агитколлектив. Совершали поездки по соседним деревням, где пропагандировали Советскую власть. В то же время среди населения активно шла и контрреволюционная пропаганда. Она шла со стороны села Астрадамовки (в настоящее время село находится в Сурском районе Ульяновской обл.- **Н. К.**). Слухи говорили о том, что Советы должны быть без большевиков. Враги сеяли панику среди населения. Они же требовали ликвидации на местах Советов, установление диктатуры буржуазии.

В целях пропаганды нового общественного строя в д. М. Акса было принято решение об открытии народного Дома просвещения. Нашлись такие граждане, которые нагло выступали против его открытия. Требовали немедленного закрытия. Многочисленные враги Советской власти не смирились с потерей своей власти и богатств.

Поднялись на борьбу. Поэтому местные власти вынуждены были пригласить военные красноармейские отряды из Буинска, которым командовал Космовский, один из активных коммунистов Буинского уезда. Его отряд был в д. Верхнем Чекурске во время подавления бунта крестьян - татар. В перестрелке погибли люди.

## *«Выйти на пенсию я считал обидным»*

После освобождения из ссылки в 1934 году я работал на разных работах. Был бухгалтером, кассиром, председателем колхоза. И везде встречался с добрыми, отзывчивыми людьми, которые никогда меня в беде не оставляли. Помогали как могли: кто советом, а кто материально. Перед выходом на пенсию я работал учителем в Анат-Кинярской средней школе и преподавал русский язык и литературу. Организовал учительский хор. С концертом ходили в соседние селения.

В 1956 году состоялся юбилейный праздник песни в честь 400-летия основания г. Чебоксары. За активное участие в празднике я был награжден Почетной грамотой Президиума Верховного Совета Чувашской АССР и ценным подарком от районного Дома культуры.

Вышел на пенсию в 1957 году, проработав в школе более тридцати лет. На проводы на пенсию я не пошел, считал обидным, хотел работать. Но получил отказ. Тогда я решил заниматься музыкой самостоятельно. Записался на заочные курсы музыкального отделения при Центральном Доме Народного творчества. Прошел курсы элементарной теории музыки, затем 1-ый и 2-ой курсы гармонии.

3 декабря 1969 г. Чувашская АССР,
Чебоксарский р-он,
с. Анат Киняры.

* * *

СВИДЕТЕЛЬСТВО

Предъявитель сего, временный учитель села Шемалакова Буинского уезда Симбирской губернии Александров Михаил, на основании правил для производства испытаний на звание учителя церковно-приходской школы, изданных по Высочайше утвержденному 26 ноября 1888 года определению святейшего синода, подвергшись полному испытанию в Правлении Симбирского духовного училища и выдержав оное удовлетворительно, удостоен звания учителя церковно-приходской школы.

В удостоверение чего дано ему сие свидетельство за надлежащим подписанием и с приложением печати Правления Симбирского духовного училища. 1917 года, месяца февраля 16 числа.

Смотритель училища (подпись)
Помощник смотрителя (подпись)
Член Правления (подпись)
Делопроизводитель (подпись)

Печать правления Симбирского
Духовного училища.

* * *

Президиум Верховного Совета Чувашской Автономной Советской Социалистической Республики награждает тов. Александрова Михаила Александровича за умелую организацию художественной самодеятельности Почетной грамотой.

Председатель Президиума Верховного
Совета Чувашской АССР (подпись)

Секретарь Президиума Верховного
Совета Чувашской АССР (подпись)
г. Чебоксары,
26 октября 1956 г.

* * *

СПРАВКА

Выдана настоящая тов. Александрову М. А. в том, что он действительно работал учителем в школах Дрожжановского района Татарской АССР с 1 сентября 1917 года по 1 февраля 1930 года; работал в следующих школах: с 1 сентября 1917 года по 1 сентября 1924 года - учителем Мало-Аксинской начальной школы, с 1 сентября 1924 года по 1 февраля 1930 года - учителем Ново-Ильмовской начальной школы.

Заведующий роно (Кузьмин)

Приложена гербовая печать отдела народного образования Дрожжановского Райисполкома ТАССР

* * *

УДОСТОВЕРЕНИЕ

№ 8 5 июня 1963 г.

Предъявитель сего внештатный научный корреспондент научно-исследовательского института языка, литературы, истории и экономики при СМ ЧАССР Александров М. А. является членом фольклорной экспедиции института, направленный в Буинский район Татарской АССР сроком на 8 дней (с 6 по 13 июня) и в Батыревский район Чувашской АССР сроком на 12 дней (с 14 по 25 июня).

И. о. директора института (В. Димитриев)

* * *

ДИПЛОМ № 439219

Предъявитель сего тов. Александров Михаил Александрович в 1936 г. поступил и в 1940 г. окончил заочно полный курс Чувашского Государственного учительского института по специальности языка и литературы и решением Государственной Экзаменационной Комиссии от 1 августа 1940 г. ему присвоена квалификация учителя средней школы, с правом преподавания в V-VII классах.

Председатель Государственной
Экзаменационной Комиссии (подпись)
Директор (подпись)
Секретарь (подпись)

М. П.

г. Чебоксары,
19 октября 1940 г.
Регистрационный N 231.

* * *

Ишлейский район,
Анат-Кинярская средняя школа
Александрову Михаилу Александровичу

От всей души поздравляем Вас с правительственной наградой - Почетной грамотой Президиума Верховного Совета Чувашской АССР, которой Вы удостоены за Ваше активное участие в художественной самодеятельности и за высокое исполнительское мастерство.

Республиканский Дом народного творчества желает Вам новых

творческих успехов на поприще самодеятельного искусства, являющегося народной школой художественного воспитания трудящихся.

**Директор Дома народного творчества** **(В. Ржанов)**
г. Чебоксары,
ул. Ленинградская, д. 1.

# Его доброе дело

Учитель-пенсионер М. А. Александров из Чебоксарского района известен в Чувашии как самодеятельный композитор и собиратель народных песен. Им записано более 400 чувашских народных мелодий. Лучшие из них обработаны им самим для ансамблевого и хорового исполнения.

В 1963 году М. А. Александров участвовал в музыкально-фольклорной экспедиции, проведенной Научно-исследовательским институтом при Совете Министров Чувашской АССР. Песни, собранные им в Чувашии и Татарии, хранятся в рукописном фонде института и представляют большую ценность. Лучшие из них часто передаются по чувашскому радио, а также на сценах сельских клубов в исполнении самодеятельных хоровых коллективов.

**Е. СИДОРОВА.**
**(Из газеты «Советская Чувашия».)**



**На снимке:** музыкальный кружок Чебоксарского районного Дома пионеров при Анат-Кинярской средей школе (май 1967 года). Руководитель М. Александров.

## Некоторые записи из архивных документов

1895 г. прихожан в с. Н. Ильмово 205 дворов, 539 мужчин и 529 женщин; в дер. Старое Ильмово в 5 верстах 129 дворов, 388 мужчин и 371 женщина; в дер. Дрожжаном Чувашском Кусте при речке Шегель в 7 верстах 146 дворов, 437 мужчин и 424 женщины; в деревне Хойбулдино при речке Цильне в 6 верстах 57 дворов, 141 мужчина и 148 женщин.

* * *

В селе Н. Ильмово две земских школы: мужская помещается в собственном здании и женская, открытая в 1897 году, в церковной караулке;

В деревне Дрожжаном Чувашском Кусте в 1898 году открыто Министерское училище.

Ближайшие села: Городище 12 верст, до Убеи 16 верст.

Расстояние до Симбирска 66 верст, до Буинска 67 верст.

* * *

Открыты церкви в Убеях в 1846 г., Норваш Шигали в 1886 г., в с. Большая Акса в 1890 г., в Городище в 1864 г.

1845 г. В Городище открыт базар по четвергам в день троицкого заговения спустя день Святой Троицы,

1838 г. Учрежден в с. Убеи при волостном правлении Убеевский сельский банк, цель банка - дать возможность удельным крестьянам получить займы под умеренные проценты.

# IV. Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнчен тухнă паллă çынсем

(Умсăмах)



И. Я. Яковлев уçнă Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен революциччен пин ытла хресчен ачи пĕлӳ илсе аслă пурнăç çулĕ çине тухнă. Вĕсем хушшинче Тутарстанри Çĕпрел районне кĕрекен ялсенчи чăвашсем те пулнă. Шупашкарта пулнă май мана Чăваш наука Тĕпчев институчĕн наука архивĕнче (ЧНТИ) ĕçлеме тиврĕ. Чи малтан К. П. Прокопьев *(ӳкерчĕкре)* çинчен каласа парасшăн.

Революциччен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă ентеш - Константин Прокопьевич Прокопьев, ăна чăваш-

сен пирвайхи этнографĕсенчен пĕри теме пулать. Хăй Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çуралса ÿсни çинчен вăл «Похороны и поминки у чуваш» ятлă кĕнекинче (1903 çулта Хусанта вырăсла пичетленнĕ) асăнать. Кун çинчен эпир маларах вулакансене пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. К. П. Прокопьев пурнăçĕпе мана наукăн аслă сотрудникĕ П. П. Фокин паллаштарчĕ. Хăй вăхăтĕнче К. П. Прокопьев тăван ялпа çыхăннă ытти паха материалсем те пухнă. Чăваш халăх сăвви-юррисене, йăли-йĕркисене çырса илес ĕçе Шăмăршă (Чăваш Республики) священникне Ф. И. Иванова, Чăвашкасси (Ульяновск облаçĕ) шкулĕнчи малтанхи учителе В. Д. Дмитриева явăçтарнă. Вĕсем пухнă çав паха материалсемпе хăй çырнă кĕнекесенче усă курать. Унăн кĕнекисем Хусанта, Чĕмпĕрте тата Петербургра 1905-1907 çулсенче çапăнса тухаççĕ. Кунсăр пуçне унăн заметкисемпе статйисем «Известия о Казанской епархии», «Миссионерское обозрение», «Казанские губернские ведомости» хаçатсенче кун çути курнă. Хăйĕн этнографилле очеркĕсенче К. П. Прокопьев халăх пурнăçне анлăн сăнласа кăтартнă. Вĕсем илемлĕ литература произведенийĕсене çывăх, çăмăллăн вуланаççĕ. Çапах та священник ĕçĕ унăн тĕп ĕçĕ шутланнă.

К. П. Прокопьев 1872 çулта çуралнă. Вулама, çырма вĕреннĕ хыççăн Чĕмпĕр чăваш шкулне пырса кĕрет, унта чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри пулса тăрать.

«Симбирская учительская школа и ее роль в просвещении чуваш» ятлă кĕнекере К. П. Прокопьев çинчен çырнă йĕркесене вулама пулать. И. Я. Яковлев ăна вырăсларан чăвашла куçарас ĕçе те явăçтарнăмĕн. Чăваш каччи букварь хатĕрленĕ чухне те хăйĕн активлăхĕпе палăрать. 1899 çулта Хусанти тĕн служителĕсен академине вĕренме кĕрет. Çав çулсенчех литературăпа публицистика ĕçĕ те илĕртет ăна. Ытларах историпе этнографи очеркĕсем çырать.

1903 çулта К. П. Прокопьевăн «Брак у чуваш» ятлă кĕнеки пичетленсе тухать. Автор унта халăх мифологине те, йăла-йĕркисемпе хуçалăхри ĕçĕсене те, ял-йыш, çемье пурнăçĕн ыйтăвĕсене те хускатать.

Академирен вĕренсе тухсан Константин Прокопьевич Чĕмпĕрти коммерци училищинче законоучитель пулса ĕçлет.

Раççейри пĕрремĕш революци вăхăтĕнче К. П. Прокопьев вырăнти революционерсен юхăмне хастар хутшăннине те палăртмалла. 1906 çулта ăна арестлеççĕ, ытти вĕренекенсемпе пĕрле училищĕрен кăларса яраççĕ.

Вуннăмĕш çулсенче К. П. Прокопьев чиркÿ ĕçĕнче тĕрлĕ çĕрте ĕçлет, каярахпа Чĕмпĕр кĕпĕрнин проповедникĕ пулса тăрать. Ăна чăвашсем хушшинче Христос тĕнне сарас ĕçе вăйлатас тĕллевпе Пăва уесĕн проповедникне лартаççĕ. Каярахпа Тĕн миссийĕн миссионерĕ пулса тăрать.

Çирĕммĕш çулсенче К. П. Прокопьев Кургана куçса каять. Епископ пулса ĕçлет. Аçта вилни паллă мар. Хăш-пĕр авторсем ăна «халăх тăшманĕ» тесе айăпланă (тĕплĕнрех ентеш çинчен кĕнекен 105-116 страницисенче çырса кăтартнă).

Пирĕн ялтах тепĕр паллă çын - Александр Семенович Михайлов (1871) çуралнă. Вăл та 1883 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухать. 1889-1893 çулсенче Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкулта учитель пулса ĕçлет. 1893-1897 çулсенче Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ. Священникре ĕçлет. Бугуруслан уесĕнче (Самар кĕпĕрни) Турă саккунĕсен предметне вĕрентет. Нумай вăхăт хушши Кивĕ Ганькино ялĕнче священник пулса ĕçлет. Хăй пурăннă ялсенче вăтам пĕлÿ илмелли училище уçас ĕмĕтпе И. Я. Яковлев патне çыру çырать. Ĕмĕчĕ пурнăçланаймасть.

Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 1896 çулта

çуралса ӳснӗ Александра Васильевна Николаева (ӳкерчӗкре). И. Я. Яковлев тăрăшнипе уçнă ялти шкултан вӗренсе тухсан ашшӗ ăна, 13 çулхи хӗрачана, Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен Чăваш шкулне вӗренме янă. Пӗлмен-курман хулана Чӗмпӗре каякан ял çыннисемпе пӗрле çула май ларса килнӗ. Чăваш шкулӗнче вăл 1909-1916 çулсенче пӗлӳ илнӗ, вӗренсе тухсан ăна хăйӗн тăван ялӗнчен 16 çухрăмри Кивӗ Чакăри шкула ӗçлеме яраççӗ. Шкул заведующийӗ М. Ф. Веденский çамрăк учительницăна ăшшăн кӗтсе илет, шкул шучӗпе тӳлесе пӗр карчăк патне хваттере вырнаçтарать, шкул лаптăкӗнче туса илнӗ ял хуçалăх продукчӗсемпе тивӗçтерет, ӗçре куллен пулăшса пырать. Çак ялтан инçех мар Кӗçӗн Аксури шкулта Шупашкар çывăхӗнчен килнӗ М. А. Александров ӗçленӗ. Икӗ çамрăк çирӗп туслашаççӗ, 1918 çул пуçламăшӗнче пӗрлешеççӗ. Çак вӗренӳ çулӗнчех Александра Васильевна Кӗçӗн Аксу шкулне ӗçлеме куçать.



1925 çулхи август уйăхӗнче М. А. Александрова Çӗнӗ Йӗлмелӗнчи пуçламăш шкул заведующийӗ пулма куçараççӗ. Александра Васильевна вара Çӗнӗ Йӗлмелӗнчи шкула 1927 çулта килет, унччен Кӗçӗн Аксурах ӗçленӗ. Вӗсем ун чухне икӗ ача - Вениаминпа Зоя - ывăлӗпе хӗрне пăхса ӳстернӗ. Кил-йыш И. Я. Яковлев шкулӗ çумӗнчи хваттерте пурăнма пуçлать. Çӗнӗ учительсем шкул хыçӗнчи пӗчӗкçӗ çырман икӗ енӗпе те улма-çырла сачӗ ӗрчетеççӗ. Вӗсем килнӗ хыççăн шкул сăн-сăпачӗ улшăнать, ăна тӗпрен юсаççӗ. Вӗренӳ процесӗ лайăхланать, шкул ялти культура вучахӗ пулса тăрать. Александра Васильевна хăй ача чухне вӗреннӗ шкулта ӗçлеме тӳр килнӗшӗн чунчӗререн хӗпӗртет. Анчах самана синкерӗ кунта та çитет. 1930 çулхи январӗн 30-мӗшӗнче М. А. Александрова «халăх тăшманӗ» тесе тытса каяççӗ. Ăна кулаксемпе çыхăну тытнă, вӗсем патне хăнана çӳренӗ, унта Сталина хирӗçле сăмахсем каласа курка çӗкленӗ тесе айăпланă. Çакăн хыççăн Александра Васильевна хăйне те айăпласран хăраса Чăваш Республикине куçса каять, Муркаш районӗнчи Кашмашри 7 çул вӗренмелли шкулта ӗçлеме пуçлать. Йывăр лав туртма тивнӗ кунта учительницăна, ăна пуçламăш шкула ертсе пыма шаннă. Колхоз йӗркеленӗ çӗре активлă хутшăннă вăл.

Айăп тупайманнипе 1934 çул пуçламăшӗнче М. А. Александрова Мурманскри тӗрмерен кăлараççӗ, вара вăл çемйи патне таврăнать, учительте ӗçлеме пуçлать. 1936-1939 çулсенче Шупашкар районӗнче Чантăрти 7 çул вӗренмелли шкулта ӗçленӗ вӗсем. Михаил Александрович шкула ертсе пырать. Кунта та Александровсем хăйсем хыççăн ырă ят хăвараççӗ. Унтан учительсен çемйи çак районти Анат Кӗнере, Михаил Александровичăн тăван ялне куçса килет. Кунти вăтам шкулта вӗсем тивӗçлӗ канăва тухиччене ӗçлеççӗ. Михаил Александрович - 1957 çулта, Александра Васильевна - 1961 çулта тивӗçлӗ канăва тухаççӗ. Александра Васильевна шкулта 45 çул ӗçлесе 65 тултарсан çеç тивӗçлӗ

канăва тухнă. Мăшăрĕпе 5 ача пăхса ҫитĕнтернĕ, вĕсене пурне те пĕлӳ парса анлă ҫул ҫине кăларнă. Александра Васильевна кирек ăҫта пулсан та общество ĕҫне хастар хутшăннă. Ана темиҫе хутчен те район Совечĕн депутатне, тăтăшах ял Совечĕн депутатне, районти халăх сучĕн заседателĕ пулма суйланă. Тивĕҫлĕ канăва тухсан та учительница халăх ĕҫне хастар хутшăннă. Тава тивĕҫлĕ ĕҫсемшĕн пултаруллă педагога 1950 ҫулта Ленин орденĕпе, ҫавăн пекех тĕрлĕ медальсемпе наградăланă, 1956 ҫулта Чăваш АССР тава тивĕҫлĕ учителĕн ятне панă.

Александра Васильевнăпа пĕр вăхăтра (1909 ҫулта) Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнисем хушшинче Упирен (Ҫĕпрел районĕ) Г. В. Зайцев - Тал-Мăрса, каярахпа паллă сăвăҫă, пулнă. Вăл пирĕн ентешрен пĕр ҫул маларах вĕреннĕ. Георгий Тал-Мăрсапа Санюк (ăна ҫапла чĕннĕ) кунта паллашаççĕ, каярахпа вăл сар ҫӳҫлĕ чиперкке хĕре куҫ хывать. Шкулта йĕрке питĕ ҫирĕп пулнă, хĕрачасем арҫын ачасен сукмакĕпе утма та вăтаннă, иртсе пынă чухне чарăнса тăма та хăюлăх ҫитереймен. Г. Тал-Мăрса Санюк патне сăвăсемпе ҫырусем ҫырнă, вĕсем икĕ альбом чухлех пухăннă. Александра Васильевна ҫав ҫырусене чылайччен упранă, анчах вăрҫă вăхăтĕнче вĕсем ҫухалнă. Тал-Мăрса чăваш шкулĕнче 1915 ҫулччен ҫеҫ вĕреннĕ, ҫав ҫулхине вăл империализм вăрҫине тухса кайнă. Тухса каяс умĕн Санюка курма ĕмĕтленнĕ, анчах тӳр килмен. Килĕштернĕ хĕре халалласа сăвă йĕркисем шăрҫаланă:

> Шăнкăртатса ҫырма юхĕ,
> Хумĕ ҫинче эп сикес ҫук,
> Каҫпа сар хĕр вăййа тухĕ,
> Ун сăввине эп илтес ҫук.

1916 ҫулта вăрҫăра аманса Тал-Мăрса килне - Упие таврăнать. Малтан Шăмăршăра учительте ĕҫлет, каярахпа Хусанта ĕҫлет, вĕренет. Пĕррехинче, килне таврăнсан Г. Тал-Мăрса Упирен инҫех мар Ҫĕнĕ Йĕлмелне Санюка курма тесе пырать. Ҫак вăхăтра хĕр Кĕҫĕн Аксура ĕҫленĕ вăл. Ҫĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкул заведующийĕ И. С. Кирпичников Санюк качча тухни ҫинчен пĕлтерет. Часах вăл та ҫемье чăмăртать. 1921 ҫул пуҫламăшĕнче поэт мăшăрĕпе Хусантан Упие куҫса килет, иккĕшĕ те Хурăнварти иккĕмĕш сыпăклă шкулта ĕҫлеме пуҫлаççĕ. Ҫак ҫулхине Санюкăн ăна учительсен пĕр канашлăвĕнче юлашки хут курма тӳр килет. Ҫакăн хыççăнах выҫлăхран тарса Г. Тал-Мăрсапа мăшăрĕ вăхăтлăха тесе Ҫĕпĕре тухса каяççĕ. Ҫĕпĕрте поэт тифпа чирлесе 1921 ҫулхи декабрĕн 8-мĕшĕнче 26 ҫултах вилсе каять. Хăрушă вилĕм Санюка та ҫав тери пăшăрхантарнă. Тал-Мăрса ăна юратнă, ун ҫинчен качча кайсан та сăвăсем ҫырнă-ҫке-ха. Вĕсенчен хăш-пĕрисем поэтăн «Хĕрлĕ Ҫар ҫыннин юрри» кĕнекере те пур.

Ҫулсем иртнĕҫемĕн те Александра Васильевнăн асĕнчен тухман Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче иртнĕ вăхăтсем. Ҫав ҫичĕ ҫул унăн чĕринче нихҫан сӳнми хĕлхем чĕртсе хăварнă. Педагогикăпа дидактикăна И. Я. Яковлев, вырăс чĕлхине унăн мăшăрĕ Екатерина Алексеевна вĕрентнĕ, хор кружокне Ф. Павлов ертсе пынă, чистописанипе рисовани урокĕсене «Нарспи» поэма авторĕ К. В. Иванов ирттернĕ. Пĕрле вĕреннисенчен чылайăшĕ чăваш шкулĕн историйĕнче паллă йĕр хăварнă. Акă, Ульяна Нягина Ҫĕпрел районĕнчи Хулаҫырминчен вăл. Пĕр вăхăт хушши Хусан кĕпĕрне Советĕнче хĕрарăмсен пайĕнче ĕҫленĕ. Ф. Д. Дмитриева - Элюкке Чăваш педагогика институчĕн доценчĕ. Анна Токсина - Чăваш Республикин тава тивĕҫлĕ артистки. Г. Лучкова Пушкăрт ҫĕршывĕнчи Слакпуҫĕнче ачасене вĕрентнĕ, К. Иванов шăллĕне - Квинтилиана качча тухнă.

Чĕмпĕрти И. Я. Яковлев шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтсем А. Александрован асĕнчен юлашки кунччченех тухман. Вилес умĕн виҫĕ кун маларах (вăл 1976 ҫулхи июнĕн 30-мĕшĕнче 80 ҫула ҫитсе вилнĕ, мăшăрĕ

темиçе çул маларах çĕре кĕнĕ) Галя ятлă хĕрĕнчен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен çырса хăварма тесе тетрадь ыйтнă. Çав халал йĕркисене пĕр улăштармасăр, вырăслах илсе кăтартатăп:

«Самые хорошие воспоминания остались у меня о трудовом воспитании в Симбирской чувашской учительской школе. В наших комнатах не было техничек. Все работы по уборке выполняли сами, по дежурству в классах, в коридорах, в умывальной и на кухне. Чистили картошку, расставляли по столам хлебные тарелки до прихода ребят и чашки с супом. В большую перемену в класс несли куски черного хлеба с солью. Иван Яковлевич нам преподавал педагогику и дидактику в 1914-1916 годах. Тогда у него слух был не важный, поэтому отвечать вызывал к кафедре.

Самое теплое воспоминание оставила Екатерина Алексеевна - близкий друг и жена Ивана Яковлевича. Она в нашем классе (2 кл.) преподавала русский язык. Захватывающе интересно проходили уроки русского языка. Она готовила нас к выступлениям с художественным чтением, декламацией, инсценировками. Пройденный материал по русскому языку закрепляли проведением вечеров с декламацией заученных стихотворений и произведений. В своей работе в школе я тоже подражала ей. Проводила детские вечера во время родительских собраний. Я по сей день не могу забыть бытность мою в Симбирской Чувашской школе». Асаилӳсене пĕр кун хушшинче темиçе хутчен чарăнса тăрса çырнă. Тепĕр кун ирхине каллех çак хут листи çинех çĕнĕ йĕркерен малалла çырма пуçланă: «Как я увидела, Виталий, твой подарок (кунта сăмах В. П. Никитин (Станьял) çинчен пырать.- **Н. К.**) сразу у меня появились слезы. Иван Яковлевич предстал передо мной, как живой».

Çакăнпа çырни татăлать. Юлашки сăмахне çырнă хыççăн ручки аллинчен вĕçерĕнсе урайне ӳкет, вара урăх çыраймасть, тăнсăр пулать. Тепĕр кунне вилет. Пĕлесчĕ, мĕн çырнă пулĕччĕ-ши ватă учительница малалла? Калама йывăр. Мĕн чĕри тапма чарăниччен, юлашки сывлăшĕ тухми пуличчен Чĕмпĕрти чăваш шкулне манма вăй çитерейменвăл, хăйĕн аслă та мухтавлă учительне - И. Я. Яковлева асра тытнă. Кунтан та пархатарлăраххи мĕн пулма пултарĕ-ши тата?

«Александровсем пилĕк ача пăхса çитĕнтернĕ. Вĕсене анлă çул çине кăларма, паллах, çăмăл пулман. Асли - Вениамин тата ун хыççăнхи Зоя, Кĕçĕн Аксу шкулĕнче ĕçленĕ чухне çуралнă. Вениамин вăрçăн пирвайхи кунĕсенчех фронта тухса кайнă. 1942 çулта Сталинград патĕнчи вут-çулăм ăшĕнче хыпарсăр çухалнă. Зоя, ашшĕпе амăшĕ пекех, ĕмĕрне учительте ĕçлесе ирттернĕ, халĕ тивĕçлĕ канура. Краснодар крайĕнче çемйипе пурăнать. Маргарита хĕрĕ те педагог профессине суйласа илнĕ, нумай çул хушши шкулта ĕçленĕ. Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ ятне панă. Роза - врач-педиатр, вăл та тивĕçлĕ канура, халĕ Киров хулинче пурăнать,- тесе çырать Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче пурăнакан таврапĕлӳçĕ А. А. Казаков. Вăл темиçе çул хушши Александровсен пурнăçне тĕпченĕ, паха документсем пухнă. А. Александрован пурнăçĕ ял историйĕнче паллă вырăн йышăнать. Александра Васильевна шăпипе интересленнĕ май, Шупашкар районĕнчи Анат Кĕнерте Александровсем пурăннă çуртра пулса куртăм. Халĕ унта Галина Михайловна хĕрĕ пурăнать. Вăл пире ашшĕпе амăшĕ çинчен нумай каласа кăтартрĕ. Хăй пурăннă вăхăтра Михаил Александрович хура хуплашкаллă тетрадь çине Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче пулса иртнĕ событисем çинчен тĕплĕн çырса хăварнă. Малалла Александровсен пурнăç шăпи çинчен çырнă "Чĕмпĕр чĕкеçĕ" очеркпа 94-99 страницăсенче паллашма пулать.

# 1. П. М. Миронов - чăвашран тухнă паллă ăсчах



Павел Миронович Миронов ятне вăл çуралнă тăрăхра кăна мар, ун тулашĕнче те пĕлеççĕ. Вăл - математика учебникĕсен авторĕ, темиçе ют чĕлхе пĕлнĕ.

П. М. Миронов 1861 çулхи чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнче Тутарстан Республикине кĕрекен Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă. Мироновсен чухăн çемйи тăм пӳртре пурăннă, амăшĕн пĕчĕк ĕç укçипе тăранкаланă. Павăла сакăр çул тултарсанах ĕçе янă. Пĕчĕк чух вăл час-часах чирленĕ, пуçне кĕсен-çăпан тухнă.

Ялта шкул çурчĕ пулман, ачасем чиркĕвĕн хурал пӳртĕнче вĕреннĕ. Вĕренекенĕсем 7-8 ача кăна пулнă. Павăл чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри шутланнă. Çырма, вулама, шутлама класра пуринчен малтан вĕреннĕ.

И. Я. Яковлевăн «Асаилӳсем» кĕнекинче Павел Миронов çинчен калани пур. Унта вăл çапла çырнă: «Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Павел Миронов чăваша астăватăп. Ăна, япăхса кайнăскере, кукша пуçлăскере, хĕрхенсе шкула илсе пытăм. Малтан мунчара лайăх çуса тасатрăм, кукша пуçне хырса ятăм. Миронов математикăпа çав тери пултаруллăччĕ».

Павăл чăннипех те питĕ тăрăшуллă ача пулнă. Каярах ун пултарулăхне тĕнчери ученăйсем те асăрханă. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне Н. М. Охотниковпа пĕр вăхăтра пĕтернĕ. Свидетельствăри вунпĕр паллăран тăхăр предмечĕпе «5» илнĕ, иттисем «4» паллăсем пулнă. Пуçламăш шкул учителĕн ятне илнĕ çамрăка И. Я. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчех кĕçĕн классенче математика вĕрентме хăварать. Çулталăкран Павел Миронович Матак ялĕнче (Çĕпрел районĕ) ĕçлеме пуçлать. Каярах ăна Шăмăршă ялне (халĕ Чăваш Республикинчи район центрĕ) куçараççĕ. П. М. Миронов шкулта хытă интересленсе ĕçлет, ачасемпе урок тулашĕнче калаçусем ирттерет, çут çанталăка сăнас тĕллĕшпе экскурсисем йĕркелет, ӳсен-тăрансен тĕнчине тĕпчет. Çав хушăрах вăл хăй тĕллĕн нумай вĕренет. Мăшăрĕ О. В. Миронова каланă тăрăх, Павел Миронович кĕнекесем, журналсем çырăнса илет, нумай вулать, çут çанталăка тĕпчет, ӳсен-тăрансен гербарийĕсене пухать. Чăваш шкулĕнче вĕренӳ процесне лайăх йĕркелени Миронова хытă интереслентерсе янă. Шкулта вăл алгебра уравненийĕсене шутласси çине пысăк тимлĕхпе пăхнă, паллă мар виçĕ хисеплĕ задачăсем шутлама юратнă. Павел Миронович Чĕмпĕр кĕпĕрнин земствин стипендиачĕ пулнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтернĕ хыççăн вăл Оренбургри учительсен семинарине вĕренме кĕнĕ, 1884 çулта ăна ылтăн медальпе пĕтернĕ, хулари училищĕсен учителĕ пулса тăнă. 1884 çулхи çурла уйăхĕнче Оренбургри вĕренӳ округĕ П. М. Миронова кунти виçĕ класлă училищĕне арифметикăпа геометри учителĕ пулма уйăрса лартнă. Çав вăхăтрах вăл учитель-инспектор ĕçĕсене те туса пынă. Училищĕри чаплă педагог энтомологипе* интересленнĕ, Оренбург тăрăхĕнчи флорăна тишкернĕ, пуян гербари пухнă. Çав çулсенче Оренбургри вĕренӳ округĕн попечителĕ пулса Д. И. Михайлов ĕçленĕ. Вăл Миронова хытă хисепленĕ, унăн наука ĕçĕсене интересленсе сăнанă. Каярах попечитель Миронова ӳсен-тăрансене систематизацилес енĕпе пĕрле

*Энтомологи - хурт-кăпшанкăсене тĕпчекен наука, биологи наукин пĕр пайĕ.

ĕçleme чĕннĕ. 1889 çулхи раштав уйăхĕн 20-мĕшĕнче ăна коллеги советникĕ пулма, 1892 çулхи çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче вара коллеги асессорĕ пулма çирĕплетнĕ. 1892 çулхи çĕртме уйăхĕнче Павел Мироновича Ĕпхӳри (Уфари) уес училищине арифметика тата геометри учительне куçараççĕ. Çав училищĕрен хулари икĕ класлă училище туса хунă май 1901 çулхи утă уйăхĕн пуçламăшĕнче ăна заведующи пулма уйăрса лартаççĕ, çав çулах авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа вăл Ĕпхӳ хулинчи 4 класлă пĕрремĕш училище учитель-инспекторĕ пулса тăрать. Хĕрарăмсен гимназийĕн саккăрмĕш класĕнче педагогика тата дидактика предмечĕсене вĕрентет.

Çав çулсенче ун патĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташĕсем: Г. И. Комиссаров этнограф тата историк, чăваш шкулĕнчи юрă урокĕн преподавателĕ А. П. Петров (Туринге) пулаççĕ. Г. И. Комиссаров каярах çав тĕлпулу çинчен И. Я. Яковлева каласа панă.

Ĕпхӳре те, Оренбургри пекех, вĕренекенсем хăйсен учительне хытă юратнă, унпа канашланă. Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисене ун патне вĕренме вырнаçтарасшăн пулнă. Миронов учительсемшĕн те тăрăшнă, вĕсене хысна хваттерĕсене вырнаçтарнă, пособисем памалла тунă. 1905 çулхи çулла П. М. Миронов кĕске вăхăтлăха чикĕ леш енне кайнă, Францире, Швейцарире, Австро-Венгрире пулнă.

1906 çулта Оренбургри вĕренӳ округĕн попечителĕ Н. А. Бобровников, И. Я. Яковлев ыйтнипе, П. М. Миронова Уральск облаçне халăх училищисен инспекторне тата директорне куçарнă. Тĕрлĕ çĕртен пухăннă çынсем тата куçса çӳрекен казахсем пурăннă кунта. Шкулсем сахал пулнă. Миронов çĕнĕ вĕренӳ заведенийĕсем йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннă. Уральск облаçĕнче ĕçленĕ пилĕк çул хушшинче вăл 55 шкул уçнă, вĕсене кирлĕ оборудованипе, пособисемпе тивĕçтернĕ. Павел Миронович учительсемшĕн те тăтăшах тăрăшнă, вĕсене мораль тата пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшнă. Вăл сĕннипе хăш-пĕр учительсем уйсене тырă акма, çĕр улми лартма тытăннă. Учительсен пуçарулăхне аталантарас, вĕсене пĕтĕçтерес, ĕçпе хытăрах интереслентерес тĕллевпе П. М. Миронов уйăхсерен тухакан алăпа çырса журнал кăларма тытăнать. Усал сунакансенчен сыхланас тĕллевпе, вăл ăна «Уральск облаçĕнчи халăх училищисене инспекцилемелли кăтартусем» тесе ят парать. Павел Миронович журналăн кашни номерĕнче малтан вĕренӳ округĕн кăтартăвĕсене, унтан педагогика, истори темисемпе çырнă статьясене (унта юмахсем, казахсен халапĕсем те кĕнĕ) вырнаçтарнă. Учительсене пĕтĕçтерес тĕллевпех вăл пĕр-пĕрне пулăшмалли общество йĕркелет. Учительсем ăна çав обществăн яланхи хисеплĕ членне суйлаççĕ.

Инспектор ĕçне туса пыма вăхăт, вăй-хал нумай кирлĕ пулнă. Павел Миронович çулталăкра икĕ хут çеçен хирти шкулсенче пулнă, çавăн чухне Каспи тата Арал тинĕсĕсем таран çитнĕ. Ăна лашасемпе те пилĕк пин çухрăм çул тума тивнĕ. Йывăр ĕç ун сывлăхне чылай хавшатнă. 1912 çулта П. М. Миронов отставкăна тухать, пурăнма Ĕпхӳ хулине таврăнать. Çав çулсенче вăл питĕ нумай статьясем çырнă, пичетлесе кăларнă, учебниксемпе пособисем çырса хатĕрленĕ. Çапла, вăл "Геометри. Хула училищисен курсĕ" (1905), "Пуçламăш шкулти

ăнланулла вулавăн тĕслĕхлĕ урокĕсем" (1906), «Арифметика. Тулли числосемпе вунпарлă ваксен системăллă курсĕ» (1912) тата урăх йышши 10 кĕнеке ытла пичетлесе кăларнă. Миронов кĕнекисене чи лайăххисен шутне кĕртнĕ. Вĕсене халăх çут ĕç министерствин ученăй комитечĕ çирĕплетнĕ хыççăн темиçе хут та пичетлесе кăларнă.

П. Миронов хăйĕн пĕтĕм кун-çулне математикăпа çыхăнтарнă, наука конкурсĕсене активлă хутшăннă, вĕсенче яланах çĕнтернĕ. Çавăн пекех математика ĕçĕсемшĕн П. М. Миронова Францири наукисен академийĕн премине парса чысланă.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн преподавателĕ В. Н. Никифоров çырнă асаилÿсенчен тата çакă паллă: Павел Миронович педагогика ĕçĕн тапхăрĕнче Хĕвелтухăç-Европа флорин пуян гербарине тунă.

О. В. Миронова асаилĕвĕсем тăрăх, П. М. Миронов çут çанталăка çывăх пулас тĕллевпе Чишма станцийĕ çывăхĕнче пĕчĕк хуçалăх йĕркелет, унта пахча, садĕрчетет, утар пахчи йĕркелет, калчасене пăхать.

П. М. Миронов тата çав вăхăтра Ĕпхÿре пурăннă ытти чăваш культура ĕçченĕсем тăрăшнипе 1918 çулта чăваш учителĕсен семинарийĕ уçăлать. Ăна П. М. Миронов ертсе пырать. Çав вăхăтри йывăр лару-тăрăва пăхмасăр, Павел Миронович семинари ĕçне питĕ лайăх йĕркеленĕ.

Ырми-канми йывăр ĕç юлашкинчен П. М. Миронов сывлăхне хавшатса çитернĕ. Вăл 1921 çулхи авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна Ĕпхÿ хулинче пытарнă.

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкулăн пĕр пÿлĕмĕнче П. М. Миронова халалланă стенд пур. А. Казаков учитель-таврапĕлÿçĕ ученăй-педагогăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне нумай çул хушши тĕпченĕ. Çак очеркра та вăл пухнă пуян архив материалĕсемпе усă курса çырнă.

1991 çулхи ноябрь уйăхĕнче ял çыннисем П. М. Миронов çуралнăранпа 130 çул çитнине анлăн паллă туса ирттерчĕç. Уяв ялти вăтам шкулăн пухусен залĕнче пулса иртрĕ. Савăнăçлă пухăва кĕске сăмах каласа ял Совет председателĕ Г. Н. Карсаков уçрĕ. Павел Мироновичăн пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе А. А. Казаков таврапĕлÿçĕ



тĕплĕн паллаштарчĕ. «Йĕлмел» ансамбль хăйĕн çĕнĕ концерт программипе уява ытларах пуянлатрĕ. Концертне Н. П. Мулеев ертсе пычĕ. Мари Республикинчен килнĕ Г. А. Арсентьев юрăçă тата Чăваш Республикинче пурăнакан Г. Н. Кольцов композитор та ял çыннисене хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Хăнасене П. М. Миронов çуралнă вырăна кайса кăтартрĕç. Халĕ унта Р. К. Улькина колхозница пурăнать. Пÿрчĕ сыхланса юлман. Павел Мироновича сума суса вăл пурăннă çурт вырăнĕнче Асăну хăми çапнă. Унта «Ку вырăнта паллă ученăй-математик П. М. Миронов çуралса 1861-1871 çулсенче пурăннă» тесе çырнă йĕркесене вулама пулать.

## Павел Миронов йĕрĕпе

(А. Казаков учитель, ĕç ветеранĕ асаилнисенчен)

Павел Миронович Миронов математик çинчен эпĕ чи малтан 4-5-мĕш классенче (1944-1945 çулсем) вĕреннĕ чухне илтнĕ. Пире ун çинчен хамăр касăрах (ĕлĕк ăна Пасар касси тенĕ, халĕ П. М. Миронов ячĕпе хисепленекен урам), пиртен икĕ кил урлă аналалла пурăнакан ватă çынсенчен пĕри - Никифор Егорович Егоров каласа кăтартсаччĕ. Унăн Витя ятлă кĕçĕн ывăлĕ манпа пĕр класрах вĕренетчĕ. Çавăнпа та эпĕ вĕсем патне час-часах пырса çÿренĕ. Н. Е. Егоров мĕн пенсие тухиччченех Çĕпрел райповĕн тĕп бухгалтерĕнче ĕçленĕ. П. М Мироновсен çемйи те çак касăрах, вĕсене хирĕçле ретре тĕлме-тĕлех пурăннă иккен. Халĕ вăл вырăнта Р. К. Улькина колхозница пурăнать. Н. Е. Егоров чаплă ăсчахран 20 çул кĕçĕнрех пулсан та, ун çинчен нумай пĕлетчĕ. Ун чухне вăл каласа панисене çырса пыманшăн эпĕ халĕ те ÿкĕнетĕп.

- Чирлĕ пулнă май, выçăллă-тутăллă пурăннă, çĕтĕк-çатăк тумтирпе çÿренĕ. Çапах та «пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕреннĕ. Каярахпа тĕнчипе паллă ученăй-педагог пулса тăнă,- тесе калаçни халĕ те асра. Унтан И. Я. Яковлев ăна хăй шкулне илсе кайни, унта мĕнле вĕренни тата ытти сем çинчен каланисене те астăватăп.

Пĕррехинче Çĕпрелĕнчи кĕнеке магазинĕнчен «Чăваш календарĕн» 1970 çулхи кăларăмне туянса таврăнтăм. Каçхине çак календаре пăхса ларнă чухне Н. Красновăн «Паллă математик» ятлă кĕске статйи куç умне килех тухрĕ. Вуласан тĕлĕнсех кайрăм. Унта çырнă тăрăх, нумаях пулмасть çеç пĕлнĕ иккен-ха Миронов çинчен.

- Ха, ку Никифор Егорович каласа кăтартнă Павлуша (Миронова ача чухне çапла чĕннĕ) вĕт,- тетĕп. Çав календарьтех кăшт маларах Г. Трофимовăн «Французсем ăшшăн саламлаççĕ» статйинче çапла çырнăччĕ: «XX ĕмĕр пуçламăшĕнче П. М. Миронов математик-педагог Франци академийĕпе çыру урлă çыхăну тытса тăнă».

- Вăт мĕнле çын пулнă вăл, Павлуша,- тетĕп каллех.

П. М. Миронов хăй ĕмĕрĕн чылай тапхăрне мĕн виличченех (1921 çулччен) Ĕпхÿ (Уфа) хулинче пурăнса тата ĕçлесе иртгернĕ.

Хурăнварти вăтам шкулта вăтăр çул ытла директор, завуч тата математика учителĕ пулса Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Г. Ф. Федоров ĕçлерĕ. Мана 8-10-мĕш классенче (1947-1950 çулсем) математикăпа шăпах вăл вĕрентрĕ. 1965 çулта пенсие тухсан Ĕпхĕве куçрĕ, вăл унта 1978 çулта çĕре кĕчĕ. Пĕлĕш учитель пурăннă вăхăтра эпĕ унпа çыхăну тытнă, тăтăшах çыру çÿретнĕ. Çав çырусенче,

паллах, вăл П. М. Миронов çинчен те асăнмасăр иртместчĕ. «Эсĕ математик, санăн ун çинчен пĕлмеллех»,- тесе çырнăччĕ вăл хăйĕн çырăвĕсенчен пĕринче. Вăл мана Ёпхўри архивсенче пулса Мироновăн кун-çулне нумай пĕлме пулăшрĕ. «Кунта сирĕн ентешĕр - П. М. Миронов çинчен чылай материалсем пур. Тен, Ёпхў хулине курмалла хăвăр килсе каятăр?» - тенĕччĕ тепĕр çырăвĕнче. Çакăн хыççăн эпĕ Ёпхĕве кайма тесех те пуçтараннăччĕ. Анчах та Г. Ф. Федоров часах ўпке шыççипе чирлесе вилсе кайни чăрмантарчĕ.

Пурĕпĕрех П. М. Миронов математик шăпи ман пуçран пĕрре те тухман. 1974 çулта Хусанта Тутарстан Республикинчи учительсен пĕлĕвне ўстермелли институтра курссенче вĕреннĕ чухне эпĕ Хусан университечĕн журналистика уйрăмĕн доцентне К. К. Петрова курса çак ыйтупа калаçрăм.

- Эпĕ Миронов шăпине тĕплĕн тĕпчемен,- терĕ вăл мана ун чухне.- Анчах та манăн Тайăр Тимкки Уфара пурăннă Миронов чăваша лайăх пĕлнĕ, ун патĕнче те пулнă.

Чăнах та, Тайăр Тимкки поэт-революционер П. М. Миронова лайăх пĕлнĕ, ун çинчен хăйĕн çывăх юлташĕсене те пĕлтернĕ иккен. Акă, Хусанта Тайăр Тимккипе пĕрле революцилле ĕç илсе пынă Тимофей Николаевич Николаев (Хури) патша тарçисем йĕрлеме тытăнсан (1906) Ёпхĕве тухса кайнă, унта П. М. Миронов патне кĕнĕ. Малалла унта мĕн пулса иртнине К. Петровăн «Тайăр» роман-хроникине вуласа пĕлме пулать (Шупашкар, 1976, 222 стр.).

Мироновăн кун-çулĕ мана çаплах канăç памарĕ. 1983 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче Çĕпрелĕнче тухса тăракан «Çĕнĕ çул» хаçатра «Тăван тавралăх историне тĕпче» рубрика айĕнче «Пулăшсамăрччĕ, тархасшăн» ятлă статья пичетленсе тухрĕ. Эпĕ ăна хумханса вуларăм. Шупашкарти Ленин музей совечĕн председателĕн çумĕ Петр Терентьевич Золотов П. М. Миронов ученăй-математикăн шăпипе интересленни тата ăна тĕпчени çинчен çырать-мĕн. Унăн пурнăçĕпе кĕскен паллаштарнă хыççăн, вăл çапла чĕнсе калать: «Хисеплĕ юлташсем! Сиртен тархасласах ыйтатăп, пулăшсамăрччĕ пире П. Миронов çинчен ытларах материалсем пухмашкăн; унăн тăванĕсем, ачисем, пĕлĕшĕсем пур-ши, ăçта пурăнаççĕ-ши? Статья вĕçĕнче авторĕ хăйĕн адресне пĕлтерет. Çакă мана тепĕр хут шухăша ячĕ, халĕ хамăн та çак ĕçе хутшăнас кăмăл çуралчĕ. Çавна май ялти ватă çынсемпе - Илья Тарасовпа, Емельян Ишметовпа, Павел Быковпа, Петр Кустовпа тĕл пулса калаçнисене тепĕр хут аса илмелле пулчĕ. Халĕ вĕсем пурте çĕре кĕнĕ ĕнтĕ. Çўлерех асăннă çынсем Мироновран 20-30 çул кĕçĕнрех пулнă, анчах вĕсем ăна аванах астăватчĕç. Ун çинчен вĕсене, паллах, аслăрах юлташĕсемпе аппĕ-амăшĕсем те каласа кăтартнă пулнă.

Эпĕ П. Т. Золотов ыйтăвне тивĕçтерсе, хам та П. М. Миронов çинчен ытларах пĕлес тата ун çинчен ыттисене те пĕлтерес шутпа, мĕн пĕлнине район хаçачĕ валли ятарласа статья çыртăм. Вăл «Пирĕн ентеш - паллă ученăй-математик» ятпа «Çĕнĕ çул» хаçатăн 1983 çулхи декабрĕн 10-13-мĕшĕсенчи номерсенче пичетленсе тухрĕ. Çакăн хыççăн эпĕ 1984 çулхи март уйăхĕнче П. Т. Золотовран çыру илтĕм. Çырăвне вăл вырăсла çырнăччĕ. Акă çав çырури хăш-пĕр йĕркесем: «Я занимаюсь уже более трех лет изучением жизни и деятельности П. М. Миронова. В этой связи в марте 1983 года я обратился в редакцию Дрожжановской райгазеты и

директору средней школы с просьбой сообщить нам некоторые сведения о Вашем земляке Миронове П. М. Ответа не последовало. Я склонен был думать, что на родине Мироновым никто не интересуется, но я ошибся. Заместитель редактора газеты «Çĕнĕ çул» Н. Е. Егоров с письмом от 19.12.83 г. прислал мне два номера газеты «Çĕнĕ çул» с Вашей статьей «Пирĕн ентеш - паллă ученăй-математик» и Ваш адрес. Вашу статью я прочел с большим вниманием и интересом». Çырăвне тĕпчевçĕ çапла вĕçлет: «Уважаемый Александр Ананьевич! Вы положили начало изучению творческого наследия своего земляка П. М. Миронова. Хочется надеяться, что Вы продолжите эту благородную работу». Эпир çакăн пек паллашса кайрăмăр П. Т. Золотовпа. Унăн çырăвĕ мана хавхалантарчĕ. П. Т. Золотов çинчен çакна калани те çителĕклĕ: вăл Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, СССР Журналисчĕсен Союзĕн членĕ, Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ, республика (РСФСР) пĕлтерĕшлĕ персональнăй пенсионер пулнă. Çапла вара эпир П. М. Миронов кун-çулне иккĕн тĕпчеме пуçларăмăр. Çак çыхăну культура ĕçченĕн ветеранĕпе мĕн виличченех пычĕ. Ун чухне П. Т. Золотов чирлекелесе тăратчĕ ĕнтĕ. Эпир хăш-пĕр ĕçсене турăмăр. Вăл тăрăшнипе «Ялав» журналта (1984), çаплах Чăвашсен наукăпа тĕпчев институчĕн сборникĕнче (1985) П. М. Миронов çинчен тĕпчев ĕçĕсем пичетленчĕç. Ĕпхӳри архивсенчен унăн сăн ӳкерчĕкĕсене тупрăмăр. Çакăн пек ĕçлесе пынă хушăрах П. Т. Золотов 1989 çулхи майăн 1-мĕшĕнче, 88 çула кайса, йывăр чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайрĕ.

Çавах та вăл пуçарнă ĕçе - П. М. Мироновăн ĕçĕ-хĕлне тĕпчессине пăрахас пулмасть. Унăн чаплă кун-çулĕпе интересленекен тĕпчевçĕсем татах та тупăнасса шанас килет.

Пурăннă вăхăтра хăйĕн пултарулăхĕпе чăваша çӳле çĕкленĕ П. М. Миронов ятне ĕмĕр асăнмалăх хăварасчĕ тесе Çĕнĕ Йĕлмел ял Совечĕн сессийĕнче депутатсем пĕр саслăн пулса ăсчах-ентеш çуралнă урама унăн ятне пама йышăнчĕç. Çаплах ялти вăтам шкула унăн ятне пама вырăнти пуçлăхсем умĕнче ыйту тăратнă. Шкула унăн ятне пама кирли çинчен Çĕпрел районĕнче çулçӳревре пулса курнă хыççăн Юхма Мишши писатель те «Ялав» журналта çырса кăларнăччĕ. Анчах ку ыйтăва çаплах татса паман-ха. Юлашки вăхăтра П. М. Миронов çинчен хаçатсенче чылай материалсем çапăнса тухрĕç. Вăл çуралса ӳснĕ ялти шкулта унăн чаплă кун-çулне сăнлакан стенд тунă. Хусан художникĕ Габдрахманов ăсчахăн пир çине ӳкернĕ сăнне парнелерĕ.

# П. М. Миронов Урал облаçĕнче

(Истори наукисен кандидачĕн, Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕн Алексей Симулин статйинчен)

Манăн П. М. Мироновăн Урал облаçĕнче халăх училищисен инспекторĕнче ĕçленĕ чухнехи кун-çул тапхăрне, ку вăхăтпа çыхăннă фактсемпе пулăмсене тĕплĕнрех çырса пĕлтерес килет. Çакă унăн вĕрентĕве йĕркелес ĕçри пысăк пултарулăхне, талантне туллинрех курма пулăшĕ.

Урал облаçĕнчи халăх училищисен инспекторĕнче Павел Миронович 1907 çулхи апрель уйăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Çавна пула вăл хăйĕн арăмĕпе Уральск хулине куçнă (Урал облаçĕ Ĕпхӳ кĕпĕрни пекех,

Оренбург вĕренӳ округне кĕнĕ). Çак ĕçре 1912 çулхи сентябрьччен, пилĕк çул çурă тăнă. Ун пурнăçĕнчи çак тапхăр Оренбургри тата Ĕпхӳри тапхăрсенчен чылай уйрăлса тăрать. Ку вăхăтра унăн вĕрентӳ ĕçĕнчи организациллĕ практикăлла мероприятисем тĕп вырăнта тăнă.

Çак çĕнĕ ĕçе ларма чунĕпе вăл чылай малтан хатĕрленнĕ пулнă. Хăйĕн И. Я. Яковлев патне янă çырăвĕсенчен пĕринче, пилĕк çул маларах, халăх училищисен инспекторĕ пулса ĕçлес ĕмĕт те пурри çинчен пĕлтернĕ. Малашне Ĕпхӳрен Хусан вĕренӳ округне куçса, чăвашсем пурăнакан уессенче шкулсен инспекторĕ пулса тăван халăха çутта кăларассишĕн хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне хурса ĕçлес шухăш унăн пуçĕнчен тухман-мĕн.

Халăх училищисен инспекторĕ пулма П. М. Миронов Оренбург вĕренӳ округĕн попечителĕ Н. А. Бобровников ыйтнипе килĕшнĕ. Попечитель 1906 çулччен Хусанти вырăс мар халăхсен учительсем хатĕрлекен семинарин директорĕ пулнă. Вăл çак халăхсем хушшинче хут вĕрентес система мĕнле пулнине пĕлсе, курса тăнă, ăна аталантарма пултаракан организацисемпе деятельсене хисеплесе, çул уçса пама тăрăшнă. Хăй вăл И. Я Яковлевпа та пĕр пек ĕç тунипе çеç çыхăну тытман, унăн çывăх хурăнташĕ, арăмĕн пиччĕшĕ пулнă. Павел Миронович халăх училищисен инспекторĕ пулма пур енчен те тивĕçлине вăл лайăх пĕлнĕ.

П. М. Мироновăн инспектор тивĕçĕсене çеçен хирти казахсен хушшинче туса пымалла пулнă. Унсăр пуçне кунта пурăнакан, çар казакĕсен йышне кĕмен ытти тĕрлĕ ĕçре ĕçлекенсен ачисене шкулсенче вĕрентес ĕçе йĕркелессишĕн те вăл ответлă пулнă. Область центрĕнче, Уральск хулинче унăн сахал пурăнма тивнĕ, ытларах хăйне шанса панă шкулсене пулăшса, тĕрĕслесе, вырăнти учительсемпе, вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлесе вăхăчĕ иртнĕ.

Çеçен хир казахĕсем хушшинче, вырăссемпе танлаштарсан, хут пĕлекенсен шучĕ темиçе хут сахалтарах пулнă. 1906 çулта вырăс казахĕсем хушшинче 34 çын пуçне пĕр вĕренекен тивнĕ пулсан, казахсен 220 пуçне пĕр ача кăна шкулта вĕреннĕ. Шкул çулне çитнĕ çĕр арçын ачаран казахсен 3-4 ачи кăна вĕренме çӳренĕ, хĕрачисем хушшинче вĕренекенсем уйрăмах сахалтарах пулнă. Область центрĕнчи вăтам шкулсене - реальнăй училищĕпе хĕрсен гимназине казахсен ачисем сайра кăна лекнĕ. Çавăнпа казахсем хушшинче хут пĕлеслĕхĕ, культурăна сарассине инспектор хăйĕн тĕп тĕллевĕ тесе шутланă.

П. М. Миронов çут ĕç министерствин ведомствинче тăракан шкулсен инспекторĕ пулнă. 1907 çул пуçламăшĕнче çак ведомствăра 70 шкул пулнă, çав шутран 54-че казах ачисем вĕреннĕ. Казах шкулĕсенче ачасене вырăс алфавичĕ тăрăх, тăван чĕлхепе усă курса вĕрентнĕ. Н. И. Ильминский йĕркеленĕ çак вĕрентӳ системи 1871 çул хыççăн Раççейри вырăс мар халăхсем хушшинче чылай енчен хăйĕн демократилĕхĕпе палăрнă. И. Я. Яковлев та чăваш шкулĕсенчи вĕрентĕве çак системăна тĕпе хурса йĕркеленĕ. 70-мĕш çулсенчен ку йĕркепе казах шкулĕсенче те усă курма пуçланă. Уйрăмах Тургай облаçĕнче казах шкулĕсен инспекторĕнче ĕçленĕ Ибрай Алтынсаринăн (1841-1889) опычĕ паха пулнă.

Павел Миронович та, ку системăна ырласа, ăна пур вăйран аталантарма тăрăшнă. Асăннă просветительсен ĕçне тĕплĕн тишкернĕ.

Хăй çак системăпа ĕçленĕ шкулта вĕренни те уншăн питĕ усăллă пулнă. 1908 çултах вăл казах ачисем валли çĕнĕрен пилĕк шкул уçнă, вĕсенчен иккĕшĕ ятарласа казах хĕрачисем валли пулнă. 1910-1912 çулсенче ун ведомствинчи шкулсен йышĕ тата хăвăрт ӳснĕ. 1912 çулхи кĕркунне вĕсем 150 çитнĕ, çаксенчен 101 шкулĕнче казах ачисем вĕреннĕ. Çапла вара кĕске вăхăт хушшинчех çут ĕç министерствине пăхăнакан шкулсен хисепĕ икĕ хут ытла ӳснĕ. 1907 çулта вĕренекен казах ачисем 1800 яхăн пулнă пулсан, 1912 çулта вĕсен хисепĕ 3000 патне çитнĕ.

П. М. Миронов çĕнĕ вырăнта та питĕ хавхаланса, пуçарулăх кăтартса ĕçленĕ. Кирек хăçан та вăл хăй тăвакан ĕçĕн уссишĕн, витĕмлĕхĕшĕн, результачĕшĕн чунне парса тăрăшнă. Ачасен пĕлĕвне ӳстерес, вĕренӳ процесне лайăхлатас тĕлĕшпе инспектор шкулсен ĕçне ăнăçлă йĕркелесси çине тимлĕ пăхнă.

Çĕнĕ шкулсем уçнипе пĕрлех, инспектор 6 çул вĕренмелли икĕ класлă училищĕсене тĕреклетме пысăк вăй хунă. 1912 çул тĕлне казах ачисем вĕренме пултаракан вырăнсенче те çакăн пек шкулсен шучĕ вунвиççе çитнĕ. Икĕ класлă училищĕсенче вĕренекен казах ачисем интернатсенче пурăннă, апат-çимĕçшĕн, тумтиршĕн, вĕренӳ пособийĕсемпе усă курнăшăн килекен тăкакăн пысăк пайне патшалăх тӳснĕ.

Икĕ класлă училищĕсенчен Илекри училищĕне уйрăмах палăртмалла. Кунта опытлă учительсем ĕçленĕ. Уроксенче пур предметпа та ачасене тарăн пĕлӳ панă, кунта ремесленнăй мастерскойсем те ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă. Çавăнпа çак училищĕре Павел Миронович учительсем хатĕрлекен тата вĕсен пĕлĕвне, методика ăсталăхне ӳстермелли яланхи курссем йĕркеленĕ.

Инспектор тăрăшнипех кашни шкула çĕр лаптăкĕ уйăрса панă. Ĕçлеме вĕреннĕ тата шкулти столовăй валли тыр-пул, пахча-çимĕç, çырла тавраш туса илме тытăннă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчи пек, вĕрентĕве пур предметпа та пурнăçпа, ĕçпе çыхăнтарма тăрăшнă.

Унччен чылай аул шкулĕсене вырăнти халăх шучĕпе тытса тăнă пулсан, çĕнĕ инспектор вĕсене пурне те çут ĕç министерствин бюджечĕ çине куçарнă. Çакна пула кун пек шкулсенчи учительсен ĕç укçи ӳснĕ, шкулсен пурлăх никĕсĕ те çирĕпленнĕ. Павел Миронович кашни шкулах квалификациллĕ учительсемпе тивĕçтерессишĕн çине тăнă. Хăй профессине парăннă, ачасене юратса ĕçлекен педагогсене вĕрентнĕ, пĕлĕвĕсене татах ӳстерме пулăшнă. 1912 çулта казах ачисем вĕренекен 101 шкулта 140 учительтен 111-шĕ педагогика пĕлĕвĕ илнĕ специалистсем, ыттисем çак ĕçпе курссенче вĕреннисем пулнă. Хăйĕн инспекцине кĕрекен кашни шкултах вăл çулталăкра икĕ хутчен кая мар пулнă. Учительсен канашлăвĕсемпе кăтартуллă уроксем ирттернипе çырлахман. Таврари аулсенче пурăнакансене пуçтарса шкулсенчи ларутăрăва, вĕрентĕве лайăхлатас енĕпе пур халăхпа пĕрле тумалли ĕçсене те сӳтсе явнă. Ахальтен мар ĕнтĕ çеçен хирти кашни аултах вăл кĕтнĕ хăна пулнă, казахсем ăна «пирĕн аслă учитель» тесе чĕннĕ. Инспектор 2-3 çултан казахла та лайăх калаçма хăнăхса çитнĕ.

Лайăх учительсен опытне пропагандăлас, умри задачăсене уççăн палăртас тĕллевпе Урал облаçĕнчи халăх училищисен инспекторĕн циркулярне кăларма пуçланă. Методикăлла статьясемпе халăх этнографийĕ çинчен, казахсен фольклорĕпе çыхăннă материалсем те

пичетленнӗ. Сӑмах май каласан, ҫеҫен хир халӑхӗн йӑли-пурнӑҫне тимленӗ ҫулсенче Павел Миронович хӑйӗн тӑван халӑхӗн фольклорӗпе те интересленме пӑрахман. Чӑвашюрри-кӗвви ҫепӗҫлӗхӗ, янравлӑхӗ ӑна вӑхӑтран вӑхӑта шухӑша янӑ, ирӗксӗрех ҫав халӑхсен иртнӗ кун-ҫулӗпе хӑй вӑхӑтӗнчи пурнӑҫне танлаштарма хистенӗ. Тӑван халӑхшӑн усӑллӑ ӗҫ тӑвас шухӑша та пуҫӗнчен кӑларман. Юлташӗсем пулӑшнипе П. М. Миронов икӗ хутчен, 1909 тата 1911 ҫулсенче, Хусанти университет типографийӗнче чӑваш ҫамрӑкӗсен вӑйӑ картинче юрлакан «Виҫӗ нухрат» юрӑ кӗввине хор валли илемлетсе, нота станӗ ҫине хурса пичетлесе кӑларнӑ. Музыка грамотипе юрӑ искусствине те вӑл начар мар чухланӑ. Ахальтен-и чаплӑ математик Ёпхӳре юрӑ урокӗсен ӑста преподавателӗ те пулнӑ. Казах шкулӗсенче те вӑл юрӑ урокӗсене ытти предметсемпе пӗр тана хурса вӗрентнӗ. Шкулти ачасен хорӗсем, халӑх юррисене илемлӗ шӑрантарса, ҫитӗннисене, ашшӗ-амӑшӗсемпе тӑванӗсене юрласа тӗлӗнтернӗ.

1910 ҫулхи августра Раҫҫей «Ҫут ӗҫ министерствин журналӗнче» П. М. Миронов Урал облаҫӗнчи казах шкулӗсем ҫинчен очерк пичетлесе кӑларнӑ. Унта хӑйӗн инспектор ӗҫӗнче 1907-1909 ҫулсенче пухнӑ опытпа тата ҫитес 2-3 ҫул хушшинче ҫак шкулсене аталантарас енӗпе тума палӑртнӑ задачӑсемпе, хӑйӗн шухӑшӗсемпе паллаштарнӑ. Очеркра автор казах ачисен вӗренӳри тӑрӑшулӑхне, ӑнкарулӑхне, вӗсем ырӑсла каласма хӑвӑрт вӗреннине, математикӑна вӗренессинче те пултаруллӑ пулнине кӑмӑллӑн ҫырса пӗлтернӗ. Хӑй те ырӑс мар, чухӑн хресчен хушшинчен тухнӑскер, казах ачисем, ытти халӑх ачисем пекех, вӗренсе, пӗлӳ пухса аталану ҫулӗпе утасса вӑл ҫирӗп шаннӑ. Инспектор тунӑ ӗҫсене тишкерсе ним иккӗленмесӗр ҫапла калама пулать: ҫак ӗҫрен пенсие кайиччен хӑй умне лартнӑ задачӑсене вӑл чыслӑн пурнӑҫланӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ Урал облаҫӗнче ӗҫленӗ тапхӑрта Станислав орденне илме тивӗҫ пулнӑ, малтан коллежски, унтан статски советник ячӗсене илнӗ.

1912 ҫулхи сентябрьте П. М. Миронов отставкӑна тухнӑ. Ёпхӳ хулине таврӑнса нумай ҫул ӗҫленӗшӗн пенси илсе тӑма пуҫланӑ. Инспекторта ӗҫленӗ тапхӑр тем пек йывӑр пулсан та, унӑн математика наукинчи тавлашуллӑ, проблемӑлла ыйтусемпе тӗпчевсем тӑвас килнӗ. Хӑйӗн гипотезисемпе шухӑшлавӗсем мӗн шайра тӑнине пӗлесшӗн кӑсӑкланнӑ вӑл.

П. М. Миронован Урал облаҫӗнчи халӑх училищисен инспекторӗнче ӗҫленӗ тапхӑрти кун-ҫулӗ унӑн пултарулӑхӗнче тата ҫӗнӗ енсене те курма пулӑшать. Казах халӑхӗн хут пӗлеслӗхӗпе культурине аталантарма вӑл чӑннипех чӗрӗ вӑй панӑ, пысӑк витӗм кӳнӗ. Сахал мар ҫынсен, ҫамрӑксен чӗринче паллӑ йӗр хӑварнӑ вӑл. Унӑн ячӗ нумай ҫулсем хушши унти ҫынсен асӗнчен тухман. 1917 ҫулхи Октябрьти революци хыҫҫӑн Урал облаҫӗнче пурӑнакан учительсемпе казах хресченӗсем Павел Мироновича тепӗр хут хӑйсен патне илсе кайса облаҫри халӑха вӗрентес ӗҫ пайӗн заведующине лартасшӑн пулнӑ. Ҫын пурнӑҫӗнчи халӑх асӗнче упранакан ырӑ ятран пысӑкрах чыс пур-ши? Анчах та ҫав ҫынсен шухӑшӗ пурнӑҫа кӗреймен. Ку вӑхӑтра вӑл Ёпхӳре чӑвашсем валли учительсем хатӗрлекен семинари уҫас тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫленӗ. Хӑйӗн ҫамрӑк чухнехи ӗмӗчӗ пурнӑҫланма тытӑнни ӑна ҫунат хушса хавхалантарнӑ.

# «И. Я. Яковлев: «Он, будучи в Симбирской чувашской школе, отличался большими способностями...»

**«...Припоминаю воспитанника Симбирской чувашской школы чуваша Павла Миронова, поступившего в школу после того, как я нашел его, заброшенного, с паршами на голове. Взяв мальчика из сожаления к его положению в школу, я обмыл его, сам не раз водя его в баню, а коросту на его голове сам лично соскребывал руками, чем и излечил его от этой болезни. Миронов показал выдающиеся способности по математике, так что впоследствии обратил на себя внимание ученого мира своими математическими трудами...»**

**И. ЯКОВЛЕВ.**

**(Из книги «Воспоминания»,Чебоксары, 1983, 190 стр.)**

## ПАВЕЛ МИРОНОВИЧ МИРОНОВ

Родился 3 ноября 1861 года в селе Ново-Ильмовый Куст Убеевской волости Буинского уезда Симбирской губернии (ныне Дрожжановского района Татарстана) в бедной крестьянской семье. В десятилетнем возрасте он был принят И. Я. Яковлевым в Симбирскую чувашскую школу. В 1879 году успешно окончил школу и полгода работал там же учителем математики в младших классах, а затем учительствовал в Матаках и Шемуршах.

Через два года П. М. Миронов поступает в Оренбургский учительский институт и в 1884 году оканчивает его с золотой медалью. В течение восьми лет работает учителем арифметики и геометрии в Оренбургском городском трехклассном училище. Переведенный в 1892 году учителем арифметики и геометрии в Уфимское уездное училище, в 1901 году П. М. Миронов был назначен учителем-инспектором 1-го Уфимского городского трехклассного училища и через два года утвержден в должности учителя-инспектора в преобразованном 1-м городском четырехклассном училище. Вся хозяйственная и методическая работа по преобразованию уездного училища вначале в трехклассное городское, а затем в четырехклассное легла на плечи П. М. Миронова. В эти годы он, автор более десяти книг по арифметике и геометрии для городских училищ, некоторые из которых многократно переиздавались, был одним из уважаемых и признанных методистов в городе Уфе. В уездном и городском училищах П. М. Миронов в разное время преподавал математику, черчение, гимнастику, пение и музыку. Он также вел уроки арифметики, естественной истории, космографии и математики в I-й женской гимназии, где с 1898 года учительницей географии работала его жена О. В. Миронова (1876-1946). В выпускном педагогическом классе гимназии он преподавал педагогику и дидактику.

Большой авторитет П. М. Миронова в городе и хорошая постановка учебно-воспитательной работы в училище способствовали тому, что не менее 15-20% учащихся составляли дети почетных граждан,

купцов, дворян и чиновников. Некоторые из родителей вносили в кассу училища средства для помощи бедным ученикам. Здесь учились будущий художник А. Э. Тюлькин, известный краевед П. П. Ищериков и многие другие уфимцы.

В 1907 году П. М. Миронов был переведен в город Уральск на должность инспектора народных училищ (на правах директора). В течение пяти лет, вплоть до отставки в чине статского советника, он вел большую работу по расширению сети народных училищ в Уральско-Темировском районе Уральской области. За время работы в области П. М. Миронов для русского казачьего и переселенческого населения, а также для казахских детей открыл 55 школ (раньше их было всего 26), в том числе женских 3 и 8 школ в городе Уральске. В 1908 и 1909 годах он издавал ежемесячный журнал, в котором, кроме распоряжений учебного ведомства, печатались статьи на педагогические, исторические, этнографические и другие темы.

За хорошую работу П. М. Миронов неоднократно получал благодарности от попечителя Оренбургского учебного округа. Он был награжден за отличие орденом святого Станислава 3-й степени (1898), за отлично-усердную службу и особые труды орденом святой Анны 3-й степени (1903) и 2-й степени (1910), 1 января 1913 года орденом святого Владимира 4-й степени, а также серебряной медалью, установленной в память Императора Александра III (1897). За выслугу лет в 1889 году он был утвержден в чине коллежского секретаря, в 1891 году - титулярного советника, в 1892 году - коллежского асессора и в 1905 году - надворного советника. В 1902 году П. М. Миронов от Министерства народного образования назначается членом в Уфимский уездной училищный совет. Он исполнял также обязанности присяжного заседателя. Вместе со своей женой принимал активное участие в работе Уфимского губернского музея, выступал с лекциями на естественно-научные темы и по вопросам методики обучения в школах и училищах.

П. М. Миронов был разносторонне одаренным человеком. Как ученый-математик он работал в области теории чисел, в частности, доказательства теоремы Ферма. Как ботаник составил богатейший гербарий растений Оренбургского края, среди них оказались также не известные науке. Как музыкант, П. М. Миронов известен своей обработкой чувашских народных песен для хора. Так, в типографии Казанского университета в 1909 и 1911 годах в его гармонизации дважды печаталась обработка чувашской хороводно-игровой песни для трех различных по составу школьных хоров.

Венцом жизни замечательного педагога, ученого и организатора просвещения П. М. Миронова явилась открытая им 1 ноября 1918 года совместно с единомышленниками чувашской учительской семинарии, преобразованной в 1920 году в чувашские трехгодичные педагогические курсы и в 1922 году - в Приуральский чувашский педагогический техникум (ПЧПТ). За уфимский период своей работы, до перевода в город Белебей, ПЧПТ подготовил около 300 учителей для чувашских, русских и мордовских школ. К сожалению, недолго пришлось работать П. М. Миронову первым руководителем чувашского учебного заведения в Уфе. Напряженные труды, в особенности в годы работы в Уральской области и основания чувашской учительской семинарии, не прошли бесследно для его здоровья. Умер П. М. Миронов 20 сентября 1921 года.

# О. В. МИРОНОВА - АВТОР КНИГ ПО ГЕОГРАФИИ БАШКИРИИ

Близкое знакомство Павла Мироновича и Ольги Васильевны Думновой, возможно, произошло в январе 1898 года, когда О. В. Думнова поступила на работу в Мариинскую женскую гимназию учителем географии. П. М. Миронов, будучи тогда учителем арифметики и геометрии в Уфимском уездном училище, в гимназии вел уроки естествоведения, математики и космографии.

П. М. Миронов был уже известным в городе педагогом-методистом, составившим и издавшим несколько книг по геометрии и арифметике для уездных и городских училищ. Пользовался он казенной квартирой при училище и был материально достаточно обеспеченным для городских условий жизни.

О. В. Думнова родилась в Уфе и почти всю жизнь прожила здесь же. Отец ее был приказчиком у купца, но умер рано. Дочь Ольга родилась через два месяца после смерти отца. Образование она получила в женской гимназии, которую окончила с серебряной медалью. После окончания гимназии проучилась там же в специальном педагогическом классе, где в качестве спецпредметов выбрала арифметику и географию. Педагогический совет гимназии в 1893 году удостоил ее звания домашней наставницы с правом преподавания этих предметов. В том же году молодая учительница направляется на Катав-Ивановский завод в качестве помощницы учительницы в местное женское училище. Через год О. Думнова была определена на должность помощницы учителя во 2-е Уфимское приходское училище. Одновременно она вела уроки в женской воскресной школе. В 1899 году вышла замуж за П. М. Миронова.

Уездное училище имело собственный двухэтажный каменный дом (угол улиц Пушкина и Цюрупы) с тремя комнатами на каждом этаже (в нем ныне проводит свои занятия Уфимская чувашская воскресная школа им. П. М. Миронова). В 1901 году оба этажа каменного здания были отремонтированы и приспособлены под помещение городского училища. Кроме основного здания, училище имело два деревянных флигеля и хозяйственные постройки. В одном из флигелей, расположенном по улице Пушкина, помещались канцелярия училища и квартира учителя-инспектора П. М. Миронова, а в другом, в здании бывшего приходского училища, были квартиры учителей А. Г. Земнухова и Н. И. Седельникова.

Будучи учительницей географии, О. В. Миронова, по примеру своего мужа, решила составить и издать учебное пособие для учащихся городских училищ и гимназий. Книга, содержащая более 80 страниц текста, была подготовлена и издана в Уфе в 1907 году - в год отъезда Мироновых в Уральск в связи с переводом туда П. М. Миронова инспектором народных училищ. Она называется «География Уфимской губернии». Краткое описание Уфимской губернии в физическом, этнографическом, промышленном и административном отношениях» и ниже - «Составила О. Миронова».

С 1907 по 1912 год О. Миронова работала учительницей географии и арифметики в Уральской войсковой женской гимназии (кстати, в этой же гимназии вместе с ней работала учительницей немецкого языка Анна Алексеевна Альбанова - мать известного полярного штур-

мана В. Альбанова).

В 1912 году статский советник П. М. Миронов вышел в отставку, и Мироновы вернулись в Уфу. Теперь они жили в доме матери Ольги Васильевны (ул. Суворова, 29). О. В. Миронова возобновила работу в женской гимназии учительницей арифметики. В первые годы после Октябрьской революции она работала учительницей географии и математики в школах г. Уфы, а с февраля 1920 года - учительницей географии в Приуральском чувашском педтехникуме (ПЧПТ), организатором и первым председателем педсовета которого был ее муж П. М. Миронов (1861-1921). С середины 20-х годов О. В. Миронова работала учительницей в школах города. По поручению Башнаркомпроса она составила «Географию Башкирии», которая была издана в 1926 году. Как и первая, вторая книга О. Мироновой содержит описание нашего края «в физическом, этнографическом, промышленном и административном отношениях» и включает богатейший материал о Башкирии, о его природе, населении и его занятиях.

Представляет познавательный интерес описание автора книги обычаев и образа жизни народов, населяющих Башкирию. Так, в первой книге подчеркивается гостеприимство башкир (**«для гостя башкир ставит все, что у него есть»**), их равнодушное отношение к религии. В то же время отмечается, что **«образование у башкир носит религиозный характер, прививает народу нетерпимость в делах веры и отвращает от истинной цивилизации»**. **«Наиболее симпатичные черты характера мордвы - кроткость, добродушие, гостеприимство и трудолюбие»**, - пишет автор. О татарах: **«Они гостеприимны, сметливы, расторопны»**. О марийцах имеется такая характеристика: **«Черемисы простодушны, миролюбивы, честны, с русскими скрытны и робки»**. Подчеркивается также их трудолюбие. **«Обработка земли и все сельские работы производятся сообща**, - говорится далее, - **жатва делится на поле же между всеми семьями поровну, и среди черемис нет нищих. Преступлений между черемисами очень мало, воровства почти нет, и избы при уходе на работы никогда не запираются; убийство между ними вещь неслыханная»**. Об удмуртах в «Географии» О. Мироновой говорится, в частности, следующее: **«Кротки, миролюбивы и трудолюбивы; они помогают друг другу, вследствие чего у них мало бедных, живут согласно в семье, редко ссорятся между собою»**. Как видно, здесь автор книги несколько идеализированно описывает жизнь сельского населения, часть которого жила бедно, с трудом сводя концы с концами.

**О чувашах в книге подчеркивается, что они по нраву кротки, простодушны и робки. Селения свои чуваши располагают по оврагам, котловинам. Главные занятия их - хлебопашество, птицеводство и пчеловодство. Русский язык знают большею частью только мужчины; свой язык у них довольно богат и выразителен, имеет свою письменность. Далее об одежде мужчин и женщин говорится следующее. По одежде мужчины чуваши мало отличаются от русских, разве только тем, что рубахи их украшены узорами, вышитыми цветными нитками или шерстью. Женщины носят холщевые рубахи, которые около воротника, на груди, плечах и рукавах вышиваются цветными нитками, обшиваются полосками цветного ситца, украшаются на груди серебряными монетами и подпоясываются шерстяным поясом. Замужние чувашки повязывают**

**голову белым полотенцем с расшитыми кумачными концами (сурбан).**

Еще при жизни мужа, за полгода до его смерти, Ольга Васильевна, видимо, по просьбе друзей, написала «Очерк о деятельности Павла Мироновича Миронова» (оригинал очерка хранится в архиве города Екатеринбурга) и тем самым оставила нам бесценные сведения об одном из талантливых учеников И. Я. Яковлева и продолжателе его дела по просвещению родного чувашского народа.

Мироновы имели богатую библиотеку, которой пользовались студенты ПЧПТ в первые годы его работы. В последующем основную часть библиотеки О. В. Миронова передала школам города, часть семейных реликвий (шпагу мужа и другие вещи) были переданы оперному театру.

Автор «Географии Уфимской губернии» и «Географии Башкирии» О. В. Миронова всю жизнь трудилась на ниве просвещения, за что была награждена орденом Трудового Красного Знамени. Она была исключительно доброй, интеллигентной женщиной. Как вспоминают выпускники ПЧПТ и учителя-пенсионеры, знавшие ее по работе, она по-матерински относилась к учащимся, помогала им делом и советом, в то же время была строгой учительницей.

В заключение следует отметить, что было бы не плохо, если переиздать обе книги О. В. Мироновой в одном томе с небольшими сокращениями и комментариями. Такая книга была бы неплохим руководством по истории местного края и замечательным подарком для краеведов. Ее можно было бы использовать в школах и в вузах в качестве учебного пособия при изучении географии и истории Башкортостана.

**А. КОНДРАТЬЕВ,**
**профессор Уфимского университета.**



**На снимке:** О. Думнова (Миронова) во втором ряду четвертая слева.

## В. П. НИКИТИН (СТАНЬЯЛ)

# 2. Чӗмпӗр чӗкеҫӗ



**Октябрьти революциччен Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен шкултан 387 хӗр-учительница вӗренсе тухнӑ. Атӑл тӑрӑхӗнчи чӑваш шкулӗсенче, ҫӗршыври партипе совет органӗсенче, культурӑпа искусство учрежденийӗсенче, хуҫалӑхра ӗҫлепӗ И. Я. Яковлев шкулӗнче пӗлӳ илнӗ хӗрсем. Вӗсем халӑх ӗҫӗнче пурте тенӗ пекех хастар пулнӑ. Республикӑн кирек хӑш кӗтесӗнче те пӗлеҫҫӗ вӗсене, ӑшӑ сӑмахпа асӑнаҫҫӗ, «Чӗмпӗр чӗкеҫӗсем» тесе хисеплеҫҫӗ. Тӗттӗм чӑваш ялӗсенче вӗсем, ӑшӑ кунсем ҫитчен пӗлтерме вӗҫсе килнӗ чӗкеҫсем пекех, ырӑ хыпарпа ҫӳренӗ, малашлӑхшӑн вӑйя шеллемесӗр ӗҫленӗ.**

1913 ҫулхи пӗр пысӑк фотоӳкерчӗк мана Шупашкар районӗнчи Анат-Кӗнер шкулне илсе ҫитерчӗ. Екатерина Алексеевна Яковлева тавра тӑрса тухнӑ ушкӑнри хӗрачасенчен пӗри - Саня Николаева - Анат-Кӗнерти вӑтам шкул учительници. Тантӑшӗсемпӗн кӑна Санюк вӑл, ыттисемшӗн - Александра Васильевна Александрова, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ учительници, Ленин орденӗн кавалерӗ, 80 ҫулхи хисеплӗ ҫын.

Ҫур ӗмӗр ӗҫленӗ Александра Васильевна чӑваш шкулӗсенче: ачасене вӗрентнӗ, шкул лартнӑ, сад ӗрчетнӗ, колхоз тунӑ, хӗрарӑмсен юхӑмне ертсе пынӑ, фронта пулӑшнӑ, ял Совечӗпе район Совечӗн депутачӗ пулнӑ, ҫултан ҫулах халӑх ӗҫне хутшӑннӑ.

1916 çулта вĕренсе тухнă вăл Чĕмпĕрти педагогика курсĕнчен, çавăнтанпа татти-сыпписĕр шкулта вĕрентнĕ: малтан Тутар республикинчи Кивĕ Чакăра, унтан Кĕçĕн Аксура, тепĕр икĕ çул - тăван ялта, Çĕпрел районĕнчи Çĕн Йĕлмелре. 1930 çулта Александра Васильевна Чăваш Республикине куçса килнĕ. Йывăр лав тыттарнă учительницăна - Кашмашри пуçламăш шкула ертсе пыма янă. Ялта шкулĕ пулман та: çуртне çĕнĕрен лартмалла, ачасене пухса классем йĕркелесе ямалла! Вăл çеç-и? Колхоз тумалла, кулаксене кăкламалла! Александра Васильевнăна председателе пулăшма уйăрнă, хĕрарăм-делегатсен Советне шанса панă, ял Совечĕн депутачĕ туса хунă, ревизи комиссийĕн членне те ăнах суйланă. Пултараймасан çакăн чухлĕ ĕç тиемен пулĕччĕç. Тăрăшнă. Пултарнă. Ку вăл учительница пурнăçĕнчи чи хĕрӳ вăхăт, вăй-хал вĕренĕ тапхăр пулнă. Кашмашсем Александра Васильевнăна паян та манмаççĕ: вĕсем ăна «Ирĕклĕх» колхозăн хисеплĕ членне илнĕ, Хисеп кĕнекине кĕртнĕ.

Упăшкине - М. А. Александрова - Чантăрти шкул директорне лартсан, Александра Васильевна та çĕнĕ шкула ĕçлеме кайнă, унтан Александровсен кил-йышĕ Анат Кĕнере, Михаил Александровичăн тăван ялне куçса килнĕ.

Паян Александра Васильевна патне Кашмашпа Чантăр енчисем те салам сăмахĕ калама кĕреççĕ пулсан, тĕлĕнмелли нимĕн те çук: хăй хыççăн кирек ăçта та вăл ыр ят хăварнă. Таçти-таçти хуласенчен учительница патне кунсеренех çыру килет: нумай çыраççĕ! «Вĕрентнĕшĕн, çын тунăшăн тав тăватпăр», - теççĕ. Чĕмпĕрте пĕрле вĕреннĕ хĕртантăшсем тăтăшах хыпарласа тăраççĕ.

Почтальон çыру илсе пычĕ, учительница ăна хыттăн вулама пачĕ. Мускавран. «Чухларăм, Поля Порфирьева çырать», - савăнчĕ Александра Васильевна. «Асран кайми Санюк-саркайăкăм...»

- Мана вĕсем сап-сарă çӳçлĕ пулнăшăн саркайăк теççĕ. Йăлана кĕрсе кайрĕ ĕнтĕ... - хушса хурать учительница. «Паян эпир Капитолина Никитична Эсливанова-Максимовăпа иксĕмĕр Шупашкарти Анюк Токсинăпа Ульяна Тимофеевăран ăшă çыру илтĕмĕр те, сана, Матрена Кузнецовăна, Людмила Сергеевăна, Фекла Дмитриева-Эдюккана, арçын ачасенчен вара сана куç хывнă Якур Зайцев-Тал-Мăрсана, хамăра вĕрентнĕ Константин Васильевич Ивановпа Федор Павлович Павлова аса илтĕмĕр... Мĕн чухлĕ çын аслă çул çине тухрĕ... Ӳксе пуç çапмалла пирĕн хаклă Иван Яковлевича...»

- Килсе кайнăччĕ ман пата Анюкпа Ульяна. Фекла Дмитриевна та килнĕччĕ. Чăваш пединститутĕнче кафедрăна ертсе пычĕ, наукăсен кандидачĕ, - ăнлантарать ватă учительница.

Георгий Тал-Мăрса архивĕпе паллашнă чухне эпĕ сăвăç-каччă пĕр сар çӳçлĕ чиперкке Санюк Николаевăна куç хывни çинчен вуланăччĕ. Учительсем тата йĕплĕ чĕлхеллĕ тантăшсем сисиччен вăл ăна валли çырусем çырнă. Çав чипер Санюк - Александра Васильевна. Сыхланса юлман-ши ун чухнехи çырусемпе хутсем? Икĕ альбом пулнă сăвăсемпе çырусем, анчах вăрçă вăхăтĕнче ачасем вĕсемпе вут чĕртнĕ пулмалла, çухалнă.

Аставать-и Александра Васильевна Якур ҫырса панӑ сӑвӑсене, тӗл пулса калаҫнисене? Шкулта ҫывӑх калаҫман та иккен! Йӗрке питӗ ҫирӗп пулнӑ, хӗрачасем арҫын ачасен сукмакӗпе утма та вӑтаннӑ, иртсе кайнӑ чухне те чаранса тӑма хӑюлӑх ҫитереймен. Аставать Санюк шкулӑн иккӗмӗш хут пусми умӗнче Якур Зайцевсен класӗ кӗпӗрленсе тӑма юратнине, иртсе кайнӑ чухне унӑн икӗ ылтӑн ҫивӗтне мухтаса сӑвӑсем каланине.

Якур Зайцев 1915 ҫулта империализм вӑрҫине тухса кайнӑ. Санюк валли сӑвӑ ҫырса хӑварнӑ: «Шӑнкӑртатса ҫырма юхӗ, хумӗ ҫинче эп сикес ҫук. Каҫпа сар хӗр вӑййа тухӗ, ун сӑввине эп илтес ҫук». Вӑрҫӑ суранӗсенчен сывалнӑ Тал-Мӑрса Шӑмӑршӑра учительре ӗҫлеме пуҫланӑ та, тӑван Упирен инҫех мар Йӗлмеле Санюка шыраса пынӑ, Санюка вӗрентнӗ Василий Иванович учитель патне кӗрсе калаҫнӑ. Анчах Санюк качча тухнӑ пулнӑ ҫав... Александра Васильевна поэт хӑйсен ялне икӗ хут пырса кайнине аставать.

Сарӑ Санюк ҫинчен шухӑшласа Тал-Мӑрса сӑвӑсем ҫырнӑ, вӗсенчен хӑш-пӗрисем «Хӗрлӗ Ҫар ҫыннин юрри» кӗнекере те пур.

Аса илмеллисем - вӗҫ-хӗррисӗр! Чӗмпӗр чӑваш шкулне кайма ялти ырӑ ҫынсем хистенипе пуҫтарӑнни, пӗлмен-курман хулана ҫула май лавпа тухса кайни, маттур вӗренекеншӗн савӑннӑ учитель Санюка пит шӑлли парнелесе хӑварни. Ватӑлсан та асран тухмасть иккен чӑтса иртternӗ вӑхӑт... Ҫичӗ ҫул вӗреннӗ И. Я. Яковлев шкулӗнче Санюк Николаева. Ҫав ҫичӗ ҫул унӑн чун-чӗринче нихҫан сӳнми хӗлхем чӗртсе хӑварнӑ. Педагогикӑпа дидактикӑна Иван Яковлевич хӑй вӗрентнӗ. Вырӑс чӗлхине - унӑн арӑмӗ Екатерина Алексеевна, ҫут ҫанталӑка - Осип Андреевич Андреев, Степан Максимович Максимовпа Федор Павлович Павлов хор кружокӗсене ертсе пынӑ, таса ҫырассипе ӳкерессине нихҫан асран тухми йӑваш та ырӑ каччӑ - «Нарспи» авторӗ Константин Васильевич Иванов вӗрентнӗ. «Пурте паянхи пекех куҫ умӗнче. Иван Яковлевич каланӑ сӑмахсем асра. Константин Васильевич класа пырса ҫӳрени, йӑваш кулли, чипер сӑн-сӑпачӗ, ҫӑмӑл утти... Вӑл пирӗн класпа юнашарах, иккӗмӗш хутрах пурӑнатчӗ. Куҫаратчӗ, ҫыратчӗ, букварь валли ӳкерчӗк тӑватчӗ. Класри хӑюллӑ хӗрача Шура Муллова ӑна урок пуласси ҫинчен пӳлӗмӗ патне кайсах калатчӗ. Ӑна курсан Константин Васильевич питӗ вӑтанатчӗ, пичӗ ҫине хӗрлӗ сӑн тухатчӗ, хӑй пӑлханнине урока пырсан та пытараймастчӗ.

Константин Васильевич сывалма Слакпуҫне каять тенӗ хыпар ҫитрӗ класа пӗринче. Лаша кӳлсе тӑратнӑччӗ ӗнтӗ, поэт инҫе ҫула пуҫтарӑннӑччӗ. Шурӑна эпир Константин Васильевича хамӑр класа чӗнсе пыма хушрӑмӑр. Пычӗ сӑвӑҫ. Эпир ӑна ӑшӑ сӑмахсем каларӑмӑр, часрах сывалса таврӑнма ырӑ сунтӑмӑр. Учитель хӗпӗртерӗ, куҫӗсем шывланчӗҫ, чӗререн тав турӗ. Таврӑнма сӑмах пачӗ. Анчах вӑл Чӗмпӗре таврӑнаймарӗ...».

Аса илмелли нумай Александра Васильевнӑн. Унӑн кашни сӑмахӗ ылтӑн-кӗмӗлӗн туйӑнчӗ мана.

Вӑхӑт иртет. Фотоӳкерчӗк ҫинчи хӗрсенчен чылайӑшӗ ҫук ӗнтӗ, хӑшӗсен адресӗсем ҫухалнӑ. Ячӗсене ҫыра-ҫыра илетӗп: Ульяна Нягина,

Çĕпрел районĕнчи Хулаçырминчен, Хусан кĕпĕрне Советĕнче хĕрарăмсен пайĕнче ĕçленĕ. Фекла Дмитриевна Дмитриева-Эдюкка, Чăваш пединститутĕн доценчĕ. Анна Токсина - Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки, Антонина Никитична Эсливанова - Капитолина Эсливанова йăмăкĕ, юрă ăсти. Дария Кузьминична Кузьмина - Никита Сверчков художник йăмăкĕ, паллă педагог. Ульяна Тимофеевна Тимофеева - Чăваш театрĕн артистки пулнă, Шупашкарта пурăнать. Груня Лучкова - йăваш та ăслă хĕр, Иванов шăллĕне - Квинтилиана качча тухнă, Слакпуçĕнче вĕрентнĕ. Варвара Павловна Горшкова - Патăрьелĕнче пурăнать; учительница «Путь Ленина» колхоз председателĕ пулнăскер, хисеплĕ колхозница.

Васса Герасимовна Малова, Чĕмпĕр хутлăхĕнчи Çĕнмалăкла районĕнчи Упамсартан, Марфа Николаевна Николаева - писательница, Шупашкарта пурăнать. Нонна Кирилловна Еремеева - Митта Ваçлейĕн арăмĕ...

Ӳкерчĕкри кашни хĕр пурнăçĕ çинчен очерк çырма пулать. Вĕсем сӳнми хастарлăхпа халăхшăн ĕçленĕ, çынсене çутă тĕллев патне туртнă. Тавах сире, Чĕмпĕр чĕкеçĕсем! Тайма пуçăм сана, Александра Васильевна, юратнă учителĕм.

* * *

«Чĕмпĕр чĕкеçĕ» тĕрленчĕк республикăри тĕп хаçатра - «Хыпарта» (ун чухне вăл «Коммунизм ялавĕ» ятлăччĕ) 1976 çулхи мартăн 25-мĕшĕнче пичетленсе тухрĕ. Унтан ăна Шупашкар районĕнчи «Ленинец» хаçат улăштармасăрах тепре çапрĕ (апрелĕн 3-мĕшĕ). Тĕрленчĕке Çӳлтикассисем (Анат Кĕнер ялне ытларах Çӳлтикасси теççĕ) килĕштерсе вуланă, çырусем илтĕм. Александра Васильевнăран та хут килчĕ: «Виталий! Манăн сывлăх вăйлах мар. Çавăнпа сана çак хута ярса парас терĕм. Май килсен, тен, эпĕ вилсен, хаçата çапса кăларăн. Ытла нумай пулсан, кĕскетсе хăварăн. Сана чăрмантарнăшăн кăмăлсăр ан пул. Сире шанмасан тата манăн кама шанас?» Тепĕр хут çинче вара хăй аллипе вырăсла çырнă: «На... году жизни скончалась пенсионерка Александрова А. В. ...» Кĕскен. Ăста çуралнă, ăста ĕçленĕ. Наградăсем. Малтанласа аптраса ӳкрĕм. Çамрăк пулнă. Вилĕм çинчен шухăшламан. Халĕ ăнланатăп: ватă çынсем ыр вилĕмпе вилес тесе хытă тăрăшаççĕ, темиçе çул малтанах тупăк туса хатĕрленисем те пур иккен. Киле кайсан аннепе калаçрăм та (вăл Александра Васильевнăпа килĕштерсе пурăнатчĕ, ялан канашлатчĕç), ырласа каларĕ: «Мĕнле ăслă çын вĕрентрĕ сана, ывăлăм. Эсир кам пуласси не кăна мар, хăй хăçан вилессине те пĕлсе тăрать. Ылтăн çынсем пулчĕç ман ачасемшĕн шкулта, ылтăн çынсем! Любовь Ивановнăпа Тимофей Степанович мĕне тăраççĕ. Сана вара Александра Васильевнах ăса вĕрентрĕ... Эпĕ сирĕнпе лараймарăм ĕнтĕ...».

Тĕкĕр çине пăхсах çырнă-тăр вĕрентекенĕм хăйĕн юлашки çырăвне. Виçĕ уйăхран, июль пуçламăшĕнче, хаçатсем уйрăлу сăмахĕсене çапса кăларчĕç. Александра Васильевнăпа упăшкин - Михаил Александрович учитель-композиторăн тăприсем юнашарах. Пĕтĕм таврари ял юратнă çынсем, халăх учителĕсем. Çăмăл пултăрччĕ йывăр тăпрăрсем!

Александра Васильевна мана 1947-1950 çулсенче пĕрремĕш-виççĕмĕш классенче вĕрентрĕ. 42 ачаччĕ пирĕн класра, мăшăрлă тепĕр класра - татах тепĕр 42 ача... Ун пек классем халĕ нихăш шкулта та çук. 1950 çулта вĕрентекенĕмĕре Ленин орденĕпе наградăларĕç. Унччен

пирĕн класа тĕрĕслеме пыман кун та пулман пулĕ - шкул директорĕпе завучĕ пыраççĕ кăна, ун хыççăнах эрни-эрнипе районти педкабинетран е вĕрентӳ пайĕнчен инспектор пырса ларать. Унччен те пулмасть - Шупашкартан килнĕ! теççĕ... Тăваттăмĕш класне те ун патĕнчех вĕренмеллеччĕ, анчах арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăм классене уйăрса ячĕç. Пире çамрăк каччă вĕрентме пуçларĕ. Нумай-и, сахал-и вĕрентрĕ, халĕ ăна та, ятне те аса илейместĕп. Тăваттăмĕш класран вĕрентсе кăларайманрĕ, салтака илсе кайрĕç ăна. Камăн вĕрентсе кăлармалла пулчĕ тетĕр хуçасăр ачасене? Александра Васильевнăнах! «Харăс виçĕ класпа ĕçлесе курнă, икĕ класпа çăмăлрах-ха, мĕнле те пулин чăтăп», - тесе каланине астăватăп.

1956 çулта пирĕн пĕрремĕш учительницăна тава тивĕçлĕ вĕрентӳçĕ ятне пачĕç. Ун чухне тăххăрмĕш класра вĕренетпĕр. Класра пурте тенĕ пекех - Александра Васильевна ачисем. Парне-мĕн класс ячĕпе пама пĕлмен пулас ун чухне, ăна асра хăварман. Анчах аннесем учительницăна саламласа пысăк пичкепе сăра парса янăччĕ. Çавна шартлама сивĕ кунхине çывăх тантăшăмпа - Тимĕрçĕ Кермăнĕпе (вăл халĕ Чăваш университечĕн доценчĕ, физик) иксĕмĕр хир-хир урлă шкула çунашкапа сĕтĕрсе пынăччĕ! Йывăр çулсен хаваслă саманчĕсем! Вăхăт иртсен хитре сăмах калакан нумай. «Вилнĕ ĕнен сĕчĕ тутлăччĕ», мар-и! Маншăн апла мар. Пирĕншĕн Александра Васильевна анне пекех хаклă пулнă. Аннесем çăкăр-тăварпа (тĕрĕссипе - çĕр улмипе, сăсăлпа е мăянпа) тăрантарса ӳстернĕ, вĕрентме-пăхма вĕсен вăхăчĕ пулман. Ытти вара - йăлтах учительницăран, Александра Васильевнăран килнĕ. Вăл пире, ашшĕсĕр ачасене, мĕншĕн чун çывăхне илсе пăхнине эпĕ кайран-кайран тин, тĕрленчĕк çырас шутпа килне кайсан пĕлтĕм: унăн пĕртен-пĕр ывăлĕ, музыкант, талантлă сĕрмекупăсçă, 19 çулхи Веня фронтра пуçне хунă. Пĕр ывăл вырăнне 100 ывăл пăхса ӳстерме сăмах панă вăл хăйне-хăй, пирĕнтен кашнинчен талантлă çынсем тума ĕмĕтленнĕ. Александра Васильевнăн ытти ачисем пурте хĕрсем - Зоя, Маргарита, Галина - тава тивĕçлĕ учительсем, тепĕр хĕрĕ - Роза-врач-педиатр. Эпир те, ял-ялсенчи вуншар ача - Александра Васильевна ачисемех. Ахаль сăмахăм мар кӳ. Ăна эпĕ 1959 çултах тăван шкулти «Асăнмалăх кĕнекене» сăвăласа çырса хăварнă: «Çул хыççăн çул ӳсрĕмĕр эпĕр вуншаррăн. Эсир кăна пирĕншĕн ĕмĕр пĕрре. Пĕрремĕш ăсчахăм, аннеçĕм, мăнтарăн! Чĕре тĕпĕнче упрансам ĕмĕрех!»

... Сунтăхра тирпейлĕ упранакан асаилӳсене пăхса ларатăп. Хăй аллипе çырнисем. Мĕн тери хаклă хутсем! Юрать, вăхăтĕнче çырса пама ыйтнă. Халĕ камран ыйтса пĕлĕттĕм?

«Эпĕ 1896 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнче (23-мĕшĕнче) Çĕн Йĕлмелĕри вăтам хресчен йышĕнче çуралса ӳсрĕм. Аслă пичче Петĕр граждан вăрçинче, кĕçĕн шăллăм Иван фин вăрçинче вилчĕç, Микулай шăллăм Çĕршывăн аслă вăрçинчен аманса таврăнчĕ. Кĕçĕн йăмăкăм Марье Çĕн Йĕлмелĕрех пурăнать... Икĕ ятак çĕр пурччĕ, çын пуçне 20 хăлаç... Вăрман пулманран улăм хутаттăмăр... Телейлĕ вăхăтăм - Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ çулсем... Хамăн ĕçре эпĕ Екатерина Алексеевна пек пулас тесе тăрăшаттăм. Иван Яковлевич сăнарĕ халĕ те куç умĕнче чĕп-чĕррĕн тăрать...»

Ман умра ĕмĕрĕпех чĕррĕн тăраканĕ - Александра Васильевна сăнарĕ.

# Пуçтайăм сăмахĕ

**Пĕрремĕш вĕрентекенĕме - Александра Васильевна Александровăна, Анат Кĕнер вăтам шкулĕн «Асăну кĕнекинчен». Тĕлпулу касĕ, 1959, кăрлач 31.**

1. Ан тив, унтанпа вăхăт вĕçĕмсĕр юхрĕ -
Карап та хăпарчĕ хĕвел тўпине,
Шĕп-шеп ачусем те этем картне тухрĕç -
Вĕсем сирĕн çитрĕç-тĕр ĕнтĕ пине!

Эсир халь, паллах, нумайăшне маннă.
Кун-çулăн черечĕ чĕнет канăçа.
Эпир ун чух çырнă хутсем те саралнă,
Туссем те тухаççĕ иккен манăçа.

Çул хыççăн çул ўсрĕмĕр эпир вуншаррăн,
Эсир кăна пирĕншĕн - ĕмĕр пĕрре!
Пĕрремĕш ăсчахăм, аннеçĕм, мăнтарăн!
Чĕре тĕпĕнче упрансам чĕп-чĕрех!

2. Ачалăх асрах-ха. Сăмса нăш туртатпăр.
Палчас пирринчен кĕпе-йĕм те тата
(Салтак уринчеччĕ ун чух мĕнпур атă)
Пур тăлăх-туратшăн телей - çăпата...

Вăл вăхăт та иртрĕ. Эпир пысăкланнă.
Кам ўснĕ, кам ўкнĕ, кам тўснĕ тип шар.
Нуша пуç çинче чух - ачалăхри майлăн,
Пулсамăр, ăсчахăм, асра юнашар.

Аннеçĕм-çĕршывăм тесе кĕл тăватăп,
Пĕкетĕп пуçа пилĕк айĕн авса.
Сире эп Турамăш пек аслă куратăп,
Саватăп сире çурхи кун пек таса!

**Виталий СТАНЬЯЛ.**

# Савăнăç куççулĕ

1976 çулхи июль. Чăваш Республикинчи Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумне вĕренме кĕме документсем панă хыççăн аттепе иксĕмĕр Анат Кĕнер ялĕнчи А. В. Александрова (Николаева) ватă учительница патне çитме шутларăмăр. Асăннă ял Шупашкар районне кĕрет.

Ял патне çывхарсан, каçхи кĕлле чĕнсе чан сасси янăраса кайрĕ. Ытти ялсенче вăл вăхăтра чиркўсем çукчĕ-ха, çавăнпа та ку пире тĕлĕнтерсе ячĕ.

Йĕри-тавра ялне кашасемпе пўлсе илнĕ. Çул пире яла пырса кĕрекен алăк патне илсе çитерчĕ. Александровсем пурăнакан çурта шыраса тупма йывăрах пулмарĕ. Вĕсене кунта пурте лайăх пĕлеççĕ иккен. Пирĕнпе юнашар утса пыракан хĕрарăм вĕсем пурăнакан килнех илсе çитерчĕ.

Кил хуçисем пире ырă сунса кĕтсе илчĕç. Çуртра Галина Михайловна тата унăн ывăлĕ Веня, Киров облаçĕнче пурăнакан Роза Михайловна пурччĕ. Александра Васильевна тăхăр кун маларах кăна çĕре кĕнĕ пулнă иккен. Мăшăрĕ Михаил Александрович маларах вилнĕ.

А. В. Александрова çинчен эпир В. П. Станьял çырнă «Чĕмпĕр

чĕкеçĕ» тĕрленчĕкрен лайăх пĕлеттĕмĕр. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕччĕ вăл.

Хăйпе куçа-куçăн курса калаçса ларма темшĕн турă çырман пире... Унтанпа 19 çул иртрĕ. Кăçал Шупашкара таврапĕлӳçĕсен пухăвне пырсан, унăн хĕрĕ Г. М. Александрова ĕçлекен Муркаш районĕнчи Калайкассинчи вăтам шкула вĕçтертĕм. Çавăн чухне Галина Михайловна амăшĕ çуралса ӳснĕ яла пырса курма кăмăлĕ пурри çинчен пĕлтерчĕ:

- Анне çуралса ӳснĕ яла кайса курас чирпе чирлесе ӳкрĕм, çамрăк чухне темшĕн мана аттепе анне Çĕн Йĕлмелне илсе кайса кăтартман, - терĕ вăл, - акă халĕ ватăлтăм та тăван кĕтесе каяссăм килет. Аннен тăван ялĕ инçетри çăлтăр пекех хăй патнелле туртать. Анчах... кам патне пымалла?

Г. М. Александрова мана Р. В. Егорова (халĕ Романова) сăн ӳкерчĕкне парса ячĕ. Çак хĕрарăмăн адресне тупма ыйтрĕ. Ялти çынсем пулăшнипе ăна Ульяновскра шыраса тупрăм.

Нумаях пулмасть, акă, Г. М. Александрова хулана пырса çитрĕ. Эпир ăна Раиса Васильевнăпа иксĕмĕр автовокзалта кĕтсе илтĕмĕр. Çакăнтан тӳрех И. Я. Яковлев уçнă шкула (унта унăн амăшĕпе ашшĕ вĕреннĕ) çитсе куртăмăр.

Музей пуçлăхĕ А. А. Пономарева инçетрен килнĕ хăнана музейри экспонатсемпе тата чăваш шкулĕн историйĕпе паллаштарчĕ. Çакăнта вырнаçнă чиркӳре те пулса куртăмăр.

Тепĕр кунхине ирех Çĕнĕ Йĕлмел ялнелле çула тухрăмăр. Пирĕн пĕрремĕш чарăну Кив Йĕлмелĕнче пурăнакан Е. В. Долгова патĕнче пулчĕ. Вăл пĕчченех пурăнать. А. В. Александрован йăмăкĕн Федосийăн хĕрĕ. Пĕрремĕш хут вăл Анат Кĕнер ялĕнче пулни çинчен кулкаласа каласа кăтартса тĕлĕнтерчĕ: «Эпир иккĕн инçетри çула тухрăмăр. Анат Кĕнер ялне пырса çитсен Александровсем пурăнакан çурт хăш тĕлтине ыйтатпăр хамăрпа юнашар пыракан пĕр ватă хĕрарăмран. Вăл: "Ок çок, поросок çолпа...», - тет. Хамăр иксĕмĕр те çак сăмахсене илтсен ăнтан кайрăмăр. Мĕнле чĕлхепе калаçать-ши теттĕр. Пирĕн патра апла калаçмаççĕ те. Вырăсла каланă пулсан ăнланнă пулăттăмăр, тен. Чăваш чăваша ăнланайманнипе тăвансене шыраса ял тăрăх чылайччен утрăмăр. Çырма айккинчи пĕр пӳрте пырса шаккарăмăр. Алăкне уçма хĕрĕ тухрĕ те: «Малалла кайăр, ют çынсене эпир кĕртместпĕр...» - тесе каласа хучĕ.

Урамра тĕттĕм, çумăр та çукалать. Пирĕн ăçта çĕр каçма каймалла? Çапла калаçса тăнă вăхăтра мăнаккапа унăн мăшăрĕ тухрĕç. Çĕнĕ Йĕлмелĕнчен хăнасем килнине пĕлсен ытакласа илчĕç, мăнаккан куççулĕ тухрĕ. Савăннипе хăй ниçта кайса кĕме пĕлмест. Апатне пĕçерчĕç. Хăналарĕç. Ирччен мăнаккапа калаçса лартăмăр".

Çĕнĕ Йĕлмелне каç пулсан тин пырса çитрĕмĕр. Николаевсен йăхĕнчен кунта М. К. Николаевпа В. К. Николаева (Чашкина) пĕр тăвансем çеç сывă пурăнаççĕ. Ыттисем вилсе пĕтнĕ, Михаил Кириллович çемйи пурăнакан çурта хирĕç урам урлă тăлăх çурт ларать. Халĕ унта никам та пурăнмасть. Ĕлĕкхи чаплă çурта 1930 çулсенче урăх вырăна куçарса кайнă. Çĕпрелĕнчи патшалăх банкĕ вырнаçнă çурт шăпах Николаевсен çурчĕ пулать те. Революциччен А. В. Николаеван ашшĕ Василий Иванович ялти бакалея лавккин хуçи пулнă. Çак вырăнта Александра Васильевна Николаева - Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, Ленин орденĕн кавалерĕ, педагог çуралнă. Унăн хĕрĕ, Галина Михайловна, Анат Кĕнертен илсе килнĕ тăпрана амăшĕ çуралнă вырăна

хучĕ. Килте пĕçернĕ çăкăра килен-çӳрене активтерчĕ. Ваттисене асăнса, çуртăн алăк умне çăкăр татăкĕ хăварчĕ. Çакăнти тăпрана хăйпе пĕрле илсе кайма илчĕ.

М. К. Николаев Александровсене лайăх пĕлет. Галина Михайловна хăйпе пĕрле илсе килнĕ кăкшăма амăшĕ çуралса ӳснĕ çурт хуçине парнелесшĕнччĕ. Халĕ унта никам та пурăнманнипе, учительница ăна М. К. Николаева парнелесе çапла каларĕ: «Хăнасене çак кăкшăмран сăрапа хăналамалла пултăрччĕ...»

Çĕнĕ Йĕлмелте пурăнакан тăванĕсем тĕлпулăва Дария Федоровна Мискина патĕнче пуçтарăнчĕç. Р. В. Романова, Д. В. Рафикова, Д. Ф. Мискина, М. К. Николаев - Галина Михайловнăн çывăх тăванĕсем. Пĕр-пĕрне тахçантанпа курмасăр тунсăхланă вĕсем. Г. М. Александрова *(ӳкерчĕкре сулахайран тăваттăмĕшĕ)* вĕсемпе ялта курса калаçма пултарчĕ. Мĕн чухлĕ асаилӳсем куç умне шуса тухрĕç.

Тепĕр кун ялти Димитрий Солунский ячĕпе хисепленекен чиркĕве, шкула çитсе курчĕç. Чиркӳ çывăхне пытарнă Иван Николаев купца (Земский Управа членĕ пулнăран ял-йыш ăна хисеплесе Чĕлен тесе чĕннĕ) - А. В. Николаеван аслашшĕ. Çовет влаçĕ вăхăтĕнче унăн вил тăприне çĕрпе танлаштарса якатнă. Ăна та асăнса унăн вил тăпри пулнă тĕле çăкăр татăкĕ хучĕç, пуç тайса сума сурĕç.

М. К. Николаев ăна алтарь çывăхне пытарнă тесе ĕнентерет.

Статьяна В. П. Никитин (Станьял) ман пата çырнă çырупа вĕçлетĕп: «... ăслăччĕ вăл, пире хăйĕн ачисенчен те лайăхрах пăхса, вĕрентсе ӳстерчĕ. Çил-тăманлă е шартлама сивĕ чухне ман пуçа хăйĕн тутăрне çыхса янисене паянхи пек хытă астăватăп (ун чухне манăн пуçа тăхăнма çĕлĕкçукчĕ, эпĕ фронтран аманса таврăннă ĕмпиччен-танкистăн ăшсăр сăран шлемĕпе çӳреттĕм; парни хаклăччĕ, анчах вăл ăшă тытмастчĕ, çавăнпа хăлха юха пуçланăччĕ...). Çапла вара, эпĕ Çĕнĕ Йĕлмел ялне А. В. Александрова ячĕпе тайăлса тав тăватăп».

А. В. Александрова Виталий Петровичăн пĕррремĕш учительници шутланать, вăл ăна аслă çул çине тухма пулăшнă. Халĕ В. П. Никитин (Станьял) Чăваш Республикинчи сумлă çынсенчен пĕри.

**("Канаш" хаçатра пичетленнĕ, 1995.)**



## 3. Пĕрремĕш комсомолец

Пирĕн шкулта вĕренекенсем ялти пĕрремĕш комсомолец Василий Федорович Бахтин çинчен материалсем пухаççĕ. Анчах ун çинчен тулли даннăйсем халиччен тупман-ха. Çавăнпа та Василий Федорович Бахтина пĕлекен çынсенчен ку ĕçре пире пулăшма ыйтатпăр.

* * *

Василий Бахтин 1898 çулта Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕпе амăшĕ ялти кулаксем патĕнче ĕçлеççĕ, питĕ йывăр пурнăç тӳссе ирттереççĕ. Апла пулин те, çамрăк Василий хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкултан вĕренсе тухать. Çемьери пурнăç питĕ йывăр пулнипе вăл малалла вĕренеймест. Василий вулама та, çырма та питĕ пултаруллă пулать. Ăна çак пултарулăхĕшĕн вулăс кантурне писаре илеççĕ. 1918 çулта ăна Çĕпрелĕнчи çар комиссариатне секретарь ĕçне туса пыма чĕнеççĕ. Ку ĕçре вăл мĕнпур вăйне, пĕлĕвне тата тăрăшулăхне хурса ĕçлет. Çав çулах вăл комсомола кĕрет тата ялта чи малтан Хĕрлĕ гварди ретне çырăнать. Совет республикине интервентсемпе шурă гвардеецсенчен ирĕке кăларнă çĕрте хутшăнать, Колчака хирĕç пынă вăрçăра пуçне хурать.

Ялти пĕрремĕш комсомолец çинчен нимĕнле документсем те сыхланман. Василий Бахтин коммунистсен партийĕ хушнипе нумай ялсенче пулса кулаксемпе, дезертирсемпе, Совет влаçне хирĕç тăракан тăшмансемпе кĕрешӳ илсе пырать.

**(«Çĕнĕ çул» хаçатран.)**

## 4. Вăл И. Я. Яковлев портретне ӳкернĕ

Урампа утса пыракан икĕ çамрăка вăхăтлăха чарăнма ыйтрăм. «Эсир Д. Архипов художник çинчен илтнĕ-и?» - тесе ыйтсан вĕсем йĕркеллĕн хуравлама пултараймарĕç. Çак ялта çуралса ӳснĕ ентеше ют çĕршывсенче лайăх пĕлеççĕ пулсан тăван-ялĕнче вара... маннă. Шел пулин те ентешĕсем ун çинчен П. С. Быков çырнă алçырусене вуласа тухнă хыççăн çеç пĕлчĕç.

«... Пирĕн ялта революциччен Архипов Степан (ятне автор арпаштарма пултарнă - **Н.К.**) пурăннă. Вăл тĕрлĕ тĕслĕ çуллă сăрăсемпе илемлĕ картинăсем ӳкернĕ. Художникăн хăш-пĕр ĕçĕсем ялта упранаççĕ. Малти касăра пурăнакан Улькинсен килĕнче вăл ӳкернĕ портрет çакăнса тăрать. Архиповăн картинисем, паллах, тата ытти килсенче те пур. Малти кĕпер леш енчи çырма айккинче пурăнакан карчăкăн (шел, хушаматне çырман - **Н. К.**) мăшăрĕн çамрăк чухнехи портречĕ çакăнса тăнине астăватăп. Картинăсене 1905-1910 çулсенче ӳкернĕ пулмалла. Коллективизаци вăхăтĕнче вăл ӳкернĕ пуянсен портречĕсем çухалнă. Нумайăшне çунтарса янă, терĕç. Ялта художникăн картинисем сахал мар пулнă...» Çак йĕркесене вуласа тухнă хыççăн ялти ватăсенчен художник çинчен ыйтса пĕлме шутларăм. Çак тĕллевпех яла пырса çитрĕм. Чи малтан Г. П. Утеева (Улькина) патне кĕтĕм. Кил хуçийĕ Галина Петровна сакăрвуннăсене çывхарса пырать. Мăшăрĕ вăрçăра вилнĕ хыççăн В. К. Утеева качча тухать. Иккĕмĕш мăшăрĕпе вĕсем 4 ача пăхса çитĕнтернĕ. Эпĕ мĕнле тĕллевпе килнине пĕлсен кил хуçи мана

сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ. Кивĕ хутсен папкине кăларса хучĕ.

- Архипов Митўк художник ҫинчен илткеленĕччĕ эпĕ, - калаҫăва пуҫарчĕ ватă хĕрарăм. - Архипов Юманккан аслашшĕпе пĕр тăвансем вĕсем. П. С. Быков Киевран килсен пирĕн патăрта хăнара пулчĕ. Художникăн картинине пăхса савăнчĕ. Акă вăл (мана кăтартать).

Художник Улькин Федот амăшĕн (Улькина Анна) портретне ўкернĕ. Картина паянхи кунччен те лайăх сыхланса юлнă. Портрета художник ҫуллă сăрăсемпе пир ҫине ўкернĕ. Кунта унăн хăйне евĕрлĕ почеркĕ, вăрттăнлăхĕ сăнланнă. Тепĕр ўкерчĕкĕнче Д. Архипов Улькин Элекҫейĕн портретне ўкернĕ пулнă. Шел, вăл паянхи кунччен сыхланса юлман. Смоленцовсен патĕнче те вăл ўкернĕ ўкерчĕксем пурри ҫинчен пĕлтĕм. Художник Л. Н. Николаева ашшĕн сăнне ўкернĕ.

Кам-ха вăл? Д. Архиповăн ячĕ те, вилĕмсĕр ĕҫĕ те нихăҫан та манăҫа юлмалла мар! Унăн пурнăҫĕпе ĕҫĕ ҫинчен ҫĕнĕ ăру пĕлмеллех. Вăл ўкернĕ паллă ҫынсен портречĕсене хак пама паян та витĕмлĕ сăмах тупаймăн. Художник ыранхи куншăн хăйне хĕрхенмесĕр ĕҫленĕ, хăй хывнă ыră та мухтавлă йĕр ĕмĕрсем хушши упранассине чун-чĕрипе шанса тăнă. Ҫут ҫанталăк тĕрлĕ енлĕ ăсталăх панă ҫынна паян эпир чăннипех те ҫĕре ҫити пуҫ тайса ăшшăн та тараватлăн сума сумашкăн тивĕҫ. Вăл халăхшăн, чăваш чĕлхин пуласлăхĕшĕн вăйне шеллемесĕр ĕҫленĕ.

Художник ҫинчен тĕплĕнрех пĕлес тесе Шупашкара кайсан В. П. Станьялран та ыйтнăччĕ. Вăл мана хулари педагогика институтĕнче вырнаҫнă И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленсе тăракан музее кайса курма сĕнчĕ:

- Д. Архиповăн пĕр картини упранать унта. Тен, художникĕ сирĕн ялтанах? - терĕ вăл.

И. Я. Яковлев портретне ўкерекенĕ Д. Архипов пулнине музей директорĕ М. В. Илларионова ҫирĕплетрĕ. Портретăн аялти рамкин сулахай енче «Д. Архипов» тесе ҫырса хунă. Санкт-Петербургра пурăнакан ученăй Алексей Иванов-Ехвет темиҫе ҫул хушши ĕнтĕ чăваш художникĕсен пурнăҫĕсене тĕпчет. Д. Архипов художник ҫинчен ыйтсан вăл мана тўрех хăй ҫырнă «По следам находок» кĕнекине кăтартрĕ.

- Художник Ҫĕнĕ Йĕлмелре ҫуралса ўснĕ, - терĕ вăл эпĕ панă ыйту ҫине хуравласа.

Ҫакна ученăйран илтсен манăн пуҫри иккĕленўллĕ шухăшсем сирĕлчĕҫ. А. Иванов-Ехвет «Прижизненные портреты И. Я. Яковлева» статьяра ҫирĕплетсе Д. Архипов ҫинчен акă мĕн ҫырать: «По воспоминаниям Н. В. Муромцева - сначала воспитанника, потом преподавателя Симбирской чувашской школы, затем доцента Московского педагогического института имени В. И. Ленина - Д. С. Архипов был родом из деревни Н. Ильмово Буинского уезда Убеевской волости Симбирской губернии. Круглый сирота, он девятилетним мальчиком попал на Северный Кавказ. В имении генерала-осетина получил первые уроки рисования, учился фотографии. Вернувшись с Кавказа, нашел себе пристанище в Симбирской чувашской учительской школе. Учился живописи у Н. Ф. Некрасова. Во время гражданской войны, кроме декораций, писал портреты советских и партийных деятелей, иллюстрировал чувашский журнал «Ана» («Нива»). В голодном 1921 году

уехал на Украину. В двадцатых годах Архипов работал художником-портретистом в художественном салоне Москультторга на Кузнецком мосту и в Краснопресненском парке культуры и отдыха в Москве. На его московской квартире часто бывали деятели чувашской культуры И. С. Максимов-Кошкинский, Г. А. Молостовкин, Кузьма Чулгась, Яков Ухсай, военоначальники, студенты. В архиве художника сохранились еще не расшифрованные портреты этих лиц.

Все, кто знал Д. С. Архипова говорят о нем: «Вспоминал К. В. Иванова, школу Яковлева». Умер Д. С. Архипов во время Великой Отечественной войны, после операции в Чебоксарах.

По рассказам доктора филологических наук, члена-корреспондента Академии педагогических наук СССР М. Я. Сироткина, на юбилейную выставку К. В. Иванова в 1940 году Д. Архипов прислал большой портрет поэта, исполненный пастелью, однако во время Великой Отечественной войны он был утерян. В семейном архиве сохранился вариант портрета в технике пастели* и незаконченный портрет маслом, а также портреты представителей чувашской интеллигенции 20-30 годов.

Имя Д. С. Архипова впервые я услышал от М. А. Волкова - добровольца Красной Армии, воспитанника Чувашской школы.

В начале десятых годов нынешнего столетия учителя Симбирской школы ходатайствуют перед вышестоящими инстанциями о разрешении вывесить портрет Яковлева в новом здании школы. Волков помнит его портрет работы Архипова. Этот портрет хранился у Анны Алексеевны Некрасовой. При снятии широкой рамы в нижнем углу обнаружилась надпись: Д. Архипов**. Портрет работы Д. С. Архипова датируется 1921 г. Задумчивый, сосредоточенный в портрете Архипова И. Я. Яковлев будто размышляет о нелегком прошлом в просвещении своего народа или мысленно сочиняет ему свое духовное завещание».***

Большое значение придается оформлению и иллюстрированию книг о войне, хотя сказываются лишения военного времени: трудно с бумагой, красками. Тем не менее, Чувашское государственное издательство выпускает целый ряд оригинальных произведений...

Рисованная обложка и многочисленные рисунки Д. Архипова в тексте иллюстрируют дневник участника партизанского рейда С. Прокопьева «Эскадрон, за мной!» (1942). Скромно, но привлекательно оформлены сборник очерков «В боях за Родину», репортаж С. Макарова «В гостях у бойцов Красной Армии» (1942) и другие книги****.

---

* Архив Ленинградского отделения Академии Наук СССР, ф. 250, оп. 5, ед. хр. 50, 1925, с.14.

** М. А. Спасский. Очерки по родиноведению, Казанская губерния, Казань, 1913, с.51.

*** А. Иванов (Ехвет). «По следам находок» (К истории русско-чувашских культурных связей), Чебоксары, Чувашское книжное издательство, 1977, с.56-61.

**** Н. А. Ургалкина. «Чувашское советское искусство». Чув. книжное изд-во, Чебоксары, 1973, с.59.

Дмитрий Семенович Архипов (1889-1942) пек ăста та пултаруллă çынсен кун-çулĕ, вĕсем тăван халăх валли туса хăварнă сулмаклă та пархатарлă ĕçĕсем нихăçан та манăçа тухмĕç. Вăл ӳкернĕ картинăсем чăвашсемпĕн кăна мар, Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемпĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Художникăн ячĕ чикĕ леш енче те palăрнă. Вăл пултаруллă та талантлă художник-портретист пулнă.

## 5. И. Я. ЯКОВЛЕВ: *«Вăл питĕ пултаруллă, ĕçлĕ тата хастар священник»*

1995 çулхи майăн 14-мĕшĕнче Константин Прокопьевич Прокопьев çуралнăранпа 123 çул çитрĕ. Вăл Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Çĕнĕ Йĕлмелĕнче 1872 çулта хресчен çемйинче çуралнă. Пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ, 1890 çулта унтан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Пăва уесĕнчи Элшел училищинче çулталăк хушши учительте ĕçленĕ. Унтан вăл Чĕмпĕрти духовнăй семинарин тăваттăмĕш класне вĕренме кĕнĕ. Унта миссионерсен обществин стипендийĕпе вĕреннĕ. 1894 çулта семинарирен питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă та Пăваран сакăр çухрăмра вырнаçнă Рункă ялĕнче священникре ĕçлеме пуçланă, шкулта Турă саккунне вĕрентнĕ. 1896 çулхи сентябрьте И. Я. Яковлев ун çинчен çапла çырнă: «Вăл питĕ пултаруллă, ĕçлĕ тата хастар священник».

1898 çулта ача çуратнă хыççăн унăн арăмĕ вилнĕ, çав çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнче вара амăшне пытарнă чухне ӳпке шыççипе чирленĕ аслă ывăлне Алексее пытарнă. 26 çулта мăшăрĕсĕр тăрса юлнă хыççăн, Константин Прокопьевич Хусанти Тĕн академине вĕренме кĕнĕ. Унтан 1903 çулта вĕренсе тухнă.

Кандидат сочинение çак темăпа çырнă: «Хусан тăрăхĕнчи вак халăхсен çутĕç хатĕрĕсене историллĕ тишкерни» (Хусана парăнтарнинчен пуçласа XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурриччен). Академире вĕреннĕ чухне 1903 тата 1904 çулсенче вăл чăвашла календарьсем туса хатĕрленĕ тата пичетлесе кăларнă. Хусан университечĕ çумĕнче тухакан «Известия общества археологии, истории и этнографии» журналта «Брак у чуваш», «Похороны и поминки у чуваш», «Обряд прохождения в земляные ворота», «Переводы христианских книг на инородческие языки во второй половине XIX века», «К истории просвещений инородцев Казанского края в XVIII веке», «Инородческие школы казанского края до введения просветительской системы Ильминского» тĕпчев ĕçĕсене пичетлесе кăларнă.

Тăван халăха çутта кăларас ĕçпе çывăх пулас тесе К. П. Прокопьев Казахстана та, Кавказа та кайман, Чĕмпĕрти коммерци училищинче Турă саккунне вĕрентекен учительте ĕçлеме юлнă. 1906 çулхи мартра вĕренекенсем пăлхав пуçарнипе, ăна политика енчен шанчăксăр тесе

ĕçрен кăларнă, çулталăк хушши вăл ĕç вырăнĕсĕр пурăннă. И. Я. Яковлев сĕннипе К. П. Прокопьев Н. А. Бобровниковран (И. Я. Яковлев арăмĕпе пĕр тăванран) ĕç ыйтнă. Ун чухне вăл Оренбург вĕренӳ округĕнче (Уфара) попечитель пулнă. Бобровников К. П. Прокопьева Челябинскри реальнăй училищĕре ĕç тупса панă. Унта вăл 1919 çулхи сентябрьччен ĕçленĕ.

Октябрьти революци хыççăн К. П. Прокопьев çурта завочĕн управляющийĕ, Челябинск кĕпĕрнин ĕçтăвкомĕн ял хуçалăх пайĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ.

1922 çултан пуçласа 1925 çулччен Курганск архиерейĕ пулнă. Унтан ĕçрен тухнă. 30-мĕш çулсенче вăл каллех службăна вырнаçнă, Курганти санитарипе гигиена лабораторийĕнче счетовод пулса ĕçленĕ. 1937 çулхи октябрĕн 11-мĕшĕнче К. П. Прокопьева, духовенствăн революцие хирĕçле пăлхавлă организацине йĕркелеме хутшăннă тесе, ĕçрех арестленĕ. Тепĕр çул ăна персе вĕлернĕ. 1957 çулта реабилитациленĕ.

«Брак у чуваш», «Похороны и поминки у чуваш» кĕнекесенче Константин Прокопьевич Кивĕ Улхаш, Чăвашкасси, кӳршĕллĕ вырнаçнă Шăмăршă, Çĕнĕ Йĕлмел ялĕсен XIX ĕмĕр вĕçĕнчи пурнăçне тата йăли-йĕркине сăнласа кăтартать, ученăй-этнограф тĕпчевĕсем тăван тăрăха тĕпчекен чăнлăсемшĕн те, шăмăршăсемшĕн те, çĕнйĕлмелсемшĕн те интереслĕ.

Пирĕн районта пурăнакансемшĕн "Брак у чуваш", "Похороны и поминки у чуваш" уйрăмах интереслĕ. Ученăй тата таврапĕлӳçĕ хăйĕн ĕçĕсенче пирĕн ентешсен XIX ĕмĕр вĕçĕнчи пурнăçне сăнласа кăтартать. Ку ĕçсем таврапĕлӳçĕсемшĕн, тăван тăрăх историйĕпе кăсăклана-кансемшĕн уйрăмах интереслĕ.

Шел пулин те, эпир Константин Прокопьевич Прокопьев çинчен нумаях пулмасть çеç, тăван тăрăха лайăх пĕлекен Ĕпхӳри патшалăх Нефть университечĕн профессорĕ Алексей Александрович Кондратьев тĕпченине пула çеç пĕлтĕмĕр. Эпир ăна пирĕн ентешĕн, темиçе кĕнеке авторĕн К. П. Прокопьевăн биографине тĕпчесе пĕлме пулăшнăшăн чĕререн тав тăватпăр.

* * *

К. П. Прокопьев пурнăçĕ, П. М. Миронов пурнăçĕ пекех, халăхшăн, пĕтĕм обществăшăн питĕ пархатарлă пулнă. Çĕнйĕлмелсем вĕсемпе чăннипех те савăнма, мухтанма пултараççĕ. Эпĕ çавăнпа вĕсем çинчен хавхаланса çыртăм. Вĕсен пурнăçне тĕплĕнрех пĕлни пуриншĕн те усăллă тесе шутлатăп.

Статьяна пĕтĕмпех архиври документсем тăрăх çырнă, хамран хупса çырни çук.

Николай, Сире тăван ялăр историйĕ çинчен кĕнеке кăларас ĕçе ăнăçлă вĕçлеме чăтăмлăх сунатăп.

**А. Симулин,**
**истори наукисен кандидачĕ.**

Шупашкар хули.
1995 ç., декабрĕн 21-мĕшĕ.

(Автор К. П. Прокопьев çинчен тĕплĕн çырса кăтартать. Вула-кансене вăл çырнă документлă очеркпа паллаштаратпăр).

# Халăх пурнăçне ăша хывса

## (К. П. Прокопьев тĕпчевçĕ-этнографăн кун-çулĕ)

Чăваш халăхĕн пурнăçĕпе йăла-йĕркисене XX ĕмĕр пуçламăшĕнче витĕмлĕ тĕпчекенсенчен пĕри Пăва уесĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă Константин Прокопьевич Прокопьев (1872-1938) пулнă. Хăйĕн вĕрентекенĕн И. Я. Яковлевăн тĕслĕхĕпе хавхаланса, Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, вăл пысăк ĕмĕтпе 1890 çулта ачасене вĕрентес ĕçе тытăннă. Пĕр çул хăйсен уесĕнчи Элшел шкулĕнче ĕçленĕ хыççăн Чĕмпĕр хулинчех духовнăй семинаринче вĕреннĕ. Лайăх вĕреннĕ пирки тӳрех малалла вĕренме пултарнă, анчах килтисем пулăшма пултарайманран священник ĕçне тытăннă. Пилĕк çул Рункă ялĕнче священникре пулнă хыççăн 1899 çулта Хусанти духовнăй академие вĕренме кĕнĕ.

Чухăн хресчен çемйинче ӳснĕ пирки Чĕмпĕрте вĕреннĕ çулсенче К. П. Прокопьева питĕ йывăр килнĕ. Йĕркеллĕ тумтир пулман, апачĕ начар пирки чирсем канăç паман. Ачалăхпа çамрăклăх çулĕсенчех унăн сахал мар нуша курма тивнĕ. Тен, çакă та ăна халăх пурнăçне тĕплĕн курма пулăшнă. Рункăра ĕçленĕ чух пĕр уйăхрах умлăн-хыçлăн арăмĕпе икĕ çулти ывăлĕ вилнĕ. Тем пек йывăр хуйхă йăтănса аннă пулсан та, вăл малалла вĕренес ĕмĕтне пăрахман.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухнех вăл халăх хушшинчи сăмахлăха, йăла-йĕркесене тимлĕн сăнама тытăннă, чылайăшне çырса та илнĕ. Учительпе священник пулса ĕçленĕ чухне те фольклорпа этнографи материалĕсене пухнă, И. Я. Яковлева вырăсларан кĕнекесем куçарма пулăшнă. Хăйĕн ĕçне типтерлĕ, юратса тунă.

Хусанти духовнăй академире тăватă çул вĕреннĕ хушăра, вĕренӳ планĕпе палăртнă предметсĕр пуçне, К. П. Прокопьев чăваш халăх пурнăçĕн тĕрлĕ енĕсене тĕпчес, тишкерес енĕпе тĕлĕнмелле нумай ĕçленĕ. Çакăн пек хавхаланса ĕçлеме ку таранччен пухнă пĕлĕвĕ, пурнăç опычĕ, тăван халăх пурнăçĕпе шăпине ăша тарăн хывни пулăшнă. Тата ку çулсенче ăна Раççее кĕнĕ хыççăн чăвашсемпе Атăл тăрăхĕнчи ытти вырăс мар халăхсем хушшинче христианствăпа хут пĕлеслĕх мĕнле аталанса пыни те питĕ кăсăклантарнă. Çак темăпа çырнă историллĕ тишкерӳшĕн 1903 çулта кандидат ятне илсе академие ăнăçлă вĕçленĕ. Ĕçлеме пуçласан, çитес икĕ çул хушшинче ку проблемăпа «XVIII ĕмĕрти Хусан тавралăхĕнчи вырăс мар халăхсем хушшинчи çут ĕç историйĕнчен» (Чĕмпĕр, 1905) тата «XIX ĕмĕрти Н. И. Ильминский çут ĕç системине тытăнicчченхи Хусан тавралăхĕнчи вырăс мар халăхсем хушшинчи шкулсенчи вĕрентӳ ĕçĕ» (Хусан, 1905) ятлă тĕпчевсем пичетлесе кăларнă. Калас пулать, К. П. Прокопьев Вăтам Атăл тăрăхĕнчи халăхсем хушшинче христианствăпа çут ĕçĕ сарăлнине анлăн тишкерес енĕпе чăвашсенчен малтанхи тĕпчевçисенчен пĕри пулнă. Каярах çак темăпа ĕçлекенсенчен чылайăшĕ унăн тĕпчевĕсемпе усă курнă.

Академин юлашки курсĕсенче вĕреннĕ чухнех вăл хăйĕн умне чăвашсен авалтан сыхланса юлнă хăш-пĕр йăли-йĕркисене тĕплĕнрех тĕпчес тĕллев лартнă. Çавăнпа та 1901 çулта унчен лайăх пĕлнĕ, тĕрлĕ

вырӑнта пурӑнакан чӑваш священникӗсенчен вӗсен ялӗсенчи йӑласене хӑйне валли ҫырса пӗлтерме ыйтнӑ. Хӑй ку таранччен пӗлни ҫеҫ ҫителӗксӗр пулнӑ. Вӑл йӑласене тӗрлӗ енчен пӑхса ӑнлантарма, иртнӗ ӗмӗрсемпе хальхи вӑхӑтӑн уйрӑмлӑхӗсене, ҫыхӑнӑвӗсене палӑртса пӗтӗмлетӳсем тума шутланӑ. Часах ун патне Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Шӑмӑршӑпа Ҫӗнӗ Улхаш ялӗсенче ӗҫлекен Ф. И. Ивановпа В. Д. Дмитриев священниксем, Хусан кӗпӗрнинчи Сиккасси ялӗнчен В. Е. Ефремов, Самар кӗпӗрнинчи Стюхаль ялӗнчен А. С. Михайлов тата ытти хӑш-пӗр священниксем пурнӑҫран илнӗ, чӑн фактсенчен тӑракан материалсем ярса параҫҫӗ. Вӗсене, хӑй пӗлнине тата унччен XVIII ӗмӗртен пуҫласа пичетленнӗ этнографиллӗ статьясене тишкерсе, 1902 ҫулта К. П. Прокопьев «Чӑвашсем мӑшӑрланни» ятлӑ чылай пысӑк статья ҫырнӑ. Октябрӗн 31-мӗшӗнче университетра археологи, истори тата этнографи обществин пухӑвӗнче статья содержанийӗн тӗп тезисӗсемпе хулари тӗпчевҫӗсене паллаштарать. Ҫак обществӑн пуҫӗнче тӑракан канаш ку статьяна этнографи наукишӗн хаклӑ тӗпчев тесе тӳрех пичетлеме йышӑнать.

Чӑн та, Хусан университечӗ ҫумӗнчи «Археологи, истори тата этнографи обществин пӗлтерӗвӗсем» журналӑн 1903 ҫулта тухнӑ 19 томӗн пӗрремӗш кӑларӑмӗнчех «Чӑвашсем мӑшӑрланни» («Брак у чуваш») статья пичетленнӗ. Журналӑн ку ҫултах тухнӑ ҫак томӑн малалли кӑларӑмӗсенче «Чӑвашсен ҫӗр хапхи витӗр тухас йӑла» («Обряд прохождения в земляные ворота»), «Чӑвашсен вилнӗ ҫынсене пытарас тата асӑнас йӗрки» («Похороны и поминки у чуваш») статйисем те пичетленнӗ. Статьясен авторӗ палӑртнӑ тӑрӑх, чӑвашсен мӑшӑрланас тата ҫемье пурнӑҫне йӗркелес ӗҫре (Тӗне кӗменнисен ҫеҫ мар, тӗне кӗнисен те), пӗтӗмӗшле илсен, XIX ӗмӗр вӗҫӗнче те авалтан пыракан йӑласем чылай ҫирӗп сыхланса юлнӑ пулнӑ. Чиркӳре венчете тӑрсан та ун пӗлтерӗшне пысӑка хумаҫҫӗ, тенӗ. Статья вӗҫӗнче мӑн кӗрӳ такмакӗн, хӗр йӗррин, хӗр ҫуммисен юррин тӗслӗхӗсене илсе кӑтартнӑ. Вилнӗ ҫынна пытарнӑ тата асӑннӑ чух тытакан йӑласенчен те чылайӑшӗ христианство тӗнне йышӑниччен тапхӑртанах сыхланса юлнине тӗслӗхсемпе кӑтартса панӑ. Автор ҫуралнӑ Ҫӗнӗ Йӗлмел ялӗнчи хресченсем те XIX ӗмӗр вӗҫӗнче хӑйсен тӗне кӗричченхи йӑли-йӗркисене пӑрахманнине палӑртнӑ. Ҫаксемпе пӗрлех хӑш-пӗр чӑвашсем православи чиркӗвӗ тӑрӑшнине пула авалхи йӑласене пӑрахса пыни ҫинчен те ҫырса кӑтартнӑ.

Ҫак этнографиллӗ статьясем К. П. Прокопьев тӑван халӑх пурнӑҫне, унӑн йӑлисемпе йӗркисене тишкерес ӗҫре ӑста сӑнавҫӑ, пултаруллӑ тӗпчевҫӗ пулнине кӑтартса параҫҫӗ. Вӑл хӑйӗн шухӑшӗсене сӑнарлӑ, ӑнланмалла ҫырса, тивӗҫлӗ пӗтӗмлетӳсем тунӑ. Шел, паллах, часах чӑвашсем пурӑнакан вырӑнтан куҫса кайма лекнӗ пирки, ӑна тек ҫакнашкал статьясем ҫырма шӑпа пӳрмен. Апла пулсан та, пичетленнӗ ӗҫӗсем те автор ятне сумлӑ тӗпчевҫӗ-этнографсен ӗретне лартнӑ. 1902 ҫулхи декабрь уйӑхӗнчен ӑна Хусан университечӗн археологи, истори тата этнографи обществин член-сотрудникне суйланӑ, каярах ҫак обществӑн действительнӑй членӗ пулса тӑнӑ.

Академире вĕреннĕ тапхăртах К. П. Прокопьев чăваш халăхĕшĕн тепĕр пысăк ĕç тунă. Чăвашла календарь - «Çулталăк кĕнеки» кăларма пуçланă. Н. И. Золотницкин 1867 çул валли кăларнă «Çулталăк кĕнеки» хыççăн чăвашла çĕнĕ алфавитпа кун пек кĕнеке тухман пулнă. Çапла вара вăл XX ĕмĕрте чăваш хресченĕсем валли кулленхи пурнăçра кирлĕ календарьсем кăларассине пуçарса янă. 1903 çул валли хатĕрленĕ «Çулталăк кĕнекине» Константин Прокопьевич 1902 çул вĕçĕнче хăй укçипе Çĕнĕ Улхашри В. Д. Дмитриев священник пулăшнипе Хусан университечĕн типографийĕнче пичетленĕ. Календарьте чăвашсен пурнăçĕнче кирлĕ сĕнÿсемпе канашсем сахал мар. Унта тĕнпе политика çинчен те, ытларах хресченсене пĕлме кирлĕ сведенисемпе материалсене кĕртнĕ. Çурт-йĕрпе выльăх-чĕрлĕх, апат-çимĕçпе пахча çимĕç, сад ÿстерессии, сывлăха упрасси тата ытти пурнăçра кирлĕ пĕлÿсем çинчен çырса кăтартнă. Н. И. Ильминскин вырăс мар халăхсене, хăйсен тăван чĕлхипе вĕрентсе, сутта кăларас тĕлĕшпе тунă пархатарлă ĕçне ырласа, вăл И. Я. Яковлева хăйĕн халăхне çутта кăлараканĕ пулма пулăшнине палăртса çырнă уйрăм статья та пур.

1903 çулта вăл, вулакансен шухăш-кăмăлĕсене, сĕнĕвĕсене шута илсе, çав типографирех 1904 çул валли «Çулталăк кĕнеки» кăларнă. Ун умĕнхи календарьпе танлаштарсан, кунта хресчене, хĕрарăма кирлĕ ăпаласемпе канашсене анлăрах, материалсене тĕплĕнрех çырса панă. Ял хуçалăхĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе усăллă кĕнекесем çинчен пĕлмелли нумай. 1905 çул валли те вăл «Çулталăк кĕнеки» хатĕрленĕ пулнă, анчах цензура тĕрлĕ сăлтавсем тупса ăна пичетлесе кăларма чарнă. Кайран ал çырăвĕпе Н. И. Ашмарин хăйĕн ĕçĕнче усă курнă.

Духовнăй академи пĕтерне хыççăн 1903 çулхи август уйăхĕнче К. П. Прокопьев Чĕмпĕрти коммерци училищинче саккунсем вĕрентекен учитель пулса ĕçлеме тытăннă. И. Я. Яковлевпа пĕр хулара ĕçлеме лекнĕ пирки чĕререн савăннă. Ку хулара хăй вĕреннĕ чăваш шкулĕпе духовнăй семинарири преподавательсем хушшинче те унăн сывăх юлташĕсем пулнă. Иван Яковлевич Константин Прокопьевича тавçăрулăхпа ĕçченлĕхĕшĕн, ĕçе тăрăшса та тĕплĕн тунăшăн, чăваш чунне ăнланма пĕлнĕшĕн питĕ хисепленĕ. Пĕр хулара пурăннă чух чăвашсем хушшинче хут пĕлеслĕхе, çут ĕçне аталантарас пирки, чăваш ялĕсенчи йывăр пурнăç çинчен вĕсем сахал мар сÿтсе явнă пулĕ. Чиркÿсенчи йĕркесене унта çÿрекенсемшĕн сывăхрах та ăнланмаллларах тăвас пирки те калаçнă паллах. Константин Прокопьевич ялта ĕçленĕ чухне те, академире вĕреннĕ çулсенче те, кайран Уралта пурăннă вăхăтра та шухăшĕмĕчĕсене хăйĕн учительне пĕлтерсех тăнă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Раççей обществинче хирĕçÿлĕхсем вăйланни чăваш ялĕсенче çеç мар, хресчен хушшинчен тухнă чăваш интеллигенцийĕн шухăшĕсенче, вĕсен профессиллĕ тата обществăллă ĕçĕ-хĕлĕнче палăрмасăр юлма пултарайман. Уйрăмах çакă 1905 çулта революци пуçлансан вĕреннĕ чылай чăваш çамрăкĕсен кăмăл туртăмĕнче, вĕсем ĕç сыннисем майлă пулса, тăван чĕлхен пĕлтерĕшне ÿстересшĕн тăрăшса, революциллĕ ĕçе тĕрлĕ майпа хутшăннинче лайăх курăннă. Вĕсен хушшинче духовнăй семинарисемпе академисенчен вĕренсе

тухнисем те, священникре тăракансем те пулнă. К. П. Прокопьев халăх сывлăшĕпе сывланă, халăх пурнăçĕпе хуйхи-суйхине витĕр курса тăнă. Çавăнпа та вăл çав тапхăрта хресченсем майлă пулса вĕсен пурнăçне çăмăллатасшăн, вырăс мар халăхсен обществăри вырăнне, наци культурине çĕклесшĕн тăнинчен тĕлĕнмелли çук.

1904 çулта Чĕмпĕрте ку хулари духовнăй семинарине пĕтернĕ, çак хуларах учительте ĕçленĕ Т. Н. Николаев (Хури) революциллĕ шухăшлă чăваш интеллигенчĕсемпе вĕренекенĕсенчен вăрттăн кружок йĕркеленĕ. Константин Прокопьевич та çак кружокпа çыхăннă. 1905-1906 çулсенче вăл хăйĕн тăван ялĕнчи хресченсене тĕрлĕ брошюрăсемпе листовкăсем парса тăнă, вĕсене халăх пăлханăвĕн сăлтавĕсем çинчен ăнлантарса панă. Коммерци училищин директорĕ, вăл хресченсем хушшинче правительствăна хирĕçле агитаци туни çинчен пĕлсен, 1906 çулхи мартра ăна политика енĕпе шанчăксăр тесе ĕçрен кăларнă. Çур çула яхăн ĕçсĕр пурăнма лекнĕ. И. Я. Яковлев унăн шăпи çинчен Оренбург вĕренӳ округĕн попечителĕнче ĕçлекен, хăш-пĕр енчен революциллĕ идейăсене те кăмăллакан Н. А. Бобровникова пĕлтернĕ. Çак попечитель август уйăхĕнче К. П. Прокопьева нумай пулмасть уçăлнă Челябинскри реальнăй училищĕн саккунсем вĕрентекен учитель ĕçне кӳлĕнтерет. Ку ĕçре вăл 1919 çулхи кĕркуннеччченех ĕçлет.

Сăмах май каласан, Н. А. Бобровников тăрăшнипех 1907 çулăн апрель уйăхĕнче Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнчен тухнă паллă учитель-математик П. И. Миронов Урал облаçĕнчи халăх училищисен инспекторĕнче ĕçлеме пуçланă. Николай Алексеевич, 1906 çулччен Хусанти вырăс мар халăхсен ачисенчен учительсем хатĕрлекен семинарин директорĕнче ĕçленĕскер, чăвашсем хушшинчен тухнă пултаруллă вĕреннĕ çынсене лайăх пĕлсе тăнă. Хăй должнăçĕпе усă курса вĕсене малалла çул уçса панă. Çак енĕпе Н. А. Бобровников тунă ырă ĕçсене пирĕн, чăвашсен, çав шутра Çĕнĕ Йĕлмел çыннисен те, манмалла мар. Пĕр чăваш ялĕнчен çут ĕç енĕпе икĕ пултаруллă ĕçчен, ăсчах-тĕпчевçĕсем тухни ăна та савăнтарнах ĕнтĕ. П. М. Мироновпа К. П. Прокопьев та пĕр-пĕрин çинчен пĕлсе тăнă паллах.

Челябинск хулинче пурăннă çулсенче те Константин Прокопьевич халăхшăн тăрăшакан, революциллĕ ĕçсене хутшăннă çынсемпе çыхăну тытма пăрахман. Вăрттăн ĕçлеме ăна священникре тăни те сахал мар пулăшнă. Чĕмпĕрти революциллĕ кружок ертӳçи, каярах чăвашсем хушшинчи нумай революциллĕ ĕçсене йĕркелеме хăраман Т. Н. Николаев (Хури) ун урлă Якутск хулинчи ссылкăран кирлĕ çынсемпе çыхăну тытнă. Ссылкăран тарнă Хурине темиçе кун К. П. Прокопьев хăй патĕнче пытарса усранă, Франци тухса кайма укçа, кĕпе-тумтир парса пулăшнă. Раççее таврăннă хыççăн иккĕмĕш хут арестлесен те (Тобольск хулинче пулнă чух) Хури ун урлă çырусем çӳретнĕ. Кунта çакна калани те вырăнлă пулĕ. 1906 çулта Хури кĕске вăхăт хушши Ёпхӳ хулинче П. М. Миронов учитель патĕнче те полици йĕрлененинчен пытанса пурăннă.

Челябинскра ĕçленĕ чухне те, уйрăмах малтанхи çулсенче, К. П. Прокопьев чăваш учителĕсемпе, священниксемпе, культура,

наука çыннисемпе çыхăну тытма пăрахман. Чĕмпĕрпе Хусанта, чăваш ялĕсенче унăн пĕлĕш-юлташсем сахал мар пулнă. Хăйĕнпе пĕрле академире вĕреннĕ, Хусанта ĕçлесе пурăнакан Н. В. Никольскипе те вăл çырусем çӳретсех тăнă, çĕнĕ хыпарсене пĕлнĕ. «Чăваш тĕнчи», чăвашсен пурнăçĕ нихăçан та унăн пуçĕнчен тухман. 1906-1907 çулсенче Челябинска ун патне редакцилеме чăвашла куçарнă текстсем те ярса панă.

Хăйне пуçласа пурнăç çулĕ çине кăларнă шкулпа унта вĕренекенсене ырă тăвас шухăш унăн асĕнчен кайман. **1915 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче Çĕнĕ Йĕлмел, Рункă, Элпел ялĕсенчен вĕренекен ачасене пулăшса тăма (ку ялсем унăн пурнăçĕнче уйрăмах паллă йĕр хăварнă) укçа хывса, хăй ячĕпе стипенди фончĕ уçнă. Çакăншăн И. Я. Яковлев çав тери хĕпĕртенĕ, кун пек ырă тĕслĕх унăн шкулне пĕтернĕ ытти çынсене те тивĕçлĕ утăм тутарасса шаннă.**

Реальнăй училищĕре хăйĕн ĕçне кăмăлтан, тăрăшса туса пынă.Çавăнпа та Константин Прокопьевича хăйĕн тĕп ĕçĕсĕр пуçне православи чиркӳ ведомствинче те, гражданла ведомство тăрăх та нумай явапла вырăна суйланă.Вăл протоиерей ятне илме тивĕçлĕ пулнă.1919 çулта, вĕренӳ заведенийĕсенче саккунсем вĕрентекен учитель должноçне пĕтерсен, виçĕ çул хушши епархинчи çурта завочĕн правленийĕн председателĕ, Челябинск кĕпĕрне ĕçтăвкомĕн ял хуçалăх пайĕ çумĕнчи утар заведующийĕ, хулари учительсен ял хуçалăх кооперацийĕн правленийĕн председателĕ пулса ĕçленĕ.

Константин Прокопьевич, И. Я. Яковлев пекех, христианство тĕнне паракнă çын пулнă. Священник ĕçне те, саккунсене вĕрентекен тивĕçне те вăл тăрăшса, чыслăн туса пынă. Анчах çакă ăна ĕçлекен халăхран нихăçан та уйăрман. Вăл темле ĕçре пулсан та халăх пурнăçне, унăн нуши-тертне чунĕпе туйса пурăннă. Унăн революцилле шухăшт-уйăмĕ уйрăмах лайăх палăрса тăнă.

1917 çулхи Октябрьти революци хыççăн, уйрăмах граждан вăрçи чарăнсан, Константин Прокопьевич Челябинскри духовенствăна Совет влаçĕн саккунĕсемпе килĕшсе ĕçлеме чĕннĕ, чиркӳри уйрăм йăласене тĕне ĕненекен ĕç çыннисене çывăхрах тăвасшăн улăштарма кирли çинчен каланă. 1921-1922 çулсенчи выçлăх вăхăтĕнче чиркӳсенчи хаклă тимĕрсенчен тунă хăш-пĕр япаласене инкек тӳсекенсен пурнăçне çăмăллатма парассишĕн пулнă. Ахальтен мар ăна, "революциллĕ протоиерея", хăш-пĕрисем çав çулсенче чиркӳрен уйăрма хăтланнă. Анчах та тĕне ĕненекенсем хушшинче К. П. Прокопьевăн авторитечĕ пысăк пулнă. 1922 çулхи ноябрь уйăхĕнче, духовенствăн нумай представителĕсем çине тăрса ыйтнипе ăна, çĕнĕ епархи уçсан, Курган епископĕ пулма уйăрса лартнă.Малашнехи кун-çулĕ унăн çак хулара иртнĕ. 1924 çулта кунта вăл архиепископ ятне илме тивĕç пулнă.

1925 çулта, архиепископран хăй ирĕкĕпе тухнă хыççăн, К. П. Прокопьев тĕн енĕпе ĕçлессине, чиркӳ ведомствинче службăра тăрассине пăрахнă. Совет Союзĕнчи улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем унăн кăмăлтуйăмĕнче те палăрнă. Унăн, Совет çĕршывĕнчи Конституци панă чун ирĕклĕхĕпе усă курса, чиркӳпе çыхăнман хуçалăх е культура сферинче ĕçлесе обществăшăн усăллă пулас килнĕ. Анчах «чиркӳ çынни» пулнă

пирки, хăйĕн шухăшĕсене пурнăçлайман. Пур пĕр, ватлăх еннелле сулăннă пулсан та, вăхăта ахаль ирттермен. Ĕçченлĕхне кура, Челябинскри пекех, пыл хурчĕсем тытнă, сад ўстернĕ, тухăçлă пахча çимĕç çитĕнтернĕ.

Ватлăх çулĕсенче хăй тĕллĕн шут ĕçĕпе бухгалтери профессине вĕреннĕ. Курган хулинчи гигиенăпа санитари лабораторийĕнче счетовод пулса ĕçлеме тытăннă. 1937 çулта, çĕршывра саккунсăрлăх хуçаланнă вăхăтра, К. П. Прокопьев та тискер репрессие лекнĕ. Совет влаçне хирĕç кĕрешме духовенствăн вăрттăн организацине тунă текен суя сăлтав тупса ăна 1938 çул пуçламăшĕнче персе вĕлернĕ. Сталин вилсен, культ вăхăтĕнчи тискерлĕхсем çинчен пĕлтерсен 1957 çулта ăна реабилитациленĕ.

Ĕçчен те нумай енлĕ пултаруллă çыннăн пурнăçĕ сарăмсăр татăлнă. Саманан киревсĕр пулăмĕсем нумай çынсен ăс-тăн пуянлăхне туллин уçса пама кансĕрлеççĕ. Халăхшăн тăрăшса ĕçлес текенсен çулĕсене хупласа лартнă, айăпсăр çынсенех айăп туса пурнăçран вăхăтсăр уйăрма та пултараççĕ. К. П. Прокопьев ĕмĕрне чыслăн, çынсемшĕн тăрăшса ирттернĕ. Вăл çырса хăварнă тĕпчев ĕçĕсемпе статьясем чăвашсем хушшинче çут ĕç мĕнле аталаннине, тăван халăхăн этнографине тĕплĕнрех пĕлме яланах усăллă пулĕç. Чăваш халăх историйĕпе культурине вĕреннĕ чух унăн ĕçĕсене сиктерсе хăварма май çук.

К. П. Прокопьев кун-çулне пăхса тухни тăван халăхăн XIX ĕмĕр вĕçĕнчипе XX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çуррингчи историне туллинрех, вăл пурăннă вăхăтри пулăмсене тарăнрах чухласа илме, ăнланма пулăшать. Унăн пурнăçне тишкерни иртнĕ вăхăтри хирĕçўсене çеç мар, хальхи вăхăтри çынсен шухăшĕсене, паянхи пăтравлă саманари вĕсен ĕмĕчĕсемпе нушисене чĕрепе туйма та кирлĕ. Ăна пĕлни çынлăх, тăванлăх, юлташлăх, пĕрлешўлĕх туйăмĕсене упрама, чăваш ятне, чысне çĕклеме хавхалантарĕ. Уйрăмах Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел çыннисемшĕн хăйсен ентешĕн ĕçĕсем, ырă ячĕ яланах хисеплĕ вырăнта пулассине шанас килет.

## Письмо К. П. Прокопьева из Челябинска

Одним из талантливейших выпускников Симбирской чувашской учительской школы был Прокопьев Константин Прокопьевич (1872-1938), оставивший нам бесценные сведения по этнографии и истории чувашского народа. Его научные труды «Брак у чуваш», «Похороны и поминки у чуваш», «Обряд прохождения в земляные ворота», статьи по вопросам истории распространения христианства и просвещения нерусских народов Поволжья, опубликованные в основном 1903-1905 гг., широко известны специалистам. К сожалению, жизненные обстоятельства К. П. Прокопьева оказались не благоприятными для продолжения научной деятельности. После окончания в 1903 году Казанской духовной академии он работал в Симбирске законоучителем в коммерческом училище. Однако в 1906 году был уволен за политическую неблагонадежность. Константину Прокопьевичу пришлось обратиться за помощью к И. Я. Яковлеву, хорошо знавшему его, с отличием окончившего Симбирскую чувашскую учительскую школу 1890 году. Помог устроиться на работу брат жены И. Я. Яковлева Н. А. Бобров-

ников - попечитель Оренбургского учебного округа, и с августа 1906 года по сентябрь 1919 года К. П. Прокопьев исполнял обязанности законоучителя в Челябинском реальном училище. (В 1907 году по просьбе И. Я. Яковлева Н. А. Бобровников повысил в должности Павла Мироновича Миронова, направив его из Уфы в Уральск инспектором народных училищ. Как и К. П. Прокопьев, П. М. Миронов - выходец из села Новое Ильмово Буинского уезда).

В архиве Чувашского государственного института гуманитарных наук хранится любопытное письмо, направленное К. П. Прокопьевым из Челябинска 19 декабря 1913 года в Казань Н. В. Никольскому, хорошо знавшему его по совместной учебе в Казанской духовной академии и научным трудам. Из письма следует, что оно было написано в связи с тем, что Н. В. Никольский сообщил К. П. Прокопьеву о своем желании предложить избрать его действительным членом Общества археологии, истории и этнографии при Императорском Казанском университете. **«Мне было бы лестно состоять членом уважаемого ученого Общества, - пишет К. П. Прокопьев, - но... в то же время немножко и стыдно. Ведь я так давно не принимал в трудах Общества никакого участия, да и в будущем не могу обещать непременно оказать какие-нибудь услуги Обществу своими трудами. Так далеко стою я от работников во имя науки, отстал от времени, да и здоровье теперь слабое. Впрочем, если Общество признает возможным приобщить меня к своей семье, ничего против не имею».** Считая себя обязанным, в случае избрания членом Общества, в какой-то мере продолжать научные изыскания, но в то же время оторванный от родного чувашского народа, его культуры и языка, К. П. Прокопьев просит совета относительно новой для него темы научных исследований: **«Мне приходила иногда мысль записать характерные слова и выражения местного (челябинского) русского говора. Таких особенностей в говоре здесь очень много, и мне они кажутся интересными».** Далее спрашивает: представляет ли интерес сбор такого материала для Общества или, может быть, он давно собран лингвистами? Да, любознательный человек - исследователь в любой обстановке остается самим собой.

Избранные члены Общества были обязаны вносить вступительный взнос (5 руб.), а затем ежегодный взнос (50 руб.). Относительно своего материального положения и возможности уплаты членских взносов К. П. Прокопьев отмечает, что он материально, как и прежде, **«достаточно обеспечен, но имеются пока срочные долги по устройству собственного дома, который встанет более 9000 р., долгов осталось еще 1500 р.»** С долгами он надеется к осени рассчитаться. **«Тогда свободнее можно будет располагать деньгами»**, - продолжает он. О чем же он мечтает? А мечтает Константин Прокопьевич не в далеком будущем учредить при Симбирской чувашской школе стипендию своего имени. Примеры бескорыстного служения родному чувашскому народу ему были известны, и прежде всего это - примеры И. Я. Яковлева и его учеников. Далее в письме К. П. Прокопьев подчеркивает, что служить ему **«стало легче, от лишних должностей избавился, и уроков теперь стало меньше, бывают нередко свободные вечера, но здоровье стало очень нежное, очень слабы нервы, и желудок работает плохо».**

Действительно, прослужив в Челябинске более семи лет, не

обремененный большой семьей (жена и старший сын его умерли в 1898 году), К. П. Прокопьев материально себя обеспечил. Если в первые годы службы он за основную должность получал 900 руб. (за 12 уроков), за добавочные уроки и классное наставничество 560 руб., а также за работу в женской гимназии 560 руб., всего 2020 руб., то в 1913 году он работал лишь в реальном училище и получал 3100 руб. в год. В эту сумму входили за 12 уроков 900 руб., за вторую пятилетнюю прибавку 800 руб., за классное наставничество 1200 руб. и за совершение богослужения 200 руб. Много это или мало? Для сравнения: в те годы основное жалованье рядового сельского учителя составляло 338 руб. 40 коп. Прибавки могли быть за пение 60 руб., гимнастику 30 руб., наем квартиры 60 руб., ведение закона божия 90 руб., заведывание 30 руб., рукоделие 16 руб. и др.

Безупречная работа К. П. Прокопьева высоко оценивалась руководством духовного ведомства. Он в разное время награждался набедренником и бархатной фиолетовой скуфьей, камилавкой, наперсным крестом; имел также медаль в память царствования Императора Александра III.

В заключительной части письма К. П. Прокопьев спрашивает о жизни в Казани и общих знакомых. **«Интересно бы узнать,** - пишет он, **- про Машанова, Катанова, Даулея и о положении инородческого дела в Казани... Не слыхал-ли, где Н. М. Кедров? Даниил Николаевич Николаев с 1 августа назначен сюда инспектором народных училищ 2-го района Челябинского уезда. Живем с ним дружно, видимся часто. Работник он хороший, но здоровье у него тоже неважное».**

Видимо, как П. М. Миронов и К. П. Прокопьев, не без участия Н. А. Бобровникова, в августе 1907 года выпускник Казанской духовной академии Д. Н. Николаев (1878-1955) устроился на работу в Оренбургском учебном округе. В одно время он работал в Оренбургских 1-й и 2-й гимназиях преподавателем словесности и истории, а с 1910 года в Осинской женской гимназии председателем педагогического совета и преподавателем методики русского языка, истории и педагогики. В августе 1913 года надворный советник Д. Н. Николаев назначается инспектором народных училищ в Челябинском уезде. Работа его была очень большой. Достаточно отметить, что в район входило 137 училищ, в том числе одноклассных разного типа 85, мусульманских мектебов и медресе 38.

По данным Г. А. Александрова, Николай Михайлович Кедров по окончании духовной академии в 1901 году работал учителем русского языка и литературы мужской гимназии в городе Ирбите (Пермская губерния), а затем в городе Бузулуке Самарской губернии.

Несколько отступя от письма К. П. Прокопьева, хочется обратить внимание читателя на судьбы чувашей-выпускников духовных академий. Как видно, К. П. Прокопьев, Д. Н. Николаев и Н. М. Кедров после окончания духовной академии, как и многие другие, вынуждены были работать в нечувашских учебных заведениях. Вот почему по случаю смерти П. М. Миронова Д. Петров в газете «Чувашский край» писал следующее: **«В судьбе П. М. Миронова, как в капле воды, отражается вся судьба несчастной чувашской интеллигенции: старая руссификаторская политика не позволяла ей работать среди своих**

**сородичей; все, кто потом и кровью добился высшего образования, вынуждены были служить в стороне. Вот почему и ныне Чувашобласть так бедна высококвалифицированными культурниками - они были и есть среди чуваш, но рассеяны по разным окраинам РСФСР».** Да, следовало бы нам - чувашам в нынешнем мире лучше использовать творческий потенциал выпускников ВУЗов в деле подъема уровня образования и духовности своих сородичей.

Наконец, К. П. Прокопьев хочет узнать о Машанове, Катанове и Даулее. Кто же эти «общие знакомые» К. П. Прокопьева и Н. В. Никольского?

Профессор Машанов (1852-1924) для К. П. Прокопьева был одним из ученых, поддержавший его в научной работе. Он, постоянно проявлявший интерес к тюркоязычным народам, с большим вниманием отнесся к исследованиям быта и верований чувашей К. П. Прокопьева.

Во время учебы К. П. Прокопьева в Казани Н. Ф. Катанов (1862-1922) был уже признанным ученым-тюркологом, одним из руководителей Общества археологии, истории и этнографии и одновременно редактором «Известий» этого общества. Внимание и поддержка, оказанные Н. Ф. Катановым в работе и при публикации научных трудов по этнографии чувашей, вызвали к нему большое уважение со стороны К. П. Прокопьева.

Даулея Романа Павловича, крещенного татарина, К. П. Прокопьев знал по учебе его в духовной академии и работе в Казанской учительской инородческой семинарии. С декабря 1907 года Р. П. Даулей, как и Н. В. Никольский, принимал участие в работе Переводческой комиссии при Управлении Казанского учебного округа, возглавляемой профессором Н. Ф. Катановым. В августе 1910 года, после летних волнений среди учащихся семинарии Н. В. Никольский, заподозренный в политической неблагонадежности, был уволен с работы. Наказания не избежал и Р. П. Даулей. Известно, что он в 1920-1922 годах работал в Уфимском чувашском педтехникуме, где преподавал историю, русский язык и литературу.

Находясь далеко от родины, К. П. Прокопьев интересуется также **«положением инородческого дела в Казани»**, которое, как и в наши дни, заключалось в требовании создания равных возможностей развития культуры и просвещения всех народов, населяющих Россию. После Октябрьской революции К. П. Прокопьев не принимал участия в общественной и научной деятельности. Тем не менее его работа архиереем Курганским с 1922 по 1925 год через двенадцать лет была использована для необоснованных обвинений в руководстве контрреволюционной повстанческой организацией духовенства, и в 1938 году К. П. Прокопьев был расстрелян.

**А. Кондратьев,**
**профессор Уфимского государственного нефтяного технического университета.**

* * *

Наукăпа тĕпчев институчĕн (Шупашкар хули, Мускав проспектĕнчи, 29-мĕш çурт, I корпус) архивĕнче К. П. Прокопьев докуменчĕсен папки упранать. Вĕсене çак номерсемпе шыраса тупма пулать: III - 22686, II-отд. ед. хр. 2269.

* * *

Никольскийĕн фондĕнче этнограф çинчен асăннă йĕркесем пур:

т. 144 с.53, 94, 173;
т. 147 с.168;
т. 154 с.386;
т. 161 с.70;
т. 162 с.899;
т. 163 с.322;
т. 164 с.195;
т. 178 с.319;
т. 242 с.214;
т. 245 с.257, 260;
т. 246 с.109;
т. 256 с.462;
т. 307 с.11, 13;
т. 319 с.609, 612;
т. 371 с.306.

* * *

Чичерин çырнă «О поволжских инородцах» кĕнекере К. П. Прокопьевăн наукăлла тĕпчев ĕçне пичетленĕ.

* * *

К. П. Прокопьевăн çырăвĕсем Мускаври Раççей Патшалăх библиотекинчи алçырусен фондĕнче упранаççĕ (361-мĕш фонд)). Курганри краеведени музейĕнче этнограф докуменчĕсен папки 4922-мĕш номерпе упранать. Усрава илнĕ хĕрĕ София Петровна Шибанова çак адреспа пурăнать: г. Курган, ул. Карельцева, д. 47.

* * *

1905-06 çулсенче ăна революци ĕçне хастар хутшăннăшăн ĕçрен кăларса янă. Çав вăхăтри унăн пурнăç тапхăрĕ çинчен Ульяновскри архивра упранакан жандармери фондĕнчи документсем каласа параççĕ.

* * *

Унăн ашшĕ Прокопий пулнăран вăл Прокопьев хушаматпа çӳренĕ. Прокопий, Емельян, Иван, Степан пĕр тăвансем пулнă, анчах та вĕсен ачисем тĕрлĕрен хушаматсемпе çӳренĕ. Каярахпа вара тин вĕсен ачисемпе мăнукĕсем Казаков хушаматпа çӳреме пуçланă. Степан манăн мăн асатте пулнă пулсан, Прокопий унпа пĕр тăван пулнă. Çапла майпа эпир тăваттăмĕш сыпăкри тăвансем пулатпăр.

# V. Чун-чĕрешĕн хаклă

## Ялти шкул историйĕнчен



Тăван шкул... Таçта инçетре пурăнсан та асран тухмасть-çке вăл. Аякри çăлтăр евĕр çуттăн ялкăшса хăй патнеллех туртать, асамлăн илĕртсе йыхăрать.

Пĕлӳ вăл - сĕм-тĕттĕмрен анлă та такăр çул çине тухма пулăшакан çутă. Тинĕсри маяк. Кашни çамрăкăн пурнăç çулĕ те ялти шкултанах пуçланать.

Пирĕн енсенче культурăпа çутĕç аталанăвĕ XIX ĕмĕр варринелле палăрма пуçланă. Ялсенче хут пĕлменлĕх, тĕн политики хуçаланнă. Çак тапхăрта ялта вĕреннĕ çынсем пулманпа пĕрех. Çĕпрел тăрăхĕнче халăха вĕрентесси, шкулсем уçса вĕсен ĕçĕ-хĕлне тĕрĕс йĕркелесе тăрассин пысăк пайĕ И. Н. Ульянов ячĕпе çыхăннă.

1863 çул. Çĕнĕ Йĕлмелĕнче шкул уçăлнă. «Мужское начальное народное училище» ятлă пулнă вăл. Ячĕнченех паллă, унта вĕренме арçын ачасене çеç илнĕ. Ăна ял обществин укçи-тенкипе тата земство пособийĕпе тытса тăнă, учителе шалу укçине хресченсем тӳленĕ.

Çакăнта пурăнакансем шкула асăннă датăран маларах та уçасшăн пулнă, анчах та малтан чиркӳ уçмасăр ку ыйтăва татса пама ниепле те пултарайман вĕсем. 1862 çулта, патша правительстви вак халăхсене алăра çирĕп тытас тĕллевпе православи тĕнне хăвăртрах сарма тăрăшас шутпа çак ялта йывăçран купаласа чиркӳ çуртне туса лартнă. Çакăн хыççăн тин чиркӳ çумĕнче шкулсем уçма ирĕк панă. Пирĕн ялта чиркӳ çуртне каярах юлса тунипе пĕр вăхăт хушши шкул уçасси те чарăнса тăнă. Ачасене чиркӳ караулкинче е арендăна илнĕ пушă çуртсенче вĕрентнĕ. Кӳршĕри Кивĕ Йĕлмел ачисем те шкула кунта çӳренĕ, ачасене

вĕрентекен учитель пулманнипе чиркӳ священникĕ вĕрентнĕ. Вăл çӳлти влаçсем хушнине пурнăçласа, çамрăксем хушшинче тĕн службине илсе пынă, çĕнĕ тĕне явăçтарма тăрăшнă. Патша правительстви чиркӳ çыннисене тĕрлĕ енĕпе хавхалантарнă. Çĕр уйăрса панă. Çав çĕрпе хресченсемех усă курнă, анчах уншăн вĕсен укçа тӳлемелле пулнă.

Ватă çынсем каланă тăрăх (Никифор Егоров, Емельян Ишметов, Илья Тарасов, Петр Кустов, Павел Быков) пурте пĕр пысăк сĕтел тавра ларса вĕреннĕ. Кивĕ хăмасенчен çапса тунă саксем çинче ларнă. Вăл вăхăтра пур пуçламăш шкулсенче те чиркӳ çыннисем пуç пулса тăнă. Çавăнпа та тĕп предметсенчен пĕри «Закон Божий» («Турă Саккунĕ») пулнă.

1867 çулта шкул çутĕç министерствин аллине куçать, çутĕç министерствин пуçламăш халăх училищи пулнă. Ялта 133 хуçалăх шутланнă, халăх йышĕ 900 çынна çитнĕ.

1869 çулхи октябрь уйăхĕнче И. Н. Ульянов (Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх училищисен инспекторĕ) Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкулта пулнă, вĕренекенсемпе тата учительсемпе курса калаçнă. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи пуçламăш халăх училищисен 1871-72 вĕренӳ çулĕшĕн çырнă отчетĕнче И. Н. Ульянов Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи пуçламăш халăх училищине те асăнса иртет. Унта çырса кăтартнă тăрăх, çак училище Пăва уесĕн училищисен советне пăхăнса тăнă, ăна тĕрĕслесе тăраканни уес училищисен совечĕн председателĕ, Алексей Иванович Баратынский священник пулнă. И. Я. Яковлев ун патне килсе çӳрекеленĕ. Вĕсен хушшинче тачă çыхăну пулнă, çырусем çӳретнĕ. Иван Яковлевич Хусанти университетра вĕреннĕ чухнех каникул вăхăчĕсенче Баратынскипе пĕрле уессем тăрăх çӳренĕ, чăваш шкулĕсемпе паллашнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренме ачасем пуçтарнă вăхăтра Кивĕ Улхашра, Çĕнĕ Йĕлмелĕнче, Пухтелĕнче, Хурăнварта, Упире пулнă. Çакăн пек çӳренĕ вăхăтра 1871 çулта Çĕнĕ Йĕлмел шкулĕнче вунă çулхи П. М. Миронова тĕл пулнă, ăна хăйпе пĕрле Чĕмпĕре илсе кайнă. Каярахпа çак шкултанах Н. С. Ефремов драматург, Д. Архипов художник, С. П. Прокопьев учитель, И. Е. Кустов агроном, революциччен Семенпа Константин Прокопьевсем вĕренсе тухнă.

1886 çулта И. Я. Яковлев тăрăшнипе çĕнĕ шкул çуртне тăваççĕ, паян кун çак çуртра медпункт вырнаçнă. Вăл икĕ пӳлĕмрен тата ун çумне учительсем валли пурăнма тунă çуртран тăнă. Алăкĕсемпе чӳречисене Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн мастерскойĕнче И. Я. Яковлев тутарттарнă. Шкул икĕ уйрăма пайланнă: пĕри арçын ачасен уйрăмĕ (вĕсем çĕнĕ шкул çуртĕнче вĕренме пуçлаççĕ), тепри - хĕрачасен (вĕсем чиркӳ караулкинче вĕренеççĕ). Ялта 227 хуçалăх е 682 арçын тата 646 хĕрарăм пурăннă.

1886 çулта ялти училищĕре 47 арçын ачапа 12 хĕрачана икĕ учитель вĕрентнĕ. Вĕсенчен пĕри Михаил Григорьевич Асановский. Вăл хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ, 27-ре (1879 çулта) Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен П. М. Мироновпа тата Н. М. Охотниковпа пĕр çулхине вĕренсе тухнă.

1886 çулта ялти училищăна тытса тăма пĕтĕмпе 582 тенкĕ те 15 пус укçа тăкакланă. Çак укçана çут ĕç министерстви уйăрса панă. Вĕрене-

кенсене Турă саккунне, вырăс историне тата музыкине, географи, арифметика, илемлĕ çырма тата вулама вĕрентнĕ, çав вăхăтрах ачасене атă-пушмак юсама, хĕрачасене ал ĕçне хăнăхтарнă.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче шкулсене те революци хумĕ пырса çапнă. Учительсем хресченсем хушшинче революцилле ĕç илсе пынă, пухусенче пуянсене хирĕç кĕрешме чĕннĕ. 1905 çулта Çĕнĕ Йĕлмелĕнче учитель пулса ĕçленĕ Петр Алексеев палăрса тăрать. Çак çулсенче вăл тăтăшах шкулта ял хресченĕсене пуçтарса пухусем ирттернĕ, унта революци юррисене юрланă. Ял çыннисенчен В. В. Вассияров, К. Е. Вассияров, Д. Чернов, И. Е. Кустов, С. Г. Волков çак пухусене активлă çӳренĕ. Пăлханулла çулсенче кунти шкулта «Пуян Карук» драма авторĕ Н. С. Ефремов вĕреннĕ. Пĕр вăхăт хушши, çемье нуши пысăк пулнăран, вăл пуянсем патĕнче тарçăра тертленнĕ. Пуянсене чунтан курайми пулса çитнĕ, вĕсен хăтланчăкĕсене курса йăлăхнă. Çак тарăху ăна каярахпа, шкултан вĕренсе тухсан 10 çултан «Пуян Карук» драма çырма хистенĕ. Петр Алексеев учитель пухусенче патша правительствине хирĕç пропаганда илсе пырать, Ленин правительстви çĕç халăха телейлĕ пурнăç парнелет, тесе ăнлантарнă. Учителĕн çак ĕçĕсене тишкерсе Пăва уесĕнчен пысăк вырăнти çынсем килнĕ. Ăна çĕр варринче тытса кайнă. Çакăн пек йывăр вăхăтра та учителĕн революцилле шухăштуйăмне малалла тăсакансем тупăннă. Ун хыççăнхи тапхăртан пуçласа учитель пулса Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă М. В. Ширкова (Егорова) ĕçлет, кунта качча тухать, 1951 çулччченех çак шкулта ĕçлет *(ӳкерчĕкре)*.



Çĕнйĕлмелсенчен Чĕмпĕр шкулĕнчен Елена Ивановна Николаева 1906 е 1907 çулсенче вĕренсе тухнă.

Октябрьти Аслă революци чухăн ачисемшĕн анлă çул уçрĕ. Вăл тĕрлĕрен чĕлхепе калаçакан ачасене хăйсен тăван чĕлхине вĕренме ирĕк пачĕ. Совет влаçĕн декречĕпе шкул чиркӳрен уйрăлать. Тăвата çул вĕренмелли пуçламăш шкул пулса тăрать. Çĕнĕ учительсем ĕçлеме пуçлаççĕ. Анат Тимĕрçентен килнĕ Иван Семенович Кирпичниковпа унăн мăшăрĕ Акулина Алексеевна нумай вăхăт хушши çакăнта ĕçлеççĕ. Шкул çурчĕн пĕрремĕш пӳлĕмĕнче Акулина Алексеевна 1-2 классене, иккĕмĕш пӳлĕмĕнче Иван Семенович 3-4-мĕш классене вĕрентеççĕ. Вĕсемех шкул çумĕнче пахчапа сад йĕркелеççĕ. Вĕсем хыççăн çак ял çынни А. В. Николаева

учитель пулса нумай вăхăт хушши ĕçлет. Каярахпа ăна Чăваш Республикинче ĕçленĕ вăхăтра Ленин орденĕпе наградăлаççĕ. 1925-1930 çулсенче Никифор Александрович Никифоров халăха çутта кăларасеишĕн ырмиканми вăйне шеллемесĕр ĕçлет, çав вăхăтрах революци идейисене пропагандăлать, ялти куштансене хирĕç вирлĕн кĕрешет. Шкулта ялкорсен кружокне те вăлах йĕркелет. Унта Василий Чернов, Петр тата Иван Герасимовсем, Петр Быков, Александр Никитич Казаков вĕренекенсем çӳренĕ, вĕсене хаçат ĕçне хăнăхтарнă, хăйсемех заметкăсем, тĕрленчĕксем çырнă, пуянсемпе кулаксене критиклесе стена хаçачĕсем кăларнă. Çакăншăн ăна ялти пуянсемпе куштансем курайми пулса çитнĕ, пĕрмаях учитĕле юнаса тăнă. Пĕррехинче каçпа хваттерĕн чӳречисенчен вут сыпписемпе пенĕ.

1934-1935 вĕренӳ çулĕнче Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çичĕ çул вĕренмелли шкул уçăлать. Вăл çулсенче шкул директорĕнче Д. И. Сибиряков (Аслă Аксуран), П. С. Райков, А. П. Губернаторов, Н. И. Сибиряков, П. Р. Мендеев учительсем пулса ĕçленĕ. Вăрçă умĕнхи çулсенче шкулта П. С. Юхвитов ĕçленĕ. Каярахпа вăл Совет Союзĕн Геройĕ пулса тăрать.

Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан шкул директорĕ Иван Леонтьевич Исаев (Хулаçырмисем) фронта тухса кайнă. Ун хыççăн пулнă шкул директорĕсем Василий Евграфович Тимошкин (Алешкин-Саплăкран) тата Павел Дмитриевич Чебанов (Куршанкă-Шăхаль) нумаях ĕçлеймеççĕ, фронта тухса каяççĕ. Вĕсен вырăнне Хурăнварти вăтам шкултан вĕренсе тухнă хĕрсем: А. Д. Рафикова (Денисова), Е. А. Самойлова (Макарова), М. Г. Рыкина, Т. П. Ишмукова, Д. А. Ишекерова, А. П. Егорова ачасене вĕрентме тытăнаççĕ, хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлеççĕ, заочно вĕренсе учитель профессине илеççĕ. Çав вăхăтрах М. Г. Рыкина тата Т. П. Ишмукова фронтра пулаççĕ, унтан таврăнсан каллех шкулта ĕçлеççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче В. Е. Кузнецов, М. Н. Калистратов, М. Н. Вирьялов, М. Н. Егоров, И. С. Мресов, Л. Н. Антонова, Е. Р. Токмаков учительсем, шкул директорĕ пулса А. Т. Чернов, каярахпа Н. А. Ермолаев ĕçлеççĕ.

1962-1963 вĕренӳ çулĕнчен пуçласа шкул сакăр çуллă пĕлӳ паракан шкул пулса тăрать, ачасене ĕçе хăнăхтарас ĕç палăрмаллах лайăхланать.

1980 çулта пĕрремĕш хут вăтам шкул уçăлать. Шкул директорĕ пулса И. С. Мресов ĕçлеме пуçлать. 1981-1982 вĕренӳ çулĕсенче Бауман ячĕпе хисепленекен колхоз вăйĕпе çĕнĕрен тунă икĕ хутлă кирпĕч çурта вĕренме куçаççĕ, ăна тума колхоз 500000 яхăн укçа-тенкĕ тăкаклать. Ачасем çутă та таса классенче вĕренме пуçлаççĕ. Çавăнтах столовăй, спортзал тата мастерской. Кунсăр пуçне колхоз правленийĕ производствăлла вĕренӳ валли «Т-40» трактор, «Нива» комбайн уйăрса парать. 1982 çулта пĕрремĕш кăларăмпа 39 ача вĕренсе тухса аттестат илеççĕ. Вĕрентӳ кабинечĕсем тĕрлĕрен кăтарту пособийĕсемпе пуянланса пыма пуçлаççĕ. (А. Казаков таврапĕлӳçĕ асаилĕвĕсенчен.)

Çĕнĕ Йĕлмел шкулĕнчен темиçе пин ача вĕренсе тухнă. Вĕсенчен ытларахăшĕ хăйсен кун-çулне тăван хуçалăхпа çыхăнтарнă: тыр-пул çитĕнтереççĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ. 40 çул хушши тракторист пулса ĕçлекен Н. Н. Мулеев - Тутар АССРĕн тава тивĕçлĕ механизаторĕ, Халăхсен Туслăхĕн орденĕн кавалерĕ, Н. М. Мискин - Тутар АССРĕн тава тивĕçлĕ агрономĕ, В. Н. Пастухова 30 çул ытла сысна пăхать, III степеньлĕ Ĕç Мухтавĕн орденĕн кавалерĕ, доярка пулса ĕçленĕ

М. С. Ларионова - Ленин орденĕн кавалерĕ, бригадир пулса ĕçленĕ Ф. Н. Утеев - Октябрьти Революци орден кавалерĕ, П. П. Головин - СССР тава тивĕçлĕ учителĕ, В. Н. Егоров - РСФСР тата ТАССРăн тава тивĕçлĕ зоотехникĕ, В. И. Мресов тата Н. И. Калаков Çар академийĕнчен вĕренсе тухнă, А. Ф. Головин - педагогика наукисен кандидачĕ, БАМ çинчи Тында хулинче ĕçленĕ, В. П. Вассияров - Шăмăршă районĕн халăх судйи, Л. С. Утеев подполковник - милици уйрăмĕн начальникĕ, В. Ф. Вассияров - тĕп инженер, И. В. Изендеев - Вешкаймăра район администраци пуçлăхĕн çумми, А. И. Казаков - Аслă Нагаткинăра районти налук инспекцийĕн пуçлăхĕ.

Афганистанра интернационалла тивĕçе пурнăçланă çĕрте В. Кузнецов, В. Кудрявцев, П. Мулеев, В. Карсаков, Н. Самойлов, Н. Ф. Казаков, В. Зайцев тата ыттисем те хутшăннă.

1989 çул шкула Тимофей Арсентьевич Кудрявцев ертсе пыма пуçлать. Вĕренӳ процесĕсем колхоз производствипе тачă çыхăнса иртеççĕ.

Паянхи кун шкулта 18 учитель ĕçлет. Вĕренекенсен йышĕ ытти çулсемпе танлаштарсан чакнă. Пурĕ 149 ача. Кӳршĕллĕ ялсенчен вĕренме çӳремеççĕ. Ĕлĕкрех Çĕнĕ Йĕлмелсем вĕренме Улхашри тата Çĕпрелĕнчи вăтам шкулсене çӳренĕ пулсан, халĕ кӳршĕ ялсене вĕренме кайма пăрахнă.

Шкул коллективне Петр Николаевич Егоров педагог ертсе пырать. Çак ĕçре вăл сакăр çул ĕçлет. Халăх вĕрентĕвĕн отличникĕ (отличник народного просвещения). Шкулта краеведени музейĕ уçăлчĕ. Халĕ унта пурĕ 60 яхăн экспонат упранать. Вĕсен хушшинче мамонт шăммисен юлашкийĕсем, авалхи укçасем, ĕлĕкхи кĕнекесемпе журналсем, авалхи масар çинчи чул татăкĕсем тата ытти те. «Музей халăха кирлĕ, усăллă, ĕлĕкхине пĕлме пулăшакан культура учрежденийĕ. Унăн алăкĕсем кирек хăçан та уçă пулмалла»,- тет унăн директорĕ А. Казаков.

Ачасене тарăн пĕлӳ парассишĕн О. П. Шадиряков, А. Т. Казакова, Е. В. Утеева, Л. Н. Мискин, Г. В. Амосова, П. И. Рафиков, Н. П. Мулеев тăрăшаççĕ. Юлашки çулсенче шкул пурнăçĕнче çĕнĕ улшăнусем пулса иртнĕ. Математика предметне тĕплĕнрех вĕрентес шутпа компьютерсем илсе килнĕ. Ятарласа класс уçнă. Л. Н. Мискин ĕç урокĕсенче ачасене платник тата столяр ĕçĕсене хăнăхтарса пырать. Учитель ачасене вĕренме тĕрлĕрен условисем туса панă. Шкул çумĕнчи участокра ачасем хăйсемех пахча-çимĕçсем лартса туса илеççĕ. Çак ĕçе вĕсене Н. П. Мулеев учитель хăнăхтарать.

Ял çыннисенчен нумайăшĕн кун-çулĕ шăпах шкулпа çыхăннă та. Çак шкултан çĕршывĕпе паллă çынсем вĕренсе тухнă.

Хальхи вăхăтра Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкулта ватă учительсен эстафетине çамрăксем тăсаççĕ.

Пурнăç çулне тухиччен эпĕ хам та çак шкултан вĕренсе тухнă. Пире вăл вăхăтра М. Н. Егоров, А. П. Егорова, И. А. Ăрхипов, М. И. Казакова, Н. Н. Албутов, Е. А. Самойлова, И. С. Мресов педагогсем тĕрлĕрен предметсене вĕрентнĕ.

**Тĕрлĕ çулсенче «Пионер сасси» тата «Çĕнĕ çул» хаçатсенче пичетленсе тухнă заметкăсем шкул пурнăçне çутатса параççĕ. Вĕсен авторĕ - Коля Казаков, çак кĕнекене хатĕрлесе пичетлесе кăлараканĕ.**

## Тăван колхоза - пулăшу

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкулти ачасем «Симĕс çулçă» операцие хастар хутшăнчĕç. Тăвата кун хушшинче вĕсем 30 центнер витаминлă апат, 50 центнер çулçăллă апат пухса хатĕрлерĕç.

Тăваттăмĕш класра вĕренекенсем уйрăмах тăрăшса ĕçлерĕç. Вера Зайцева - 102, Ваня Албутов - 82, Лидия Выселкина - 79 милĕк çыхрĕç.

Витаминлă тата çулçăллă апат хатĕрлесси малалла пырать.

("Пионер сасси", 1970.)

## Вĕлтрен пухрăмăр

Комсомолецсемпе пионерсем колхозри сыснасем валли витаминлă паха апат - вĕлтрен - пухрĕç. Нина Алякина, Зина Рафикова тата ыттисем те кашни 3-4 центнершер вĕлтрен пухнă. Пĕтĕмпе колхоза 12 тонна пуçтарса панă. Колхоз правленийĕ шкул ачисене тав турĕ.

("Пионер сасси", 1970.)

## Пионера кĕчĕç

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкулти Иван Кожедуб ячĕпе хисепленекен пионер дружинин торжествăлла сборĕ пулса иртрĕ. Унта III класра вĕренекен 39 ачана пионер ретне йышăнчĕç. Пионера кĕрекен ачасем лайăх вĕренме, çамрăк пионерсен законĕсене чыслăн пурнăçласа пыма тупа турĕç. Халĕ кăна мăйĕсене хĕрлĕ галстук çыхнă пионерсем савăнăçлă кун ячĕпе концерт кăтартрĕç.

("Пионер сасси", 1970.)

## Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

- Тимĕр ванчăкĕсене - мартенсене! Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çуллă шкулта вĕренекенсем акă çакăн пек девизпа тимĕр-тăмăр пухас енĕпе хăйсен хушшинче ăмăрту йĕркелерĕç. VI «а» класра вĕренекен В. Кудрявцев хăй кăна 504 килограмм тимĕр ванчăкĕсем пухса кӳчĕ. Çаплах М. Рафиков, Н. Денисов, Н. Кадиров пионерсем те кая юлмаççĕ. Вĕсем те 300-380 килограмм тимĕр-тăмăр пухса ăмăртура малти вырăна тухрĕç.

Тимĕр-тăмăр пухасси ăнăçлăн малалла пырать.

("Пионер сасси", 1970.)

## Колхоза пулăшаççĕ

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкулти производство бригадине Бауман ячĕпе хисепленекен колхоз 6 гектар сахăр кăшманĕ уйăрса пачĕ. Çак производство бригадине М. И. Казакова учительница ертсе пырать. Халĕ çак бригада членĕсем колхоза выльăх апачĕ хатĕрленĕ çĕрте пулăшаççĕ.

(Çĕнĕ çул", 1972.)

## Стена хаҫачӗсен конкурсӗ

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкулта класри стена хаҫачӗсен конкурсӗ пулса иртрӗ. Вӑл «Эпир Ильич халалӗсене пурнӑҫлатпӑр» девизпа пулса иртрӗ. Пӗрремӗш вырӑна VI «А» класри «Отличник» стена хаҫачӗ (редакторӗ Г. Рафиков), иккӗмӗш вырӑна VII класри "Мир" стена хаҫачӗ (редакторӗ Л. Утеева), виҫҫӗмӗш вырӑна VI «Б» класри «Чайка» стена хаҫачӗ (редакторӗ Н. Казаков) йышӑнчӗҫ.

Ҫак хаҫатсен редколлегийӗсене шкул дирекцийӗ грамотӑсем парса парнелерӗ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1972.)

## Кайӑксене кӗтсе илтӗмӗр

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкулта вӗҫен кайӑксем кӑнтӑр енчен вӗҫсе килнӗ ятпа ҫурхи уяв - «Кайӑксен кунӗ» пулса иртрӗ. Эпир ӑна тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илтӗмӗр. Ҫак кун тӗлне кашни шкул ачиех ҫӗнӗ шӑнкӑрч вӗллисем турӗ е киввисене тасатса майларӗ. Ку уявра шкул ачисем пурте хутшӑнчӗҫ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1972.)

## Уяв хаваслӑ иртрӗ

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкулта В. И. Ленин ҫуралнӑранпа 102 ҫул тултарнӑ ятпа клубра В. И. Ленин пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен доклад пулчӗ. Ачасем ӑна тимлӗн итлесе ларчӗҫ. Доклад хыҫҫӑн 5-8 классем концерт лартса пачӗҫ. Вӑл концерта М. Лысова ертсе пычӗ.

Концертра шкул ачисем юрӑ юрларӗҫ тата ташӑсем ташларӗҫ. Ленин ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсем вуларӗҫ. Шкул ачисем пурте ку концерта юратса, хавасланса пӑхрӗҫ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1972.)

## Колхоза пулӑшаҫҫӗ

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫуллӑ шкул ачисем ҫуллахи каникула усӑллӑ ирттерчӗҫ. Уҫӑ сывлӑшра ҫӳресе сывлӑхӗсене ҫирӗплетрӗҫ, ҫаплах тӑван колхоза пулӑшасси ҫинчен те манса каймарӗҫ. Тыр-пул вырса пухнӑ вӑхӑтра улӑм пухнӑ, йӗтем ҫинче тырӑ тасатнӑ ҫӗрте ӗҫлерӗҫ. Кӗркунне вара сад пахчинче панулми пуҫтарчӗҫ. Халӗ пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса вӗренме тытӑнчӗҫ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1972.)

## Витаминпа пуян апат

Эпир, пионерсемпе комсомолецсем, ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче тӑван колхоза пысӑк пулӑшу паратпӑр. Нумаях пулмасть кӑна-ха эпир обществӑлла выльӑхсем валли витаминпа пуян апат - вӗлтӗрен пухрӑмӑр. Ку ӗҫре Л. Вожаровский, В. Кирхеева, Е. Захарова, В. Алякин, З. Рафикова вӗренекенсем уйрӑмах пысӑк тӑрӑшулӑх кӑтартрӗҫ. Вӗсем 3-4-шар центнер витаминлӑ апат пухма ӗлкӗрчӗҫ те ӗнтӗ.

Колхоз правленийӗ шкул ачисене тав турӗ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1972.)

* * *

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫуллӑ шкулта математика кружокӗ ӗҫлет. Кружока А. Зимина ертсе пырать. Эпир кружокра тӗрлӗ задачӑсем шутлатпӑр, математика вӑййисене ирттеретпӗр.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1972.)

## Ӑмӑрту йӗркелерӗҫ

Январӗн 25-мӗшӗнчен тытӑнса февралӗн 25-мӗшӗччен пыракан макулатура пухмалли уйӑхлӑха хутшӑнса, пирӗн Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫуллӑ шкулти VII «А» тата V классенче вӗренекенсем пӗр-пӗрин хушшинче ӑмӑрту йӗркелерӗҫ. Икӗ класс та хӑйсене панӑ план-задание ирттерсе пурнӑҫларӗҫ. Шкулӗпе пурӗ 4 центнер ытла макулатура пухнӑ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1973.)

## Кайӑксен кунне уявласа ирттертӗмӗр

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи пионерсемпе комсомолецсем кайӑксем кӑнтӑр енчен вӗҫсе килнӗ ятпа уяв ирттерчӗҫ. Ҫаплах кайӑксем килнӗ ятпа стена хаҫачӗсем кӑларчӗҫ. Уроксем хыҫҫӑн клубра М. И. Казакова учительница «Вӗҫен кайӑксем - пирӗн ҫывӑх туссем» темӑпа доклад туса пачӗ. Ун хыҫҫӑн З. Мутина ертсе пынипе концерт пулчӗ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1973.)

## Колхоза пулӑшрӑмӑр

Эпир, Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫуллӑ шкулта вӗренекенсем ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче тӑван колхоза тӗрлӗ ӗҫсенче пулӑшатпӑр. Колхоз правленийӗ пире 4 гектар сахӑр чӗкӗнтӗрӗ уйӑрса пачӗ. Биологипе тата химипе вӗрентекен М. И. Казакова учительница ертсе пынипе ҫак участокри чӗкӗнтӗре пӗрремӗш хут ҫумласа тата сайратса пӗтертӗмӗр. Ку ӗҫре Л. Абрамова. Н. Шуркина, П. Пришельцев, Г. Казакова тата ытти пионерсем те питӗ тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1973.)

## Ҫӗр улми пуҫтарчӗҫ

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкул ачисем Бауман ячӗпе хисепленекен колхоза ҫӗр улми кӑларма пулӑшрӗҫ. Ҫӗр улми кӑларнӑ ҫӗрте пионерсемпе шкул ачисем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ. Вӗсенчен VII «Б» класра вӗренекен В. Казаков, И. Карсаков, З. Кудрявцева, VI «Б» класран Н. Кадиров, VIII класран З. Агапова тата ытти пионерсем тӑрӑшулӑх кӑтартрӗҫ.

("Ҫӗнӗ ҫул", 1973.)

## Тӗлпулу пулса иртрӗ

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкулти Иван Кожедуб ячӗпе хисепленекен пионер дружини Ульяновск облаҫӗнчи вӑтам шкулти Князькин ячӗпе хисепленекен пионер дружинипе тахҫанах ӗнтӗ тачӑ ҫыхӑну тытать. Пионерсен аслӑ уявӗ ячӗпе кӑҫал та Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи шкул ачисемпе Кивӗ Улхаҫри пионерсем хушшинче тӗлпулу пулса иртрӗ. Икӗ шкул енчен те саламлӑ сӑмахсем каларӗҫ. Ун хыҫҫӑн вара

хавасл̆а концерт к̆атартр̆еç тата спорт ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. Кунсăр пуçне туслăх костерĕ чĕртрĕç. Ун йĕри-тавра савăнса юрларĕç. Пионерсен аслă уявĕ нихçан та асран каймалла мар савăнăçлă иртрĕ.

**("Çĕнĕ çул", 1973.)**

## Правлени тав турĕ

Çĕнĕ Йĕлмелĕнче сакăр çул вĕренмелли шкулти производство бригадине колхоз правленийĕ 3 гектар сахăр кăшманĕ уйăрса пачĕ. Бригада членĕсем хĕрсех ĕçе пикенчĕç. Вĕсенчен Т. Албутова, Т. Карсакова, С. Калаков пионерсем пуринчен ытла тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсене правлени тав турĕ.

**("Пионер сасси", 1973.)**

## Пионерсен тăрăшулăхĕ

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çуллă шкулта вĕренекенсем пионерсен маршрутне активлă хутшăнса, Бауман ячĕпе хисепленекен колхоза пулăшаççĕ. Халĕ вĕсем выльăхсем валли витаминпа пуян апат хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеççĕ. Пионерсем тăрăшса ĕçленипе 50 центнер ытла утă хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Л. Вассияров, П. Пришельцев вĕренекенсем ку ĕçре уйрăмах активлă хутшăнаççĕ.

**("Пионер сасси", 1973.)**

## Парк ешерет

Çĕнĕ Йĕлмел ял варринче халиччен усă курман çĕр лаптăкĕ выртатчĕ. Ял çыннисен пĕрлехи пухăвĕ çак вырăнта парк тума йышăнчĕ. Кунта çамрăк йывăçсем лартнă çĕрте çамрăксемпе пĕрле, шкул ачисем те активлă хутшăнчĕç. Пурĕ 1 пине яхăн çамрăк топольсем лартнă. Парк йĕри-тавра решетке тытса çавăрнă. Парк пурĕ 1 гектар ытла çĕр йышăнать. Лартнă йывăçсем пурте чĕрĕлчĕç.

Кĕркунне вара унта тĕрлĕрен йывăçсем лартма палăртнă.

**(Çĕнĕ çул", 1973.)**

## Каникул хавасл̆а иртет

Çуллахи вăхăтра шкул ачисемпе пионерсем колхоз лагерĕнче канчĕç. Пионерсен аслă важатăйĕ Е. Казакова ертсе пынипе эпир лагерьте тĕрлĕ вăйăсем тата юрăсем юрларăмăр. Пионерсем колхоз лагерĕнче стена хаçачĕ кăларчĕç тата питĕ нумай кĕнекесем вуларĕç. Аслă пионервожатăй Е. Казакова пире Леонид Агаков çырнă «Ылтăн вăчăра» ятлă кĕнекене вуласа пачĕ. Ăна эпир тимлĕн итлесе лартăмăр тата ăна сўтсе яврăмăр. Кунсăр пуçне унта ачасем КВН лартма хăнăхрĕç. Пире колхозри пионер лагерĕ питĕ кăмăла кайрĕ.

Çуллахи каникул вăхăтĕнче шкул ачисем колхозри выльăхчĕрлĕхсем валли вĕлтĕренпе йывăç çулçисем 10 тонна хатĕрлерĕç. Çак ĕçре шкул ачисем питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен Николай Яковлев хăй пĕччен 6 центнер та 51 килограмм, Леонид Чернов 3 центнер ытла, Леонид Вожаровский 2 центнер та 57 килограмм, çаплах Петр Давыдов, Михаил Симулин тата ыттисем те 2,5-3,5 центнер витаминлă курăк пухса пачĕç. Пионерсене колхоз правленийĕ тав турĕ.

**(Çĕнĕ çул", 1973.)**

## Витаминлă апат пухаççĕ

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çуллă шкулта вĕренекенсем колхоза витаминлă апат пухма пулăшаççĕ. Ку ĕçре И. Карсаков, Н. Алякина, Н. Кудрявцева, Л. Вожаровский, Л. Никифорова, В. Кирхеева, Е. Лянкина вĕренекенсем уйрăмах пысăк тăрăшулăх кăтартаççĕ. Вĕсем 161-107-шер килограмм вĕлтĕрен пухса пачĕç те ĕнтĕ.

Ку ĕç малалла пырать.

("Çĕнĕ çул", 1973.)

## Макулатура пуçтараççĕ

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи 8 çул вĕренмелли шкул ачисем макулатура пуçтармалли уйăхлăха анлăн хутшăнса государствăна 395 килограмм макулатура пухса пачĕç.

Макулатура пуçтарас енĕпе шкулта ăмăрту йĕркеленĕччĕ. Ăмăртура 1 вырăна - VI класра, 2 вырăна - IV класра, 3 вырăна III класра вĕренекенсем йышăнчĕç. IV класра вĕренекен Л. Зайцева 21 килограмм, Л. Вассияров 25 килограмм макулатура пухрĕç.

Макулатура пухас ĕç малалла пырать.

("Çĕнĕ çул", 1973.)

## Лекцисем итлетпĕр

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çуллă шкулта кашни эрнерех V-VIII классенче вĕренекенсем валли лекцисем пулаççĕ. Лекцисене тĕрлĕрен предметсемпе вĕрентекен учительсем вулаççĕ. Юлашки вăхăтра эпир географи учителĕ И. А. Архипов «Пулнă-ши вăл тĕнче пуçламăшĕ тата унăн вĕçĕ пулать-ши?», физикăпа вĕрентекен Г. П. Казаков «Марспа Венера планетăсем çинчен эпир мĕн пĕлетпĕр», чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Н. Н. Албутов «Чăвашсен просветителĕ И. Я. Яковлев» темăсемпе вуланă лекцисене итлерĕмĕр.

("Çĕнĕ çул", 1974.)

## Хаçатсем çырăнтăмăр

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çуллă шкулта вĕренекенсем пурте хаçат-журналсем çырăнчĕç. Вĕсем çĕнĕ çулта 250 экземпляр хаçат-журнал илсе тăма тытăнаççĕ. Хаçатсем çырăнас енĕпе VI класра вĕренекенсем мала тухрĕç. Пионерсем 66 экземпляр «Пионер сасси» тата 75 экземпляр «Пионерская правда» хаçатсене çырăнчĕç. Шкулта вĕренекен ачасем çĕнĕ çултан вара хăйсен юратнă хаçачĕсемпе журналĕсене илсе вулĕç.

("Çĕнĕ çул", 1974.)

## Туслă çыхăну

Пирĕн шкулти пионерсем тĕрлĕ çĕршывсенчи пионерсемпе çырусем çӳретеççĕ. Паян та акă Польша çĕршывĕнчи Эва Брелиньскаран çыру килчĕ. Вăл Галензево ялĕнче пурăнать. Вăл хăйĕн пурнăçĕ, шкулта вĕренни, çуллахи каникул çинчен çырать. Эпир Эвана Польшăна ирĕке кăларнăранпа 30 çул çитнĕ ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр.

("Çĕнĕ çул", 1974.)

## Конкурс пулса иртрĕ

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи сакăр çуллă шкулта нумаях пулмасть «Комсомол 50 çул Ленин ячĕпе» темăпа сочиненисен конкурсне ирттерчĕç.

Конкурса литературăна вĕрентекен М. И. Лысова юлташ йĕркелерĕ. В. Мулеева, В. Шуркина, Е. Еремеева (VIII «А»), П. Рафиков, Р. Шагаева (VIII «Б») вĕренекенсем çырнă сочиненисене уйрăмах ырларĕç.

**(Çĕнĕ çул", 1974.)**

## Тăрăшса ĕçлеççĕ

Çуллахи каникул вăхăтĕнче комсомолецсемпе çамрăксем колхоз уй-хирĕнче ĕçлерĕç. Каникулăн кашни кунĕ хаваслă иртет.

Вăхăт иртни те сисĕнмест, август - каникулăн юлашки уйăхĕ.

Колхоз уй-хирĕнче ылтăн тырă ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ, ывăна пĕлмен хастар комсомолецсем Бауман ячĕпе хисепленекен колхоз уй-хирĕнче тырă вырса пухнă çĕрте ĕçлеççĕ. Уйрăммăнах В. Мадуров комсомолец вара колхоз шанса панă комбайнпа тырă вырса кĕртнĕ çĕрте тăрăшса ĕçленĕ.

Çаплах çак комсомолецсене те кĕртмелле: В. Чашкин, В. Кудрявцев. Вĕсем комбайнера пулăшакан пулса ĕçлерĕç.

Колхоз правленийĕ комсомолецсене чĕререн тав турĕ, тата та лайăх вĕренме сунчĕ.

**(Çĕнĕ çул", 1974.)**

* * *

Ку ялта паллă математик тата ботаник П. М. Миронов, К. П. Прокопьев этнограф, Д. С. Архипов художник, çар академин преподавателĕ Н. И. Калаков, СССР тава тивĕçлĕ учителĕ П. П. Головин тата ытти-ытти паллă çынсем çуралса ӳснĕ. И. Я. Яковлев Çĕнĕ Йĕлмелне темиçе хутчен те килсе кайнă, кунта чăвашсемпе курса калаçнă, вĕсене пулăшнă. Чухăн ачисене Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме вырнаçтарнă. Кунти таврапĕлӳçĕсем шутланă тăрăх, Чĕмпĕр шкулĕнчен 10 яхăн çын тарăн пĕлӳ илсе тухнă. Математика учителĕ А. А. Казаков вырăнти чăвашсен обществине ертсе пырать. Ял историйĕпе çыхăннă документсем самаях пуçтарнă вăл, ун коллекцийĕнче авалхи чăвашсен çырса хăварнă асаилĕвĕсем упранаççĕ. Сăн ӳкерчĕксем те пайтах...

**("Вучах", 1992 23 N.)**

# Пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ...

Утă уйăхĕн пĕр кунĕнче Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкул умĕнче капăр тумланнă çамрăк çынсем пуçтарăнчĕç.

- Люся,.. Анна,.. Петя! Вăт маттурсем! Нивушлĕ эпир каллех пĕрле? Мĕнле телей!

- Эсир нимĕн чухлĕ те улшăнман иккен!

- Ӳт-пӳрен кăшт кăна улшăннă ĕнтĕ, хĕрсем. Тĕрĕс вĕт?..

Кулă, ыталашу, куççуль. Кунта 1974 çулта çак ялти шкултан вĕренсе тухнисем пухăннă. Çăтă* ункă варринче класри активист Виктор Казаков тăрать.

---

*Çăтă - плотный.

- Мĕн тери аван эсир килни! Палласа илтĕр-и пире? Эсир пирĕн, пĕрремĕш учителĕн М. Н. Егоровăн пулăшаканĕччĕ вĕт?

- Палларăм, палларăм - именчĕклĕн те пăлханса хуравлать Виктор пĕрле вĕреннĕ юлташĕсене, - мĕнле палламăн ĕнтĕ?

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи шкула Чăваш халăхĕн патриархĕ И. Я. Яковлев никĕсленĕ, халĕ вара кунта медпункт вырнаçнă. Пуçтараннисем кăна пĕлсен кăштах салхуланчĕç - И. Я. Яковлев асне сыхласа хăварман. Çĕнĕ шкул халĕ кирпĕчĕрен тунă икĕ хутлă çуртра вырнаçнă.

Эпир ун чухне çирĕм виçĕ ача вĕреннĕ. Шел пулин те, пуртех килеймерĕç ку тĕлпулăва. Нумайăшĕ тăван ялтан аякра пурăнаççĕ. Питĕ шел, пĕрремĕш учитель М. Н. Егоров вăхăтсăр вилсе кайрĕ. Тата темиçе учитель пирĕнпе çук, çĕре кĕнĕ. Пирĕн асра вĕсем юратнă çынсем пулса юлчĕç. Вĕсене эпир пĕр минут сăмах чĕнмесĕр тăрса хисеплерĕмĕр. Класс руководителĕ Н. Н. Албутов та чире пула ку тĕлпулăва пыраймарĕ. Шел, ăна та кураймарăмăр. Пирĕн класра вĕренекенсенчен çурри ытла ял хуçалăхĕнчи пысăк квалификациллĕ специалистсем пулса тăнă. Мĕншĕн тесен вĕсем ачаранах яла юратнă, хăйсене çакăнта ĕçлеме хатĕрленĕ. Раççей çарĕн служащийĕ те пур - И. Карсаков, журналист - Н. Казаков, священник В. Быков, нумайăшĕ вара механизатор тата водитель. П. Афиногентов «Ильмово» колхозра ферма заведующийĕ пулса ĕçлет...

Л. Ефимова (Юнгерова) каласа парать: «Пире питĕ лайăх учительсем вĕрентетчĕç, çавăнпа хамăр та тăрăшаттăмăр, «иккĕ» паллăпа вĕренекенсем çукчĕ. Пĕлӳ патне хамăр туртăнаттăмăр. Паян пĕрпĕринпе курнăçни питĕ пысăк савăнăç маншăн. Пĕр вăхăтрах чĕре савăнать те, ыратать те. Пурин те шăпи ăннăшăн савăнатăп, хăш-пĕр юратнă учительсем пирĕнпе çуккишĕн хурланатăп».

Люся Ефимова шкултан лайăх паллăсемпе кăна вĕренсе тухрĕ, шăпа ăна Ишеевка рабочи поселокне (Ульяновск облаçĕ) илсе çитернĕ. Вăл кĕпе-йĕм çĕлекен КИМ фабрикин филиалĕнче ĕçлет, унăн икĕ ача ӳсет.

- Эпир шкул пĕтернĕ чухне, - сăмах илет Петр Афиногентов, - хамăра çитĕннĕ çынсем пек туяс килетчĕ. Унтанпа 20 çул иртсе кайрĕ, халĕ çамрăкланнă пек туйăнать. Пурте çакăн пек çамрăк та савăк тăрăр тепĕр юбилейччен, тăнăç пурнăçпа пурăнăр.

Николай Патшеев: «20 çул ĕнтĕ эпир шкулти туслăха упратпăр. Ку - пысăк тапхăр. Пирĕн класс питĕ туслăччĕ, пурте пĕрле савăнаттăмăр. Паян вара эпир хамăрăн яшлăхпа тĕл пултăмăр. Хам мĕнле савăннине сăмахпа каласа та параймастăп! Пĕр-пĕриншĕн эпир питĕ çывăх çынсем пулса тăтăмăр».

Киле кая юлса таврăнтăмăр. Çул тăршшĕпе аса илсе утрăмăр, пĕр-пĕрне адрессем çырса патăмăр, хамăрăн сăн ӳкерчĕксене пĕр-пĕрне кăтартрăмăр.

Тепĕр тĕлпулу калаçмасăрах паллă - вăл пулатех.

**(«Канаш» хаçатран, 1994.)**

# „Пăян сăмах пире пачĕс!"

## ÇĔНĔ ЙĔЛМЕЛĔНЧИ ÇИЧĔ ÇУЛ ВĔРЕНМЕЛЛИ ШКУЛТАН КИЛНĔ ХЫПАРСЕМ

### Ачасене ĕçрен уйăрмалла мар

Халĕ çĕршывăн пур кĕтессинче те „Шку па пурнăç хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси тата çĕршывра халăха вĕрентес ĕçе малалла аталантарасси çинчен" КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ хатĕрленĕ тезиссене анлăн сÿтсе явăççĕ. Ку ыйту тăрăх пирĕн шкулта та вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Шкул ĕçне çĕнĕлле йĕркелесси çинчен сÿтсе явнă май, учительсемпе шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсем нумай сĕнÿсем параççĕ.

Ачасене ĕçе хăнăхтарас тесен, колхоз производствинче ĕçлеме уйрăм бригадăсем йĕркелени усăллă. Паллă ĕнтĕ, ялти шкул ачисем колхоз ĕçĕпе пысăк çыхăну тытаççĕ. Çавăнпа та кашни шкултах 2-шер бригада йĕркелесе яни усăллă. Арçын ачасем уйрăмах техникăпа интересленеççĕ, хĕрачасем вара фермăсене кайма пултараççĕ.

Вĕренĕве практикăпа çыхăнтарас ĕçре шкулсенчи сăнав участокĕсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн районти хăшпĕр шкулсенче колхозран пысăках мар çĕр лаптăкĕсем уйăрса илеççĕ. Çакă вăл ман шухăшпа тĕрĕсех мар. Мĕншĕн тесен кирек мĕнле шкулăн та хальхи техникăпа анлăн усă курмалăх çĕр лаптăкĕ илсе ĕçлесси йывăр. Пĕчĕк участок çинче ĕçлесе ачасем колхоз производствипе çирĕп çыхăну тытаймаççĕ. Çавăнпа та ачасене тÿрремĕх колхоз производствипе çыхăнтарма тăрăшмалла, практикăлла ĕçсене колхозрах тусан лайăх. Кашни шкултах уйрăм бригадăсем йĕркелесе вĕсене ачасен кăмăлне пăхса, е трактор бригади, е ферма çумне çирĕплетмелле. Çапла вара вĕренекенсем колхоз производствипе яланах çирĕп çыхăну тытма пултараççĕ.

**А. Казаков,**
Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулти учитель.

### „4" „5" паллăсем кулленех ÿссе пыраççĕ

Хальхи вăхăтра ачасем уйрăмах тăрăшса вĕренме пуçларĕç. Вĕренÿ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкне лайăх паллăсемпе çеç вĕренсе пĕтерес шутпа пионерсем хăйсен хушшинче час-часах тĕрлĕрен калаçусем, сборсем ирттереççĕ. Çак ĕçре уйрăмах 5 „Б" класра вĕренекен В. Кирхеев, В. Вассиярова. 7-мĕш класран Ю. Антонов, В. Антипов лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ. Вĕсем пур предметсемпе те „4" тата „5" паллăсем çеç илеççĕ, килти ĕçсене туса, ашшĕ-амăшĕсене пулăшаççĕ.

—Вĕренĕвĕн иккĕмĕш çур çулне эпир лайăх паллăсемпе çеç вĕренсе пĕтерĕпĕр,—теççĕ вĕсем яланах.

**П. Великанов.**

### *КРУЖОКСЕМ—ПИРĔНШĔН УСĂЛЛĂ*

Пирĕн шкулта вĕренÿ пахалăхне çĕклеме условисем çителĕклĕ. Ачасем тĕрлĕ кружоксене хутшăнаççĕ. Уйрăмах Александр Ананьевич Казаков ертсе пыракан математика кружокĕ лайăх ĕçлет. Уроксем пĕтнĕ хыççăн вĕсем унта счет шăрçи тăрăх шутлама вĕренме пултараççĕ. Художествăлла пултарулăх кружокĕнче (руководителĕ Л. Н. Антонова) вĕренекенсем хăйсен творчествăлла пултарулăхне ÿстерсех пыраççĕ, вĕсем вĕренÿре те яланах малта.

Халĕ шкулсене çĕнĕлле йĕркелемелли майсене пăхса тухнă хыççăн ытти кружоксенче те ачасен творчествăлла ĕçĕ ÿсни кулленех паллăра пуçларĕ.

**В. Симуллин.**

### ПЛАТНИК ТАТА СТОЛЯР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕТПĔР

Вĕренĕве эпир тăтăшах ĕçпе çыхăнтарса пыратпăр. Çакна тума пирĕн шкулта мастерской пур. Ăна Иван Петрович Казаков йĕркелесе пырать. Вĕренекенсем унта çирĕп расписани тăрăх ĕçлеççĕ, платник тата столяр ĕçне вĕренеççĕ. Нумаях пулмасть вĕсем кроликсем валли клеткăсем тума тытăнчĕç.

**П. Акимов.**

### *Ĕçе хăнăхатпăр*

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче пирĕн шкулта производствăлла звено йĕркеленĕччĕ. Унта пурĕ 44 ача ĕçлерĕç. Шкул çумĕнчи сăнав участокĕ çинче çĕрулми акса çитĕнтерчĕç, колхоз валли пилĕк гектар кукуруза ÿстерсе пачĕç. Çак ĕçре уйрăмах М. Чашкина, В. Шуркин, И. Андреев, П. Головин пионерсем тăрăшса ĕçлерĕç. 5—6—7-мĕш классенче вĕренекенсем колхозăн вицĕ гектар çинчи çĕрулмие кăларса пачĕç.

Производствăлла звено кăçалхи вĕренÿ çулĕнче те лайăх тĕслĕх кăтартать. Унхире тислĕк кăларассинче кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас ĕçре активлăн хутшăнаççĕ. Çак ĕçе ертсе пырассинче учительсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем звено ĕçĕсемпе тăтăшах интересленеççĕ, кирлĕ вăхăтра пулăшу параççĕ.

**Н. Мискин.**

### *Тасалăхшăн кĕрешетпĕр*

6-мĕш класра вĕренекенсем шкулти тасалăхшăн пĕтĕм вăйран кĕрешеççĕ. Вĕренÿ çулĕ пуçламăшĕнчех суйласа лартнă санитарсем ачасем шкула мĕнле килнине кулленех урок пуçланиччен тĕрĕслеççĕ. Çак ĕçре уйрăмах М. Кустова, П. Акимов пионерсем лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ.

**П. Головин.**

### *Манăн сĕнÿ*

Сентябрь уйăхĕ—ялхуçалăх ĕçĕнчи хĕрÿ тапхăр. Çак вăхăтра аслăрах классенче вĕренекен ачасем колхоз производствине пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Анчах та вĕренÿ çулĕ сентябрь уйăхĕнчен пуçланнă пирки вĕсем ĕçре пысăк пулăшу параймаççĕ. Хăшпĕр чухне çакăн пек тĕслĕхсем те пулкалаççĕ. Шкул ачисем вăрах вăхăт хушши вĕренÿ программине кая хăварсах колхоза ĕçе каяççĕ. Программăна васкавлăн вĕренсе ирттерме тÿрĕ килет. Çавăнпа та çĕнĕ вĕренÿ çулне сентябрь уйăхĕнчен мар, октябрь уйăхĕнчен вĕренме тытăнни усăллă пулмалла. **В. Антипов.**

### Ĕç—пурнăç

Юлашки çулсенче пирĕн шкулсем пурнăçпа вăйлăрах çыхăнма пуçлани ытларах палăрать. Ку — пархатарлă ĕç. Çакă вăл пирĕн çамрăк ăру общество пурнăçĕпе çине тăрсах интересленнине пĕлтерет.

Анчах та кулленхи пурнăçра çакăн пек тĕслĕхсене те тĕл пулма пулать-ха. Хăшпĕр çамрăксем,—ку шкулта вĕренекенсем те,—колхоз производствинче хутшăнса ĕçленĕ чух ĕçе çиелтен, урăхла каласан, ячĕшĕн çеç тăваççĕ. Кун пек çын, паллах, пирĕншĕн, пирĕн обществăшăн усăллă мар. Çавăнпа та çакна хирĕç çитĕннĕ çынсен—ашшĕ-амăшĕ-и вăл е вĕрентекен—пурин те вирлĕн кĕрешмелле. Ача-пăча çамрăклăх ĕçе хăнăхтăр. Ĕç вăл, тепĕр май каласан, пурнăç.

**Ф. Щегалькова.**

"Коммунар" № 119 (639), 1960 çул.



# VI. Вăрçă ветеранĕсем аса илеççĕ

Вăрçă! Çак чуна çӳçентерекен хаяр сăмах ялсемпе хуласене çиçĕм пек сарăлнă. Çĕршыв пысăк хăрушлăха кĕрсе ӳкнĕ. Пĕтĕм халăх çĕршыва хӳтĕлеме çĕкленет. Вăрçăра вилнисене аса илтерсе ял варринче палăк ларать. Унта çĕнĕ ăру çыннисемпĕн пуçĕсене хунă ентешсен хушамачĕсене ылтăн саспаллисемпе çырса хунă.

Нумай çул каяллах эпĕ вăрçăран таврăннă ял паттăрĕсемпе курса калаçса, вĕсен кĕске биографийĕсене çырса илнĕччĕ. Çавна шута илсе кивĕ альбома уçатăп. Акă Николай Иванович Акимовпа курса калаçнă самантa аса илетĕп. Вăл 1941 çултанпа фронтра пулнă. Вăл каласа панинчен çакна аса илсе юлнăччĕ. Калугăран фронт валли снарядсем ăсатакан поезда çул çинче нимĕç летчикĕсем бомбăсем пăрахса сывлăшра сирпĕтеççĕ. Н. И. Акимов ларса пыракан поезд ăнсăртран тепĕр поездпа пырса çапăнать. Вагонсенчи вăрçă хатĕрĕсене (боеприпассене) çăлса хăварас тĕллевпе 12 салтакран тăракан хурал ушкăнĕ (командирĕ те хăех) çывăх станцине поезд ыйтма тесе каяççĕ. Анчах... Станцăра нимĕçсем. Николай Ивановичпа унăн çыннисем хиртех каç выртаççĕ. Тепĕр кунне вара вагонсем тупса вăрçă хатĕрĕсене хамăрăннисем патне çитереççех.

Ленинград патĕнчи çапăçура ăна «За оборону Ленинграда» медаль парса чысласçĕ.

- Ленинград фрончĕ шурлăхлă вырăнтаччĕ, - аса илет вăрçă ветеранĕ, - хамăр апатланакан вырăн та (кухня) шурлăхра ларатчĕ.

Апат-ҫимӗҫсене илме траншейӑпа ҫӳренӗ (траншейӑра вара чӗркуҫҫи таран шыв пулнӑ). Ҫӳлтен ҫӳресен нимӗҫсем кураҫҫӗ. Окоп чавса выртма ҫук, йӗри-тавра шыв. Нимӗҫ ҫарӗсем Нева юхан шывӗн тепӗр енче ҫирӗпленсе ларнӑ. Ун урлӑ каҫма саперсем ҫӗрле кӗпер турӗҫ. Артиллерипе ҫапӑҫӑва кӗмелле тесе час-часах калаҫаҫҫӗ. 2 сехет те 30 минутра хаяр ҫапӑҫу пуҫланчӗ. Нимӗҫсем те сывӑрмаҫҫӗ. Пирӗннисем ҫине минӑсем, снарядсем, пульӑсем вӗҫеҫҫӗ. Ҫак ҫапӑҫура Совет Ҫарӗ вӑйлӑраххи палӑрчӗ. Пирӗн артиллери нимӗҫсене лӑплантарчӗ. Вӗсем урӑх пуҫӗсене ҫӗклеймерӗҫ. Пирӗн саперсем тунӑ кӗперпе танксем, вӗсем хыҫҫӑн салтаксем юхан шывӑн тепӗр енне каҫса кайрӗҫ.

Салтаксем сахалланаҫҫӗ. Вилеҫҫӗ. Пӗр ҫапӑҫура амантӑм. Эпӗ пытанса выртнӑ ҫӗрте ура мина ҫинче пулнӑ иккен. Сиссе те ӗлкӗреймерӗм, мина ҫурӑлса ман урана ҫӗмӗрчӗ, алӑ витӗр пуля тухса кайрӗ. Манӑн ирӗксӗрех каялла ҫаврӑнма тӳр килчӗ, хырӑмпа шуса, ҫапах пулемета хамран хӑвармарӑм, хамӑрӑннисем патне хӑрах урапа таптарса пырса ҫитрӗм. Вунӑ пӳрне вӗҫне тӑм илнӗччӗ. Мана Ленинградри госпитале ӑсатрӗҫ... Ҫапла вара Аслӑ вӑрҫӑ пӗтичченех инвалид пулса таврӑнтӑм...

Н. В. Самойлов фронтовик ҫинчен те сахал мар ырӑ сӑмах калама пулать. Вӑл 1937 ҫултанпа ҫар ретӗнче пулнӑ. 1942 ҫулта Мускавра НКВД органӗнче хесметре тӑнӑ. Командир. 1943 ҫулта Украина фронтӗнче нимӗҫсене хирӗҫ ҫапӑҫать. Яла кӑкӑр тулли орден-медальсемпе таврӑнать.

Павел Марков граждан вӑрҫи участникӗ. 1919 ҫулта ӑна Чӗмпӗртен Воронеж хулине илсе каяҫҫӗ. Хула патне ҫывхарса ҫитсенех вӑл ҫапӑҫӑва кӗрет. Можаевка ялӗ патне Деникинӑн шурӑ ҫарӗ ҫывхарса ҫитнӗ. Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче пирӗн ентеш Деникина хирӗҫ ҫапӑҫать. Каярахпа, партизансемпе пӗрлешсе, Украинӑн 102-мӗш номерлӗ доброволецсен ҫарне лекет. Волчанск патӗнчи ҫапӑҫура аманнӑ хыҫҫӑн ӑна госпитале ӑсатаҫҫӗ. Махно бандине хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫура Петр Алякинпа пӗрле пулнӑ. Тӑван ҫӗршыв Аслӑ вӑрҫи вӑхӑтӗнче Павел Марков Мускавра службӑра ирттернӗ. Хӑй каланӑ тӑрӑх, вӑл метро тунӑ ҫӗрте те пулнӑ-мӗн.

П. В. Вассияров Ленинград патӗнчи тата Украинӑн 1-мӗш фронтӗнчи ҫапӑҫусене хутшӑнать.

В. Д. Козлова 1941 ҫулта, колхоз уй-хирӗнче ылтӑн тырӑ ӗлкӗрнӗ вӑхӑтра, фронта илсе каяҫҫӗ. Ун чухне вӑл ҫирӗмре ҫеҫ пулнӑ. Пӗрремӗш Украина, иккӗмӗш Белоруссии фрончӗсенче пулать.

... 1943 ҫул. Шартлама хӗл тӑрать. Чӑваш каччи сивве пӑхмасӑр фашистсене пулеметран ҫунтарать. Нимӗҫсен нумай ҫар техникине сывлӑша сирпӗтет, офицерӗсемпе салтакӗсене «леш тӗнчене» ӑсатать. Ку ӗҫ Атӑл хӗрринчи Сталинград патӗнчи ҫапӑҫура пулса иртнӗ. Паттӑрлӑхшӑн чӑваш каччине «Ҫапӑҫури хастарлӑхшӑн» медаль парса наградӑлаҫҫӗ.

Курск пӗкки патӗнчи хаяр ҫапӑҫу ҫинчен ветеран ҫапла каласа кӑтартнӑччӗ: «Ирхине шӑп. Паянхи пекех, шурӑ пӗлӗтсем шӑваҫҫӗ

тўпере, унта та кунта тăри юрлани илтĕнет. Салтаксем канаççĕ. Сасартăк çапăçу... (ветеранăн куçĕнчен куççуль юхса анчĕ, ăна сăмса тутрипе шăлса илчĕ). Татти-сыпписĕр мина тата граната çурăлни илтĕнсе тăрать. Йĕри-тавра вут-хĕм вылять, хура çăра тĕтĕм пĕлĕте кар! витсе хучĕ...»

Кĕçĕн сержант В. Д. Козлов кунта та паттăрлăх кăтартать. Вăрçă çулĕсем ăна Берлина илсе çитереççĕ. Унта кашни урамшăн, çуртшăн хаяр çапăçусем кĕрленĕ. Унта та кунта тăшмансемпе совет салтакĕсемпе офицерсен виллисем йăваланса выртнă, танксем çуннă. Берлин çийĕн хура тĕтĕм явăннă, çуртсем ишĕлнĕ. Юлашкинчен пирĕн ентеш рейхстагшăн пынă çапăçура пулать. Лелюшенко генерал-полковник ертсе пынă çарăн 4-мĕш прорыв корпусĕнче В. Д. Козлов Чехословакишĕн пынă çапăçусене те хутшăнать. 1954 çулта тин тăван яла таврăнать çĕнтерӳçĕ-салтак. Кайран хĕрĕх çула яхăн арманта мельник пулса ĕçлет. Вăл 1979 çулта çĕре кĕнĕ.

Фронтра хăйсен пурнăçне шеллемесĕр паттăр çапăçнă ентешсем татах та нумай, пурин çинчен каласа та пĕтереймĕн. Çак кĕнекере хăйсен хушамачĕсене асăнманнисем ан кӳренччĕр. Вăрçă ветеранĕсем пирĕншĕн пурте хаклă. Шел, вĕсен йышĕ куллен чаксах пырать. Анчах нимĕн тума та çук. Ку та пурнăç йĕрки. Кăçал Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 51 çул çитрĕ. Çак куна çирĕм миллион ытла совет çынни кĕтсе илеймерĕç. Вĕсем яланлăхах вăрçă хирне выртса юлчĕç. Кашни çемьерен тенĕ пек кам та пулин Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине тухса кайнă, чылайăшĕ каялла таврăнайман. Аслă вăрçă çулĕсем пирĕн çемьене те айккинче хăварман. Манăн асатте, Ананий Яковлевич Казаков, вăрçăран таврăнайман. Хыпарсăр çухалнă. Салтак çырăвĕсене атте халь те типтерлĕн упрать. Эппин, вĕсенчен хăш-пĕрисемпе паллашар-ха.

**«Юратнă мăшăрпа ачасем! Сире пурсăра та юратса хĕрӳллĕ салам яратăп. Ку çырăва хаяр çапăçăва кĕрес умĕн çыратăп. Часах тăшмана çĕнтерсе киле таврăнма ĕмĕтленетпĕр. Сывлăх енĕпе аптрамастăп-ха, маншăн кулянма кирлĕ мар.**

**Салампа Ананий Казаков».**

- Ачасене питĕ юрататчĕ, - аса илетчĕ асанне. - Вĕсене вĕрентесшĕн тăрăшнă. Çакна кашни çырурах пĕлме пулатчĕ.

Акă тепĕр çыру. Ăна вăл 1942 çулхи августăн 23-мĕшĕнче Иваново станцинче малти линие (фронта) тухса каяс умĕн çырса хăварнă:

**«Эсир хăвăр валли хĕл каçма мĕн вăй çитнĕ таран хатĕрленĕр. Ман шутпа, икĕ килĕ пĕрле хатĕрленсе пурăнсан питĕ аван пулать, мĕншĕн тесен, пурсăмăра та паллă - саманан йывăр вăхăчĕ».**

Фронтри лару-тăру епле йывăр пулсан та, пирĕн патăрти ĕçсемпе интересленет асатте. **«Колхозра ĕçсем епле пыраççĕ?** - ыйтать вăл. - **Тырăсене пуçтарса пĕтереççĕ-и, çук-и?»** Унтан асаннене çапла асăрхаттарса çырать: **«Ку çырăва илсенех пĕр мăшăр перческе, панĕски тата йĕппе çип хатĕрлесе хур. Кĕркунне енне, кирлĕ пулсан, ыйтса ярăп».**

Ку вăл асаттен юлашки çырăвĕсенчен пĕри пулнă. Ананий Яковлевич Казаков 1942 çулхи октябрь уйăхĕнче пĕр хаяр çапăçура тăшмана хирĕç çапăçса вилет. Анчах эпир халĕ те вăл ăçта вилнине

пĕлместпĕр. 1942 çулта хыпарсăр çухални çинчен хут анчах килнĕ. Вăрçă çулĕсем каппи çын чĕринче тарăн йĕр хăварнă.

Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçма 400 яхăн çын тухса кайнă, вĕсенчен çурри ытла - 197 çын килĕсене таврăнайман, хыпарсăр çухалнă, 61 çын йывăр аманнипе госпитальсенче е вăрçă хирĕнче вилнĕ. Вĕсем ăçта вилни тата вĕсене хăш масара пытарни паллă, ыттисем хыпарсăр çухалнă.

Вăрçă пуçлансанах П. Г. Казаков ултă ывăлне фронта ăсатнă, вĕсенчен пĕри çеç - Ваня ятли таврăннă. Н. Ф. Денисовăн пилĕк ывăлĕнчен пĕри кăна (вăл йывăр аманса госпитальте чылай вăхăт хушши выртнă) чĕрĕ юлать. Е. Н. Алякин тăватă ывăлне кĕтсе илеймерĕ, Виталий ятли çеç сывă таврăнчĕ. Вĕсене ăсатнă хыççăн кил хуçи хăй те вăрçă хирĕнче хыпарсăр çухалать. Н. Н. Казаков тăватă ывăлне, П. Вассияров, Д. Дунаев, П. Зайцев виçшер ывăлĕсене кĕтсе илеймеççĕ, пурте вăрçăра вилнĕ.

Пирĕн ял çыннисем вăрçă кĕрленĕ мĕн пур фронтсенче çапăçнă. Литвана ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçура Ф. А. Ляуков, К. Д. Селендюков, Н. В. Албутов пуçĕсене хунă, вĕсене çавăнтах пытарнă. А. А. Лянкин лейтенант Брянск фронтĕнче 1943 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче вилнĕ. Н. К. Марков 1943 çулхи августăн 18-мĕшĕнче тан мар çапăçура пуçне хурать. Ун чухне вăл пурĕ те вун саккăрта кăна пулнă. Ăна Ленинград облаçĕнчи Медведево ялĕ çывăхĕнчи тăванла масар çине пытарнă.

## Салтак çырăвĕсем

47 çул каялла, 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕнче Совет правительстви пĕтĕм тĕнчипе нимĕç фашисчĕсене çĕнтерни çинчен савăнăçлăн пĕлтерчĕ. Аслă Çĕнтерӳ савăнăçĕ хуйха-суйха пĕр вăхăтлăха мантарнă.

Çак вăрçăран яла таврăнайманнисене, вилнĕ е хыпарсăр çухалнисене пурне те «Асăнӳ кĕнекине» кĕртме çырса панă. Хальхи вăхăтра ялта вăрçă ветеранĕсем пурĕ те 23 çеç тăрса юлнă. Вĕсен йышĕ çулсерен чакса пырать. Вĕсем хушшинче çулĕсемпе чи аслисем - Г. В. Кудрявцев, А. С. Пришельцев, П. П. Шуркин, А. С. Амосов, Ф. Н. Денисов, М. К. Николаев, Ф. Н. Утеев, Н. А. Великанов, П. В. Вассияров, Ф. К. Дунаев, Н. И. Чашкин.

Япони империалисчĕсене хирĕç çапăçура Н. В. Алякин, Ф. Т. Айметов, Н. М. Мискин, А. В. Симулин, А. П. Шуркин çĕршывăн наградисене илме тивĕçлĕ пулнă.

Аяларах манăн фронтовиксен вăрçă вăхăтĕнчи çырăвĕсем пирки каласа парас килет. Вĕсем салтаксен кун-çулне тĕплĕнрех уçса пама пулăшаççĕ, чĕрене ыраттараççĕ.

31 çулхи В. П. Шуркин фронта фашистсем тапăнсан пилĕк уйăхран тухса кайнă. Чи пирвайхи хыпара вăл 1942 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче янă. Унта çапла каланă: "**Халĕ эпир Мускавран 200 çухрăмра Калуга патĕнче Киева каякан çул çинче тăратпăр. Кунти çуртсене пĕтĕмпех ишсе-тустарса пĕтернĕ, йĕри-тавра вилесем выртаççĕ. Бомба, снаряд шăхăрни илтĕнет. Пире кĕçех çапăçăва илсе каяççĕ.**"

"**Урăх çыру ярăп тесе шантараймастăп. Вăрçă вутне кĕнĕпе пĕрех, малти линирен 8 çухрăмра тăратпăр. Виçĕм кунхи çапăçуран 117 çын çеç сывă тухрĕ, вĕсем те пулин аманнă. Çитереççĕ аван, паян эрех те пачĕç.**

**Çак çырупа сывпуллашса алă паратăп..."**- тенĕ вăл тепĕр çырура. Çакăн хыççăнах В. П. Шуркин хыпарсăр çухални çинчен çыру килнĕ.

Акă тепĕр виçĕ кĕтеслĕ çыру. Ана С. Н. Егоров салтак 1942 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче çырнă. **«Победа будет за нами. Остаюсь жив и здоров. Ваш сын Сережа»**,- тенĕ вăл. 1942 çулхи августăн 5-мĕшĕнче çырнă иккĕмĕш çырăвĕнче çапла йĕркесем пур: **«Хисеплĕ атте, анне! Салтаксен пурнăçĕ çўç пĕрчи пекех, паян сывă, ыран... «Вăрăмтунасем»* сине-çинех вĕçсе килеççĕ. Тен, ку çыру ман юлашки пулĕ»**. Ашшĕ-амăшне пăхса çитĕнтерсе çын тунăшăн тав туса икĕ куплетлă сăвă та çырнă. Унăн виççĕмĕш çырăвĕ вырăсла çырнипе вĕçленет: **«Враг будет разбит, победа будет за нами. Смерть немецким оккупантам! Остаюсь жив и здоров. Целую Вас. Сережа 5-3-42»**. Юлашки çыру хыççăнах, августăн 18-мĕшĕнче, 19 çулхи каччă вилет.

Николай Марковăн фронтран янă çырăвĕсем сыхланса юлман, салтак тумĕ тăхăнас умĕн темиçе кун маларах çырнă «Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ - асăнмалăх» тата «Аннене» ятлă сăввисем тăванĕсем патĕнче упранаççĕ. Вĕсем сăвă техники тĕлĕшĕнчен пиçсех çитмен пулин те, шухăшĕсем чĕрене пырса тиveççĕ. Илсе кăтартар-ха пĕр куплет:

**Атăлăн кăвак хумĕсенче**
**Эпĕ ипсе çўрес çук.**
**Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче**
**Тек савăнса çўрес çук.**

Пурĕ те тăвата уйăх çеç пулма ĕлкĕрнĕ Н. Марков вăрçă хирĕнче. 18 çулхи каччă 1943 çулхи августра Ленинград патĕнче пуçне хунă. Ана Ленинград облаçĕнчи Медведево ялĕ çывăхĕнчи тăванла масарта пытарнă.

Çĕнĕ Йĕлмел шкулĕнче директор пулса ĕçленĕ П. Чебанов фронтран А. Рафикова учительница патне темиçе çыру янă. А. Казаков, И. Чебоксаров, П. Агапов хăйсен çырăвĕсенче вăрçа ылханса çырнă. Çырăвĕсене хумханмасăр, чĕрене ыраттармасăр вулаймастăн (1992).

## ВЕНИАМИН АЛЕКСАНДРОВ ФРОНТРАН ЯНĂ ÇЫРĂВĔСЕМ

1941 çулхи июнĕн юлашки кунĕсем. Çуллахи ăшă кунсем, кĕске çĕрсем... Çак вăхăтра ял çыннин каштах савăнса илме вăхăт пур: çураки ĕçĕсене вĕçленĕ ĕнтĕ, кĕçвĕçех утçи тытăнмалла. Унччен, хĕрў ĕçсi пуçланиччен, ял-йыш канать. Ĕçĕ мăй таран ялта, анчах та çак вăхăтсенче каçсерен яш-кĕрĕм вăййа тухнă: юрланă, ташланă, малашлăх пирки ĕмĕтленнĕ. Анчах 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшне кĕтсе илекенсемшĕн савăнăç пулман, паллах. Яш-кĕрĕмсем, ачасен ашшĕсем тутăр вĕçтерсе, хурлăхлă салтак юррисене юрлама тытăннă, ял-йыш вĕсене ăсатса янă...



*«Вăрăмтунасем» - автор фашистсен самолечĕсенчен кулса çапла каланă. - Н. К.

чылайăшĕ каялла таврăнайман, Тăван çĕршывшăн пынă çапăçусенче ĕмĕрлĕхех пуçĕсене хунă... Çав шутра В. М. Александров та, А. В. Александрова ывăлĕ. Вăл фронтран янă çырăвĕсем Г. М. Александрован килĕнчи архивĕнче упранаççĕ. Çырусене вырăс чĕлхипе çырнă.

Добрый день, дорогие родители. Так как завтра только начнем учиться и времени у меня пока много, не дождавшись от вас письма, пишу второе письмо. Подробнее напишу о своей жизни. С завтрашнего дня, то есть с 17 августа, начнем заниматься военной подготовкой. Кормят хорошо. Живем в палатках. Многие ребята из Москвы, все они русские и почти все со средним образованием. Как сказали нам, что будем учиться шесть месяцев. В конце сентября нас переведут в г. Владимир.

После получения моего письма ответьте, как Маргарита, Роза - выздоравливают?

**С красноармейским приветом Веня.**

16.08.42 г.

Ивановская обл.,<br>г. Ковров.<br>почт. ящик 48/16.

* * *

Всем большой привет, дорогие родные.

У нас с 6 часов до 8 часов - самостоятельная подготовка. Когда тема поддается легко, я больше трачу времени на письма.

Обмундирование пока не выдали, но обещают. А свои вещи, когда нас обмундируют целиком, мы будем отдавать в помощь пострадавшим от немцев. Так сказал командир. На питание грех жаловаться. Нам выдают по 40 г масла сливочного и по 40 г сахара.

**С приветом Веня.**

29.08.42 г.

* * *

Здравствуйте, дорогие родители!

Вчера получил от вас второе письмо, написанное вами 5 сентября.

Живу хорошо. Не болею. Целиком и полностью обмундировали, дали всем кителя, брюки-галифе, сапоги, нижнее белье. Скоро нас отправят в г. Владимир. В день мы занимаемся военной подготовкой по 12 часов.

Жив, здоров. Большой привет сестрам.

**Веня.**

1942.

* * *

Здравствуйте, дорогие родители!

Ваше письмо, написанное 11 сентября я получил 16 сентября.

За неимением времени (так как сдаем экзамены за 1-ый период обучения) не мог вовремя ответить на ваше письмо.

Первый период нашего обучения кончился, то есть прошли курс молодого красноармейца,сегодня, 20 сентября приняли военную присягу на верность Родине. Впереди второй период обучения.

29 сентября перейдем на зимние квартиры в г. Владимире, 50 км

от нашего лагеря. От нас деревни, города находятся далеко, так что на деньги ничего нельзя купить, во Владимире может быть будет лучше.

Пока все.

**С приветом Веня.**

20.09.42 г.

* * *

Здравствуйте, дорогие родные!

Письмо, написанное вами 23 сентября, получил только 30 октября в г. Владимире. 29 сентября перешли на зимние квартиры. Здание нашего училища 3-х этажное, очень большое. В классах и в казармах паровое отопление, койки пружинные. В умывальниках кругом зеркала. Во время перерыва открываем окна и любуемся городом.

В город, видимо, не будут выпускать. Лейтенант говорит, что на базаре и хлеба можно достать... Надо было взять мне больше бумаги, правда, нам здесь давали по 3 тетради, это мало...

**Курсант В. Александров.**

Ивановская обл.
г. Владимир.
п/я 48/16.
п/отд. 6.

* * *

Здравствуйте, дорогие родные!

Не получив от вас ответа, тороплюсь сообщить Вам новый адрес: Ивановская обл., г. Владимир, часть 964. Александрову В.

Живу хорошо. А как вы? В следующем письме напишите, как живет Зоя? Пусть Маргарита пишет письма ко мне. Очень жду. Вчера, то есть в субботу, посмотрели концерт Горьковской филармонии.

**С приветом будущий лейтенант Александров.**

19.11.42 г.

* * *

Добрый день, дорогие родные.

Сообщаю Вам новость. Кажется, 22-го октября передавали по радио, что в честь праздника будут принимать посылки к военнослужащим до 5 ноября. Узнайте это точно на почте и как-нибудь постарайтесь послать посылку. Скоро зима, а в сапогах ноги мерзнут и руки тоже зябнут. Если удастся послать посылку, то в первую очередь не забудьте положить перчатки, чулки, носовые платки, бумаги чистой и карандаши (пару).

Живу пока хорошо. Насчет питания тоже не плохо. Неизвестно пока, когда зимнюю форму дадут. Занимаемся почти целыми днями на улице. Холодно...

**С приветом Веня.**

Зима 1942 года.

* * *

Здравствуйте, дорогие родители!

Живем хорошо. Занимаемся военной подготовкой. В Ленинских комнатах училища имеются: шахматы, шашки, радио. Вместе с нами учатся курсанты из г. Владимира. У нас есть особый зал для свидания

с родными. По субботам и по воскресеньям всегда в том зале многолюдно. Приезжают родители.

В город не отпускают. По субботам показывают кинокартины.

**С приветом Веня.**

Зима. 1942 года.

* * *

Фронтовикăн 11 çырăвĕ... Мĕн тĕри тунсăхлă, пурнăçа юратса çырнă йĕркесем. Унăн йăмăкĕ Галина Михайловна Александрова çак çырусене пысăк вырăна хурса хаклать. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл вăрçăра вилнĕ пиччĕшне асăнса хăйĕн ывăлне Веня ят панă. Халĕ вăл Шупашкарта пурăнать. Инженер пулса ĕçлет. Авланнă. Икĕ хĕр пăхса ӳстерет.



**Ӳкерчĕкре**: çамрăксем палăк умне чечексем хураççĕ.



# Ф. УТЕЕВ: *Асран тухми кунсем*

1941 çулхи сентябрьте пирĕн яла хура пĕлĕт хупларĕ. Вăйпитти арçынсем фронтра çапăçатчĕç пулсан, пире, халлĕхе салтак çулĕ тухманнисене тата хĕрарăмсене, Атăл тăрăхне окопсем чавма илсе кайрĕç. Питĕ сивĕччĕ, çĕр пĕр метр тарăнăш шăннăччĕ. Çак йывăрлăха пурте чăтаймарĕç. Çавăнпа та киле тарса таврăнакансем те тупăнчĕç. Паллах, çакăншăн вĕсене пуçран ачашламарĕç. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе ăнланса ĕçленисем вара чирлерĕç. Вилекен те пулчĕ.

Пирĕн çулхисене çара 1942 çулхи мартра илчĕç. Хамăр районтан улттăнччĕ эпир. Пурне те Ленинградри пехота училищине вĕренме ячĕç. Офицер ятне илмесĕрех эпир Кивĕ Чакă ачипе хамăр ирĕкпе фронта тухса кайрăмăр. Анчах та тĕрлĕ çĕре лекрĕмĕр. Мана 28-мĕш армие кĕрекен 13-мĕш дивизин 170-мĕш полкне ячĕç. Калуга облаçĕнчи Заячья гора текен вырăнта тăраттăмăр. Нимĕçсем сăрт çинче хуçаланаççĕ, эпир - ун айлăмĕнче. Пирĕнтен маларах кунта Хусантан килнĕ дивизи çапăçнă. Винтовкăсемпе çеç хĕç-пăшалланнă салтаксене нимĕçсем автоматсенчен шĕкĕлченĕ çеç.

- Вăл вырăнта Çĕпрел район çыннисем нумайăн çухалчĕç, - каласа паратчĕ кайран штаб начальникĕ пулнă Давыдов.

Çапах та нимĕçсене сăрт çинчен мĕнле те пулсан шăлса ывăтмаллах. Çавăнпа та вĕсен «чĕлхине» тытас тĕллевпе мана ытти разведчиксемпе пĕрле задание ячĕç. Окопра тытăçнă чух пуçран йывăр амантăм. Кайран ытти салтаксемпе пĕрле госпитале ăсатрĕç. Сывалсан Курск пĕккине лекрĕм. Ĕмĕр куç умĕнчен каймалла мар çапăçусем кĕрлерĕç унта. Прохоровка патĕнче пирĕннисемпе нимĕçсен танкĕсен пысăк масарĕ юлчĕ. Çапах та эпир вăйлăрах пултăмăр, тăшмана тата

хытăрах хăвалама тытăнтăмăр. Унти çапăçусенче ентешсене те тĕл пултăм.

Кĕçех салтак çулĕ Варшавăна илсе çитерчĕ. Ăна ирĕке кăларнăшăн кашнине медаль пачĕç. Вăл шутра мана та.

Хаяр вăрçăра тăватă хутчен амантăм, икĕ хутчен контузие лекрĕм. Çав сурансем эпĕ те япăхах салтак пулманни, Тăван çĕршывшăн вăй-хала шеллеменни çинчен калаççĕ пулĕ, тетĕп.

**(«Сăвар» 8 (62) N, 1995 çулхи нарăс уйăхĕн (февралĕн) 25-мĕшĕ).**

**Ӳкерчĕкре:** ветерансен совечĕ канашлать (варринче Ф. Н. Утеев).

# Вĕсем нимĕçсен тыткăнĕнче пулнă

Михаил Петрович Мискин 1908 çулта вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ, Петр Никифорович, хăй вăхăтĕнче Яппун вăрçине кайнăскер, çĕршывра пулса иртекен пулăмсене лайăх пĕлсе тăнă. Ял хуçалăхĕнче ĕçлесе ĕмĕрне иртттернĕ вăл. П. Н. Мискин тата унăн мăшăрĕ пилĕк ача пăхса çитĕнтернĕ: Мария (1893 çулхи), Анисия (1898 ç.), Иван (1903 ç.), Анна (1911 ç.), Михаил (1908 ç.). Вĕсем ашшĕ пекех, мĕн пĕчĕкрен ялти йывăр ĕçсенче пиçĕхнĕ, Михаил та вĕсенчен юлман, пĕрлех вăй хунă. Пилĕк ачана ура çине тăратас тесе нумай вăй хума, нумай асап тӳсме лекнĕ Петр Никифоровичăн.

Ялти шкултан вĕренсе тухсан Михаил хресчен ĕçĕпе пурăннă. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркеленсен вăл вырăнти влаçсем хистенипе мар, чун-чĕри хушнипе колхоза кĕнĕ. Такама килĕшмест çакă. Ун чухне Михаил Чукалта лавккаçă пулса ĕçленĕ. Ăна колхоз пурлăхне вăрланă тесе элеклесе айăплаççĕ, тĕрмене хупса хураççĕ. Вăрçă умĕн Михаил яла таврăнать. Анчах кун-çул шăпи каярахпа та тикĕс пулман. Пĕр вăхăт хушши вăл Донбасра шахтăра та ĕçлесе курнă.

1941 çулхи июнь... Фашистла Германи çарĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн чиккине сĕмсĕррĕн тапăнса кĕнĕ. Вăрçă...

Çак усал хыпар çисĕм хăвăртлăхĕпе сарăлнă таврана, кашни çыннăн чĕрине ыраттарнă. Вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех Михаил фашистсене хирĕç çапăçăва тухать. Фронтри тумхахлă пурнăçĕ унăн Ленинград патĕнчен пуçланнă.

Çулла. Шăрăх. Нимĕçсем тупăсенчен пĕр чарăнмасăр персе тăраççĕ. Снарядсем çурăлнипе тусан-сĕрĕм пĕлĕтелле çĕкленчĕ, таса уяр кунра та хĕвел курăнми пулчĕ. Çунăк шăрши салтаксен пуçĕсене ыраттарнă. Тарăн çырмара пĕр-ик сехет выртсан, рота командирĕ тăшманункине умри ял хĕррипе татса тухма, йĕркепе пынă салтаксене сапаланса пыма хушнă. Анчах малтан та, сылтăм енчен те, вăрмантан та нимĕçсем пӳлеметсенчен пĕр чарăнми персе кĕтсе илнĕ. Çапăçу хирне салтаксем нумай выртса юлнă. Çав вăхăтра Михаил пĕр вырăс салтакĕ вилĕмрен шикленсе çĕр çине выртса йĕнине асăрханă.

- Ан йĕр, юлташ, тăхта-ха, пирус туртса илер, - тесе каланă хыççăн лешĕ лăпланнă.

Çутăлас умĕн отделени командирĕ салтаксене пĕр-пĕрин хыççăн утма хушнă. Çырма хĕррине çитсен вĕсем йĕплĕ пралук карса хунине асăрханă. Ун урлă каçса кайма май пулман. Ирĕксĕрех каялла чакма тивнĕ. Тăшманăн артиллерийĕ вĕçĕмсĕр персе тăнă. Совет салтакĕсен

пысăк çухатусем тÿссе çывăхри вăрмана кайса пытанма тивнĕ.

Çапла вĕсен çар чаçĕ виçĕ уйăха яхăн чакнă, тăшман ункине лекнĕ. Вилĕм салтаксен йĕри-тавра пĕр хĕрхенÿсĕр вĕçĕмсĕр явкаланса çÿренĕ. Тăшмана хирĕç тăма нимĕнле хĕç-пăшал та пулман. Танксемпе артиллери шăпланнă. Снарядсем пĕтнĕ. Юлашкинчен кашни салтакăн икшер патрон юлнă: пĕри - тăшманăн пĕр çыннине те пулин пĕтерме, тепри, чи юлашки, хăйне валли.

Ротăран темле майпа чĕрĕ юлнă, выçă та халтан кайнă, аманнă 15 салтак тăрса юлнă. Вĕсене ункăран пĕчĕкшер ушкăнсемпе е пĕчченшеррĕн хăтăлса тухма приказ панă, çав вăхăтрах фашистсем ниçта кайса кĕме çук хĕснĕ те хĕснĕ. Михаил Петровичпа унăн юлташĕсене нимĕç салтакĕсем вăрманти лесник пÿртĕнче канма выртнă чухне çĕрле ярса тытнă. Тыткăна лекнĕ салтаксене Германи еннелле хăваласа кайнă. Белоруссинчи пĕр хулара вĕсене апатсăр эрне ытла уçă пĕлĕт айĕнче тытнă, хушăран çеç йытăсене апатлантаракан хытă çăкăр чĕллисем лекнĕ.

Тыткăна лекнĕ совет салтакĕсене Литвана илсе çитернĕ. Михаил çул тăршшĕпех тарса çăлăнасси çинчен шутланă. Вăл тыткăнрисем хушшинче Çĕнĕ Упи ялĕнче çуралса ÿснĕ чăваша тĕл пулнă. Икĕ ентеш тарса та пăхаççĕ, анчах усси пулман . М. П. Мискин каллех нимĕçсен аллине лекнĕ. Пилĕк çул хушши концлагерьте пăчкă кĕрпиллĕ апата çисе асапланнă.

Пĕр кунхине тыткăнри 300 çынна тарăн çырма хĕрринче темиçе ретĕн тăратса, ушкăнран еврейсемпе чикансене тата комиссарсене суйласа илнĕ, вĕсене персе пăрахнă. Ыттисене уçă вагонсем çине тиесе хĕвеланăç еннелле илсе кайнă, вĕсем хушшинче пирĕн ентеш те пулнă.

Лагере çитсен тыткăнрисене уйрăм хуçасем хăйсем патĕнче тарçăра ĕçлесе тăма илеççĕ. М. П. Мискина та çак шăпах лекнĕ. Вăл пĕр пуян çын патĕнче ир тытăнса каçчен пĕр канми ĕçленĕ: пăрçа çулнă, выльăхĕсене пăхнă, çурт-йĕр тунă çĕре хутшăннă. Паллах, кунта концлагерьтинчен çăмăлтарах пулнă ĕнтĕ. Апла пулсан та, выçăпа аптăраса вилес патнех çитнĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕ тата унăн хĕрĕ упăшки куриччен вăрттăн сывлăх енчен хавшаннă çынна шеллесе апатлантараççĕ, çапла майпа вилĕмрен çăлса хăвараççĕ. Выçăпа аптранă чухне М. П. Мискин хурт-лĕпĕшсене тытса чĕлĕм çинче ĕнтсе çинĕ. Шыв пулманнипе выльăх шăкĕсене ĕçнĕ. Çăкăр чĕллисене навус куписем патне пăрахнă çĕртен илнĕшĕн ăна 25 хутчен тимĕр пралукпа çапнă. Çапах вилĕмрен çăлăнса тухнă, тăван ялне таврăннă.

Ача чухне эпĕ çакна астуса юлнă. Михаил Петровичпа унăн мăшăрĕ пирĕн пата хăнана килсех çÿретчĕç.

- Хĕлле. Сивĕ. Тыткăнрисем сарайĕнчи пăрлă урайĕнче çара уран тăраççĕ. Пурĕ çирĕммĕнччĕ. Манпа юнашар тăракан çамрăк салтакăн вăй-халĕ пĕтсе çитрĕ; ура çинче аран-аран тăрать хăй. Выçăпа тата сивĕпе унăн ăш-чикĕ йăлтах хавшанă. Кĕçех салтак тăнне çухатрĕ. Пăрланнă урайне йăванса кайрĕ. Караулта тăракан нимĕç салтакĕ ăна çийĕнчех персе вĕлерчĕ. Хĕрлĕ юн пăс кăларса пăрланнă урай çинче шăнса ларчĕ. Пирĕннисенчен эпир пиллĕкĕн çеç тăрса юлтăмăр. Тÿсетпĕр. Вилес килмест-çке? Çапла майпа чылай кун пăрланнă урай çинче тăтăмăр. Каç еннелле сулăнсан нимĕç офицерĕ пырса кĕчĕ. Çамрăкскер хăй. Пирĕн çине тимĕр решеткеллĕ чÿрече витĕр пăхса илчĕ те, хăйĕн пальто кĕсйинчен икĕ перчеткине те кăларса пирĕн еннелле ывăтрĕ. Хамăр хăранипе чĕтретпĕр. Шеллерĕ пулас. Офицер нимĕçле тем каларĕ

те пăрăнса кайрĕ. Эпир вара пăрлă урай çинче перчеткесем çине пусса тăратпăр. Урасем ăшăнса çитсен юлташсене паратпăр. Çапла майпа эпир пиллĕкĕн çăлăнса юлтăмăр. Тепĕр кунне пире урăх çĕре илсе кайрĕç...

«Эпĕ арăм çĕлесе-тĕрлесе тăхăнтарнă кĕпене çийрен пĕрре те хывмарăм, çавăнпах пуль чĕрĕ-сывă таврăнтăм тыткăнран, вăрçа ăсатса янă чух пиллесе кăларса яни пурнăçланчĕ...», - тесе каласа панăччĕ вăл пĕррехинче пирĕн патăрта хăнара пулнă чухне.

Тăван тавралăха вăл 1945 çулхи ноябрьте кăна таврăнать. Ялта хисеплĕ çын пулнă М. П. Мискин çук ĕнтĕ текех пирĕн хушăра. Вăл пурнăçĕнче хура-шурра ытлашшипех курнăскер вăрçă хыççăн нумай пурăнаймарĕ, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Унăн арăмĕ Мария Петровна (манăн кукамай) çаплах ыр-сывă пурăнать. Чĕрере тарăн йĕр хăварнă вăрçă çулĕсене аса илсе çапла каласа кăтартать:

«Çав çул тыр-пул тухăçĕ çав тери пĕчĕк пулчĕ. Çанталăк чăтмалла мар шăрăх тăнине пула тепĕр çулхине те тыр-пул калчисем пĕтĕмпех пĕтрĕç. Уйрăмах Атăл тăрăхĕ пысăк инкек тӳснĕ. Чăваш халăхĕн те сахал мар хура-шур чăтса ирттерме тиврĕ. Вăрçă çулĕсенче ял халăхĕн 70 процентĕ выçлăхпа нушаланчĕ. Уйрăмах пире, хĕрарăмсене, çав тери йывăр лекрĕ, эпир пуринчен ытла асап тӳсрĕмĕр. Вилекенсен шучĕ çав çулсенче çуралакансенчен 10 хут ӳсрĕ. Апата çĕр улмипе хутăштарнă икелсем те, мăянсем те, çурхи улăм та, йывăç вулли те, тĕрлĕ ӳсен-тăран та каятчĕ...

Мăшăрăм çĕре кĕнĕренпе хама хуçăлса юлнă турат пекех туятăп, - тет М. П. Мискина (Казакова), - çавăнпа çынна иккĕн пурăнма çырнă. Хамăн чи савăнăçлă вăхăта та пурнăçра Михаилпа пурăннă кунсем тесе шутлатăп. Вăл та вăрçă суранĕсене пула çемьерен хăварт уйрăлса кайрĕ. Аллисем унăн ылтăнччĕ, платник ĕçне пултаратчĕ. Нихçан та унпа вăрçăнса курман. Мăшăрăм тыткăнра пулнине эпĕ пачах пĕлмен. Л. В. Вассияровăн арăмĕ Марье (Никита Казаковăн хĕрĕ), вăл вăхăтра почтальонка пулса ĕçлетчĕ, çыру илсе килсе тыттарчĕ. Çавăн чухне тин упăшка тыткăнра пулни çинчен пĕлтĕмĕр.

- Анне, аттерен çыру илтĕмĕр, кĕçех вăл яла таврăнмалла, - тет Агафия хĕрĕм. Пурте хĕпĕртерĕç. Кĕтетпĕр. Вăрçă пĕтнĕ çулхи кĕркунне тин яла таврăнчĕ. Эпĕ вăл кун Мискин Иван патне хăнана кайнăччĕ. Ани (М. П. Мискинăн амăшĕ) мана чĕнме Агафия хĕрĕме янă. Çав кас маншăн тĕлĕнмелле ырă кас пулчĕ. Юратнă упăшкам вăрçăран таврăннă ятпа хăна пухрăмăр. Савăнтăмăр...

Тĕлĕнмелле ырă çынччĕ. Ытлашши эрех ĕçсе çапăçса çӳренине астумастăп. Ани калани халĕ те асрах: «Эпĕ хĕпĕртесе кăна лараттăмччĕ. Эсир хăнаран урă таврăннипе, хама вара чи телейли тесе шутлатăп...», - тетчĕ.

Мискинсен ачисем тахçанах ӳссе çитĕннĕ. Халĕ кинеми мăнукĕсемпе савăнать.

- Самани лайăх тăтăрччĕ, эпир курнă нушана ачасен те, ачасен ачисем те курмалла ан пултăр. Эпир çĕнтерӳпĕн çапăçса илнĕ медальсем вĕсене асăнмалăх юлччĕр.

* * *

Вăрçă умĕн Казакова Н. И. (Георги амăшĕ.- **Н. К.**) упăшки патне пурăнма Белоруссие кайнă. Сасартăк вăрçă пуçланать. Пирĕннисем чакаççĕ, нимĕçсем пĕр чарăнми тĕрлĕ хĕç-пăшалсенчен переççĕ. Унăн упăшки Казаков П. Г. вăрçă пуçлансанах вилет. Вăл ăçта вилни халĕ те паллă мар.

Çамрăк хĕрарăм нимĕçсен ункинчен хăтăлса тухсан вырăнти

партизансен отрядне лекнĕ...

- Çамрăк хĕрарăмпа унăн икĕ хĕрĕ вăрман уçланкинче лараççĕ. Арçынни (упăшкийĕ пулас) вĕсенчен инçех те мар шăтăк чавнă. Пурте салхуллă. Арçынниех тӳшекпе минтерне шăтăка пăрахрĕ те арăмĕпе хĕрĕсене хăех персе вĕлерчĕ. Шăтăкри тӳшек çине вилесене антарчĕ, утиялпа витсе хучĕ, тăпрапа хупларĕ. Юлашкинчен хăй те перĕнсе вилчĕ. Пĕр палламан çын вилене тăпрапа хупларĕ те хĕрес лартмасăрах вырăнтан хускалса вăрмана кĕрсе çухалчĕ... Кайран тин вăл еврей çемйи пулнă иккенне пĕлтĕмĕр. Нимĕçсем патне лексен пире пурпĕрех вилĕм кĕтет, çăлăнăç çук. Капла... çемье канлĕ выртать, имĕш..., - çапла каласа кăтартрĕ мана пĕррехинче ватă хĕрарăм. Халĕ вăл хăй те çĕре кĕнĕ.

**Ӳкерчĕкре:** М. П. Мискин тăванĕсемпе пĕрле (çемьери альбомран).



* * *

1943 çулхи июль уйăхĕнче пире, Смоленск çывăхĕнче тыткăна лекнĕ çар çыннисене, Францири Лепью хулинчи лагере ăсатрĕç. Унта эпĕ икĕ ентешпе - Петр Долговпа тата Алексей Кирилловпа паллашрăм. П. И. Долгов 1904 çулта Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралса ӳснĕ. Ялти шкулта вĕренсе тăватă класлă пĕлӳ илнĕ. Колхозра ĕçленĕ. Вăхăтлăха укçа ĕçлесе илме Донбаса тухса кайнă, кунта шахтăра забойщик пулса тăнă. Вăрçă пуçлансан çара илнĕ. Ман пекех тăшман ункинче тертленсе çӳренĕ хыççăн тыткăна лекнĕ.

1944 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнче союзниксем иккĕмĕш фронт уçрĕç. Фашистсем каялла чакма пуçларĕç. Нимĕç командирĕ пире колонна хыçне тăратрĕ те эпир епле утса пынине сăнаса пычĕ. Çав хушăра американецсен самолечĕ вĕçсе килсе чакакан фашистсене пулемет

вучĕпе çунтарма тапратрĕ. Тăшман салтакĕсем вĕтлĕх хушшине пытанса выртрĕç. Çак самантпа усă курса эпир, виçĕ чăваш, малтан калаçса татăлнă пекех, ушкăнран уйрăлса тартăмăр. Сукмакпа пынă чух апатсимĕç продукчĕсемпе хĕç-пăшалсем (винтовкăсемпе патронсем, ытти снаряженисем) купаланса выртнине асăрхарăмăр. Çав купаран хамăр валли çăкăр, консервăсем илтĕмĕр, винтовкăсемпе хĕç-пăшаллантăмăр. Кун хыççăн чылай вăхăт хушши утрăмăр, унтан апат çиме лартăмăр. Апатланнă хыççăн Петр Иванович фашистсем чакрĕç, малта пирĕн союзниксем, тесе савăннипе чăвашла юрласа ячĕ. Анчах та эпир иртерех савăннă иккен.

Каннă хыççăн фронта илсе пыракан çулпа каялла утрăмăр. Сасартăк умра хĕç-пăшаллă пилĕк нимĕç салтакĕ курăнса кайрĕç. Вĕсене асăрхасан Долгов мана:

- Аслипе сăмах пуçла: мĕн кирлĕ вĕсене? Эпĕ виçĕ метр аяккарах тăрăп. Хирĕç калаçма пуçласан, виççĕшне «леш тĕнчене» ăсатăп, сирĕн валли пĕрер тăшман юлать,- терĕ.

Çывхартăмăр. Нимĕç ефрейторĕ:

- Автомобиль çулне тухма инçе-и? - тесе ыйтрĕ.

- Тўррĕн кайсан 200 метр,- хуравларăм эпĕ.

Ефрейтор пире тав турĕ те, ушкăн ним пулман пекех малалла утрĕ. Эпир хамăр çулпа утатпăр. Фронт хĕррине çитрĕмĕр. Умра пысăк мар сăрт. Малта Ла-Манш пролливĕ. Аялта, тинĕс хĕрринче, нимĕç салтакĕсем темĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Çўлте, палаткă умĕнче вĕсен лейтенанчĕ çывăрать.

Эпир союзниксем патне куçас ĕмĕтпе фронт линийĕ тăрăх уçă вырăн шыраса малалла утрăмăр. Чарăнтăмăр. Йĕплĕ йывăçсемлĕ вĕтлĕх витĕр фашистсен тупписене куртăмăр. Эппин, тăшман пехоти çеç каялла чакнă-ха, унăн артиллерийĕ оборонăра тăрать, вырăнтан хускалман. Çапла вара, эпир вĕсен аллине лекнĕ пулсан, вĕсем пире тўрех «расхута» янă пулĕччĕç. Çапла шутласа, эпир çур çухрăма яхăн каялла чакрăмăр та, вĕтлĕх хушшинче пытанса тăтăмăр, юлашки фашистсем каялла чакиччен канавра çĕр выртрăмăр.

Ирхине тăрса çул хĕррине тухрăмăр, куннехинче нимĕçле калаçнă сăмахсем илтмерĕмĕр. Куратпăр: американецсен «бобикĕ» çывхарса килет. Хамăр пата çитес умĕн винтовкăсене пăрахрăмăр та тыткăна лекни çинчен пĕлтертĕмĕр. Пире штаба илсе кайрĕç, унтан тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерьне ăсатрĕç. Лагерьте маларах паллашнă чех салтакĕпе - Павăлпа тĕл пултăмăр. Вăл пире: «Гитлер капут! Сталин гут!» - тенĕ сăмахсемпе кĕтсе илчĕ. Кунтан пире тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсемпе пĕрле транспорт карапĕ çине лартса Англие ăсатрĕç. Вырăна çитсен 40 çынна автомашинăпа пересылочнăй пункта илсе кайрĕç. Вăхăтлăха пĕр хутлă чул çурта вырнаçтарчĕç. Юлашкинчен картишне илсе тухрĕç. Кил картине виçĕ метр çўллĕш кирпĕч хўмепе тытса çаврăннă, çўлтен виçĕ рет йĕплĕ пралук карса тухнă. Пире хўме çумне тăратса кĕсъесене тĕрĕслерĕç, кун хыççăн виçĕ утăм каялла чакарчĕç. Часовойсен вышкисем çинчен пирĕн çине икĕ пулемет кĕпçи тĕллесе тăрать. Çар офицерĕ хăйĕн икĕ помощникĕпе пĕрле строй умĕпе утса тухаççĕ. Чи малтан Польша салтакĕ калаçма пуçларĕ.

- Эпĕ - поляк. Манăн тăван çĕршыв - Польша çĕрĕ. Эпĕ айăплă мар. Мана персе ан вĕлерĕр,- терĕ вăл куççуль витĕр тархасласа.

Манпа юнашар тăракан Долговăн та куçĕсенчен куççулĕсем юхма пуçларĕç. Вăл мана алăран тĕксе ура айĕнчи чĕр юн вырăнне

кăтартрĕ.

Хам тĕле ҫитсен эпĕ офицера ҫапла пĕлтертĕм:

- Эпир - вырăссем. Германире тыткăнра пултăмăр. Пире персе ан вĕлерĕр, эпир сирĕнпе союзниксем.

- Юрать, юрать,- терĕ офицер.

Ҫакăн хыҫҫăн пире вырăссен ҫар лагерьне куҫарчĕҫ. Икĕ уйăх пурăнтăмăр унта. Лагерь коменданчĕ тата конвоирсем пире тĕкĕнместчĕҫ...

**(Н. М. Аюгов ҫырнă «Тăшман тамăкĕнче» асаилӳрен).**

# Вăрҫă вăхăтĕнчи йывăр кунсем

Революци умĕн пирĕн яла халăха лăплантарас тесе казаксен пĕр ушкăнĕ килнĕ. Вĕсем килĕрен ҫӳренĕ:

-Хĕрлисем е шуррисем майлă-и? - тесе ыйтнă. Ҫийĕнчех каламасан ҫурăм урлă чĕн пушăпа ҫапса илнĕ.

Ял ҫыннисен хушшинче туса ирттерекен мĕнпур идеологи ĕҫĕ ун чухне чиркӳ ҫине тиеннĕ. Патша салтакĕсемпе офицерĕсем ҫак вырăнти халăхсен шухăш-кăмăлĕ мĕнлерех пулнине ҫийĕнчех туйса пĕлсе тăнă. Хăш пĕр чӳхне большевиксем те ҫак тĕттĕм вырăна пырса ҫитнĕ, Ленинăн политикине ăнлантарас ĕҫе илсе пынă. Вĕсем пуху пуҫтарăннă кун ял ҫыннисене хурал пӳртне пыма чĕнсе килрен киле ҫӳренĕ. 1905-1920 ҫулсем ялăн историнче чи йывăр тапхăр пулса тăнă. Каярахпа самани улшăннă. Ял-йышсем авантарах пурнăҫпа пурăнма пуҫланă. Анчах... 1940 ҫулсем каллех ял-йышшăн калама ҫук йывăр ҫулсем пулса тăнă. Вăрҫă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене вăрҫăра ҫеҫ мар, Ҫĕнĕ Йĕлмелĕнче пурăнакансем те тӳссе ирттернĕ. Каламасăрах паллă, вăрҫă кашни ҫемьене пысăк хуйхă илсе килнĕ, вĕсен мирлĕ ĕҫне, телейлĕ пурнăҫне татнă. Тăван ҫĕршыва сыхлама вăрҫăн малтанхи кунĕсенчех ял ҫыннисем тухса кайнă. Кайнисен хушшинче хĕрсем те пулнă. Акă вĕсен хушамачĕсем. В. Иванова (Мазюкина), О. Ляукова (Алякина), Т. П. Ишмукова. Колхозри мĕнпур ĕҫсем ватăсемпе хĕрсем ҫине тиеннĕ. Хирте ҫурлапа тырă вырнă, вĕсемех «Коммунар» ятлă комбайн моторне 40 градус сивĕре вĕренпе туртса тивертнĕ. Хирти ҫĕмелсене тачкăпа е ҫунапа турттарнă. Шартлама сивĕре авăн ҫапнă. Килĕсенче юлнă пĕчĕк ачисем сивĕпе аптăраса вырăн ҫинче утиялпа витĕнсе ларнă. Пӳрте ăшăтма вутă-шанкă пулман. Вылььăх-чĕрлĕх тислĕкĕнчен хутма кирпĕч ҫапнă е Чăваш Ҫĕпрел шурлăхĕнчен торф турттарнă. Вутăпа питĕ те хисеплĕ хутнипе пӳрт ăшăнман. Хутма вутă-шанкă ҫуккипе хĕллехи вăхăтра 2-3 килĕ пĕрлешсе пурăнакансем те чылай пулнă. Шкулти класс пӳлĕмĕсенче те сивĕ пулнăран «доскана» шывпа йĕпетнĕ тряпкăпа тасатсан самантрах унăн ҫийĕ пăрланса ларнă. Ял урамĕсенче е пĕр киле пуҫтарăнса ял-йыш хурлăхлă юрă юрланă. Ҫавăн пек сăвăсенчен нумайăшне ял ҫыннисем хăйсемех ҫырнă. Кĕввисене те вĕсемех кĕвĕленĕ. Хĕллехи вăрăм каҫсем пуҫлансан хĕрсем тата вĕсемпе пĕрлех ваттисем те, кунĕпе ĕҫлесе ывăннă пулин те, пĕр-пĕр киле пуҫтарăнса вăрҫăри

хыпарсем çинчен кам мĕн илтнĕ çавна каласа кăтартнă. Шкул ачисем салтаксем валли килте лартса ÿстернĕ махоркăна пуртăпа пукан çинче тураса вĕтетнĕ хыççăн пĕчĕкçĕ хутаçа тултарнă. Хут татки çине çыру çырса (камран иккенне) пĕлтернĕ. Çак парнене илекен салтака ун патне çыру çырма ыйтнă. Хирĕç çыру илекенсем те пулнă. Алсиш е чăлха çыхса çур çĕр тĕлне çитни те сисĕнмен. Ывăнса çитсен, кăштах ыйхă уçăлтăр тесе, ерипен кăна юрласа илнĕ...

(А. Казаков каласа панă тăрăх).

* * *



Мария Васильевна Утянова *(ÿкерчĕкре)* хăй пурнăçĕ çинчен аса илсе çапла каласа кăтартать: «Эпир вăрçă вăхăтĕнче çамрăк пулсан та аслисемпе пĕрле колхоз уй-хирĕнчи, фермăри пур ĕçсене те вăй çитнĕ таран ĕçлеме хутшăннă. Кĕлтесем çыхса тачкăсемпе турттарма çÿренĕ. Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче талăкĕпех кĕлтесене çапнă çĕрте аслисемпе пĕр тан ĕçленĕ. Кĕлтесем çыхма ирех сывлăм типиччен тăрса тухнă, ĕçрен киле килсен каçхине вăййа тухма та вăй хал çитернĕ. Çамрăк чухне ывăнма пĕлмен-тĕр! Тепĕр кунхине каллех ирхи кăвак çутăпа ĕçе тухнă. Пĕррехинче эпир хĕртантăшпа Чăнлă çырми урлă каçнă чухне хамăртан инçех те мар икĕ кашкăр чупса иртсе кайнине асăрхарăмăр. Малтан ним те ăнланманскерсем аташса кайнă килти выльăхсем пулĕ тесе хăрама та пĕлмерĕмĕр. Инçех те мар çеремре курăк çисе çÿрекен лашасем тулхăрнине илтсен çеç хăраса ÿкрĕмĕр. Çав выçă кашкăрсем çынсем çине тапăнма пултарнă! Турă сыхланă ĕнтĕ пире, çамрăк хĕрачасене. Вăрçă çулĕсенче ял çывăхĕнчи хирсенче кашкăрсем кĕтĕвĕпе çÿренĕ.

Хальхи пурнăçа мĕнле хурласан та ĕлĕкхипе танлаштараймăн, вăл вăхăтра пурнăç питĕ йывăр пулнă, çимелли пачах пулман. Ялти мĕн пур ĕçсене алă вĕççĕн тунă. Халĕ акă пур çĕрте те ял хуçалăх машинисем

ĕçлеççĕ. Çакăн пек ырлăх пурнăç пире парнеленĕшĕн эпир Ленина пуç тайса тав тума тивĕç. Хамăн пурнăçа эпĕ, сăмахран, шăпах Ленин идейисемпе хавхаланса пурăнса ирттертĕм. Шкулта çапла юрлаттăмăрччĕ:

«Ведь с нами Ворошилов,
Первый красный офицер.
Сумеем кровь пролить мы
За СССР...
Когда нас в бой пошлет товарищ Сталин
И первый маршал в бой нас поведет...

Выçлăх çулĕсене аса илес пулсан, çимелли çуккипе ыраш нимĕрĕ (çапла каланă ял-йышсем) çинĕ. Çак апата ыраш-тулă çăнăхĕнчен тунă, савăт-сапа пулманнипе кавăна çурмалла касса тунă чашăк евĕрлĕ савăтпа çинĕ. Ялта вăл вăхăтра икĕ колхоз пулнă. Ленин тата Суворов ячĕсемпе хисепленсе тăнă вĕсем. Уйра пуçтарнă кĕлтесене пĕр кĕлтепе çӳлтен витсе хураттăмăр (пĕр вырăна çапла майпа пуçтарнă кĕлтесене «ÇĔМЕЛ» тесе каланă). ĂМКăна» (МК-механизированный комбайн тенине пĕлтерет) ĕçлеттерекенĕ Лянкин Миккалай пулнă. Мĕнпур ĕçсене ялти ватăсем йĕркелесе пыратчĕç. Уй-хирти тĕш-тырăсене алă вĕççĕн çавапа е кĕреплеллĕ çавапа çулнă. Хальхи пек комбайнсем пулассине тĕлĕкре те ĕненмен. Совет влаçĕ, Коммунистсен партийĕ ял-йыш пурнăçне тĕпрен улăштарчĕ.

* * *

Вăрçăччен ялĕпе те 2 машина çеç пулнă. Вĕсен водителĕсем: Михаил Федорович Афиногентов, Василий Николаевич Алякин. Вăрçă вăхăтĕнче тракторпа В. В. Кадиров, Г. Патрин, «ĂМКăна» тракторпа ĕçлеттернĕ çĕрте арçынсемпе пĕр танах Л. Быкова, А. А. Волкова, Д. И. Мискина, М. Н. Вассиярова хĕрарăмсем ĕçленĕ. Çав çулсенче ялта пĕр çыннăн кăна Шăрттан Юманĕн (Зайцев Иван) мотоцикл пулнă. Сергей Бахтин пĕрремĕш летчик пулса тăрать. Иван Бахтин (вĕсен тăванĕ) ялта чи малтан тимĕрçĕ лаççине уçать.

* * *

Вăрçăран сывă таврăннисем (вăй-хал пуррисем) канма шутламан, тӳрех ялти юхăннă хуçалăха (колхоза тата кил хуçалăхне те) ура çине тăратма тăрăшнă. Колхозри выльăх-чĕрлĕхсене çитерме утă-улăм çитменнипе çуркунне енне кайсан кивĕ витесен тăррисене витнĕ улăма сирсе илсе выльăх апачĕ вырăнне çитернĕ. Кил-çурчĕсем вара кивелсе çитнĕ, хуралтăсен тăррисем пĕтнĕпе пĕрех, çуртсен тĕпĕсем çĕрĕшнипе чалăша-чалăша кайнă, кăшт тĕртсенех ишĕлсе анма пултарнă. Тăлăха юлнă амăшĕсене, шăллĕ-йăмăкĕсене пулăшас тесе ачасем çамрăклах ĕçе кӳлĕннĕ, шкулта вĕренме пăрахнă. Хăшĕ-пĕрин, чăнах та, шкула çӳреме тумтирĕ те, çимелли те пулман. Ун чухне аякка вĕренме кайма шухăшлама та пултарайман. Вăрçă тин çеç чарăннă, пурнăç начар, вĕренме яма килтисен укçи-тенки пулман. Колхозра укçа-тенкĕ парас вырăнне ĕçленĕшĕн ĕç кунĕ çырса пынă, кĕркунне тырă е ытти ял хуçалăх продукчĕсене панă. Апла пулсан та çынсем хавхаланса пурăннă, пуçĕсене усса ларман. Хăйсенчен мĕн килнине веçех тума тăрăшнă. Ыранхи пулас телейлĕ пурнăçпа пурăннă.

# Çĕнтерӳ Кунне малтанхи хут уявлани

## (А. КАЗАКОВ ТАВРАПĔЛӲÇĔ АСАИЛĔВĔНЧЕН)

Çĕнтерӳ!.. Эпир çĕнтертĕмĕр!.. Вăрçă чарăннă!.. - çапла хытă кăшкăрса шкул еннелле чупатпăр. Пирĕн хыççăн чупакансем те: «Эпир çĕнтертĕмĕр!», «Часах аттесемпе тетесем вăрçăран таврăнаççĕ!» - çак сăмахсене каласа чупаççĕ. Пурте вăл кун ирех вăраннă.

Шкул тата клуб çурчĕсем çинче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Çуртăн стенисем çине «Çĕнтерӳçĕ-халăха мухтав!», «Эпир çĕнтертĕмĕр!» лозунгсем. Вĕсене илемлетсе çырнă. Çавăнтах И. В. Сталин портречĕ те пур.

Ял халăхĕ хăйсен пахчисенче çĕр улми лартма çĕр чавать. (Ун чухне анкартине лашапа е тракторпа сухаласси çинчен шухăшлама та пултарайман). Савăнăçлă сасса илтсе пахчари çынсем урама чупса тухаççĕ, пирĕн хыççăнах шкул патне пыма васкаççĕ. Пуриншĕн те уявçке.

Эпир шкул патне пырса çитнĕ тĕле шкул умĕнчи вăрăм сак çинче А. П. Алякин купăс каласа ларать (куçĕ курманнипе ăна ялта Суккăр Александр тенĕ). Вăл ялти чи пултаруллă сăвă-такмак ăсти пулнă, колхоз е ытти ял пухăвĕсенче çитменлĕхсене тӳррĕн калама хăюлăх çитернĕ. Çавăншăн ăна пуçлăхсем юратман. Вăл ирех Совет салтакĕсем нимĕçсене çĕнтерни çинчен илтнĕ те шкул патне чи малтан пырса тăнă. Халăх пуçтарăниччен çакăнта купăсĕпе вăрçă вăхăтĕнче хывнă такмаксене аса илсе çепĕç кĕвĕ-çемĕ янăратнă.

Кăнтăр тĕлне халăх йышлăн пухăннă. Митинг пуçланать. Николай Ларионов коммунист (Ленин ячĕпе хисепленсе тăракан колхоз председателĕ), пухăннисен умĕнче хаяр вăрçа сивлесе хĕрӳ сăмах калать. Калаçнă май хура костюмĕн алăсăр çанни çил вĕрнипе вĕлкĕшсе тăрать. Алексей Николаев (ял Совет председателĕ), Ленинград фронтĕнчен хăрах урапа таврăннă Николай Акимов ял халăхне çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Калаçакансем хыççăн купăс кĕввипе килĕшӳллĕн тухса ташлакансем те пулчĕç, юрăсем юрларĕç. Çакăн хыççăн, шкул патне пуçтарăннă ача-пăчасемпе пĕрле ял-йышсем хĕрлĕ ялав çĕклесе ял урамĕпе утрĕç. Ушкăна шкул директорĕ И. М. Денисов тата учительсем ертсе пычĕç. Утса пынă хушăрах Иван Михайлович ачасен енне çаврăнать те пĕтĕм вăйĕпе: «Сывă пултăр Аслă Çĕнтерӳ!», «Сывă пултăр паттăр совет халăхĕ!» сăмахсене пурте илтмелле кăшкăрса калать. Виçĕ хутчен: «Урр-р-а!, Ур-р-а!, Ур-р-а!», - тени таврана янăраса каять.

1418 талăк пынă хаяр вăрçă тинех вĕçленчĕ. Çав кун кунĕпех ял урамĕнче купăс сасси инçетрен илтĕнсе тăчĕ. Çанталăкĕ те уяр та хĕвеллĕ пулчĕ.

Вăрçă чарăннăранпа 50 çул иртрĕ. Сывă юлнă вăрçă ветеранĕсем куллен чакса пыраççĕ, халĕ вĕсене пӳрне вĕççĕн шутласа кăларма пулать.

Çĕнтерӳ уявĕнче кашни çулах ветерансене сума суса ялти "Йĕлмел" фольклор ушкăнĕ юрă-ташăсемпе савăнтарать.

Асаилĕве 1995 çулта çырса илнĕ.

# VII. Камсем вёсем, манӑн тӑвансем?

**... Не долга и не чести ради**
**Семья любая знать должна:**
**Кто прадед был, а кто - прапрадед**
**И где прабабка рождена...**

**В. Кулагин.**



Манăн хамăн тăвансен ăру йывăçне тĕпчес шухăш çуралчĕ, çемье тымарне пĕлес килчĕ. Пирĕн тăвансем, несĕлсем, сарăлса ӳсекен йывăç вуллисем пек, çĕршыв тăрăх сапаланнă. Миçе кăна шăпа пĕр-пĕриҥпе çыхăнман-ши! Кам кăна çук-ши кунта: учитель, инженер, рабочи, çĕр çынни... Казаковсем, Чебоксаровсем, Карсаковсем, Анисимовсем... Пурте пирĕн ăру йывăçне пĕрлешнĕ. Халĕ эпир вĕсенче несĕлсен сăн-сăпатне, кăмăл-сипетне куратпăр.

Манăн мăн асаттесемпе мăн асаннесем çĕр ĕçлесе пурăннă. Йăх пуçлăхĕ Степан пулнă. Анчах ун çинчен тĕплĕнрех пĕлме йывăр. Ял çыннисем Степанăн пĕр ывăлне - Якова анчах пĕлеççĕ. Крым вăрçинчен таврăнсан, пĕр вăхăт хушши каннă хыççăн, Яков çĕр ĕçне пуçăнать. Çамрăклах вăл патша çарĕнче хĕсметре тăнă. Севастополь патĕнчи хаяр çапăçусенче Георги хĕресне илме тивĕçлĕ пулать. Çар хĕсметĕнче 18 çул тăнă хыççăн сывлăхĕ япăхланнипе яла таврăнать. Ку вăл 1856 çулта пулнă. Вăл вăхăтра çамрăксен патша çарĕнче 25 çул тăмалла пулнă. Яковăн салтак пурнăçĕ ытларах казаксен хушшинче иртнĕ-мĕн. Çапла вара эпир те Казаковсем пулса тăнă.

Яков ашшĕ - Степан - язычество тĕнне ĕненнĕ. Ывăлĕ салтакран хут пĕлекен çын пулса таврăнать. Яла таврăнсан Яков çемье çавăрать, 1899 çулта Дарья Евграфовнана (хушаматне пĕлме тӳр килмерĕ) качча илет. Хĕрĕн ашшĕ-амăшĕсем халĕ Прохоров Хĕвеча пурăнакан вырăнта пурăннă. Çав çемьере Тарьесĕр пуçне тата тăватă ача пулнă. Çав шутран

унăн икĕ шăллĕ выçлăх çул Çĕпĕре куçса кайнă. Пĕр йăмăкĕ Мулеевсене качча тухать (Николай Никифорович Мулеевăн мăн асламăшĕ), тепри - Макаровсене (Николай Никифорович Макаровăн мăн асламăшĕ).

Ял çыннисем мăн асаннене ырăпа асăннă. Пысăк, яштака пӳллĕ, хитре хĕрарăм пулнă вăл. Унăн ашшĕ-амăшĕсем укçа-тенкĕллĕ пулнăран Яков япăх пурăнман. Туйне те чаплă ирттернĕ. Римма асламăшĕ (Никита Казаков арăмĕ) хăйматлăх пулнă. Çĕнĕ çынсен ывăл çуралать. Ананий тесе ят параççĕ ăна. Дарья Евграфовнан кун-çулĕ ытла та кĕске пулать. Упăшкипе тăватă çул пурăнсанах, 1903 çулта ăнсăртран вилсе каять. Ун чухне вăл пурĕ те вăтăрта анчах пулнă. Иккĕмĕш ачипе (куннехинче вăл хĕр çуратнă) çăмăлланса мунча хутса кĕнĕ, мунчара Тарье вăйлă çапăнать. Çакăн хыççăн йывăр чирлесе ӳксе çĕре кĕрет. Тин çеç çуралнă хĕрĕ амăшĕ хыççăн нумаях та пурăнаймасть, вилсе каять. Ананий тăлăха тăрса юлать. Мăн асаннене Тукасра, масар хапхине кĕрсен инçех мар (Илья Калаков пурăннă çурт тĕлĕнче) пытарнă. Вăхăт иртнĕ май ку вырăна çынсене пытарма пăрахаççĕ. Халĕ вăл çул çийĕ пулса тăнă. Çуралсанах вилнĕ хĕрне те амăшĕпе юнашарах пытарнă, теççĕ. Çав масартах Яковăн ашшĕ те ĕмĕрлĕхех канăç тупнă (халĕ ку вырăнта çуртсем лараççĕ). Арăмĕпе пĕчĕк хĕрне пытарнă хыççăн Яков тепĕр хут авланать, куннехинче Саплăк ялĕнчен вун çиччĕри хĕре качча илет. Ăна та Тарье тесе чĕннĕ. (Яков халĕ Денисов Хĕвеча çемйи

пурӑнакан вырӑнта пурӑннӑ.) 1905 ҫул хыҫҫӑн ҫӗрсӗр хресченсене урӑх вырӑна куҫса кайма ирӗк параҫҫӗ. Яков хӑйӗн ҫӗнӗ арӑмӗпе Сартункка патӗнче ҫӗр илет. (Халӗ ҫак вырӑн Ульяновск облаҫӗнчи Сурски районӗнчи Астрадамовка ялне кӗрет.) Ялти ҫуртне Денисов Хӗвечасен йӑхне сутать. Яковпа пӗрле тата темиҫе ҫемье ҫӗнӗ вырӑнта пурӑнма пуҫлаҫҫӗ. Кил хуҫи хӑйпе пӗрле вилнӗ арӑмӗн ачине, Яковӑн ватӑ амӑшне тата тӑватӑ ҫулхи ывӑлне илсе каять. Сартункkara ӗлӗкех сарӑ тӗслӗ кӗрӗксем ҫӗленӗ. Ҫывӑх ялсенче ҫав тумтире хапӑлласах туяннӑ.

Ҫӗнӗ вырӑнта кӗтмен инкек сиксе тухать. Чӗмпӗр енчен килнӗ казаксен ушкӑнӗ вырӑнти вырӑс ҫыннисемпе пӗрле чӑвашсене ирӗксӗр хӑваласа яраҫҫӗ. Хӗллехи шартлама сивӗре пулса иртнӗ ҫак инкек вӑхӑтӗнче Яковӑн ватӑ амӑшӗ вилет. Ӑна ҫавӑнтах пытараҫҫӗ. Ку событи 1915 ҫулта пулса иртнӗ. Сартункkaран таврӑнсан Якова Чӑнлӑ ҫырмин тепӗр енче пушӑ вырӑна ҫурт лартма ҫӗр уйӑрса параҫҫӗ. Паян ҫак вырӑнта Нина Семеновна Казакова пурӑнать. Яковӑн ҫемйи хушӑнса пырать, иккӗмӗш арӑмӗнчен ултӑ ача ҫуралать: Ульяна (1906 ҫулта ҫуралнӑскер), Николай Никифоров амӑшӗ; Альтук (1917) - Улхаш каччине Петр Эндюськина качча каять; Николай (1920) - Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче пуҫне хурать, ӑна Таганрог хулинче (Ростов облаҫӗ) тӑванла масара пытарнӑ, ятне хулари палӑк ҫине ҫырса хунӑ; Елизавета (1924), Кирхеева качча тухать; Иван (1928), Дмитрий (1930) ҫуралаҫҫӗ. Ҫакӑнта асӑннисенчен ялта Елизавета кӑна пурӑнать, ыттисем вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗреҫҫӗ. Ҫемье хуҫи, Яков, Аслӑ вӑрҫӑ пуҫланиччен, унӑн арӑмӗ, Дарья Михайловна, ҫитмӗлмӗш ҫулсенче ватӑлса вилнӗ. Саплӑкра, Кивӗ Йӗлмелӗнче (Ефремов Лявка арӑмӗ) Яковӑн пӗр тӑванӗсем пурӑнаҫҫӗ. Унӑн кӗҫӗн шӑллӗ вӑрҫӑран таврӑнайман.

Яковӑн пӗрремӗш арӑмӗнчен юлнӑ ывӑлӗ - Ананий - мӗн пӗчӗкрен ял хуҫалӑхӗнчи йывӑр ӗҫсене ӗҫлесе ӳсет. Лаша, сурӑх кӗтӗвӗсене кӗтет. Вӑхӑт ҫитсен, ҫемьеллӗ пулас шутпа, Изендеева Аленӑна (хӗрӗн ашшӗ Иван пулнӑ) качча илесшӗн пулать. Лешӗ Ананий чухӑн ҫын пулнипе качча тухмасть. Ҫав вӑхӑтра Микифор (Головинсем) патне каҫсерен хӗрсем улаха пуҫтарӑннӑ. Микифор амӑшӗ суккӑр пулнӑ, теҫҫӗ. Ман пулас асанне (Евдокия Ефимовна Григорьева) кил хуҫи амӑшӗпе пӗр тӑвансем. Ӑна вӑл мӑнакка тенӗ. Шӑп та шай ҫав каҫсенче Ананий хӑйӗн пулас мӑшӑрӗпе паллашать. Ҫапла вара 24 тултарсан вӑл (1923 ҫулта) ҫемьеллӗ пулать. Микифорсем ҫӗнӗ ҫӗре пурӑнма тухса кайсан, вӗсен ҫурчӗ пушӑ юлать. Ҫамрӑксем вӑхӑтлӑха пурӑнма ҫав ҫурта куҫаҫҫӗ.

Ҫамрӑк чухне, 1919 ҫулта, Ананий Совет влаҫне тӑшмансенчен хӳтӗлет. Пӗр хушӑ 261-мӗш номерлӗ Василий Островский полкӗнче хӗсметре тӑнӑ. Вӑрҫӑра йывӑр аманать. Тӑван яла Урал облаҫӗнчен 1920 ҫулта таврӑнать. Тӑшман пульли унӑн ҫурӑм шӑммине витӗрех шӑтарса тухать, пӗр пӳрне кӗмелӗх шӑтӑк вырӑнӗ темиҫе ҫул иртсен те тӳрленмест.

1930 ҫулта чи малтан колхоза кӗрет. Ҫав ҫулах Коммунистсен партийӗн ретне тӑрать. Ял пухӑвӗнче Анание ҫурт-йӗр ҫавӑрма ҫӗр

уйăрса параççĕ. Пурăнмалли çуртне Аксу ялĕнчен туянса купаласа лартать. Халĕ вăл вырăнта Н. А. Андреев пурăнать. Ялта кооператив йĕркелесен Анание сутуçăна уйăрса лартаççĕ. Тетюшинчен лашапа апат-çимĕç турттарать. Колхоз çирĕпленсен хатĕрлев пунктĕнче тырă йышăнакан пулса ĕçлет. Каярахпа çемйипех Çĕпрелне куçса каять. Ăна хатĕрлев кантурĕн директорĕ пулма сĕнеççĕ. Кăштах алă çавăрсан Ананий 20 пăт тырă парса Япалакран мулла çуртне туянать. Аслă вăрçă вăхăтĕнче (1942) колхоз председателĕнче ĕçлет. 1942 çулхи майăн 20-мĕшĕнче, инвалид пулсан та, ăна вăрçа илсе каяççĕ. Мари Республикине кĕрекен Суслонгерти сборта пулнă хыççăн 1942 çулхи октябрь уйăхĕнче вăрçă хирĕнче хыпарсăр çухалать. Паянхи кунччен те асатте *(ӳкерчĕкре)* ăçта вилни паллă мар.



Ананий çемйинче пилĕк ача çуралнă, вĕсенчен виççĕшĕ çамрăклах чирлесе вилеççĕ. Асатте вăрçăра пуç хунă хыççăн асанне икĕ ачине: Николайпа Александра - пĕчченех ура çине тăратать.

Яковран тухнă пĕр тăвансем ялта нумайăн, çаплах вĕсем çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнаççĕ. 100 çул хушшинче Яковран пурĕ тăвата сыпăк тухнă пулсан, йăх-пурнăç йывăçне 200 яхăн йыш хушăннă. Вĕсем пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ. Халĕ çав çыхăнусем татăлнăпа пĕрех. Вăрçă хыççăнхи çулсенче чылайăшĕ ял хуçалăхĕнчен ютшăнма пуçланă. Аттерен пуçласа çĕр ĕçĕнчен пач уйрăлаççĕ. Халĕ пирĕн йăхра çĕр çыннисем вуçех çук. Эпĕ, сăмахран, вăрман хуçалăх техникумне пĕтернĕ. Халĕ журналист пулса ĕçлетĕп. Йошкар-Олари (Мари Республики) политехника институтне пĕтерсе аслă пĕлӳ илме тӳр килчĕ. Атте коммунист пулман пулсан та, çак йывăр вăхăтра (1990) Коммунистсен партине кĕтĕм. Асаттерен пуçласа паянхи сыпăка çитиччен пурте Турра ĕненмен, тăвансенчен ытларахăшĕ ачисене шыва кĕртмен, çав шутрах эпĕ те. Йăхра чи анлăн сарăлнă ят - Николай.

Октябрьти социализмла аслă революци манăн несĕлсене пусмăртан хăтарса хăйсен телейĕшĕн ирĕккĕн ĕçлесе пурăнма майсем туса пачĕ, телейлĕ пурнăç парнелерĕ. Çакна ниепле те хирĕçлеме е пăсса кăтартма çук.

Ăру йăхĕн историйĕ çакăнпа вĕçленмест, ку вăл унăн малтанхи пĕчĕк пайĕ кăна-ха.

# "Хамăр йăхри çынсене манас марччĕ..."



Ӳкерчĕк çинче эсир И. К. Чебоксарова (1907-1942) юлташĕсем хушшинче тăнине куратăр. Хусанти педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вăл Чăваш çĕршывĕнчи Шăмăршă тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи шкулсенче ырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Каярахпа Çĕпреленчи РОНО аппаратĕнче, Аслă Аксура учитель пулса ĕçленĕ. 1942 çулта Сталинград патĕнчи çапăçусенчен пĕринче хыпарсăр çухалнă. "Эпĕ ăçта вилнине эсир вăрахчен пĕлмĕр. Кунта хамăр тăрăхри çынсем çук..." Çапла çырнă пулнă вăл хăйĕн юлашки çырăвĕнче. Унăн мăшăрĕ Серафима Михайловна Белякова ачисене (Мария, Николай, Петр, Александр) пĕчченех пăхса ӳстернĕ. 1972 çулта вăл çул çинче аварие лексе вилнĕ.

Кузьма Романовичпа (Иванăн ашшĕ) пĕр тăван Константин, 1932 çулсенче Çĕпĕрте пĕр хыпарсăр çухалнă. Арăмĕпе ачисене коллективизаци тапхăрĕнче ялтан ирĕксĕрлесе янă вырăнтан (Магнитогорскран) вăл тарса тăван тăрăха çитнине ял-йыш астăвать. Çавăн чухне вăл картишĕнчи пусă тĕпĕнчи пĕрене хыçне пытарнă пурлăха хăйпе пĕрле илсе кайнă. Тимĕр лаçăра упранакан укçана илме пултараймаи вăл. Çав çурт çĕнĕ хуçалăх (колхоз) аллинче пулнă. Алăкĕсем питĕрĕнчĕк пулнипе çуртăн ăшне кĕреймен. Çакăнта пурлăх упранни çинчен ăна ашшĕ вилес умĕн каласа хăварнă. Анчах ватă çын шалкăм çапнипе çийĕнчех вилсе кайнăран укçине ăçта пытарни вăрттăнлăха юлнă. Вăхăт иртсен çак пурлăх çĕр айĕнчен тупăнать. Константин вăтăрмĕш çулсенче хыпарсăр çухалать. Хăш-пĕрисем ăна вăрман витĕр тухнă чухне упа тапăннă пулĕ тесе ĕнентереççĕ, теприсем - тĕрмере халăх тăшманĕ тесе персе вĕлернĕ, теççĕ. Хăшĕ тĕрĕс, халĕниепле те пĕлме çук. Тăлăха юлнă арăмĕ виçĕ ачине пĕчченех (Анна, Гурий, Гриша) пăхса çитĕнтернĕ. Вĕсенчен Гриша консерватори пĕтерет. Сĕрме купăс калакан (скрипач) пулса тăрать. Унăн ывăлĕ те ашшĕ пекех - музыкант профессине суйласа илет.

Константин йăмăкĕ Ира 80 çула çитсе вилнĕ.

Кузьма Романовичăн арăмĕ Агафия Ивановна Николаева (Чебоксарова) - Иван Николаевăн хĕрĕ.



**Ӳкерчӗкре:** И. Николаев.

Иван, Василий, Екатерина вӗсен ачисем. Иванпа Василий вӑрҫӑра вилнӗ. Екатерина халӗ те пурӑнать. Унӑн мӑшӑрӗ Василий Степанович Семенов вӑрҫӑра вилнӗ.

Вӗсен хушамачӗ ӑҫтан тухса кайнине пӗлес тесен, 1850-мӗш ҫулсене аса илмелле. Роман Тимофеевичӑн арӑмӗ Нина Константиновна вырӑс хӗрӗ пулнӑ. Упири больницӑра ӗҫленӗ. Чӑвашла ҫырма, калаҫма пӗлнӗ хӑй. Шупашкар (Чебоксары) хулинче ҫуралса ӳснине пӗлсен хушаматсем паракан ҫын пӗр шухӑшласа тӑмасӑр ун ҫумне Чебоксаров хушамата ҫирӗплетнӗ.

# Тӑвансене пӗлетӗн-и?

Хӑвӑр йӑхӑн историне пӗлме сире хам ӑсталанӑ ӳкерчӗк (148-мӗш страницӑна пӑхма сӗнетӗп) пулӑшӗ. Ӑна хӑвна, ачу е мӑнуку валли тума пултаратӑр. Ҫавӑнпа та чи аялти тӑваткӑла мӑн асаттесен е мӑн асаннесен пӗрин ятне ҫырмалла. Ҫӳлерех вырнаҫнӑ тӑваткӑлсене ашшӗ-амӑшӗн, тата та ҫӳлереххисене вӗсен ачисен ячӗсене кӗртмелле.

Юнашар «туратсем» ҫинчи тӑваткӑлсене чи ҫывӑх иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш сыпӑксенчи пиччесемпе аппасен, иккӗмӗш ретре мучисемпе куккасен, аппасен тата ыттисен ячӗсене ҫырсан йӑх-тымарӗн схеми туллирех пулать. Кайран тӑваткӑлсене ручкӑпа е фломастерпа чӗрсе пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарӑр.

Малтанхи сыпӑксенчи тӑвансем валли тӑваткӑлсем ҫитмесен те пултараҫҫӗ. Ун пек чух пӗр тӑваткӑла темиҫе тӑван хушаматне кӗртмелле. Пӑтрашӑнса каяс мар тесен, тӑваткӑлсене номерсемпе паллӑ тума та юрать. Тӑваткӑлсене хушаматсене, ятсене, ашшӗсен ячӗсене, пурӑннӑ ҫулсене ҫырмалла.

## Мӗнле чӗннӗ пулӑттӑр?

### (Хӑш-пӗр терминсене ӑнлантарса пани)

Хӗрпе каччӑ мӑшӑрлансан, вӗсен ҫывӑх ҫыннисем, тӑванӗсем нумайланаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та эпӗ ҫамрӑк мӑшӑрсене ҫемье-хурӑнташ справочникӗпе усӑ курса паллаштарасшӑн. Астуса юлӑр, ан манӑр.

Анне (мама) - ача амӑшӗ;
Атте (папа) - ача ашшӗ;

Амаçури амăшĕ (мачеха) - тăван мар амăшĕ;
Тăван мар ашшĕ (отчим) - аçа çури;
Амаçури хĕр (падчерица) - тăван мар хĕр;
Амаçури ывăлĕ (пасынок) - тăван мар ывăлĕ;
Пĕр амăшĕнчен çуралнă ывăлсем (единоутробные) - пĕр варта выртнă ачасем;
Асанне (бабушка) - атте амăшĕ;
Асатте (дедушка) - атте ашшĕ;
Мăн акка, мăн аппа (тетя, тетка) - атте аппăшĕ, анне аппăшĕ;
Мăн (ват) асанне (прабабушка) - асатте амăшĕ (атте асламăшĕ);
Мăн (ват) асатте (прадедушка) - асатте ашшĕ (атте аслашшĕ);
Кĕçĕн аппа, акка (тетя, тетка) - ашшĕн е амăшĕн кĕçĕн йăмăкĕ;
Евчĕ, тупкăч (сват) - мăшăрланнă чухне хăтана ертсе каякан çын;
Инке (тетя) - ашшĕн пиччĕшĕн арăмĕ, кукка арăмĕ, хунчăкам арăмĕ, ĕçкей, пăяхам арăмĕ;
Йысна (зять) - тăван аппа упăшки, анне йăмăкĕн (аппан) упăшки, атте йăмăкĕн (аппа) упăшки, упăшка аппăшĕн упăшки;
Кукамай (бабушка) - анне амăшĕ;
Кукаçи (дедушка) - анне ашшĕ;
Кукка (дядя) - анне пиччĕшĕ, шăллĕ;
Мăн (ват) кукамай (прабабушка) - атте асламăшĕ;
Мăн (ват) кукаçи (прадедушка) - атте аслашшĕ;
Кинемей (тетя, тетка) - атте пиччĕшĕн (мучи) арăмĕ, анне пиччĕшĕн (кукка) арăмĕ;
Кĕрӳ (зять) - хĕр упăшки, йăмăк упăшки;
Кин (сноха, невестка) - ывăл арăмĕ, шăллăм арăмĕ;
Матушка (жена священника) - пуп арăмĕ;
Мучи (дядя) - атте пиччĕшĕ, мăнакка (анне аппăшĕн) упăшки;
Мăнакка, аслă аппа (тетка) - ашшĕн е амăшĕн аслă аппăшĕ;
Пичче (дядя) - атте шăллĕ;
Тăван пичче (аппа) ывăлĕ - племянник;
Пуçана (свояк) - пĕр тăван хĕрсене качча илнĕ çынсем (арăм аппăшĕн (хунякам) упăшки, арăм йăмăкĕн (хĕр пултăр) упăшки;
Иккĕмĕш сыпăкри пуçанасем (двоюродные свояки) - ашшĕпе е амăшĕпе пĕр тăвансен хĕрĕсене качча илнĕ кĕрӳсем;
Пăяхам, ĕçкей (деверь, ст. брат мужа) - упăшка пиччĕшĕ;
Пултăр (шурин) - арăмăн кĕçĕн шăллĕ;
Пултăр кĕрӳ (муж золовки) - хĕр пултăр упăшки;
Пултăр кин (жена мл. шурина или деверя) - пултăр (ывăлсем) арăмĕ, ывăл пултăр арăмĕ;
Хăта (сват), тăхлачă (сваха) - упăшкипе арăмĕн ашшĕ-амăшĕсене çапла хисеплесе чĕнеççĕ;
Хуняçа, хунеçе, пăятам (свекр) - упăшка ашшĕ;
Хуняма, пăянам (свекровь) - упăшка амăшĕ;

Хуньăм, пăятам (тесть) - арăм ашшĕ;
Хунякам (свояченица) - арăм аппăшĕ;
Хуняма (теща) - арăм амăшĕ;
Хĕр пултăр (золовка, свояченица) - упăшкан кĕçĕн йăмăкĕсем:
кĕçĕн хĕртен аслăраххи - аслă хĕр пултăр, унтан кĕçĕнреххи -
вăталăх хĕр пултăр, ун хыççăн - чипер хĕр, тепри - сарă хĕр
пултăр, чи кĕçĕнни - кĕçĕн хĕр пултăр, арăм йăмăкĕ;
Хунчăкам (шурин) - арăмăн тăван пиччĕшĕ;
Ывăл пултăр, ывăлсем (деверь) - упăшка шăллĕ.



Ӳкерчĕкре: Алеша Казаков (килти фотоальбомран, 1994).



# VIII. Ялти чиркӳ ҫинчен

(А. Казаков таврапӗлӳҫӗ каласа панинчен)

Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнче крепостла йӗрке хуҫаланнӑ ҫулсенче вулама е ҫырма пӗлекенсем пулман, ҫавӑнпа та ял ҫыннисем шкул уҫасшӑн ҫуннӑ. Анчах та вӑл вӑхӑтра чиркӳсӗр шкул уҫма юраман. Ҫавӑнпа та малтан чиркӳ уҫмалла пулнӑ. Чиркӳ тесе турӑ ятне асӑнса уйрӑм туса лартнӑ ҫурта каланӑ. Тулашӗнчен вӑл тӗрлӗрен пулнӑ. Сӑмахран, Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи чиркӗве хӗрес евӗрлӗ тунӑ. Ӑна 1861 ҫулта тырӑ вырма тухас умӗн туса пӗтернӗ. Хӗрес символӗ «турӑ ҫурчӗ» хӗресрен пуҫланса кайнине пӗлтернӗ. Освященине кӗрхи сӑра кунӗ (ҫӗнӗ стильпе ноябрӗн 4-мӗшӗнче) ирттернӗ. Чиркӳ ҫав самантран пуҫласа ӗҫлеме тытӑннӑ. Асӑннӑ куна вара ҫулсерен уявласа ирттерме пуҫланӑ (халӗ те ҫаплах). Тӗн уявӗ совет уявӗпе тӗл килнипе ӑна йывӑр вӑхӑтсенче те ирӗккӗн уявланӑ. Ульяновскри тӗп архивра пирӗн чиркӳ пирки ҫакӑн пек ҫырса хунӑ хут пур: "В с. Ново-Ильмовом кусте Храм деревянный, построен

прихожанами в 1861 году, теплый придел к нему в 1895 году. Престолов в храме два: главный (холодный) во имя святого ВМЧ Дмитрия Солунского и в приделе в честь Богоявления Господня. Церковной земли 33 десятин пахотной. Причт состоит из священника, диакона и псаломщика. Дома у них собственности, на общественной земле. Прихожан в с. Нов. Ильмово 205 дворов, 539 мужчин и 371 женщин". Шкул çаплах пулман-ха. 1863 çулта тин чиркӳ хуралӗн пӳртӗнче малтанхи шкул уçӑлнӑ. Ялта И. Я. Яковлев пулӑшнипе çӗнӗ шкул уçичченех, тӗпрен илсен, ачасене хуралçӑ пӳртӗнчех вӗрентеççӗ. «Закон божий» урокӗсене пуп чиркӳре ирттернӗ. Малтанхи вӑхӑтсенче арçын ачасем çеç вӗреннӗ-ха. Хӗрачасем килте арлама, панӗски çыхма, пир тӗртме кирлӗ пулнӑ. Чиркӳ уçӑлсан яла пирвайхи пуп килнӗ. Вӑл Алаксагаров хушаматлӑ вырӑс пулнӑ. Чӑвашла калаçма пӗлмен. Вӑкӑр Кавӗрли (Быков Гаврил) пуп ачисене вылятнӑ. Вӗсемпе пӗрле вырӑсла калаçма хӑнӑхать. Çапла вара ялта чи малтан вырӑсла калаçма пӗлекен çын пулса тӑрать. Каярахпа пуп ӑна чиркӳ хуралçине лартать. Çапах та чӑваш чӗлхине пӗлменни Алаксагарова вырӑс ялне куçса кайма хистет. Ун хыççӑн чиркӳре чӑваш çыннисем ӗçлеççӗ. Юлашкинчен чылай вӑхӑт хушши Василий Иванович Иванов чӑваш пуп пулса ӗçлет. Вӑл хальхи вӑхӑтра Николай Андреев пурӑнакан вырӑнта пурӑннӑ. Ун çинчен çакӑн пек сӑмах юлнӑ. 1921 çулхи выçлӑх çулхине, çумӑр çутарас тесе, халӑхран тырӑ пуçтарса учӳк ирттернӗ çӗрте апатланма вӑкӑр илсе пуснӑ, çумӑрӗ çавах çуман. Çавӑн чухне Иванов пуп çапла каланӑ: «Çак тырра мана панӑ пулсан, эпӗ чиркӳре кӗлӗ тунӑ пулӑттӑм. Вара турӑ çумӑрне те панӑ пулӗччӗ».

1930 çулхи январӗн 30-мӗшӗнче Иванов пупа «халӑх тӑшманӗ» тесе айӑпласа тӗрмене хупса лартаççӗ. Унпа пӗрле тата 11 çынна кулак тесе е ытти сӑлтав тупса тытса кайнӑ, вӗсенчен нумайӑшӗ килӗсене таврӑнайман. Кун хыççӑн чиркӗве питӗрсе илеççӗ. Çӑраççи уççи чиркӳ старостинче Никита Казаковра упраннӑ. Кӑшт вӑхӑт иртсен, йывӑрпа пулсан та, чиркӳ каллех ӗçлеме пуçлать. Пуп пулса ӗçлеме Пӑва сывӑхӗнчи Каша ялӗнчи Григорий Ефремович Ефремова илсе килеççӗ. Çапла вара чиркӳ çӗнӗрен 1936 çулччен ӗçлеме пултарнӑ. Асӑннӑ çул Ефремов пупа «ирӗк илмесӗр ӗçленӗ» тесе тытса каяççӗ. Унӑн малаллахи шӑпи паллӑ мар. Чиркӳ куполне, хӗресӗсене, чанӗсене, турӑшӗсене сирпӗтсе антараççӗ. Çакӑн хыççӑн чиркӳ - шкул, тырӑ склачӗ, каярахпа клуб пулса тӑрать.

1990 çулхи апрелӗн 17-мӗшӗнче ирхине 3 сехетре клуб тунӑ чиркӳ çуртӗнчен кӗтмен çӗртен вут тухать, вӑл тӗпӗ-йӗрӗпе çунса каять. Кирпӗчрен хӗрес евӗрлӗ тунӑ никӗсӗ çеç юлать. Ку хӑрушӑ япала мункун хыççӑн иккӗмӗш кунне пулса иртет. Апрелӗн 19-мӗшӗнче чиркӗве çӗнӗрен тӑвас енӗпе граждансен пухӑвӗ пулса иртет. Унта кашни çемье унччченхи никӗс çинчех çӗнӗ чиркӳ тума малтанласа 100 тенкӗрен кая мар укçа-тенкӗ парса пулӑшма йышӑнаççӗ. Укçа-тенкӗ пуçтарса чиркӳ

тăвас ĕçе ертсе пыма ветерансен совечĕн председателĕ Ф. Н. Утеев хăй çине илет. Ял халăхĕ тăрăшнипе çурт тума пĕренесем кӳреççĕ. Василий Симулин ертсе пыракан 12 çынран тăракан платниксен бригадине йĕркелеççĕ. Платниксемпе пĕрле ял халăхĕ те ӳркенсе тăмасть, унта кашнин валли ĕç тупăнать. 1993 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче чиркӳ тăвас ĕç вĕçленет. Октябрĕн 17-мĕшĕнче вăл ĕçлеме пуçлать. Çак кун йĕри- таври ялсенчен халăх йышлăн пуçтарăнать. Çывăхри чиркӳсен пупĕсем те пулнă. Тăрăн (Патăрьел районĕ, Чăваш Республики) чиркĕвĕнчен тĕн юррисене юрлама хор килет. Октябрĕн 19-20-мĕшĕсенче чăвашла пĕрремĕш кĕлĕсем пулса иртеççĕ. Чиркӳре пуп пулса Чăваш Çĕпрел çынни Иван Михайлович Ефремов ĕçлеме тытăнать. Халĕ те вăл ĕçлет. Алтарник пулса Н. Дунаев, бухгалтер-кассир Д. Герасимова, электрик-кочегар В. Прокопьев, староста Ф. Утеев, просвир пĕçерекен Е. Карсакова ĕçлеме пуçлаççĕ. Халлĕхе псаломщик çук-ха.

Çĕнĕ Йĕлмелĕнче чиркӳ уçнăранпа нумай та вăхăт иртмерĕ-ха, анчах та вăл тĕне ĕненекенсене хăй патнелле туртать. Ял çыннисем кăна мар, ытти кӳршĕллĕ ялсенчен те килсе çӳреççĕ кунта. Халăх йышлă пырать. Пĕрисем кĕлле çӳреççĕ, теприсем ачасене шыва кĕртме, венчете тăма пыраççĕ. Тĕн кĕнекисем, çуртасем сутаççĕ кунта.

**(1993.)**





# IX. Музей пулать

И. Я. Яковлев пирӗншӗн хаклӑран та хаклӑ ҫын. Вӑл ҫине тӑрса тӑрӑшнипе пирӗн Ҫӗнӗ Йӗлмел ялӗнче те шкул тума пулӑшнӑ, ӑна 1887 ҫулта уҫнӑ. Маларах асӑннӑччӗ ӗнтӗ, унччен кунта 1863 ҫултан тытӑнса чиркӳ хурал ҫуртӗнче е укҫалла тытнӑ ҫуртсенче ҫеҫ вӗрентнӗ, урӑхла каласан, ятарлӑ шкул ҫурчӗ пулман.

Ялта ҫӗнӗрен, ятарлӑ проектпа кирпӗчрен икӗ хутлӑ шкул ҫурчӗ туса лартсан (1980) И. Я. Яковлев уҫнӑ кивӗ шкул ҫурчӗ пушанса юлать. Ҫул иртнӗ май вӑл юхӑнма пуҫларӗ. Ҫакӑ ял ҫыннисене шухӑшлаттарчӗ те. «Яковлев шкулне пӗтме памастпӑр, унта музей тумалла», - терӗҫ вӗсем. Ҫак шухӑша колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ те ырларӗ, ял Совет депутачӗсем вара хӑйсен сессийӗнче пӗр саслӑ пулса шкулта музей уҫма йышӑнчӗҫ. Ку ыйтӑва сӳтсе явнӑ чухне унта ҫаплах Хусантан килнӗ хӑнасем - Тутар ССР культурин тава тивӗҫлӗ ӗҫлевҫи, СССР писателӗсен Союзӗн членӗ, «Социалистик Татарстан» хаҫатӑн пай пуҫлӑхӗ С. К. Хайрутдинов, радиотелевидени комитечӗн редакторӗ И. Ф. Сирматов хутшӑнчӗҫ, тухса калаҫрӗҫ, пуҫарӑва ырларӗҫ, хӑйсенчен мӗн килнӗ таран пулӑшу пама пулчӗҫ.

Анчах 100 ҫул ытла ларнӑ ҫурта, паллах, пӗр юсамасӑр музей туса хума май ҫук. Ҫавӑнпа та ӑна реставрацилеме Бауман ячӗллӗ колхоз правленийӗ вуникӗ пин тенкӗ укҫа уйӑрса пачӗ тата кирлӗ материалсем-

пе тивĕçтерчĕ. Куншăн Р. Х. Хисметов колхоз председательне тав тумалла. Ытларах вăл тăрăшрĕ. Платниксемпе столярсен ушкăнĕ - Н. В. Марков, В. Е. Марков, Г. В. Марков, Н. Н. Николаев, А. Н. Николаев, В. И. Скворцов (бригадирĕ Н. В. Марков) пĕр уйăх çурă хушшинче реставраци ĕçне чылай пурнăçларĕç, тăрăшса, пысăк пахалăхпа ĕçлерĕç çак ĕçе. Ял çыннисем вĕсен ĕçĕпе питĕ кăмăллă юлчĕç. Хусан хăнисем те пană сăмаха манса каймарĕç, вĕсем 200 штук ытла анкета-запрос бланкĕсене укçа тӳлемесĕр пичетлесе ярса пачĕç. Эпир çав бланксене ватă çынсемпе вăрçă ветеранĕсене ярса патăмăр. Кунсăр пуçне Габдрахманов художник П. М. Миронов сăн ӳкерчĕкĕ тăрăх пир çине унăн пысăк портретне ӳкерсе парнелерĕ. Çаплах И. Я. Яковлев портретне те парнелеме пулчĕç хăнасем.

Пирĕн музей тĕрлĕ енлĕ пулать, вăл темиçе пайран тăрĕ. Унăн пĕр уйрăмне ятарласа И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлева тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă ял çыннисене халалласшăн. Ку енĕпе пайтах материалсем пуçтарăнчĕç ĕнтĕ. Паллах, йывăрлăхсем те тĕл пулаççĕ.

"Халлĕхе музей ĕçне эпĕ обществăлла пуçарупа пурнăçласа пыратăп, кирлĕ материалсем пуçтаратăп. Анчах темле йывăрлăхсем пулсан та, Яковлев уçнă шкулта музей пулатех. Ял çыннисем хăйсен тахçанхи ĕмĕчĕ пурнăçланасса çирĕп шанаççĕ. Колхоз правленийĕ çурт йĕри-тавра пахча тытса çаврăнчĕ, унта улмуççи тата ытти çимĕç йывăççисем лартма шутлатпăр. Çаплах тĕрлĕ йышши чечексем те ешерĕç. Шкул çурчĕ (музей) сад ăшне пулĕ, вăл ăна никĕслекенĕн ятне ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса тăма пулăшĕ",- тет калаçăва вĕçлесе А. Казаков.

* * *

Ялсенче музейсем пурри ялсен историне тата таврари культурăна пĕлме пулăшать. Вĕсем тĕрлĕ экспонатсемпе пуян пулсан та унта авалхи сăн ӳкерчĕксем çителĕксĕр-ха. Ытларах пайĕ вĕсен килти архивсенче, ватă çынсенче упранаççĕ. Кил хуçи вилсен унăн тăванĕсем авалхи сăн ӳкерчĕкĕсене кирлĕ мар тесе кăларса пăрахаççĕ е çунтарса яраççĕ. Апла ан тăвăр, вĕсене музее парăр. Акă мĕншĕн. Пирĕн куршĕре ватă карчăк (Сашук теттĕмĕр ăна) вилсе кайсан унăн килти архивне куршĕсем çунтарса янине астăватăп эпĕ. Ĕлĕкхи япаласенчен кĕл купи çеç тăрса юлчĕ. Çав документсене музее панă пулсан, ял историне тĕплĕнрех пĕлме пулăшнă пулĕччĕç. Ял çыннисемшĕн кăна мар, тĕпчевçĕсемшĕн те вăхăт иртсен пысăк пĕлтерешлĕ вĕсем.

# Х. Ялти ватăсем иртнĕ вăхăта аса илеççĕ

## *"Тӳсес пулать Турă çырнине..."*

Çĕнĕ Йĕлмел урамĕпе туя çине таянса карчăк ерипен утать. Ватти-вĕтти те лайăх пĕлет ăна çак ялта. Кĕтерук аппа вăл - Екатерина Никоноровна Мартынова - ялти чи ватă çын. 1894 çулта çуралнă. Кĕтерук аппа хальхи вăхăтра хăй çуралса ӳснĕ вырăнтах пурăнать, çурт-йĕрĕ çеç урăххи. Чăн та, качча кайсан пĕр хушă урăх çĕрте пурăннă. Тĕпе юлнă кĕçĕн шăллĕ вара вĕсем ача чухне пурăннă çурта сутнă. Кăштах пурăнсан çĕнĕ хуçа та çурта сутса ярать. Хăй çуралнă вырăнтах пурăнма ĕмĕтленекен Кĕтерук аппа упăшкине çак çурта сутăн илме хистет.

Эпĕ Кĕтерук аппана хăй пурнăçĕ çинчен каласа пама ыйтрăм.

- Эй, пĕр ĕмĕр пурăнса мĕн кăна курма тӳр килмен пуль, - пуçларĕ вăл сăмахне. - Çемьере пирĕн 6 ывăл тата 2 хĕр пулнă. Кĕçĕннисем Петĕрпе Санюк Тăван çĕршыв вăрçинчен таврăнаймарĕç...

Ĕлĕк вĕт ывăл ачасене çеç çĕр панă. Ывăл йышлă пулнăран вĕсен çемйине çĕрĕ те чылай лекнĕ. Çавна пулах Кĕтерука ашшĕпе амăшĕ шкула вĕренме яман. Çĕр ĕçлемелле тата ачасене пăхмалла пулнă.

Кĕтерук аппан ашшĕ, Никонор Никифорович, 1943 çулта вилнĕ. Амăшĕ вара 1931 çултах çĕре кĕнĕ пулнă. Ашшĕпе амăшĕ ачисене пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарса ӳстернĕ. Кĕтерукăн та 12 тултарсанах ĕçе кӳлĕнме тивнĕ. Ашшĕпе пĕрле суха тунă, тырă акнă, сӳреленĕ. Хĕллехи кунсенче вара пир тĕртнĕ, çăм арланă, кисĕппе сӳс тӳнĕ. Ашшĕ çав вăхăтра çăпата тунă, вĕрен явнă, лаша пăхнă. Ун чухне хресчене пĕр тенкĕ укçа ĕçлесе илме те йывăр пулнă-çке. Сухапуçпе сухаласа, алăпа вăрлăх сапса, йывăç сӳрепе сӳрелесе тыр-пул кал-кал туса илеймĕн. Ĕçĕ йывăр пулнă, тырри вара йӳне кайнă. Калăпăр, пĕр пăт ыраш - 30 пус, сĕлĕ - 18 пус, вутă (лаша лавĕпе) - 15 пус тăнă. Тулă тавраш ку вырăнсенче вуçех те акса туман. Нумай хуçалăхсен тырри-пулли çĕнĕ тырăччен те çитсе пырайман. Сутлăха хăварас пирки вара шутламан та. Хресченĕн укçа тумалли майсем пулманпа пĕрех. Çав вăхăтрах патшалăха çуллен 7-8 тенкĕ налук укçи тӳлемелле пулнă.

Кĕтерук аппа 28 чухне пĕр хресчен ачине качча тухать. Унăн мăшăрĕ, Егор Васильевич, вăл вăхăтра 22 çеç пулнă.

- Ун чухне ашшĕ-амăшне килĕшмен çынна качча тухма юрамастчĕ, вĕсем вара эпĕ кăмăлланине ялан тиркенĕ, - аса илет Кĕтерук аппа. - Хăшчухне Якура йĕплесе те илетчĕç: «Санăн арăму ватă, сана тепре те авланма тӳрĕ килĕ-ха», - тетчĕç. Пурнăçра темле те килсе тухать çав. Мăшăрăм, 11 çул пĕрле пурăнсан, 33 чухне тăруках чирлерĕ

те вилсе кайрӗ. Унтанпа эпӗ 60 ҫул пурӑнатӑп ӗнтӗ ак. Хама аванах туятӑп-ха.

Унӑн мӑшӑрӗ тӑлӑх ача пулнӑ. 1930 ҫулта ялта колхоз йӗркеленсен, унта кӗме ҫыраннӑ. Егор Васильевич мӗн виличченех колхозра ӗҫленӗ.

- Тыр-пул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра мана апат тутлӑ пӗҫерен тесе, яланах кӑнтӑрла апачӗ пӗҫерме уйӑрса лартатчӗҫ, - каласа кӑтартать ҫав вӑхӑт ҫинчен Кӗтерук аппа.

Вӑл пурне те астӑвать, ӑс-тӑнӗ халӗ те ҫивӗч-ха унӑн. Кӗтерук аппа ҫемйи ҫинчен те пӗр-ик сӑмах. Мӑшӑрӗ вилнӗ хыҫҫӑн пилӗк ачапа тӑрса юлнӑ вӑл. Хӗрӗсем - Елисса, Сима, Дуня, ывӑлӗ Федя - пурте тӗрӗс-тӗкел пурӑнаҫҫӗ. Марье ятлӑ хӗрӗ кӑна ачаллах вилсе кайнӑ. Дуньӑн хӑйӗн пилӗк хӗр те икӗ ывӑл, Федьӑн икӗ ача. Мӑнукӗсем те пурте ҫемьеллӗ ӗнтӗ.

Хуйхи-суйхине пайтах курнӑ пулин те, хӑйне аванах туять-ха Кӗтерук аппа. Куҫӗ те чип-чиперех курать. Чирлекелени пулкаланӑ, паллах.

- Пӗрре ҫапла, 70-те чухне, ӑш ыратнипе йывӑр чирлесе ӳкрӗм, - аса илет Екатерина Никоноровна. - Операци тумалла, терӗҫ. Район больницине илсе кайрӗҫ. Врач тӗрӗслерӗ те: "Эсӗ ватӑ, операцие чӑтаймӑн", - терӗ. «Сыхлансарах пурӑнсан чир иртсе каять, тата вунӑ ҫул ҫӑмӑллӑнах пурӑнатӑн», - тет. Мана 80 ҫул пурӑнсан пуҫ тӳпинченех, терӗм те, операци тутарма килӗшмерӗм. Ҫавӑнтанпа 10 ҫул мар, 30 ҫул пурӑнатӑп ӗнтӗ. Хама япӑх туймастӑп-ха», - хушса хурать вӑл ҫавӑнтах.

- Нумай ҫул пурӑннин вӑрттӑнлӑхӗ мӗнре-ши? - ыйтрӑм эпӗ.

- Мана вӑрӑм ӗмӗрлӗ пулма ӗҫрен хӑраманни те пулӑшрӗ пулӗ тетӗп. Нихӑҫан та хаяр шӗвекпе туслӑ пулман.

Нумайччен калаҫса лартӑмӑр Кӗтерук аппапа. Пӗрле пурӑнакан хӗрӗ Сима та ун патӗнчен пӑрӑнмарӗ. Паянхи кун-ҫул пирки те сӑмах хускатрӑмӑр.

- Юлашки вӑхӑтра лару-тӑру пӑтранчӑклӑ пулни ытла та пӑшӑрхантарать ҫав, - тет Кӗтерук аппа. - Ҫапах та ӗҫме -ҫимеллипе аптрамастпӑр-ха. Малашне те Турӑ пулӑшгӑрах ӗнтӗ. Тӳсес пулать Турӑ ҫырнине. Совет влаҫӗн малтанхи ҫулӗсенче те ҫакӑн пек йывӑр пулчӗ. Япаласем ҫав тери хакланса кайнӑччӗ. 1000, 10000, 25000, 100000 тенкӗлӗх укҫасем ҫӳретчӗҫ. Мӗльюн тенкӗлӗх укҫа пулнине те астӑватӑп. Каярах-па майӗпен майлашӑнчӗ. Халӗ те ҫапла тӳрленсе кайӗ-ха.

Ҫакна каланӑ хыҫҫӑн Кӗтерук аппа мана 1918-1921 ҫулсенче тухнӑ укҫасем те кӑтартрӗ. Эпӗ вӗсене ку таранччен усранӑшӑн тав турӑм. Вӑл ҫав укҫасене музейра сыхласа упрама парнелерӗ. Тухса каяс умӗн хуҫи Турӑ юрри юрласа кӑтартрӗ. Кӗлӗсем те чылай пӗлет вӑл. Чиркӗве ҫӳренӗ чух вӗреннӗскерсене, хальччenех вӗсене асра тытать Кӗтерук аппа.

**(«Сӑвар» хаҫатран).**

* * *

Ваттисем ӗлӗкренех ҫыннӑн пурнӑҫне виҫсе, сӑнласа: «Ӗмӗр

сакки сарлака», «Пурнăç пурăнса ирттересси хир урлă утса каçасси мар», - тенĕ. Кашни çын хăй ĕмĕрĕнче темĕн чухлĕ хĕн-хур курма ĕлкĕрет.

100 çул тата ытла пурăнакан çыннăн ĕмĕр сакки мĕн сарлакăшши вара? Ăна мĕнпе виçмелле? Çак 100 çулхи ĕмĕр хирĕнче мĕн чухлĕ вăй, сывлăх пĕтнĕ, асап тÿснĕ, куççуль юхнă-ши? Кăна Кĕтерук аппа хăй кăна пĕлет...

Вăл - Екатерина Никоноровна Мартынова шăп 100 çул каялла - 1894 çулхи чÿк уйăхĕн 27-мĕшĕнче Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче çуралнă.

Унăн ашшĕ пĕр вăхăт хушши ял старости пулса та ĕçленĕ. Каярах çĕр ĕçĕ ĕçленĕ, лашапа япаласем турттарнă. Чĕмпĕре махорка сутма çÿренĕ (ун чухне 1 стакан махорка 3 тенкĕ тăнă). Хуларан кил валли тăвар, сахăр, фуфайка илсе таврăннă. Пĕрре çапла Никанура Сартункаран махорка тиесе килнĕ чухне власть çыннисем тытса чараççĕ. Спекулянт тесе айăплаççĕ. Çакăншăн унăн тĕрмере ларса тухма та тÿрĕ килет.

Вĕсен çемйине тырă акмалли çĕр пĕр ятакшăн (20 хăлаç) кăна панă. Сахал пулнă ку çемье валли. Çак вăхăтра вĕсен пĕлĕшне - Çĕпрелĕнчи пачăшкăна Çĕнĕ Йĕлмелĕнче тырă акма çĕр параççĕ. Анчах вăрлăх çуккипе ку çĕре акаймасть вăл. Никифоровсен çемйи хăйсен вăрлăхне акса ÿстерет, пуçтарать. Пулнă тырра кĕркунне пачăшкăпа пайлаççĕ. Паллах, икĕ еншĕн те лайăх пулнă ĕнтĕ килĕшÿ. «Революци хыççăн хĕрарăмсене те çĕр пама пуçларĕç. Питĕ савăннăччĕ эпир уншăн. Çĕрми те лайăх пулатчĕ. Çапла тăранкаласа пурăнаттăмăр»,- каласа парать Кĕтерук аппа.

Мăшăрĕпе Кĕтерук аппа 11 çул кăна пурăннă. 1934 çулта ачисемпе тăлăха тăрса юлать. 1938 çулччен колхоза кĕмен. Çак çул лашипе урапине сутса яраççĕ, çунине колхоза параççĕ, хăйсем те колхоза кĕреççĕ.

Аслă вăрçă тытăнсан унăн икĕ шăллĕне - Петĕрпе Сахара вăрçа пĕр кунтах илсе тухса каяççĕ. Çакăнтанпа вĕсене никам та курман, нимĕнле хыпар та пулман...

Ялти пурнăçри улшăнусем çинчен Кĕтерук аппа çапла каласа парать:

- Революциччен ял пуянĕсем çаксем пулнă. Уççясем - Васикĕ, Элексантăрĕ, Кирукĕ, Якурĕ, Хĕветĕрĕ, Клава Тяппанĕ, Клава Якурĕ, Чĕленсем - Тяппанĕ, Якурĕ, Васикĕ, Иванĕ. Чĕленсем патĕнче Чăмлак Иван тарçăра ĕçлетчĕ, Куян Васси кĕтÿ кĕтетчĕ. Чĕленсен эртелĕ валли пирĕн аттесем пасарта вырăн укçи пуçтарса паратчĕç. Уççя Хĕветĕрĕн, Васикĕн, Элексантăрĕн лавккасем пурччĕ. Унта хĕрлĕ тавар, чей, сахăр, тăвар сутатчĕç. Уçса Якурĕ чаплă тимĕрçĕ пулнă. Чиркÿсене тустарма пуçласан, ялти чиркÿ тăрринчи хĕресе Тимма Кĕçтукĕ çапса антарнă. Тĕп Тукас хыçĕнче, Чăнлă çырми хĕрринче, чÿк тумалли лап пурччĕ. Çавăнта кивĕ тĕне ĕненекенсем чÿк тума çÿретчĕç. Çумăр çумасан та çак лапа кайса пăтă пĕçерсе çÿлти турăран пулăшу ыйтатчĕç. Ку лапра вăрçма, хирĕçме юраман. Çакăнта вăрçнă, усал ĕç тунă çынсем чире кайса, асап-нуша курса вилнĕ...

Халĕ Кĕтерук аппа хĕрĕпе - Симапа пурăнать. Тепĕр хĕрĕ - Туня, Ульяновск облаçĕнчи пĕр совхозра ĕçлет. Федя ывăлĕ Ульяновск хулинче пурăнать. 100 çула çитнĕ пулин те Кĕтерук аппан ăнĕ лайăх, çынпа ăнланса калаçать, хăшчухне шӳт туса та илкелет. Урисем ыратнă пирки юлашки 12 çулта урама тухса çӳремен ĕнтĕ. Çавăн пирки те: «Мĕскер-тĕр урасем сурма пуçларĕç, пульницана кайса килмелле-и? - тесе шӳтлесе илет. Юлашкинчен вăл пире ĕлĕк юрланă юрăсенчи йĕркесене аса илсе каласа кăтартрĕ:

**«Шыв хумханать, шыв хумханать,**
**Çил хумхантарса хумханать.**
**Чун хурланать, чун хурланать,**
**Çын хурлантарсан хурланать.**
**Касас пулать улма çуррине,**
**Тӳсес пулать Турă çырнине».**

## *«Мăян çулĕ урăх ан пултăр...»*

**(Аксиния Сидоровна МИСКИНА каласа панинчен)**

Эпĕ 1912 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Манăн атте Сидор Ахтямов (Эхтем Çитăрĕ), анне Ухиме ятлă пулнă. Атте чаплă çĕвĕçĕ тата платникчĕ. Унăн аптиркка пурччĕ. Вăл хальхи Шуркин Петя пурăнакан вырăнтаччĕ. Ялта пурĕ тăватă аптиркка пулнă. Унăн «кĕперĕ» çине лашасем хăпартса тăрататчĕç, аптиркка çав лашасен вăйĕпе ĕçленĕ те. Пирĕн килте çичĕ ача пулнă (виçĕ ывăл тата тăватă хĕр). Эпĕ чи кĕçĕнниччĕ. Сыввисенчен пĕччен кăна тăрса юлтăм. Ача чухне яла салтаксем килнĕччĕ (мĕн сăлтавпа килнине астумастăп). Вĕсене кăмăн апат-çимĕç пуррисем патне хваттере ячĕç. Пирĕн пӳрт пĕчĕк пулин те, пирĕн патра та пурăнчĕç салтаксем. Вĕсем пĕр хĕл каçрĕç. Анне, кил хуçи хĕрарăмĕ, 1926 çулта вилчĕ, атте - 1931 çулта. Атте вилнĕ хыççăн çулталăкран, 1932 çулта, качча кайрăм. Мискин Дмитрий Григорьевича. Унпа эпир Çĕнĕ çул тĕлне спектакль хатĕрленĕ чухне паллашнăччĕ. Ун чухне йĕкĕтсем тирпейлĕччĕ, хальхи пек эрех-сăра ĕçмен. Мăшăрăм вăрçăччен бригадирта, лавккара сутуçăра ĕçлерĕ.

Кĕçĕн тете, Микканур (1900 çулхи) атте вилсен унăн аптирккине илсе юлчĕ. Вăл ку ĕçре маçтăрччĕ. Колхоз йĕркеленсен Лариван Миттюкне мельнике лартрĕç. Микканур тетене çак армана ĕçлеттернĕ чух мельнике кăтарткаласа тăма чĕнсе каятчĕç. Ку аптирккара виçĕ тĕрлĕ тырă авăртнă: вир, хуратул, пăри. Халĕ аптиркка вырăнĕнче Прохоров Митя çемйи пурăнать.

1921-1922 çулхи выçлăх çула «мăян çулĕ» тенĕ. Ун чухне мăянсăр пуçне нимĕн те çимелли пулман. Çав çул эпир килте атте, анне, виçĕ хĕр, икĕ инке хĕл каçрăмăр. Килте лаша, ĕне, сурăхсем пурччĕ. Хам колхозра 9 çул çăкăр пĕçертĕм. Пекарньăра манпа пĕрле Тришка Хĕветут арăмĕ, Чашкин Миккалай амăшĕ, Еремеева Анастасия, Утеева Мавра ĕçлетчĕç. Пĕр вăхăт килте шоферсем усрарăм. Кунне пĕр кăмака çăкăр пĕçермеллеччĕ. Куншăн ĕçкунĕ çыратчĕç. Кӳршĕсем, Козловсем, аван çынсемччĕ, килĕштерсе пурăнтăмăр.

Вăрçă пĕтнине лайăх астăватăп. Çу уйăхĕнче çĕр улми ани

чаваттăмăр. Колхоз енчен Хĕрлĕ ялавпа тата плакатсем çырса илемлетнĕ машина килчĕ. Ялава ялти шкулта учитель пулса ĕçлекен Иван Михайлович Денисов (вăл уксахчĕ) йăтса пыратчĕ. «Вăрçă пĕтнĕ, эпир çĕнтертĕмĕр!» - тесе халăха пĕлтерчĕ вăл. Çакăн хыççăн савăннипе виçĕ кун чавма тухмарăмăр. Манăн упăшка, Мĕтри, вăрçăран инвалид пулса таврăнчĕ. Вăл 1961 çулта вилчĕ. Эпир унпа тăхăр ача çуратнă. Пĕри ачаллах вилчĕ, саккăрăшне çитĕнтернĕ: Санькка (халĕ вилнĕ), Мишша шкулта завхозра ĕçлет, Валерий (вилнĕ), Зина колхозра сысна ферминче ĕçлет, Николай (вилнĕ), Анатолий (вилнĕ), Елюк колхозра ветврачра ĕçлет, Ира та ветврач, Марье сельсоветра секретарьте ĕçлет. Ачасем шкулта пурте лайăх вĕреннĕ. Халĕ кĕçĕн хĕрпе Марьепе тата юратнă мăнукăмпа Алешăпа пурăнатăп.

**(1994 çулта çырса илнĕ).**

## *Ĕмĕрĕм шкулта иртрĕ*

**(Анисия Петровна ЕГОРОВА асаилĕвĕсем)**



**Сăн ўкерчĕкре:** А. П. Егорова мăшăрĕпе.

Манăн пурнăç тăван ялта - Çĕнĕ Йĕлмелĕнче иртрĕ. Ачалăх, çамрăклăх кунĕсем яланах куç умĕнче паянхи пек курăнса тăраççĕ. Ялти шкул ман асăмран нихçан та тухаяс çук. Çуралнăранпа сакăр çула çитсенех эпĕ вĕренме çакăнта килнĕ-çке! Вĕренсе тухса мĕн ватăличченех шкулта учительница пулса ĕçлерĕм. Педагогăн ĕçне мĕн пĕчĕкренех кăмăлланипе маншăн çак вырăн иккĕмĕш кил пулса тăчĕ.

...Революциччен пирĕн ялти шкула Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтерсе тухсан Мария Ва-

сильевна Ширкова (Егорова) ачасене вĕрентме килнĕ. Нумай вăхăт хушши вăл çак шкулта ĕçлеймест, ăна Чăваш Çĕпрел ялне ĕçлеме куçараççĕ. Манăн мăшăрăн ашшĕне Никифор Егорович Егорова качча тухсан граждан вăрçи вăхăтĕнче Украинăра пурăннă. Унти йывăр пурнăçа тутанса пăхнă хыççăн яла таврăнаççĕ. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ çулсене аса илсе Мария Васильевна çапла каласа панине астăватăп: "Эпир Мархва Трубинипе иксĕмĕр çак шкула пĕрле вĕренме кĕтĕмĕр, вăл та ман пекех Куславкка районĕнченччĕ. Çав вăхăтра училищĕре К. В. Иванов вĕренетчĕ, ăна революци ĕçне хутшăннăшăн шкултан кăларса ячĕç..."

Мария Васильевна 1951 çулччен ялти шкулта вырăс чĕлхине вĕрентрĕ, унтан вăл пенсие тухрĕ. Çамрăк чухне Кирпичников хушаматлă çынпа пĕрле ачасене вĕрентнĕ. Унпа пĕрле ...Васильев, ...Николаев, А. В. Александрова, А. С. Сорокина, Петров учительсем ĕçленĕ. М. В. Егорова вĕсен сăнарĕсене мĕн виличченех асра тытнă.

Пĕрремĕш хут шкула эпĕ 1931 çулта вĕренме кайрăм. Ун чух шкул çурчĕсем те çитместчĕç-ха. Чи малтан пире Борис Терентьевич Полковников вĕрентрĕ. Кăнна Кушки ялĕнче çуралнăскер, кайран вăл мĕн ватăличченех Матак ялĕнче шкулта ĕçлерĕ. Эпир вĕренме пуçланă тапхăрта пурне те йывăр пулнă, вĕренӳ пособийĕсемпе учебниксем питĕ сахал пулнипе, 3-4 ачана пĕр кĕнеке анчах тиветчĕ. Вăл та пĕр ачаран тепĕрне черетпе çаврăнса çитиччен çуркаланса, вараланса пĕтетчĕ. Çырма тетрадьсем çуккипе кирлĕ мар кĕнекесен хушшинчи пушă вырăнсем çине çыраттăмăр. Çĕршыври пурнăç йĕрки улшăннă май учебниксемпе кĕнекесен ячĕсем те улшăнсах пычĕç. Шкулта вĕренекен кашни ачанах пĕчĕк хура «доска» пурччĕ (ăна хамăрпа пĕрле илсе çӳренĕ), ун çине грифельпе* çыраттăмăр, виçĕ класс пĕтеричченех çак «доскасемпе» усă куртăмăр. Иккĕмĕш класра (1932/33 çулсенче) пире Аслă Аксу çынни Тянюков учитель вĕрентме пуçларĕ, нумай вăхăт хушши те вăл ĕçлеймерĕ, ун вырăнне М. К. Евграфова килчĕ. Вăл Шăмăршă районĕнчен килнĕ Куприянов учителе качча тухрĕ. Пирĕн пĕлĕве «вуд», «уд», «нуд» паллăсемпе хак паратчĕç. Кивĕ Йĕлмелĕнчен килнĕ учитель Д. К. Пеньков тăваттăмĕш класра пире вĕрентрĕ, пĕрремĕш класс ачисене Анастасия Петровна Рахманова (Кивĕ Улхаш) вĕрентетчĕ. Вăл Никита Казаковсем патĕнче пурăнатчĕ.

1934 çулта пирĕн ялта çичĕ класлă шкул уçăлчĕ. Ун чухне ăна «неполная средняя школа» тетчĕç. 7 класс эпĕ 1938 çулта пĕтертĕм, çак вăхăтра тата çĕнĕ учительсем килчĕç. Д. И. Сибиряков кайсан директор ĕçне Я. Ф . Каргин пуçăнчĕ, унпа пĕрлех И. А. Алексеев (Хурăнвар), И. С. Захаров (Турхан Упи), И. А. Краснов (Турхан Упи), Семибратов (Аксубаево районĕнчен) учительсем килчĕç.

... 1943 çулхине январь уйăхĕнче пуçламăш класс учительне Васильева фронта илсе кайрĕç. Хĕллехи каникул хыççăн эпĕ ун вырăнне 3-мĕш класс ачисене вĕрентме пуçларăм. Çак вăхăтран пуçласа 1979 çулччен ялти шкулта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухрăм. Вăрçă çулĕсем

---

*Грифель - мел евĕрлĕ япала.

калама çук йывăр вăхăт пулчĕç. Апла пулсан та эпир пуçа усса ларман. Учительсем салтаксем валли ăшă чăлхасем, алсасем пухас тата агитациллĕ-массăллă ĕçсенчен пăрăнса юлман. Унсăр пуçне тата колхозниксемпе пĕр-танах уйра ĕçленĕ, ачасемпе хирте пучах та пуçтарнă. Вăрçă çулĕсенче халăха хавхалантарасси çинчен те манса кайман. Кашни эрнерех канмалли кун умĕн шкулта (клуб ĕçлеместчĕ) концертсем тата спектакльсем кăтартнă. Çак ĕçре Ф. Н. Казаков, Г. Селендюков. И. М. Денисов, О. М. Денисова, З. С. Сорокина, М. Г. Рыкина учительсем хастар пулнă. Вĕсем хутшăнмасăр ялта пĕр уяв та иртмен. Кунсăр пуçне çывăх вăрмана вутă касма та кайнă. 1943-44 çулсенче шкул директорĕ пулса И. М. Денисов ĕçлерĕ. Çав çулсенче Е. А. Самойлова завуч ĕçĕсене туса пыратчĕ. Кĕçĕн классенче вĕрентнĕ вăхăтрах пире учительсем çитмен пирки аслă классене вĕрентме тӳрĕ килетчĕ, эпĕ те географи, арифметика, биологи, хими, нимĕç чĕлхи предмечĕсене вĕрентрĕм.

1947 çулта ялти шкул учительне М. Н. Егорова качча тухрăм, Михаил Никифорович та ĕмĕрне шкулта ĕçлесеирттерчĕ. Аслă вăрçă участникĕ. 1985 çулта кĕтмен çĕртен вилсе кайрĕ.

## *Эпир ача чухнех ĕçе пуçăннă*

**(Александр Васильевич СИМУЛИН асаилĕвĕсем)**

Манăн асаттене Кĕркури тесе чĕннĕ, хут çине вара Василий тесе çырăннă. Вăл хăйĕн ĕмĕрне çĕр ĕçлесе ирттернĕ, 70 çула çитсе вилнĕ. Асанне Ульяна ятлă пулнă, вăл Чашкинсен йăхĕнчен. Вĕсен виçĕ ача çуралать: Маттĕрне, Елюк тата манăн атте - Василий. Икĕ хĕрĕ Пухтелне качча каяççĕ, Маттĕрне - Кузнецов Ваççана, Елюк - Шурбин Николая. Ульяна çамрăкла вилет, атте ун чухне икĕ çулта çеç пулнă. Кĕркури çав çулах тепре авланать, ку арăмĕнчен тата пилĕк ача çуралать: Микĕття, Хĕлип, Анук, Праска, Элексей. Вĕсен амăшĕ Никоноровсен йăхĕнчен пулнă.

Манăн атте Василий 1897 çулта çуралнă, 26 çула çитсен Энтип Çтапан хĕрне - Хвеклана (Антипова Фекла Степановна) качча илет. 1925 çулта эпĕ çуралнă, çулталăк çурăра чухне анне вăтăра çитеймесĕрех вилсе каять. Атте çав çулах тепре авланать, Энтип Миттюк хĕрне - Уçтинене илет (Антипова Устиния Дмитриевна). Уçтине малтан Антонов Ваççана качча кайнă пулнă, лешĕ тиф чирĕпе чирлесе вилет. Вĕсен пĕр ачи - 1921 çулта çуралнă Элексей кайран вăрçăра çухалнă. Аттепе Уçтинен тата ултă ача çуралаççĕ: Улька, Лидя, Петя, Маруç, Клавди, Елюк. Петя Донецк облаçĕнчи Макеевка хулинче пурăнать - вăл шахтăра ĕçленĕ. Улька 40 çул ытла Мускавра пурăнчĕ, халĕ Ульяновск хулине пурăнма куçрĕ. Ытти пĕртăвансем ялта пурăнаççĕ. Атте пурăннă çуртра халĕ Никифоров Василий пурăнать. Атте - Василий Васильевич 1915-16 çулсенче пĕрремĕш тĕнче вăрçине хутшăннă, революци хыççăн граждан вăрçинче çапăçнă. Вăрçă чарăнсан ялти чи йывăр ĕçсенче ĕçленĕ, колхоз йĕркелениччен Смоленцов Николай арманĕнче мельник пулса ĕçленĕ. 1935 çулта вăл колхоза кĕрет. Хуçалăхра та мельник ĕçĕсене тăвать, çав хушăрах пĕр вăхăт хушши кладовщик пулать. 1942 çулхи çуркунне аттене Кустов Миккулькkапа тата Макаров Эптюкпа

пĕрле вăрçа илсе каяççĕ. Пирвай вĕсене Мари Республикинчи Суслонгер ятлă станцине илсе каяççĕ. Кунта вĕсене çурма выçă усраççĕ, вăрман кастараççĕ, йывăр пĕренесене йăттараççĕ, чăтма çук нушалантараççĕ. Питĕ нумай çын çакăнтах, фронта каяймасăрах вилсе юлать. Кайран тин çынсене çакăн пек нушалантарнин сăлтавне пĕлеççĕ: кунти командирсем сутăнчăксем пулнă иккен. Суслонгертен аттене фронта ăсатаççĕ, вăл артиллери батальонне лекет. Шăпа ăна каярахпа Ленинград фронтне çитерет. Блокадăра пулса хулари халăхсемпе пĕр танах нушине тӳсет.

Берлина çитме инçе те мар юлсан вăл аманать, унăн урине осколок кĕрсе ларать. Госпитальте сипленнĕ хыççăн 1945 çулхи июнь уйăхĕнче киле таврăнать. Тĕрлĕ вăрçăсенче вăл пурĕ 9 çул çӳренĕ. Яла килсен малтанхи вăхăтра колхозра хуралçă пулса ĕçлерĕ, 1951-62 çулсенче хатĕрлевçĕ (заготовитель) пулчĕ. Юлашки çулсенче суранĕ канăç памастчĕ ăна. 1966 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнче çĕре кĕчĕ.

Манăн тăван мар анне Уçтине 1898 çулта çуралнă, 1992 çулта вилчĕ. Унăн амăшĕ Маттĕрне ятлă пулнă.

Эпĕ 1933 çулта шкула вĕренме кайрăм, пурĕ те 6-класлă пĕлӳ çеç манăн. Çамрăклах ĕçе кӳлĕнтĕм. Конюхра ĕçлерĕм, лашапа "ĂМКă" хыçĕнчен улăм пуçтараттăм, икĕ лаша кӳлсе жнейкăпа тĕш-тырă выраттăм, кĕлтисене хĕрарăмсем çыхатчĕç. 1942 çулхине кĕркунне декабрь уйăхĕнче Ульяновскри элеватора лашапа тырă турттартăм. Çав çулхи декабрь уйăхĕнче Шуркин Элексей тата Кудрявцев Петĕрпе пĕрле мана салтака илсе кайрĕç. Инçетри Хĕвелтухăçа лекрĕм, Уссури шывĕ хĕрринче чикĕ сыхлакан 352-мĕш стрелковăй полкра хĕсметре тăтăм. 1945 çулхи августăн 9-мĕшĕнче Япони çĕршывне хирĕç пыракан вăрçăра пултăм, Боацинь хулинчи çапăçăва лекрĕмĕр. Япони сентябрь уйăхĕнче капитуляци турĕ, октябрь уйăхĕнче эпир хамăр çĕршыва килтĕмĕр, Бикин ятлă хулана вырнаçрăмăр. Кунта пирĕн вырăна иккĕмĕш эшелон йышăннăччĕ, вĕсем страховкăра тăнă пулнă пулмалла. Вырăн çуккипе уйăха яхăн палаткăсенче пурăнтăмăр. Ноябрь уйăхĕнче пире Амур çинчи Комсомольск хулине илсе кайрĕç. 1946 çулхи май уйăхĕнче Владивостока куçарчĕç. Çакăнта хĕсметре тăтăм, 1949 çулхи август уйăхĕнче киле таврăнтăм.

1950-51 çулсенче тĕрлĕ япаласене пуçтаракан хатĕрлевçĕ пулса ĕçлерĕм. 1951-54 çулсенче ялта государство валли тырă илекен пунктра (ăна «глубинный пункт» тетчĕç) ĕçлерĕм, вăл Пăвари элеватор филиалĕ пулнă. Ун хыççăн тăхăр çул ялти лавккара сутуçă пултăм. Колхозра ферма заведующийĕ пулса ĕçлеме те тӳрĕ килчĕ.

Мăшăрпа Антонина Николаевнапа (унăн хĕр чухнехи хушамачĕ Афиногентова) 4 ача пăхса ӳстертĕмĕр: Зина, Витя, Елюк, Ванюш. Халĕ пирĕн 11 мăнук.

## А. КАЗАКОВ: *«Тепĕр пурнăç панă пулсан малтанхи йăнăшсене тӳрлетнĕ пулăттăм»*

Эпĕ 60 çул тултартăм, сисмесĕрех темелле. Пурнăç урапи шав

малаллах чупать иккен. Ёненес те килмест. Пĕр енчен пенсие тĕрĕс тĕкел кайнăшăн савăнатăп, тепĕр енчен - «старость - не радость» тени çÿçентерет кăштах.

... Пурнăçăн ытларах пайне эпĕ ачасене вĕрентсе ирттертĕм, пĕлÿ патăм, çавăнпа та сăмах ытларах çакăн çинчен пулĕ. Манăн ачалăхăм хаяр вăрçă çулĕсене тÿрĕ килчĕ. Эпĕ 1940 çулта 1-мĕш класа вĕренме кĕтĕм. 1947 çулта 31 ачаран 13 çеç 7 класс пĕтертĕмĕр. Тăлăха юлнă амăшĕсене, шăллĕ-йăмăкĕсене пулăшас тĕллевпе нумай ачасем вĕренме пăрахса ĕçе кÿлĕнчĕç. Вĕсен шкула çÿреме çимелли те, тумтирĕ те пулман. Аслă вăрçă пуçланнă çул эпĕ 1-мĕш класран вĕренсе тухрăм. Хальхи пекех лайăх астăватăп-ха çав çулхи июнĕн 22-мĕшне. Çав кун эпир Хурăнвар çырмине экскурсие кайма пуçтарăнтăмăр. Вăрçăччен манăн атте (Ананий Яковлевич) Çĕпрелĕнче райпотребсоюзăн хатĕрлев пунктĕнче директор пулса ĕçлетчĕ. Ирхине июнĕн 22-мĕшĕнче эпĕ тата тете пÿрте кĕрекен алăк патĕнчи чÿрече тĕлĕнче çывăрса выртатпăр. Паян экскурсине каяс шухăшпа манăн ирхине ыйхă килмерĕ, часрах шкула каяс килет. Ирхине, миçе сехетрине калаймастăп, эпир выртакан тĕлти чÿречерен такам шаккарĕ: "Анушка, Анушка, - терĕ вăл шăпрах сасăпа. - Эсĕ çывăратăн-и?" Атте çак сасса илтсе вырăн çинчен тăрса чÿрече патне пычĕ. Сасăран тÿрех чухласа илтĕмĕр: ку Никифор Егорович Егоров пулчĕ. Пиртен инçех те мар пурăнатчĕç вĕсем. Никифор Егорович райпотребсоюзра тĕп бухгалтер пулса ĕçленĕ вăхăтра аттепе куллен пĕрле ĕçе çÿретчĕç. «Анушка, начар хыпар. Паян вăрçă пуçланнă, радиопа пĕлтерчĕç», - терĕ вăл чÿрече витĕр пăхса хуйхăллă сасăпа. Атте çакна илтсен васкаса тула тухрĕ.

- Вăрçă пуçланнă вĕт, - тет мана тете çурăмран аллипе чыпса (вăл ун чухне 6-мĕш класра вĕреннĕ).

- Илтрĕм, - тетĕп эпĕ те хăрана сасăпа.

Атте тултан кĕрсен эпир илтмелле мар ерипен аннене темĕн çинчен каларĕ. Паллах, вĕсем нимĕçсем пирĕн çĕршыва вăрçăпа тапăнса кĕни çинчен калаçнă ĕнтĕ.

Ирхине тăрса апатлансанах пурĕпĕрех экскурсие каяс шутпа эпир шкула чупрăмăр. Шкула ачасем чылай пуçтарăнсан çакăнта ĕçлекен хĕрарăм пире хăй патне чĕнсе илчĕ те çапла каласа хучĕ:

- Паян вăрçă пуçланнă, учителĕре ирех военкомата чĕнтернĕ. Килĕре саланăр,- терĕ вăл.

Пире пуçламăш класра çырма, вулама вĕрентнĕ учитель фронтра пĕр хыпарсăр çухалчĕ.

Çав кунах пирĕн ялтан Тимофей Айметов (1905 çулхине çуралнăскер), Дмитрий Патрин (1907), Филип Рафиков (1905), Александр Вассияров (1908), Дмитрий Тарасов (1907) фронта тухса кайрĕç. Ун чухне вăрçа каякансене Пăрăнтăк станцине çитиччен лашапа ăсатнă, хуçалăхра урăх нимĕнле техника та пулман. Вĕсене пĕтĕмпех фронт валли тесе илсе кайнă.

1942 çул пуçлансанах сывлăх енĕпе япăхраххисене те çар ретне илме повесткăсем пама пуçларĕç. Майăн 20-мĕшĕнче аттене те çавнашкал хут пачĕç. Çав кун тетепе иксĕмĕр аттене ăсатма хальхи П. Албутов

пурăнакан пўрт тĕлне çитиччен урапа çинче ларса пытăмăр. Сатуркка-на каякан çул çине çитсен пире атте хăй патне йăтса илсе питрен чуп туса ыталарĕ те çапла каларĕ:

- Халĕ эсир киле кайăр, эпĕ вăрçăран таврăннă çĕрĕ пысăк пулăр, аннĕре итлĕр.

Сывпуллашнă хыççăн Сатуркка еннелле лашине чуптарсах кайрĕç. Анне пĕрле ларса кайрĕ. Сăмах май каласан, Григорьева Евдокия Ефимовна, 1903 çулта Алешкин Саплăк ялĕнче çуралнăскер, çăмăл пурнăç пурăнса ирттермен. Çамрăклах тăлăх ўснĕ, сахал мар нуша курнă. Вăрçă çулĕсенче ырми-канми ĕçленĕшĕн ăна «1941-1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медаль парса чыс тунă.

Каçсерен пĕлĕт çинче ярăнса çўрекен прожектор çути ялкăшса илсен пĕтĕм таврана çутатса илетчĕ (оборона линийĕ иртнĕ çак вырăнсенче, окопсем чавнă унта). Каç пулсанах эпир чўречесене хупса лартнă, çутă курăнма юраман; йытăсем вĕрсе сасă ан паччăр тесе вĕсене те витесене хупса лартнă.

Вăрçă çулĕсенче пире А. В. Васильев учитель вĕрентрĕ. Вăл Аслă Аксу ялĕнченччĕ, пирĕн патăрта хваттерте пурăнчĕ. 1943 çулта ăна вăрçа илсе кайрĕç. Сталинград патĕнчи çапăçура вилни çинчен унăн шăллĕ хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ пире. Унăн пур-пек япалисене пирĕн патăртан илсе кайма пуçтарсан, Степан Васильевич йĕрсе çапла каласа хучĕ: «Урăх кунта килес çук ĕнтĕ вăл».

Ун хыççăн пире А. П. Егорова вĕрентрĕ. Халĕ вăл пенсире. Вăрçă пуçланнă çулта шкул директорĕ пулса Хулаçырминче çуралса ўснĕ И. Л. Исаев ĕçлерĕ, ăна фронта илсе кайсан пĕр вăхăт хушши П. Д. Чебанов (Куршанкă Шăхаль ялĕнче çуралнăскер) шкул коллективне ертсе пычĕ. И. М. Денисов шкул директорĕнче 1950 çулччене х ĕçлерĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче батарейкăпа ĕçлекен «Колхозник» ятлă радиоприемник ялĕпе те пирĕн касăри Н. Е. Егоровăн кăна пурччĕ. Каçсерен унăн килĕ умне халăх йышлăн пухăнатчĕç. Çавăнта пухăннисенчен çакна илтме пулатчĕ: «Паян çак çынсем вилни çинчен хыпар килнĕ, çав çынсем аманнă».

Аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсем пирĕн таврара та хытă палăрчĕç. Арçынсем фронта тухса кайрĕç. Паттăрла çапăçса вилнисем çинчен хутсем килсех тăчĕç. Манăн атте хыпарсăр çухални çинчен те хыпар килчĕ. Хуйхă çине хуйхă. Мĕнпур йывăрлăх ачасемпе хĕрарăмсем, вата çынсем çине тиенчĕ. Ун чухне эпир, 11-12 çулхи ачасем, лаша кўлсе хĕл кунĕсенче хиртен кĕлте турттараттăмăр. Çав вăхăтрах шкула та вĕренме çўреттĕмĕр. Аслăрах класра вĕренекенсем лашасемпе тата вăкăрсемпе çĕр сухалатчĕç. 1944 çулта ĕçмелли-çимелли пулманнипе выçăпа вилекенсем те пулчĕç. Вĕлтĕрен, серте, пултăран, уткăшкар, пиçен çулçисенчен шўрпе пĕçернĕ, ун çине кăштах сĕт ярса шуратнă. Вăл вăхăтра ялти пасарта пĕр пăт çăнăх 2000 тенке, пĕр пăт çĕр улми 600 тенке çитнĕччĕ. 1947 çулта та лару-тăру йывăрччĕ-ха. Выçлăх, чухăнлăх. Манăн та Ульяновскри чăваш шкулне вĕренме каяс ĕмĕт путланчĕ. 8-10 классене Хурăнварти вăтам шкулта вĕренме тўр килчĕ. Шкула Федя

Прохоровпа иккĕн çеç çӳрерĕмĕр (халĕ вăл ял Советĕнче бухгалтер пулса ĕçлет), ыттисем 7 класс пĕтернĕ хыççăн ниçта та каяймарĕç.

Хурăнварта вĕреннĕ çулсем те çăмăл пулмарĕç. Укçалла тытнă хваттерте пурăннă, çимеллисене килтен илсе килнĕ. Тăхăнмалли те япăх пулнă, вĕренмелли хатĕрсем те çитмен. Саккăрмĕш класра 30 яхăн вĕренекен пулнă пулсан, вуннăмĕш класран пурĕ те 14-ăн çеç вĕренсе тухрăмăр. Малалла вĕренме кайма укçа-тенкĕ те, тумтир те пулман. Çавăнпа та эпĕ 10 класс пĕтерсенех учитель ĕçне кӳлĕнтĕм, пединститута заочно вĕренме кĕтĕм. Нушаланса та пулин пĕтертĕм ăна.

Эпĕ шкулта ĕçлеме пуçлани 43 çул тулчĕ. Çак иртнĕ тапхăр çинчен пĕтĕмлетсе мĕн калама пулать-ха?

Пурнăç çулĕ асаплă та тертлĕ, хĕн-хурлă пулнă тесе калас килмест манăн, анчах пурнăç çулĕ çинче йывăрлăхсемпе чăрмавсем пулман мар. Нихăçан та çăмăл ĕç шыраман, пысăк укçа илĕртмен мана, мĕн пуррипе çырлахнă, тĕрĕслĕхпе пурăнма тăрăшнă. Çынна хирĕç киревсĕр ĕç туман. Мухтава тивĕçлĕ ĕçленĕ тесе те мухтанаймастăп, çавах лайăххах ĕçлеме тăрăшнă. Манăн пурĕ те "Ветеран труда" медаль тата темиçе Хисеп грамоти çеç пур. Эпĕ вĕсемпе тивĕçлипе савăнатăп, мĕншĕн тесен вĕсем манăн ĕçе тивĕçлипе хакласа панисем.

Обществăлла ĕçре те активлă хутшăнма тăрăшрăм. 10 çул ытла колхозри «Малалла» хаçат редакторĕ пулса ĕçлерĕм. Ял, шкул, чиркӳ, колхоз историйĕсене тĕпчесе материалсем пухса хатĕрлерĕм. Вĕсенчен чылайăшĕсем хаçатсем çинче пичетленчĕç. Хальхи вăхăтра Ульяновск облаçĕнчи чăвашсен культура обществин ялти пуçламăш организацине ертсе пыратăп.

Эпĕ вĕрентсе кăларнă ачасенчен ĕçре паларнă çынсем нумай, çакă та мана савăнтарать. Вĕсем çинчен манăн аса илсе çырма кăмăл та пур. Ĕçре, пурнăçра, паллах, çитменлĕхсемпе йăнăшсемсĕр пулмастех. Вĕсене май килнĕ таран çиййĕнчех пĕтерме тăрăшнă, юлнисем те пур-тăр. Тепĕр пурнăç панă пулсан, тунă йăнăшсене пĕтĕмпех тӳрлетнĕ пулăттăм. Анчах кирек кам та çĕр çинче пĕрре çеç пурăнать. Çавăнпа та шухăшлама пĕлекен кашни çынах çĕр çинче ырă ят хăварма тăрăшать. Çакăншăн пурăнмалла та.

**Калаçăва 1995-мĕш çулта çырса илнĕ.**

# XI. Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи халап-юмахсемпе такмаксем

**(А. А. Казаков, Н. Н. Ларионов, Н. А. Казаков, П. С. Быков пухса хатĕрленĕ.)**

## Исентей тĕне кĕни

Сармантейĕн сар чăххи
Сар çăмарта тунă, тет.
Исентейĕн арăмĕ,
Сар хĕр çуратнă, тет.

Сар хĕр пит хăвăрт ÿсет,
Ак, вун çиччĕ çул тулать.
Ашшĕ çеç нуша тÿсет -
Хĕр ăспа çынран юлать.

Çак юратнă савнă хĕр
Шав вутпа вылянă, тет.
Кÿршисене мĕншĕн-тĕр
Чĕртеспе хăратнă, тет.

Кÿршисем ун ашшĕне
Уншăн питĕ вăрçнă, тет.
Исентейĕ хăй хĕрне
Шелленипе тÿснĕ, тет.

Каç пулсан пĕррехинче
Çуталать йĕтем варри.
Сарă хĕр - вут патĕнче,
Çавăнтах - çапман тырри.

Çилĕпе çак Исентей
Пăтари пушша тупать.
Çаптарса илсе хĕрне
Мунчана кайса хупать.

Савнă хĕрĕ - сар пике
Мунчара выртса вилет.
Пытармашкăн Виçчике
Исентей лаша кÿлет.

Пĕлтермесĕр ял-йыша
Çул тытать вăл Виçчике.
Çĕрепех пуль тăрмашать,
Шăтăка чавса чикет.

Вăхăт иртет, сисĕнмест,
Исентейĕн хĕрĕ çук.
«Ĕненессĕм те килмест»,-
Уласа йĕрет хăш чух.

Сар хĕре çĕр айĕнчен
Ял çынни чавса тупать.
Исентейĕн умĕнче
Ял-йыша чĕнет, пухать.

Амăш тухрĕ çын çине,
Сăнаса пăхать хĕре.
Хăй тĕрленĕ кĕпине
Палласан ÿксе йĕрет.

Вулăсри уретнĕк, ак,
Исентее чĕнтерет:
«Мĕншĕн-ха эс тăр-ухмах?
Ăсататăп Çĕпĕре!

Айăпушăн эп сана
Нихăçан каçарас çук.
... Тĕне кĕр те паянах...
Каçарма пулать ун чух.

Каяс çук инçе çула,
Чун туртмасть сив Çĕпĕре.
Хăйĕн айăпне пула
Исентей тĕне кĕрет.

## Пулмасан чеелĕх - пулмĕ сан телейĕ

Çĕн Йĕлмел вăл пысăк ял,
Темĕнле çынсем те пур.
Пур пуянĕ - чаплă ят,
Кăшт çукраххисем те пур.

Вун тенкĕлĕхсем парса
Кĕçтук ашшĕне суять.
Мĕнпурне улăштарсан
Кĕç Эрхип пичче пуять.

Ашшĕ Чари Кĕçтукĕн
Улпутсем патне пырса
Ыйтнă: «Эпĕ - ĕçлекен,
Илĕр-ха мана тарçа».

Вăхăчĕ иртет нумай,
Хай улпут укça çинчен
Ас илет те: «Ай-ай-ай,
Çук укçа вырăнĕнче».

Тарçăра ĕçленĕ чух
Кĕçтук ашшĕ мĕн курать:
Унăн хуçи, хытă чун,
Укçа пытарса хурать.

Виçĕ лашине кўлсе
Çитрĕ вăл Йĕлмелне.
Чуптарса пырса кĕрсен
Кĕçтуксем патне килет.

Мĕн тăвас-ха укçапа?
Пĕлнĕ вырăнта выртать.
Чăтрĕ, чăтрĕ, çук, çапах
Укçана вăл йăкăртать.

Турăш хыçнелле тўрех
Вăл пăхать пуçне пăрса.
Кĕçтук: «Халь аттесĕрех,
Тен, юлатпăр, - тет, - тăрса».

Пĕр кĕсье укçа чиксе
Вăл кунтан тухса тарать.
Йĕлмелне тăрать çитсе,
Лавккана кайма хăрать.

Ывăл укçана тупать,
Пурпĕрех те хăратмасть.
Алăкран тухса утать,
Ытти укçине ыйтмасть.

Хисепе пачах пĕлмест,
Аптăрать: «Ку укçана
Халь парам-ши мĕн илме?
Кăтартам-ха пĕр çынна».

Çĕклемест вăл аллине,
Пĕр сăмах та каламасть.
Ырă çын кайма килне
Тухса ларчĕ. Шарламасть...

Темиçе çĕр тенкĕлĕх
Кăларса Эрхип умне
Кăтартма хурать: «Лĕх-лĕх», -
Пытарать леш куллине.

Кĕçтук ашшĕн чеелĕх
Çук, вăл чухăн пурăнать.
Пулмасассăн телейĕ -
Çапла ăн шыра ăна.

## Вăйçă Кирукпа Шуйттан

Тукасра, măн урамра,
Çын нумай шав курăнать.
Пăхма начар мар сăнран
Кирук-вăйçă пурăнать.

Унăн хăма купăсĕ
Шăпчăк пек çинçе юрлать.
Пит илемлĕ кĕввисем -
Ялăн халăхĕ ырлать.

Пысăк, аслă туйсенче
Хăма купăспа калать.
Чаплă хăна умĕнче
Хăйне хавас тыткалать.

Çын телейлĕ-ха хăйле,
Пĕр телейсĕр те пулать.
Вăйçă-Кирука темле
Тамаша, ак, çулăхать.

Çурçĕр варринче пĕрре
Шухăшсăр çапать ыйха.
Тройка кĕç яла кĕрет -
Ырлăха-и хурлăха?

Çын, çуна çинчен анса,
Чӳрече патне пырать.
Пуш аврипе шаккаса,
Кирука туя йыхрать.

Тумланать тăрса Кирук,
Тăрантас çине ларать.
Тройка хускалать тăрук,
Туй ăна кĕтсе тăрать.

Васкаса туя çитсен
Вăйçă выранне ларать.
Купăс каласа, пиçсе
Хăнана савăнтарать.

Купăс туртса ывăнсан,
Кирука тулли черкке
Тыттарса калаççĕ: «Сан
Паю ку, эс те лĕркке».

Ёненет Турра Кирук,
Черккене ĕçес тесе
Сăхсăхать те, ак, тăрук -
Кайрĕ çурăм çӳçенсе.

Çут çанталăк улшăнать,
Халăх куçран çухалать.
Вăл курать шур Шуйттана -
Ак, кам ăна улталать!

Кирук ларать çырмара,
Аллинче ун сивĕ пăр.
Урисем сивĕ шывра:
«Вакă вĕт ку. Пулăшăр!»

Кам сана çĕр варринче
Çырмана çăлма анать?
Хăвартрах тăр пăр çинчен,
Ан ĕнен мур-Шуйттана.

Хай чупать Кирук килне
Арăмне курсан чĕнет.
«Эсĕ кам? Сана пĕлмеп», -
Арăмĕ йăлт тĕлĕнет.

Арăм çумĕнче выртсан,
Тин Кирук кăшт ăшăнать.
Çывăрса ирпе тăрсан:
«Тĕлĕк çеç», - тет. Лăпланать.

Вăхăт кăшт иртсен, каллех
Кируксен хапхи умне
Чарăнать пырса çĕрле -
Никам та пĕлмест камне.

Кантăкран шаккать патак,
Кирука тухма чĕнет:
«Кайрăмăр туя татах».
Тăрантас ăна сĕнет.

Ак, ларать Кирук туйра,
Вылятать хăй купăсне.
Халăха савăнтарать,
Нимĕн те килмест асне.

Ташă-кĕвĕ чарăнсан,
Тыттараççĕ пĕр черкке:
«Пыră типрĕ пулĕ сан,
Яр ĕçсе веç, шĕвĕркке!»

Кирук вăйçă сăхсăхать,
Веç ĕçме хатĕрленет.
Çухалаççĕ йăлт. - Пăхать -
Картара вăл. - Тĕлĕнет.

Аллинче каллех шăн пăр:
«Кам карти-ши ку тата?
Вăрă тейĕç. Кирук, тăр,
Пултарать лекме патак».

Вăл хăйне çапла хушса,
Сурăх çумĕнче тăрать.
Юлчĕ Шуйттан çуйхăшса,
Килнелле Кирук тарать.

Арăм алăка уçать,
Нимĕн Кирук каламасть.
«Эс ăçта çӳрен, хуçа,
Шап-шур юр, çук паллама».

Темиçе хут, ак, çапла
Вăйçă Кирук аптăрать.
Парăнать вăл усала.
Савăнать Шуйттан, ташлать.

Хăма купăс усала
Илĕртет-ши? Кам пĕлет.
Кирук çўçĕ шуралать,
Канăçлăх, телей пĕтет.

Ан тустарăр пуçăра,
Айăпĕ веç - вăйçинче.
Юратса эрех-сăра,
Шутсăр ĕçнĕ туйсенче.

Туйсенче çўре-çўре,
Аншарли ĕçе-ĕçе,
Вăйçă кайнă шур чире.
Шуйттанпа халь хирĕçет.

Е чăнах, е шўтлесе -
Ял çинче чапа тухать.
«Курнă эп Шуйттан» - тесе
Калаçса çынсемпе мухтанать...

Тытăнать патша вăрçи,
Çухалать Кирук çарта.
Çĕн Йĕлмелти туй вăйçи
Пурпĕрех асăмарта.

Ку истори те вĕçне
Çывхарса, пĕтсе пырать.
Арăмĕ ун купăсне
Кўршине сутса ярать.

## Вăрçă вăхăтĕнчи такмаксем

Эпир каяс çул çинче
Пĕлĕтсĕр çумăр çăвать.
Германи пульли çăвать,
Асатăр - кам ыр сунать.

Чакак чавать, çĕр чавать,
Чакак чавас çĕр марччĕ.
Гитлер вăрçи пулмасан
Капла çўрес çын марччĕ.

«Ах», тесе ыванниле
Çерем çине лартăмăр.
Чăтма çук йывăр хуйхă
Вăрçă пирки куртăмăр.

Макăрмастăп, хурланмап,
Чĕрем çиреп, чун чăтать.
Гитлер пуçне тĕп тума
Алла тытрăм автомат.

Аттине тăхăнчĕ пуль,
Шинельне пĕркенчĕ пуль,
«Тусăм, сыв пул», - терĕ пуль,
Вăрçа кĕрсе кайрĕ пуль.

Гитлер патша - сăмахшеччи,
Кĕчĕ пирĕн çĕр çине.
Вун çиччĕри атьсене
Хучĕ хура çĕр çине.

Нихăçан та манас çук
Хĕрĕх пĕрмĕш çулхине.

Ман юлташ пуçне хучĕ
Германи çĕрĕ çинче.

Пуйăс хăçан килĕ-ши
Хура тĕтĕм кăларса?
Атте хăçан килĕ-ши
Гитлера парăнтарса?

Ав, килеççĕ тракторсем
Пысăк урапаллисем.
Çаксем ĕнтĕ вăрçăра
Нуша куракансем.

Çĕпреленчен салтак килет
Шинелĕпе пĕркенсе.
Манăн савни юлчĕ, тет,
Хура çĕрпе витĕнсе.

Ту тăрринче - машина,
Ту айĕнче - танкă.
Манăн савни партизан,
Хам та партизанка.

Паттăр каччă вăрçăра
Хĕç-пăшалпа илтерет.
Ун савниййĕ колхозра
Маттур ĕçпе çĕнтерет.

Кашкăр хытă чупсан та
Самолета çитес çук.
Тем пек хытă урсан та
Гитлер пире çĕнес çук.

Вăрçăра пулман, сисмен
Пуçа пуля лекнине.
Тăшман амантнă суранран
Курман юнăм юхнине.

Вăрçăра пулман, курман
Умра снаряд çурнине.
Çумри юлташ ахлатса
Çĕр çине йăваннине.

Эп курнă салтаксене
Вăрçăра хĕн хур тÿснисене.
Унта аманнă, сурансем
Вилĕме çывхартнине.

Курнă çамрăк каччăсем
Вăрçа епле кайнине.
Цинкпа витнĕ тупăксем
Тăван яла килнине.

Эпĕ илтнĕ аннесенчен
Çак вăрçа ылханнине.
Сухалнă çыннисемшĕн
Вырта-вырта йĕнине.

Гитлер авланасшăнччĕ,
Ак, авланчĕ вăл тинех.
Вĕçĕ-хĕррисĕр урчĕ,
Шăпи тулчĕ ун тинех.

* * *

Аса ил-ха, тусăм,
Вăрçă вăхăтне,
Çухатман, тăванăм,
Пур чысăрсене.

Эсир мĕн курман-тăр
Вăрçă хирĕнче?
Сахал мар шăнман-тăр
Сивĕ юр çинче.

Сив çумăр лÿшкенĕ,
Сире хĕрхенмен.
Вичкĕн çил лăсканă,
Пĕртте шеллемен.

Мĕн чул çĕр чавман-тăр
Вилес мар тесе.

Мĕн чул юн тăкман-тăр
Çĕнтерес тесе.

Аса ил-ха, тусăм,
Вăрçăри çула,
Кăвакарчĕ çÿçĕ
Çак вăрçа пула.

Ватăлтăмăр тесе
Ан хурлан-ха тек.
Ан ахлат-ха хыттăн
Начар салтак пек.

Вăрçă вучĕ сÿнтĕр,
Курас марччĕ тек.
Кирлĕ пулсан, пĕлччĕр -
Хатĕр эпир яланах
Çĕршыва сыхлама.

* * *

Сике-сике шыв юхать.
Пулли ăçта тăрать-ши?
Вăййа тухман хĕрĕсен
Чунĕ ăçта тăрать-ши?

Ай-хай пахча илемлĕ
Шур купăста пур чухне.
Ай-хай хĕрсем илемлĕ

Хĕрлĕ сăнĕ пур чухне.

Икĕ кукук, пĕр карăш
Авăтаççĕ пĕр харăс.
Ик кас хĕрĕсем пĕр пулса
Сăвă калаç пĕр харăс.

*(Хĕрсем пуçтарăннă чухне юрланă юрăран).*

## Салтак юррисем

Хулари пусăсем, ай, пит тарăн,
Сăнчăр ярса сăнчăр, ай, çитес çук.
Эпир каяс çулсем, ай, пит инçе,
Çыру çырса çыру, ай, çитес çук.
Эп каймăттăм Çĕпрел, ай, приемне*
Шур хут çине çырнă, ай, ятăм пур.

Хурăнлăхпа иртсе эп пынă чух
Хурăн çулçи ӳкрĕ, ай, пуç çине
Вун саккăра çитсе эп пынă чух
Салтак нуши ӳкрĕ, ай, пуç çине.

Сар кăвакал чĕпĕ, ай, кăларать
Шыв-шур тăрăх ишсе, ай, çӳреме.
Атте-анне пире, ай, çуратать
Тĕнче тăрăх йĕрсе, ай, çӳреме.

Кĕленчерен хӳме эп хӳтертĕм
Хӳтертĕм те ишсе эп хăвартăм.
Çĕнĕ Йĕлмел хĕрне эп тус турăм,
Тус турăм та тăратса эп хăвартăм.

Аталăн варринче улма йывăç,
Çав улма йывăçăн, ай, мĕн хуйхă, -
Улми шыва каять, ай, çав хуйхă
Пирĕн ял-йышсене, ай, мĕн хуйхă, -
Ачи тухса каять, ай, çав хуйхă.

Сирĕн кăмакăрсем сакăр кĕтес -
Шуратса хăварас кăмăлăм пур.
Хамăр килтен тухса эп кайнă чух
Юрласа хăварас кăмăлăм пур.

Атте, ларт пурттуна пукан çине,
Анне, ларт пăттуна сĕтел çине.
Анне, ма пĕçертĕн, ай, вир пăтти
Самуй сар çу пĕтнĕ, ай, вăхăтра?
Атте, ма çуратрăн, ай, ывăлна
Самуй нуша килнĕ, ай, вăхăтра?

**Хушса юрламаллисем:**

Акăнать - тăкăнать тулли пучахĕ.
Иртет иккен çамрăк вăхăчĕ.

Мĕн пур тăван пырăр ăсатма -
Çак çеккунтра тухса каймалла.

Ан йĕрĕр-ха чунран таталса, -
Час килетпĕр киле çаврăнса.

---

*Прием - военкомат.

Вĕçтерсе яр шурă тутăрна,
Юрласа яр ăшна пусарса.

Вĕçет иккен вĕçен кайăкĕ,
Иртет иккен çамрăк вăхăчĕ.

Çĕнĕ çуна турăм ларса кур, -
Ял-йышран уйрăлатпăр, курса юл.

Хура чĕкеç килет юр кайсан, -
Эпир час килес çук пĕр кайсан.

Çут сăмавар вĕрет кăмрăксăр, -
Çамрăк ĕмĕр иртет вăхăтсăр.

Военкомат пусми авăнать,
Авăнма мар хуçăлса анать.

## Киремет турă умĕнче каламалли кĕлĕ

Эй, аслă Киремет, паян çак хура халăхпа пуçтарăнса, эс çитĕнтернĕ тыр-пултан ĕçмелли-çимелли хатĕрлесе, Сана хисеплесе тата ырă сунса уй-чӳкне пуçтарăнтăмăр;

Эй, Турă, çак хура халăхпа пуçтарăнса уй-хире çичĕ тĕрлĕ тыр-пул акса хăвартăмăр. Çав тыр-пула шăтса тухма ăшшине-нӳрĕкне парсамччĕ. Шăтса тухсан ешерсе çитĕнсе пĕрчисем пăрça пек шултра пултăрччĕ. Пĕр пĕрчĕрен пин пĕрчĕ шăтса ӳстĕр. Тата çав тыр-пула аça-çиçĕмрен, вут-кăвартан, çил-тăвăллă пăрлă çумăрсенчен, ирхи тăмсенчен, кăнтăрлахи шăрăхсенчен, арлансенчен, шăшисенчен, усал çынсенчен сыхласа усрасчĕ;

Эй, Турă, тыр-пула пуçтарса илме халăха вăй-хăват парсамччĕ;

Эй, Киремет, тыр-пула çĕмеле хывма перекетлĕх парсамччĕ;

Эй, Киремет, çĕмелтен капана хывма перекетлĕх парсамччĕ;

Эй, Киремет, капана кĕлете кӳртме вăй-хăват парсамччĕ;

Турă, кĕр мăнтăрĕпе пыл-сăра тума перекетлĕх парсамччĕ. Çав пыл-сăрапа çамрăксене пĕрлештерсе çемье тумалла пултăрчĕ. Çитес çул вара çак чӳклемене мăшăрупа килмелле пултăрччĕ;

Чӳклемерен чӳклемене ырлăхпа сывлăх хушшинче пурăнар;

Турат çумне турат хушăр;

Пус çумне пус хушăр;

Мул çумне мул хушăр;

Йӳçĕ пурăнса ырă калаçмалла пултăр;

Виçĕ тĕслĕ тырра виçĕ кĕлетре усрамалла пултăр;

Арман чӳлĕ витĕр кăларнă çăнăх-кĕрпе перекетлĕ пултăр;

Виçĕ тĕслĕ выльăх-чĕрлĕхе виçĕ картара усрамалла пултăр;

Ача-пăчаллă пулăр;

Сак тăрăх сакăр ывăл чупчĕр;

Урам тăрăх ултă хĕр утчĕр;

Тĕпеле кин кĕртмелле пултăр;

Тепĕр çул уй-чӳкне ывăлăпа кинĕр, хĕрĕрпе кĕрӳшĕр килмелле пултăр...

**(Çак кĕлле Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче пурăнакансем 1921 çулта уй-чӳкĕнче каланă.)**



# XII. Ялти тĕрлĕ вăхăтри культура хыпарĕсем

## Авалхи йăла-йĕркесене манас марччĕ

Кашни ялтах вилнĕ çынсене пытармалли вырăн пур. Вăл - масар. Çимĕк кунĕ умĕн, çулталăкра пĕрре, хăйсен вилнĕ ашшĕ-амăшĕсене, аслашшĕ-асламăшĕсене асăнма пуçтарăнаççĕ ял çыннисем çак вырăна. Малтанах вĕсем вил тăприсене тирпейлеççĕ.

Ирхине, масар çине кайиччен, ялти чиркĕве кайса вилнĕ тăванĕсене асăнма илсе каймалли апат-çимĕçĕсене «тасаттараççĕ». Масарăн хĕвеланăç енчи пушă çереме халăх пуçтарăнать. Иван атте священник кĕлĕ ирттерет. М. В. Евграфова, Т. И. Мулякова, А. П. Кудрявцева, О. Н. Быкова, Е. И. Патрина, М. П. Самойлова «Трепник» çине çырнă йĕркесене вулаççĕ. Е. П. Карсакова просвир пĕçерсе килнĕ.

Çакăн хыççăн çынсем ратни-ратнипе пĕрлешсе çерем çине лараççĕ. Пĕр-пĕрне илсе килнĕ çимĕçсемпе, эрех-сăрапа хăналаççĕ. Асăнма тытăниччен пуринчен те ватăраххи ура çине тăрса вилнисен ячĕсене вуласа парать. Илсе пынă апат-çимĕçе, эрех-сăрана веçех ĕççе-çисе

яраççĕ. Кăнтăрла иртсен халăх килĕсене саланать.

Масар - сăваплă вырăн. Унта яланах таса та тирпейлĕ пулмалла. Шел пулин те, эпир хăш-пĕр чухне çакăн çинчен манса каятпăр. Масар хĕррипе йывăçсем, вил тăприсем çине чечексем лартса ӳстерсен çак сăваплă вырăн пĕлтерĕшĕ татах та çирĕпленĕччĕ.

Тепĕр кунхине, вырсарникун, çамрăксем урама Аслă çереме тухса Çимĕк юррисене юрлаççĕ. Ĕлĕкрех ку йăла питĕ анлăн саралнă пулнă, ялăн тĕрлĕ кĕтессисенче юрă-кĕвĕ янăраса тăнă. Çамрăксем çак йăла-йĕркесене çĕнĕрен чĕртсе ярсан аван пулĕччĕ.

## Çĕнĕ йăла çурални

Ульяновск хулинчи Туслăх çуртĕнче Тутарстан Республикинчи Çĕпрел районне кĕрекен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче пурăнакансен (Ульяновска куçса килсе тĕпленнĕ ентешсен) тĕлпулăвĕ пулса иртрĕ. Унта пулнисем пĕр-пĕрне хăйсем çинчен каласа кăтартрĕç, иртнисене аса илчĕç, пуласлăх çинчен канашларĕç, дискусси турĕç, чăвашла юрăсем юрларĕç, ташларĕç.

Тĕлпулура йĕлмелсем çĕртешлĕх* туса хуни çинчен пĕлтерчĕç. Малашне вĕсем унта пĕрле пухăнса ял историне тишкерĕç, çывăх вăхăтра унăн уставне туса хатĕрлеме килĕшсе таталчĕç. Çирĕплетсе регистрациленĕ хыççăн устав вăй илет. Çĕртешлĕхе «Ильмово» («Йĕлмел») ят пама йышăннă. Унта тухса калаçакансем Н. Ларионов, Н. Казаков тата Н. Патшеев пулчĕç.

**(1994).**

## Обществăн çĕнĕ пуçламăш организацийĕ

Йĕлмелĕнчи вăтам шкулта И. Я. Яковлев ячĕллĕ Ульяновскри чăвашсен культурăпа çутĕç обществин пуçламăш организацийĕ йĕркеленчĕ. Учительсемпе пĕрле аслă классенче вĕренекенсем те общество членне кĕчĕç. Вĕсенчен активлăраххисене обществăн «К. В. Иванов. 1890-1915» значокĕсене парнелерĕç. Наградăланисен хушшинче - П. Н. Егоров шкул директорĕ, П. В. Мадуров, П. И. Рафиков, Н. П. Мулеев учительсем, П. В. Вассияров, М. К. Николаев, Л. В. Вассияров вăрçăпа ĕç ветеранĕсем, Андрей Лянкин, Оля Терентьева, Таня Кузнецова, Анатолий Амосов вĕренекенсем тата ыттисем те.

Обществăн пуçламăш организацине ертсе пыма А. А. Казакова, унăн çуммине Н. Н. Албутова суйланă.

**(«Канаш» хаçат, 1994.)**

---

*Çĕртешлĕх - землячество.



## Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи чăваш фольклорĕ

Фольклор ушкăнĕ, тĕпрен илсен, аслă классенче вĕренекенсенчен тăрать . Ăна йĕркелекенĕ - Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкул учителĕ Н. П. Мулеев.

Шкулти уявсенче, Культура çуртĕнче ял халăхĕ умĕнче сахал мар концерт кăтартрĕ чăваш фольклор ушкăнĕ. Ăна кашнинчех ăшшăн кĕтсе илеççĕ куракансем: аслисем те, ачасем те. Вăл çывăхри шкулсенчи художество пултарулăх коллективĕсен смотрĕнче çĕнтерне, районта ирттернĕ уявсенче куракансене савăнтарнă, çапла вара творчество пусми тăрăх çӳлелле çĕкленнĕ, ăнăçусем тунă.

Н. Мулеев ертсе пыракан ушкăн кӳршĕллĕ ытти ялсенче те концерт кăтартнă. Вĕсене Ульяновск облаçĕнчи Чăвашкасси ялĕнче çуллен пулса иртекен И. Я. Яковлев Кунне те йыхравланă. Кăçал пĕрремĕш хут Ульяновск хулинче Çĕнтерӳ паркĕнче пулса иртнĕ чăвашсен Акатуйне хутшăннă.

Фольклор ушкăнĕ хăйĕн программине çĕнетсех пырать. Çакă унăн членĕсене çирĕп пĕтĕçтерсе тăрать, ачасен чĕринче пĕрлĕх туйăмне çуратать. Фольклор ушкăнĕн руководителĕ Н. Мулеев ачасен пултарулăхне аталантарассишĕн чунне парса ĕçлет, вăхăтне хĕрхенмест. Çаплах Ульяновскри И. Я. Яковлев обществи ирттерекен тĕрлĕрен мероприятисене те хутшăнма ĕлкĕреççĕ вĕсем.

**(«Çĕнĕ çул» хаçатран, 1991.)**

Вулакансене "Йĕлмел" фольклор ушкăнĕ çинчен çырнă тĕрленчĕкпе паллашма сĕнетĕп. Автор ертӳçисене Н. П. Мулеевпа Н. Макаровна халалласа 1993 çулта çырнă.

## Юрри-ташши - чĕре ăшши

Çĕнĕ Йĕлмелне мана ял çыннисемпе кайма тӳр килчĕ. Машина кузовĕ çине хăпарса ларсанах калаçăва ватă çын пуçларĕ.

- Хуларан, ывăл патĕнчен таврăнатăп.
- Эпĕ кӳршĕ ялтан (унта качча кайнă та) яла васкатăп.
- Виçĕ уйăх ĕнтĕ ялта пулманни,- терĕм эпĕ те калаçнă май.

Машина ҫинче ларса пыракансем савӑнӑҫлӑ хыпар пӗлтерчӗҫ. Паян каҫхине шкулта вӗренекенсем ял ҫыннисем валли концерт кӑтартассӗ иккен.

«Йӗлмел» фольклор ансамблӗ ҫинчен эпӗ илтнӗччӗ пӗррехинче, «Ҫӗнӗ ҫул» хаҫата вуласа пӗлтӗм. Анчах та ачасен пултарулӑхне халиччен хам куҫпа курманччӗ-ха.

Акӑ, чаршав умне Наталья Макарова тухрӗ. Вӑл пухӑннисене саламларӗ.

Чаршав уҫӑлчӗ. Чӑваш юрри янӑраса кайрӗ. Ачасен ҫепӗҫ сассисем чуна илӗртеҫҫӗ. Н. Мулеевӑн купӑсӗ хитре ҫемӗ кӑларать. Чуна тыткӑнлакан чӑваш юрри! Куракансем хорпа юрланӑ юрӑсене те, уйрӑм артистсен пултарулӑхне те пысӑк хак парса йышӑнчӗҫ. Концерта 8-11-мӗш классем хутшӑнчӗҫ. Пухӑннисене уйрӑмах Т. Мискина, Е. Карсакова, А. Амосова, Т. Логинова, Е. Кашкарова, Н. Кустова, С. Зайцева, М. Мискин, Ю. Айметов, А. Карсаков, Н. Казаков, А. Амосов вӗренекенсем чӑваш ташшине ташлани, юрӑсене юрлани килӗшрӗҫ.

- Чӑн та артистсем пек юрлаҫҫӗ,- терӗ пӗр хӗрарӑм хӑйӗн кӳршине. Ку сӑмахсем хыҫҫӑн мӗн калӑн ӗнтӗ, пӗтӗмпех ӑнланмалла. Концерт хыҫҫӑн эпӗ музыкӑпа ӗҫ учителӗпе, ансамбле йӗркеленӗ Н. Мулеевпа калаҫрӑм:

- Николай Петрович, кунти фольклор ансамблӗ хӑйӗн юрри-ташшисемпе кама кӑна савӑнтарман пулӗ. Чӑваш халӑхӗн ырӑ йӑли-йӗркисене сыхласа хӑварас, вӗсене малашне те ҫӗнетсе аталантарса пырас, халӑх таланчӗсен пултарулӑхне пропагандӑлас тӗлӗшпе юлашки ҫулсенче кӑна ҫак ансамбль калама ҫук пысӑк ӗҫ туса ирттерчӗ. Аҫтан пуҫланса кайрӗ-ха ку ӗҫ?

- Ульяновск хулинче Чӑвашсен обществине туса хуни пире вӑй пачӗ. «Еткер» телекӑларӑмри чӑваш юррисене итлесе савӑнтӑмӑр. Кӳршӗри чӑваш ялӗсенчи фольклор ансамблӗсем ҫинчен пӗрре кӑна мар илтнӗччӗ. Пур ҫӗрте те чӑваш культурине аталантарас тӗллевпе пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ.Шухӑша путрӑм. Мӗнех вара, эпир, йӗлмелсем, вӗсенчен пӗрре те кая мар вӗт-ха. Юрлакансем те сахал мар. Йӗркелес кӑна пулать. Ватӑ учительницӑсем халӗ те астӑваҫҫӗ-ха улахра карталанса юрланине, ваттисем каларӑшле «хӗм кӑларса» ташланине. «Атьӑр-ха, тепӗр хут чӗртсе ярар ӑна»,- терӗмӗр эпир. Ку шухӑша шкул директорӗ П. Н. Егоров ырларӗ.

- Кӗскен кӑна хӑварӑн плансемпе паллаштарайман-ши?

- Кӑҫал П. М. Миронов ҫуралнӑранпа 130 ҫул ҫитет, кӗҫех Яков Ухсайӑн та юбилейӗ. Вӗсене халалласа уяв концерчӗсем йӗркелемелле. Колхоз ӗҫченӗсем валли те.

- Кам пулӑшрӗ сире чӑваш халӑхӗн ӗлӗкхи тумтирӗсене тупма?

- Пирӗн тӗп задача - чӑвашсен ӗлӗкхи йӑла-йӗркесемпе ҫамрӑксене паллаштарасси. Ӗлӗкхи тумтирсене Шупашкарта ҫӗлеттертӗмӗр, ватӑ ҫынсенчен илтӗмӗр. Шкул дирекцийӗ укҫа уйӑрса пачӗ. Такмакӗсемпе тӗрлӗ вӑйӑ юррисене те ҫырса илтӗмӗр. Малашне те ҫак ӗҫе йӗркелесе пыма ҫамрӑксене те явӑҫтаратпӑр.

Ҫакӑн пек уявсем шкулта тӑтӑшах пулаҫҫӗ. Вӗсене йӗркелес ӗҫре Н. П. Мулеев пысӑк ӗҫ тӑвать.

Тепӗр кун шкулти юрӑҫӑсемпе ташӑҫӑсем Ҫӗпрел район центрӗнчи Культура ҫурчӗн сцени ҫинче хӑйсен пултарулӑхне кӑтартрӗҫ. Яла вӗсем Хисеп грамотипе таврӑнчӗҫ.

24
ДЕКАБРЬ
1939 нчы ел
№ 80 (730)

Barlьq illərnen proletarlarь, berləşegez!

# Kommunar

„КОММУНАР" Орган Дрожжановского РК ВКП(б) и РИК-а

ВКП(б) ның
Чүпрәле райкомы
һәм
район башкарма
комитеты ОРГАНЫ

## 24 nce dekəbr kөne bөten xalьq tantanasь kөne bulьp, kommunistlarnьꞑ həm partiəsezlərneꞑ Stalincьl blogьnьꞑ taqьn da jaꞑa çiꞑy kөne bulьp əvrelsen!



## БАРЫГЫЗ ДА САЙЛАУЛАРГА, ИПТӘШЛӘР!






Bygen—xezmət ıəlare deputatlarьnьꞑ çirle Sovetlarьna sajlavlar kөne. Un millionnarca sovet grazdannarь avьl, posjolka, rajon, okrug, өlkə, kraj sovetlarьna lajьqlь ... şelərne çisary өcen, sygen sajlav urnalarьna baracaqlar.

Xezmət iəlare deputatlarьnьꞑ çirle Sovetlarь—alarda kraj, өlkə, rajon, şəhər jəisə avьl tormьşьnьꞑ konkret, kөndəlek məs'ələlare hər kөn həm hər saqat xəl itelə torqan vlastnьꞑ tyəange organnarь niqədər zur kөc bulьp torqanlьqьn hərber sajlavcь jaxşь aŋlьj.

Ilebez bөjek Stalin Konstitutsiəse bilgeləgən jaꞑa sajlav sistemasь bujьnca ike tapqьr sajlavlar ytkərde. Sajlav kampaniəse protsesьnda millionnarca keşelər aktiv çəmaqət tormьşьna qatnaştьlar.

Ləkin çirle Sovetlarqa sajlav kampaniəse, ytkəndəge ike sajlav kampaniəsenə qaraqanda yzeneꞑ qolacь jaqьnnan kyp tapqьrlar kiꞑərək, yzeneꞑ kyləme jaqьnnan kyp tapqьrlar zurraq. Barlьq çirle Sovetlarqa ber million ec jөz meꞑ deputat sajlav alda tora.

Bu sajlavlar Sovetlarda çitəkce eşkə xalьqnьꞑ jaꞑa zur qatlavlarьn caqьrьrlar, alar dəvlətne idarə ity eşenə jөz meꞑnərcə eşcelərne, kolxozcьlarnь, intelligentlarnь—Vatannьꞑ turьlьqlь ullarьn tartьrlar.

Sajlavcьlar, xalьq sovetlarnьꞑ deputatlarь aldьna Lenin—Stalin tepьndaqь politik eşlekle bulьrqa digən taləpne qujalar.

Sajlavcьlar xalьq yzləreneꞑ deputatlarьnnan şunь taləp itələr ... rьclarь juqarьlьqьnda torsьnnar; alar yz eşlərendə politik cьnjvatellər dərəçəsenə teşməsennər; alar Lenin—Stalin tipьndaqь politik eşleklelər postьnda qalsьnnar; alar, Lenin həm Stalin kebek yk, kem ikənlekləre acьq bulqan həm bilgele bulqan eşleklelər bulsьnnar; alar, Lenin həm Stalin kebek yk, suqьşta qurqusьz həm xalьq doşmannarьna qaratə rəximsez bulsьnnar; alar eş qьlьnlaşa başlaqanda həm gorizontta nindi də bulsa qurqьnьc gəvdələngəndə hər tөrle panikadan, panikaqa oxşaqan hər tөrle nərsədən azat bulsьnnar; alar, panikaqa oxşaqan hər tөrle nərsədən, Lenin həm Stalin kebek yk, azat bulsьnnar; alar, hər jaqlap orientatsiə alu həm barlьq plyslarnь həm minuslarnь hər jaqlap isapkə alu kirək bulqan qatlavlь məs'ələlərne xəl itkəndə, Lenin həm Stalin kebek yk, bөjek aqьllь həm aşьqmavcan bulsьnnar; alar, Lenin həm Stalin kebek yk, turьlьqlь həm namuslь bulsьnnar; alar yz xalqьn, Lenin həm Stalin jaratqan kebek yk, jaratsьnnar.

Sovetlarqa bez xalьqnьꞑ ьşanьcьn aqlaqan keşelərne sajlarbьz. Bez Sovetlarqa Lenin—Stalin partiəsenə cьn kyꞑeldən birelgən keşelərne, xalьq interesları, sotsialistik dəvlət interesları alar өcen barьnnan da juqarraq bulqan keşelərne sajlarbьz.

Burzuazia elek-elektən yk yzeneꞑ borьnqь „demokratia"se belən masaja torqan kapital illərendə xəzer dөnjanь jaꞑadan byly өcen qanlь suqьş bara. Demokratiə xalьqlarqa „tьnьclьqnь həm imincelekne" „tə'min itər" digən syzlər kyplən ontьlqannar. Burzuaz illərdə tьnьclьq ta, iminlek tə juq. Xəzer inde kapitalizm illərendə demokratiəneꞑ ajanьc qaldьqlarь da beterelgənnər. Fransiədə, Angliədə həm başqa burzuaz „demokratia" illərendə eşcelər sьjnьf ojşmalarьn jegənsez rəveştə ezərlekləv bara, xezmət iəlarenenꞑ annan başqa da barlьjuqlь „xoquqlarь" kiselə, xezmət xaqь kimetelə, eş kөne arttьrьla.

Çir şarьnda ber beznen il genə—bөjek vatanьbьz qьna—şatlьqlь, tьnьc tormьşta jaşi. Beznen ildə xəjercelek həm keşene ekspluatatsiəlav juq. Ilebezdə xalьq ... barlьq ... tormьşnьꞑ barlьq ... faidalana.

Beznen ildə çəjelderelgən sovet demokratiəse, kapitalizm illərendə anьꞑ turьnda xiallana da almьj torqan demokratiə prinsiplarь, tormьşqa aşьrьldь. Bygenge sajlavlar barь tik SSSR da qьna—sotsialistik demokratizm ilendə genə—xalьqnьꞑ yz telegen cьn-cьnnan irekle rəveştə belderye jəşəgənlekne bөten dөnjaqa jaꞑadan kyrsəterlər. Monьꞑ belən bez bol'şeviklar partiəsenə, Sovet vlastьna, xalьqlarnьꞑ sөjekle julbaşcьsь iptəş Stalinqa burьclьbьz.

„Barь tik bezdə, Sovetlar ilendə genə, eşcelər həm kolxozcь krestiənnər өcen, şəharnen həm avьlnьꞑ barlьq xezmət iəlare өcen barlьq bajlarqa həm ekspluatatorlarqa qarşь tavdaj torqan xөkymət jəşi" (Stalin).

Sovet xөkymətenen Stalincьl aqьllь politikasь danlьqlь eşlərdə sьnaldь.

Bygen bez kommunistlarnьꞑ həm partiəsezlarneꞑ çiꞑyce Stalincьl blogь kandidatlarьna taqьn da zurraq şatlьq belən yz tavьşlarьbьznь birerbez.

Barьqьz da sajlavlarqa!

Sovet xalqьnьꞑ qaqşamaslьq moral'—politik berdəmlegen jaꞑa kөc belən kyrsətik!

Tavьşlarьbьznь kommunistlarnьꞑ həm partiəsezlərneꞑ Stalincьl blogь kandidatlarьna birik.

Sovetlarqa vatannьꞑ lajьqlь, cьn kyꞑeldən birelgən ullarьn, kommunizm eşe өcen yz-yzlaren ajamavcь kөrəşcelərne sajlьjq!



## Активлă корреспондентсем

Çĕпрел районĕ 1930 çулта йĕркеленнĕ. Тепĕр çултанах районта тутар чĕлхипе пĕрремĕш хаçат кун çути курать. «Коммунар» («Kommunar») хаçат латин саспаллисемпе çапăнса тухнă (ÿкерчĕкĕ 183-мĕш стр.). Каярахпа, чăваш чĕлхипе хаçат кăларма тытăнсан, ятне те шрифтне те çавнашкалах хăварнă. Утмăл пилĕк çул хушшинче район хаçачĕ ик-виçĕ хутчен шрифтне улăштарать, ячĕсем те улшăнаççĕ.

Çĕнĕ Йĕлмелĕнче пурăнакансемпĕн районта «Коммунар» ятлă чăваш хаçачĕ пичетленсе тухма пуçлани калама çук пысăк событи пулнă. Ăна кашни çемьерех çырăнса илме тăрăшнă. Хаçат пирĕн ял пурнăçне те çутатса тăнă-çке. Н. А. Никифоров учитель хаçат тухма пуçланă çулсенче ялкорсен кружокне йĕркелет. Шкул тата ял пурнăçĕ çинчен В. Чернов, П. Герасимов, П. Быков. А. Казаков хаçата хыпарласах тăнă. Вăрçă пуçланиччене район хаçачĕ латин алфавитĕнчи саспаллисемпех пичетленнĕ...

Пăва районĕнчен уйрăлнă хыççăн, 1967 çулта, «Çĕнĕ çул» хаçат тухма пуçланă. Çав çулах пирĕн яла çĕнĕ хаçат уçăлни çинчен хыпар сарăлнă. Пичет активисчĕсем пулăшнипе хаçат кашни киле çитнĕ. Паянхи кун ялти почтальонсем хаçата 60 яхăн экземпляр валеçеççĕ. Ульяновскра тухса тăракан «Канаш» хаçат та Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çырăнакансем патне çитет. Ик-виç çул хушшинче вăл ял-йышсен юратнă хаçачĕ пулса тăчĕ. Тĕрлĕ çулсенче хаçата çырăнакансен йышĕ 100 экземпляра çитнĕ. 1994 çулта ăна 40 çемье илсе тăнă. Хаçата пропагандăлас тата халăх хушшинче сарас ĕçре таврапĕлÿçĕ тата педагог А. А. Казаков пысăк ĕç илсе пынă.

Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче пурăнакансем «Канаш» хаçата каярах юлса илеççĕ, хăш-пĕр чухне 3-4 кун иртсен çеç çитет вăл пирĕн пата.

Иртнĕ çул Хусанта «Сăвар» хаçат тухса тăма тытăнчĕ. Ялта 35 экземпляр çырăннă ăна.

Н. Ларионов, Н. Алексеев, А. Казаков, Н. Казаков, Г. Карсаков, Н. Мискин ялкорсем тĕрлĕ вырăнта тухса тăракан чăваш хаçачĕсенче ял пурнăçне тĕрлĕ енчен çутатса параççĕ. Вĕсем çырнă тĕрленчĕксене ял-йыш кăмăлласа вулать.

Николай Ларионов шкулта вĕреннĕ чухнех район хаçатне заметкăсем çырма пуçланă. Юлашки çулсенче унăн ăсталăхĕ палăрмаллах ÿсрĕ. «Ман шухăшсем - çунатлă акăшсем» сăвă ярăмĕшĕн «Канаш» хаçатăн 1994 çулхи лауреачĕ пулса тăчĕ. Унăн пултарулăхĕнче кулăш теми те тĕп вырăн йышăнать.

- Мĕн хистет-ха сана кулăшла хайлавсем çырма? - ыйтрăм Николайран.

- Пурнăç хистет. Çитменлĕхсем нумай, кашни утăмрах. Вĕсене асăрхаса халăха хаçат урлă çырса пĕлтерме тăрăшатăп. Халĕ пурнăç арканса кайрĕ. Кулăшçă валли çырмалли темăсем нумай, суйласа илме çеç пĕлмелле.

* * *

«Сăмахăм, шухăшăм - пурнăç çинчен». Çак сăмахсен авторĕ таврапĕлÿçĕ А. А. Казаков. Кăçал вăл çуралнăранпа 65 çул çитрĕ.

Иртнипе шухăша кайса автор асаилӳ кӗнекине çырма пуçланӑ. Алçырăвӗнче Александр Ананьевич Çӗнӗ Йӗлмел ялӗнче пулса иртнӗ событисене сăнласа парать. Çăмăл чӗлхепе çырса кăтартнă вăл унта. Авторăн асаилӳсен тетрачӗ халлӗхе ăна Совет Çарне илсе кайичченхи тапхăрпа вӗçленет. Алçырăвӗ 27 страницăран тăрать. Таврапӗлӳçӗ вара хăйӗн кун-çулне малалла та çырма ӗмӗчӗ пурри çинчен пӗлтерет. Çак ӗç пуринпӗн те ырă тӗслӗх пулса тăрӗ.

## Чăваш наци конгресӗн делегачӗсем

Чăваш Республикин Аслă Совечӗн Президиумӗ йышăннипе 1992 çулхи юпа (октябрь) уйăхӗн 8-9-мӗшӗсенче Шупашкарта Чăваш халăх наци конгресӗ (Аслă пухăвӗ) пулса иртнӗ.

Пирӗн ялтан конгресс ӗçне Г. Н. Карсаков, Н. П. Мулеев, Н. А. Казаков, Д. Д. Рафиков юлташсем хутшăннă. Вӗсем тăван халăх культурине аталантарас, чăвашлăха упрас тӗлӗшпе пысăк çитӗнӳсем тунăшăн çак Пухăва хутшăнма тивӗç пулнă.

## Мухтавлă ятсем панă

Ачасене вӗрентес ӗçре пысăк çитӗнӳсем тунăшăн халăх вӗрентӗвӗн отличникӗ ятне илме П. Н. Егоров, Л. Н. Мискин, М. И. Шадирякова (Лысова) учительсем тивӗçлӗ пулнă. Н. М. Мискина "Тутарстан Республикин тава тивӗçлӗ агрономӗ" ятне панă.

Халăх ӗçӗнче чыслă пулнăшăн, 1994 çулта таврари аваллăха тӗпченӗ çӗрте палăрмалла ӗç тунăшăн «Чăваш ăс-хакăл ăсти» ятсене илме Н. А. Казаков, Г. Н. Карсаков тивӗç пулнă. Н. Казаков (Ильмовский) çак йӗркесене çыраканӗ «Вучах» хаçатăн А. Талвир ячӗпе хисепленсе тăракан премии лауреачӗ (1993).

## Футболистсен çитӗнӗвӗсем

1985 çулта Çӗнӗ Йӗлмелӗнчи вăтам шкула физкультура учителӗ пулса ӗçлеме Хусанти патшалăх педагогика институтӗнчен вӗренсе тухса А. И. Молгачев килчӗ (хăй Турхан Упи ялӗнче çуралса ӳснӗ). Вăл ялти çамрăксене спортпа туслаштарас тӗллевпе футбол команди йӗркелерӗ. Командăна йӗркелесе ярса пӗрремӗш çитӗнӳсем тума уйрăмах Н. Ларионов, В. Мискин, Г. Карсаков, Н. Самойлов, В. Патшеев, В. Лянкин, Л. Карсаков, Г. Мискин, В. Карсаков, П. Карсаков, В. Ефимов, В. Мискин, Ю. Лянкин, В. Мискин нумай вăй хучӗç.

1987 çулта Çӗнӗ Йӗлмелӗнче иртнӗ район спартакиадинче ял команди «Цильна» колхоз командине 6:2 шутпа çӗнтерсе финала тухрӗ, чемпион ятне çӗнсе илчӗ. Чăваш Çӗпрелӗнче иртнӗ район ака туйӗнче 2:1 шутпа çӗнтерсе чемпион пулчӗ (1989 ç.). 1992 çулта Çӗпрел районӗнче пӗрремӗш хут футбол чемпионачӗ иртрӗ, унта 6 команда хутшăнчӗ, кашни команда пӗр-пӗринпе икӗ хутчен - килте тата хăнара вылярӗ. Çӗнӗ Йӗлмел футболисчӗсем унта та ăнăçлă ăмăртрӗç. 10 вăййăра 14 очко пухса иккӗмӗш вырăн йышăнчӗç.

Çулсем иртнӗ май командăра çӗнӗ футболистсем хутшăнса пычӗç: В. Николаев, Н. Николаев, С. Головин, С. Карсаков, А. Карсаков, С. Макаров, Г. Лянкин, В. Мулеев, П. Пришельцев, Г. Архипов,

В. Д. Ефимов, Д. Ефимов.

1992 çулта юпа уйăхĕнче Кивĕ Çĕпрелĕнче «Ылтăн пучах» футбол турнирĕ иртрĕ. Çĕпрел район командишĕн Çĕнĕ Йĕлмелĕнчен пилĕк футболист вылярĕç.

Çĕнĕ Йĕлмел çамрăкĕсем малалла та спортра çитĕнÿсем тăвасса шанас килет.

## Çĕнĕ Йĕлмелĕнче - «Янра, купăс»

*Çакăн çинчен пире Н. Ларионов каласа парать*

Мартăн 5-мĕшĕнче (1995) Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкул çуртĕнче пĕрремĕш хут «Янра, купăс» уяв пулса иртрĕ. Ăна йĕркелекенсем ялти мĕн пур вăйçăсене пĕрле пуçтарнă, халăха курма йыхăрнă.

Вăл кун суйлавччĕ, анчах бюллетенсене урнăна пăрахнă хыççăн çĕнĕ йĕлмелсенчен никам та килĕсене васкамарĕ, пурте «Янра, купăс!» уява юлчĕç.

Уява пуçараканĕ - Н. П. Мулеев, вăтам шкулта музыкăпа ĕç учителĕ. Вăл чăваш культурине çĕнĕрен чĕртсе аталантарассишĕн нумай тăрăшать, темиçе çул ĕнтĕ ял ĕçченĕсенчен йĕркеленĕ «Йĕлме» фольклор ансамбле ертсе пырать. Сăмах май каласан, ку ансамбль пĕлтĕр апрельте хăйĕн пултарулăхне Хусанта кăтартрĕ. Ульяновскри акатуйсене хутшăнчĕ. Николай Петрович хальхи уява та тĕплĕн хатĕрленнĕ: кашни купăсçăпа тĕл пулнă, музыка инструменчĕсем пухнă, ыттине те тунă.

Акă купăсçăсем сцена çине ларса тухнă та. Вĕсен шутĕнче - И. Казаков платник, И. Марков, В. Карсаков водительсем, А. Кашкаров столяр, Д. Карсаков платник, Ф. Патрин кладовщик, А. Карсаков механизатор тата ыттисем те, пĕр сăмахпа, купăс калама пултараккансем пурте пухăннă. Кашни хăй мĕнле майпа купăс калама хăнăхнипе паллаштарать, юратнă кĕввине выляса кăтартать. В. Антиповапа А. Кашкаров вара алла балалайка тытнă, унпа выляса тĕлĕнтерчĕç.

Д. Сергеев хăй пĕрремĕш хут алла купăс тытни çинчен çапла каласа парать:

- Ялти пĕр вăйçăн купăсĕпе нартлаттарса пăхрăм. Çак самантран манăн купăс калама вĕренес туйăм çуралчĕ. Тÿрех киле чупрăм, аннене: «Купăс илсе пар-ха»,- тесе йăлăнма тытăнтăм. Анне мана: «Эх, ачам, урунти çăпату çĕтĕлсе тухрĕ вĕт, малашне мĕнле çÿрĕн? Мĕн пур укçа та пĕр мăшăр атă илме çитет-и, çитмест-и»,- тет. Эпĕ çав-çавах хамăнне петĕм: «Илсе пар та илсе пар». Анне чăтаймарĕ, юлашки укçипе купăс илсе пачĕ. Эпĕ ниçта тухми купăспа вĕренме тытăнтăм, юлашкинчен аванах калама вĕрентĕм. Кайран купăса сутса ятăм, ун укçипе атă туянтăм. Çапла пĕр укçапах икĕ ĕç турăм: купăс та калама вĕрентĕм, атăллă та пултăм.

Юлашки сăмахсене илтсен, залти çынсем хавассăн кулса ячĕç.

Ку уява «Йĕлме» фольклор ушкăнĕ те хутшăнчĕ, чăваш юррисене шăрантарчĕ. Куракансем Наталья Макарова, Нина Карсакова, Галина Мулеева, Нина Патрина, Людмила Кашкарова, Нина Маркова, Людмила Патшеева, Тамара Егорова, Людмила Захарова, Валентина Самойлова, Валентина Пастухова пултарулăхне пысăк хак пачĕç. Шкул ачисенчен Наташа Никифорова, Валентина Архипова, Ирина Кудрявцева, Таня Лянкина юрлани, ташлани кăмăла кайрĕ.

Нумайччен кĕрлерĕ вăтам шкул çурчĕ чăваш кĕвви-юррипе, такмакĕпе, ташшипе. Залти çынсем те ахаль лармарĕç, чăтма çук илемлĕ кĕвĕсем калана чухне ура хуçса ташларĕç.

Юлашкинчен Н. П. Мулеев уява çапла сăмахсемпе пĕтĕмлетрĕ:

- Ял халăхĕ уява хастар хутшăннăшăн питĕ савăнатăп, тав тăватăп. Укçа-тенкĕпе пулăшнăшăн «Ильмово» ял хуçалăх предприятийĕн председательне Н. М. Мискина, ял совет самоуправленийĕн пуçлăхне Г. Н. Карсçакова ырă сăмахсем калас килет. Паян ял халăхĕ мĕнле савăннине кура, пуçра тепĕр ĕмĕт çуралчĕ: çывăх вăхăтра Çĕнĕ Йĕлмелĕнче «Чăваш чĕлхи уявне» ирттерĕпĕр.

Килелле утнă май мана вара тепĕр шухăш канăç памарĕ. Мĕншĕн «Янра, купăс!» уява вăтам е аслă çулсенчи çынсем, çамрăксем сахал хутшăнчĕç? Мĕне пĕлтерет ку? Çамрăксем тăван культурăна маннине, е..?

## Анастасий епископ Çĕнĕ Йĕлмелĕнче

1994 çулхи ноябрĕн (чӳк) уйăхĕн 8-мĕшĕнче, кĕрхи сăра вăхăтĕнче, Çĕнĕ Йĕлмелне Хусан тата Тутарстан епископĕ Анастасий хăнара пулса курчĕ. Ял-йыш пысăк вырăнти Турă çыннине ăшшăн кĕтсе илнĕ. Çав кун Ульяновскри чăваш чиркĕвĕн настоятелĕ Илия атте, Тутарстанри чиркӳсен пуçлăхĕсем ялти çĕнĕ чиркĕве кĕлĕ туса çутатнă, пухăннисем валли литурги* ирттернĕ. Юлашкинчен Анастасий епископ пурне те сывлăх, килĕшӳ, тăнăçлăх сунса çапла каласа хăварнă: «Храм туса кăна хуни çителĕксĕр, ку чиркӳ çыннисемшĕн ăс-тăн, чун пурнăçĕн тĕп вырăнĕ пулмалла». Сăмах май каласа хăварсан, пирĕн яла пысăк вырăнти священник иккĕмĕш хут килнĕ. Çак ĕмĕр пуçламăшĕнче Çĕнĕ Йĕлмелне Курган хулинче епископ пулса ĕçлекен К. П. Прокопьев (вăл Çĕнĕ Йĕлмелре çуралса ӳснĕ) официаллă йĕркепе килнĕ. Ялти ватăсем калана тăрăх, вăл ял хĕррине çитиччен тăрантаспа килнĕ. Ун çинчен ансан чиркĕве çитиччене ял-йыш асăннă çынна чаплă кавирсем сарса хурса çул туса панă. Епископ çак кавирсем çинче утса чиркĕве çитнĕ. Ваттисем К. П. Прокопьева нумай чечексемпе кĕтсе илнине каласа параççĕ.

Тĕне хирĕç кĕрешӳ пуçлансан чиркӳ çурчĕ пĕр вăхăт хушши Культура керменĕ пулса тăрать. Маларах кунта склад та пулнă. Çав вырăн ял çамрăкĕсемшĕн улах пулса тăрать. Çапăçнăшăн та, ĕçнĕшĕн те чаракан пулман. Нумайăшĕ вĕсенчен шутлама та пултарайман: çакăнта (чиркӳ пахчинче) Турра ĕненекенсемпе ялти пуянсене пытарнă пулнă. Вĕсен вил тăприйĕсем урлă утса çӳренĕ. Чиркӳ пулнă çурт пылчăкпа витĕнет, алăкĕсене, чӳречисене çамрăксем çĕмĕрсе пĕтереççĕ.

Çĕнĕ самана тапхăрĕ пуçлансан ялти чиркӳ каллех çĕнĕрен çĕкленет. И. Ефремов священник пулса ĕçлеме тытăнать. Вăл Çĕпрел районĕнчи чăваш Çĕпрелĕнче çуралса ӳснĕ. Нумай вăхăт хушши Совет Çарĕнче прапорщик пулнă. Чиркӳрен инçех те мар икĕ пӳлĕмлĕ çуртра хăйĕн çемйипе пурăнать, хуçалăхĕ те çавăнтах.

Турра кĕл туни - чун ăшши, усалсенчен çăлăнни. Турра пĕлсе ăнланас тесен, виçĕ хутчен Библи кĕнекине вуламалла. Турă сăмахĕ вара тин сан пата çитĕ, - тет вăл.

---

*Литурги - кĕлĕ.




# XIII. Ял çынни пĕрлĕхех хаклать

(«Ильмово» колхоз çинчен унăн председателĕ
Н. М. МИСКИН каласа паратъ)

Бауман ячĕпе хисепленекен колхозри Çĕнĕ Йĕлмел бригади 1991 çулхи март уйăхĕнче «Ильмово» колхоз пулса йĕркеленчĕ. Хуçалăх нумай отрасльлĕ: выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илес, тĕш тырă, сахăр чĕкĕнтĕрĕ ÿстерес енĕпе ĕçлет. Фермăсенче 650 пуç ĕне-выльăх (çавсенчен икçĕр пуçĕ - сăвакан ĕнесем) тата 1100 пуç сысна усратпăр.

Колхозăн 1850 гектар çĕр. Вĕсенчен 1607 гектарĕ - сухаланакан çĕрсем. Гумус çителĕклĕ мар, йÿçĕк тăпраллă. Çавăнпа та ял хуçалăх культурине ÿстерсен кăна пысăк тухăçлă тыр-пул туса илме пулать.

Ака лаптăкĕн структуринче пĕрчĕллĕ культурăсем мĕн пур акăнакан çĕрсен - 47, выльăх апатлăх культурăсем - 32, сахăр чĕкĕнтĕрĕ - 12 тата пусăсем çичĕ процент йышăнаççĕ.

1994 çулта пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен кашни

гектарĕнчен вăтамран 31, 4 центнер, кукурузăран - 72 центнер тĕшшине тата 285 центнер симĕс масса, çĕр улмирен - 183, сахăр чĕкĕнтĕрĕнчен 153 центнер тухăç ÿстерсе илтĕмĕр. Выльăхсене хĕл каçармалли тапхăр валли çителĕклĕ чухлĕ апат хатĕрленĕ. Çакăншăн мĕнпур колхозниксен тата специалистсен тăрăшуллăхĕ пысăк пулчĕ.

Тухăçшăн пынă кĕрешÿ çулталăкĕпех чарăнмарĕ темелле. Кĕрхи тата хĕллехи агротехника мероприятийĕсене вăхăтра пурнăçланă. Акма пысăк пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрленĕ, çителĕклĕ чухлĕ минераллă удобренисем пур. Кĕрхи культурăсене икĕ хутчен тымартан апатлантарнă. Çĕр çине мочевина, гербицид тата метафос саптарнă, чир-чĕрсене хирĕç кĕрешсе импактпа им-çамланă.

Колхозра икĕ çултанпа çĕнĕ тĕш-тырă технологийĕпе кукуруза ÿстеретпĕр. Унăн результачĕсем пире савăнтараççĕ тата малашлăха шанчăк параççĕ. Эппин, выльăх апатне ытлă-çитлĕ хатĕрлеме пулать.

Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен сорчĕсене çĕнетнĕ çĕрте Ульяновск облаçĕнчи ял хуçалăх наукăпа тĕпчев институчĕн ученăйĕсемпе тачă çыхăну тытатпăр. Пирĕн хуçалăх вĕсем шутласа тупнă ырашăн «саратовская-5», çурхи туллăн «симбирская», урпан «днепровская-220», пăрçан «труженик» сорчĕсене акать. Кăçал 5-шер центнер çурхи туллăн çĕнĕ «ишеевская» сортлă супер элита, сĕллĕн «голап» тата К-127 амарант вăрлăхĕсене акрăмăр. Килес çул вăрлăхсене районти хуçалăхсене сутас тĕллевпе акма шутлатпăр. Удобренисемпе тулăхрах усă курас тĕлĕшпе те кирлĕ ĕçсем туса иртерме палăртрăмăр.

Çапла. Колхозсене йĕркелесе яма çăмăл пулман. Хăй вăхăтĕнче хресчене юнаса, хăратса колхоза кĕртнĕ. Хресчен йышпа, пĕрлехи хуçалăхпа ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Экономикăри йывăр лару-тăру ял ĕçченне те шиклентерет, вăл уйрăлса тухсан пуш алăпа тăрса юласран хăрать. Çын кăмăлне самантрах улăштарма çук. Уйрăмшарăн ĕçлеме, ман шутпа, тĕреклĕ никĕс кирлĕ. Рынок экономики çав никĕсе кĕске вăхăтрах хывма май парасси халлĕхе иккĕлентерет. Мĕнле йывăр пулсан та, хресчен йывăрлăхсене парăнманни савăнтарать.

* * *

## «Ильмово» ял хуçалăх предприятийĕ

Суха çĕрĕ - 1607 гектар, ĕçлекен йыш - 200 çын ытла. Сăвакан ĕнесем - 200 пуç, сыснасем - 1300. Хуçалăхра 23 трактор, 7 комбайн. Ял нушисене тивĕçтерме техника çителĕклĕ. Тыр-пул çитĕнтерессе, выльăх-чĕрлĕх самăртасси лайăх аталаннă.

1960-70 çулсенче хуçалăхсене пысăклатас юхăм пайтах ялсене «малашлăхсăр» тăратса хăварнă. Çав шута Çĕпрел районĕнчи Çĕнĕ Йĕлмел ялне те кĕртмелле-тĕр. Вăл самай пысăк пулсан та, Бауман ячĕпе хисепленекен колхозпа пĕрлештерсен малалла аталанайман. Халăх çине тăнипе колхозран уйрăлаççĕ, «Ильмово» ял хуçалăх предприятийĕ йĕркелеççĕ.

Çĕнĕ уставпа кирек хăш хресчен те предприятирен хăйне тивекен çĕр, пурлăх пайĕпе уйрăлса тухма пултарать. Паян вара пĕр çын та пĕрлĕхлĕ хуçалăхран тухма васкамасть.

- Революци хыççăн хресчен шăпипе пÿскелле выляна пек хăтланнă, - тет предприяти пуçлăхĕ Николай Мискин. - 30-мĕш çулсенче хĕсĕрлесех колхозсене хăвалана. Кĕрес мар текеннисене налуксемпе пусмăрлана. Çапла, колхозсем «пушă вăйĕпе» çуралнă. Апла пулин те, вĕсем аванах ĕçле пуçланă, сынсем пĕрлĕхре вăй пурриие туйнă.

Парти ертÿçисем темле ăнланма çĕн «çĕнĕлĕхсем» шутласа кăларма тытăннă. Вĕсенчен пĕри - халăх кăмăлне шута илмесĕр, ирĕксĕрлесе колхозсене пысăклатасси. Ку мĕн патне илсе çитерчĕ-ха? Ялсенче чÿречисене çапнă çуртсем йышланнисемсĕр пуçне, нимĕнле ырлăх та кÿмерĕ. Ку инкек Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнчен те пăрăнса иртмен.

Председатель тĕрĕснех калать. Тутарстан Республикинче те çакăн пек ялсем вĕççĕр-хĕррисĕр. Юрать-ха, юлашки вăхăтра халăх шухăш-кăмăлне хисепле пуçларĕç. Районсенче çĕнĕ хуçалăхсем çумăр хыççăн шăтакан кăмпасем пекех йышланчĕç. Паллах, вĕсене ураланма йывăр. Мĕншĕн тесен, «тĕпре» юлаканнисем кивĕ техника, ĕç хатĕрĕсем кăна уйăрса параççĕ. Çапах та, «ирĕке» тухнă ял çыннисем колхозринчен хастартарах ĕçлеççĕ. Çакна «Ильмово» ял хуçалăх предприятийĕн ĕçри çитĕнĕвĕсем çирĕплетеççĕ.

- Колхозран уйрăлсан пирĕн хуçалăх икĕ-виçĕ çултанах районти чи тĕреклисен шутне кĕчĕ, - хавхаланса пĕлтерет Николай Михайлович. - Уйрăмах пĕлтĕрхи çул пирĕншĕн ăнăçлă пулчĕ. Гектартан вăтамран 35,4 центнер тĕш-тырă туса илтĕмĕр. Механизаторсем акара та, вырмара та, çĕртмере те ырми-канми вăй хучĕç. Виктор Ермолаев, Геннадий Казаков, Виктор Чашкин комбайнерсем ĕççи вăхăтĕнче нормăсене 1,5-2 хут иртгерсе пурнăçласа пычĕç. Кĕске вăхăтрах тырра пухса илчĕç те ĕлĕк «тăван» пулнă Бауман ячĕпе хисепленекен колхоза пулăшрĕç.

Чăнах та, колхозăн пĕлтĕрхи çитĕнĕвĕсем витĕмлĕ. Тĕш-тырă тухăçлăхĕпе районта иккĕмĕш вырăн йышăннă пулсан, выльăх апачĕ хатĕрлессипе хуçалăх пĕрремĕш вырăнта. Çакă фермăсен тухăçлăхне самаях ÿстернĕ. Пĕлтĕр пĕр ĕнерен вăтамран 3000 килограма яхăн сĕт суса илнĕ. Валентина Яковлева, Зоя Андреева, Елена Кудрявцева дояркăсен ĕнисем кашниех 3200 килограмм сĕт антарнă. Мария Амосова, Елена Ермолаева пăхакан сыснасем кулленхи пысăк ÿт хушăслăхпа палăрнă.

Хуçалăх тупăшĕнче сахăр кăшманĕн тÿпи пысăк. Вăл 48 процентпа танлашать. Иртнĕ çулсенче унăн тухăçĕ те чылай ÿснĕ.

Çитĕнÿсем çакна кăтартаççĕ: пĕчĕк хуçалăх пысăккинчен çаврăнăçуллăрах ĕçлет. Председатель ял халăхĕ хастар ĕçленипе тупăш тăван ялшăн çеç тăкакланнипе çыхăнтарать. Хресчен пĕрлĕхлĕ хуçалăхран

уйрӑлса тухсан лайӑхрах ӗҫлемелле пек. Тухӑҫӗ те, тупӑшӗ те хӑйне пулать. Анчах та вӑл коллективран тухма васкамасть.

Калаҫӑва 1993 ҫулта ҫырса илнӗ.

**("Сувар" хаҫатран.)**

* * *

Правительство йышӑннӑ саккун тӑрӑх колхоз ҫӗрӗ йышӑнакан лаптӑксенчен 10 процентне ҫӗр илекенсене пама палӑртнӑ. Халлӗхе ҫӗр илес текенсем ялсенче йышлӑ тесе калама ҫук.

- Мӗнпе ҫыхӑннӑ-ши ҫакӑ, - тесе ыйтрӑм ял Совечӗн ӗҫтӑвком председателӗнчен Г. Карсаковран.

- Кунта тӗлӗнмелли ҫук. Эпир коллективлӑ хуҫалӑхра ӗҫлеме хӑнӑхнӑ. Ку пӗрре. Тепӗр енчен, уйрӑм ҫӗр илсен, ӑна мӗнле ӗҫе кӗртмелле? Техника кирлӗ . Ӑна кам парать? Туянма халӑхӑн укҫи-тенки ҫук. Паянхи хресчен ҫӗр илме хатӗр мар. Колхоз хуҫалӑхӗнчех аренда меслечӗпе ӗҫлеме хатӗр ҫынсем те ҫукпа пӗрех.

**(1994).**

* * *

Яла хӑнана килекенсем ҫул айккинчен инҫе те мар вырнаҫнӑ улма йывӑҫҫисен пахчине асӑрханӑ та пулӗ? Йывӑҫсене колхоз йӗркеленсенех ял-йыш лартнӑ. Пурӗ вӑл 3 гектара яхӑн ҫӗр лаптӑкӗ йышӑнать. Ҫавӑнтах вӗлле хурчӗсене те ӗрчетеҫҫӗ, пыл туса илеҫҫӗ. Ӗлӗкхипе танлаштарсан, паллах, улма йывӑҫҫисен шучӗ чакнӑ. Сивӗ ҫулсенче ҫанталӑк вӗсене пысӑк сиен кунӗ. Вӗлле хурчӗсем те тӗрлӗрен чирсемпе аптӑраҫҫӗ.

Мӗнпур ӗҫсен йывӑрлӑхӗсем ҫине таянса кунта Иван Николаевич Архипов пахчаҫӑ ӗҫлет. Ҫутҫанталӑка юратни ӑна ҫакӑнта илсе ҫитернӗ. Ятарласа пахчаҫӑна вӗренмен вӑл. Пӗлӗвӗ вара унӑн ҫителӗклӗ. Ас-тӑнне хушма ӑна учебниксемпе журналсем пулӑшаҫҫӗ. Сад ӗрчетес енӗпе тӗрлӗрен кӗнекесем вулать, районти тата вырӑнти специалистсемпе канашлать.

**(«Капаш», 1995, 37-мӗш №.)**

## Ял сӑнӗ улшӑнать

Тулли кӑмӑлпа ҫапла калас килет манӑн тӑван Ҫӗнӗ Йӗлмел ялӗ ҫинчен.

Ял хӗррипе иртсе каякан Кӗртлӗварпа Хурӑнвар ҫырмисенче тимӗр-бетонран тунӑ плотинӑсене курма пулать. Ҫуллахи шӑрӑх ҫанталӑкра унта ял халӑхӗ шыва кӗрсе савӑнать, унӑн шывӗпе пысӑк ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче пысӑк тухӑҫлӑ тымар - ҫимӗҫ ӳстерсе илеҫҫӗ. Вӑрҫӑччен ялта чуспа витнӗ ҫуртсем 20-е яхӑн ҫеҫ пулнӑ, икӗ - хӗҫ тимӗрпе витнисем, пуянсенчен юлнӑ пӗр чул ҫурт упраннӑ. Халӗ ялта улӑм витнӗ ҫуртсем пачах ҫук. Кирпӗчрен купаласа тунӑ ҫуртсен шучӗ ӳссех пырать. Кирпӗчрен П. М. Николаев, В. М. Николаев, П. И. Казаков, Н. П. Казаков колхозниксем, Г. П. Казаков, М. И. Шадирякова ҫуртсем турӗҫ. Иван Архипов, Николай Кашкаров, Владимир Патрин виҫӗ пӳлӗмлӗ ҫуртсенче пурӑнаҫҫӗ. Юлашки 10 ҫул хушшинче кӑна ялта 113 ҫӗнӗ ҫурт туса ҫамрӑксем пурӑнма пуҫланӑ, е вӑл 6690 тӑваткал метр

вырăн йышăнать. Ялта халĕ килĕрен тенĕ пек телевизор, радио пур. Вăрçăччен ялĕпе те икĕ патефон, 3 хуткупăс, батарейăпа ĕçлекен пĕр радиола, 1 мотоцикл, 7 велосипед пулнă. Халĕ ялĕпе 33 çăмăл автомашина, 90 мотоцикл, 288 газ плити, 300 яхăн холодильник. Ялта медпункт, перекет касси, почта уйрăмĕ, йăла ыйтăвне тивĕçтерекен пункт пур. Елĕкхи пек никам та вăрмантан вутă турттарса тертленмест, 283 килте «кăвак çулăм» йăлкăшать. Çĕнĕ Йĕлмелĕнче, ытти ялсемпе танлаштарсан, чаплă çуртсем ытларах.

Вăрçă вăхăтĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн ялти нумай хĕрарăмсене медальсем парса чысланă. 14 çулхи Никодим Утеева та медальпе наградăланă. Вăл 12 çултах ĕçе пуçăннă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче колхозри тăрăшуллă ĕçшĕн Мария Ларионова дояркăна Ленин орденĕпе, Николай Мулеева Халăхсен туслăхĕн орденĕпе, Валентина Пастухована *(ӳкерчĕк çинче)* III степенлĕ Ĕç Мухтавĕн орденĕпе, Ф. Н. Утеева Октябрь Революци орденĕпе наградăланă.



Ялта аслă пĕлӳ илнĕ е аспирантура пĕтернĕ çынсем сахал мар. Пурте çаксем Октябрь тивлечĕпе пулнă.

## Тĕрлĕ вăхăтсенче пичетленнĕ хаçатсенчен илнĕ хыпарсем

## Çĕнĕ магазин

Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче нумаях пулмасть икĕ хутлă çĕнĕ магазин туса пĕтерчĕç. Ăна тунă çĕрте П. Волков, В. Евграфов, В. Ларионов тата ытти юлташсем те тă-

рăшса ĕçлерĕç. Унăн пĕр хутĕнче апат-çимĕç продукчĕсем, тепринче - хуçалăх таварĕсем сутакан магазин вырнаçнă.

М. Егорова сутуçă япала туянакансене яланах ăшшăн кĕтсе илет. Вĕсене вăл кирлĕ япаласем туянма пулăшать.

**("Çĕнĕ çул", 1973.)**

# Çĕр улми хума - путвал

Бауман ячĕпе хисепленекен колхозри Çĕнĕ Йĕлмел участокĕнче тухăçлă çĕр улми çитĕнет. Ăна 30 гектар çине акнă. Кашни гектартан 110 центнер туса илме йышăннă çĕр ĕçченĕсем. Çĕр улмине сыхласа усрамалли вырăнсем кирлĕ. Çавна шута илсе, Серафим Макаров ертсе пыракан строительсен бригади кĕске вăхăтрах çĕр улми сыхламалли çĕнĕ путвал туса пĕтерчĕ. Унта 700 центнер çĕр улми вырнаçать. Çĕр улми хĕлĕпех лайăх сыхлантăр тесе, пĕтĕм агротехника правилисене пăхăнса тунă.

Путвал тунă çĕрте П. Казаков, В. Кудрявцев, В. Макаров тата ыттисем те тăрăшса ĕçлерĕç. Комисси çак путвала лайăх паллăпа йышăнчĕ. Малашне тымарçимĕçсем лайăх хĕл каçĕç.

**("Çĕнĕ çул", 1973.)**

# Кашласа ӳсеççĕ топольсем

Май уйăхĕн пуçламăшĕнче эпĕ Çĕнĕ Йĕлмел ял Советĕнчен çичĕ тĕп тополь илсе килтĕм.

- Асту, Коля, пĕр тĕп те ан хăртăр! - терĕ ял Совет председателĕ А. В. Быков топольсене панă май.

Эпĕ йывăççене тĕрĕс лартас тесе, чи малтан кĕнекесем вуларăм. Вара вĕсене хамăр пӳрт умне, çул хĕррине, лартса тухрăм. Ирлĕ-каçлă топольсене çителĕклĕ шăвартăм. Халĕ манăн топольсем чĕрĕлчĕç кăна мар, пурте сарлака çулçăллă симĕс тумпа витĕнчĕç. Выльăх-чĕрлĕх тивесрен кашни тополь тавра карта тытса çаврăнтăм.

- Кашлăр, топольсем, çынсене савăнăç кӳрĕр, - тетĕп эпĕ вĕсем çине пăхмассерен.

Юрататăп эпĕ йывăççене. Кăçал хамăр пахчана хăмла çырли, хурлăхан та лартрăм. Вĕсем те лайăх чĕрĕлчĕç. Халĕ пахчаран тухас та килмест. Тата пӳрт умне хурăнсем лартма кăмăл пур-ха. Çак ĕмĕте çитес çуркунне пурнăçлăп.

**(«Пионер сасси», 1974.)**

# Пултаруллă почтальонка

Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче Валентина Угандеева нумай çулсем хушши почтальонка пулса ĕçлет. Ял ĕçченĕсем патне савăнăçлă хыпарсене пуринчен малтан вăл çитерет. Вăл илсе килнĕ хаçатсенчен çамрăккисем те, ваттисем те çĕршыври, республикăри тата районти çĕнĕлĕхсемпе паллашаççĕ.

Почтальонка 1977 çулхи подписка кампанине те лайăх хатĕрленчĕ. Хаçат çырăнакансен хушшинче ăнлантару ĕçĕсем илсе пычĕ. Нумай колхозниксем 6-7 экземпляр хаçат-журналсем çырăнчĕç.

Чыслă ĕçĕпе В. Угандеева ял çыннисен хисепне çĕнсе илчĕ.

**(«Çĕнĕ çул», 1977, 11-мĕш №.)**

* * *

Çĕнĕ Йĕлмел (Тутарстан Республики) ялĕн Миронов ячĕпе хисепленекен урамĕ аслă та илемлĕ. Çыннисем тараватҫ, çурчĕсем хăтлă. Кунта ĕмĕр ĕçлесе пурăнакансенчен ытларахăшĕ «Ильмово» колхозра ĕçлеççĕ, тепĕр пайĕ - район центрĕнчи рабочисемпе служащисем.

Ялăн сăн-сăпачĕ улшăнса пыни юлашки çулсенче уйрăмах палăрчĕ.

«Ильмово» колхоз председателĕ Н. М. Мискин ку ĕçре тăрăшуллă.

Кĕçех ку ялта тата тепĕр пысăк строительство объектне ĕçе яма палăртнă. Çак тĕллевпе çăкăр кăмакине (суткара пилĕкçĕр килограмм чухлĕ çăкăрпа кондитер изделийĕсене пĕçерме пулать) тата ытти оборудовани туяннă. Миронов урамне пырса кĕнĕ çĕрте июль уйăхĕнче строительсем çăкăр пĕçермелли цех тума тытăннă. Стройкăра виççĕн ĕçлеççĕ. В. К. Курганов, Р. А. Абдюков, А. И. Барышкин Ульяновскри «Правда» кооперативра ĕçлекенсем. Вĕсем монтаж ĕçĕсене тăваççĕ. Август уйăхĕн вĕçĕнче объекта туса пĕтерме палăртнă. Вырăнти колхоз администрацийĕ стройкăна вĕçлеме икçĕр пин укçа уйăрса панă. Ял историйĕнче ку вăл пĕррремĕш стройка.

**(«Канаш», 1992, 33-мĕш №.)**

# Мĕнле тав тумăн?

Çитсе курнă-и эсир Çĕпрел тăрăхĕнчи чăваш ялĕсене? Çула тухма ан васкăр. Мĕншĕн тетĕр-и?

Совет влаçĕ пулнăранпа та Кивĕ тата Çĕнĕ Йĕлмелне çӳрекен автобуссене кураймăн. Сайра-хутра пĕр-пĕр ыр кăмăллă шофер чарăнса ял çыннисене лартса кайма пултарать.

Çĕпрелĕнчен асăннă ялсене çитме 4 тата 7 километр. Ял çыннисенчен чылайăшĕ Çĕпрелĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсен кашни кунах ĕçе çӳремелле-çке.

Тем пек каймалла пулсан та çынсем çула тухаймаççĕ, ӳркенменнисем (çамрăксем, паллах,) район центрне çитиех çуран утаççĕ. Паллах, çакăнта пурăнакан çынсене айăпласшăн мар эпĕ. Вĕсен валли, чăнах та, çак ялсене çӳрекен автобуссем уйăрмалла çеç. Кунти район чиновникĕсем чăвашсем çине пӳрне витĕр пăхни çеç курăнать. Халăх вара ку ыйтăва татса парасса тахçанах кĕтет. Район администрацине те темиçе хутчен çакăн çинчен пăшăрханса ыйтса çырнă.

Халăх кĕтет, тарăхать, асапланать. Ватă çынсене больницăна çӳреме те йывăр. Çынсен шухăшĕпе Çĕпрел - Çĕнĕ Йĕлмел маршрутпа автобус çӳремеллех.

* * *

Заметкăна хаçат валли пичетлеме тесе хатĕрлесе хунă кăначчĕ, "Канаш" хаçат редакцине ырă хыпар çитрĕ. Район центрĕнчен Çĕнĕ Йĕлмел ялне асфальтлă çул сарса пĕтернĕ. Çакăншăн мĕнле тав тумăн? Çак ыйтупа хăй вăхăтĕнче пĕрре кăна мар район администрацийĕн пуçлăхĕ патне кĕме мана та тиврĕ. Ĕçе пĕр вырăнтан тапратса ярас шухăшпах ĕнтĕ «Çĕнĕ Йĕлмелне çул хăçан пулĕ?» ятлă заметка çырнăччĕ. Ăна район пуçлăхĕсене кăтартнăччĕ. Манпа пĕр тĕллевлĕ пулса ял пуçлăхĕсем тата депутатсем çине тăрсах ĕçлерĕç. Çĕпрелĕнчи çул-йĕр тăвакан предприяти (ДРСУ) çул тăвас ĕçе кăçалхи май уйăхĕнче пуçларĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех Аслă Аксу ялне каякан çулпа çыхăнтарса яла

çитичченех асфальт сарса пĕтерчĕç. З. Р. Галимов, В. Н. Борисов, А. Мухутдинов, Ф. Азизов, А. Яфизов рабочисем хăйсене шанса панă ĕç участокне пысăк пахалăхпа пурнăçларĕç. Мĕн пур ĕçсене В. В. Григорьев мастер ертсе пычĕ. Çĕнйĕлмелсем çул туса панăшăн район администрацийĕн пуçлăхне Р. Х. Хайруллина, çул-йĕр тăвакан предприятин пуçлăхне Г. Х. Хакимова тав тăваççĕ.

**(«Канаш», 1995, 31-мĕш №.)**

* * *

Создано землячество чувашей - выходцев из села Новое Ильмово Дрожжановского района Татарстана, входившего ранее в состав Симбирской губернии. Один из активистов землячества Николай Казаков-Ильмовский написал уже очерки об истории родного села и предложил проект его герба. Начат сбор средств на издание рукописи Казакова отдельной книгой.

**(«Симбирские губернские ведомости», 1995, 155-156-мĕш №.)**

**Письмо в газету**

## Почему я стал коммунистом?

Ответить на этот вопрос нелегко. Нелегко потому, что на моих глазах рушатся многие коммунистические ценности. На совести партократов миллионы загубленных жизней. Были и голод, и разруха. Все это мы знаем. А есть ли здесь вина самой партии? Не была ли она сама жертвой сталинизма? Об этом многие не задумываются, да и не хотят. Но партия, созданная В. И. Лениным, мне дорога.

Моим жизненным идеалом всегда была справедливость. Честным трудом зарабатывали на жизнь и мои родители. Так воспитывали они и меня. Когда я вырос, стал задумываться: правильно ли живем?

Процветали пьянство, сквернословие, драки, убийства. Воровство не имело своих границ - воруют все. Почему так происходит? Закономерно ли это? Понять этого я не мог.

Когда исполнилось семнадцать лет меня приняли в комсомол. Был очень счастлив. Об этом написал заметку в «Пионерскую правду» - опубликовали. Был октябренком, пионером. Не скажу, что в стране было все плохо. Пионерские сборы, походы в лес, песни у костра, имя Ленина стало мотивом всей моей школьной жизни.

Впервые я путешествовал по стране в 1977 году - ездил в Краснодарский край. Бесконечные его просторы, леса, реки, поля - все это богатство моей страны, моя гордость, Чтобы понять, что происходит в стране в последнее время, стал ближе к людям, чьи судьбы связаны с судьбой Родины, компартией. Когда предложили стать коммунистом, без колебаний встал в их ряды. Потому что коммунистические идеалы совпадали с идеалом моей жизни. Слова, сказанные Лениным о партии - ум, честь и совесть нашей эпохи - стали моим жизненным лозунгом. Рекомендацию дали люди, которые были примером в жизни - В. Мишурская и старый коммунист С. М. Лавкин. Партбилет вручил секретарь Тереньгульского райкома партии В. Ключников. Я горд, что в это трудное время не порвал с коммунистическими идеями, которые являются самыми гуманными и справедливыми.

**(«Новый день», 1994, 3-мĕш N.)**

# XIV. Хальхи самана çыннисем

**За активное участие в пропаганде марксистско-ленинской теории постановлением бюро Ульяновского обкома КПСС от 22 августа 1989 года товарищ КАЗАКОВ Александр Иванович занесен на областную доску Почета в Ленинском Мемориале.**

## Асаилӳре аваллăх чĕрĕлет

**(ОЧЕРК)**

Манпа юнашар лараканĕ - Александр Иванович Казаков. Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çуралса ӳснĕскер, халĕ Аслă Нагаткинăра (Чăнлă районĕ) пурăнать.

Иван Емельяновичпа Елена Михайловна ултă ача пăхса ӳстернĕ. Темĕнле йывăр пулсан та, вĕсене ашшĕпе амăшĕ пурнăçăн анлă çулĕ çине тĕрĕс-тĕкелех кăларнă. Çĕршыва усăллă çынсем пулччĕр тесе пĕрмаях тăрăшнă-çке. Амăшĕ кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăван колхозăн уй-хирĕнче, йĕтем çинче ĕçленĕ. Çаплах ашшĕ те ял хуçалăхĕнчи пĕр ĕçрен те юлман. Уйрăмах Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăнхи çулсенче пурнăç çăмăлах пулман. Колхоз уйăрса панă çĕр лаптăкĕсенче амăшĕ ачисене те ĕçе явăçтарнă. Çапла майпа Елена Михайловна вĕсене çĕр ĕçне хăнăхтарнă. Çăкăр хакне пĕлсе ӳснĕскерсем, ачисем пур ĕç вырăнĕнче те тăрăшса, чунтан ĕçленĕ.

Ӳссе çитĕнсен Александр (вăл 1951 çулхи, Иван Емельяновичăн пиллĕкмĕш ывăлĕ) ялти шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан, кӳршĕ ялти вăтам шкула вĕренме каять. Икĕ çултан Кивĕ Улхашри вăтам шкултан тарăн пĕлӳ илсе лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать. Шкулта вĕреннĕ чухнех тăван тавралăха, ялăн авалхи историне тĕпчеме пуçлать.

- Чăнлă çырминче мамонт шăммисен юлашкийĕсем тем чухлĕччĕ, чулсем çинче авалхи чĕр чунсен кĕлеткисен тата авалхи йывăç çулçисен йĕрĕсене пĕр хут мар асăрхарăм,- каласа кăтартать мана Александр Иванович,- миллион çул каялла пирĕн тăрăхри вырăнсем шыв айĕнче пулнине пĕр иккĕленмесĕр калатăп. Вăхăт иртсен çак вырăнсем шыв тĕпĕнчен тухаççĕ. «Ишекен континентсем» («Плавающие континенты») теорипе институтра вĕреннĕ чухне тĕплĕн паллашнăччĕ. Çавăн çине таянса çапла калама пултаратăп эпĕ.

Кил хуçийĕпе сĕтел хушшинче чей ĕçнĕ май вăхăт сисĕнмесĕр иртет. Асаилӳре ялăн аваллăхĕ чĕрĕлет. Васкамасăр унпа пĕрле килти архиври хутсене тишкеретпĕр. Çав вăхăтрах Александр Иванович аль-

бомри сăн ÿкерчĕксенчи çынсен пурнăçĕсем çинчен тĕлĕнмелле каласа кăтартать. Пурин çинчен те вăл лайăх астунине туйса илтĕм. Унтанах çакна та пĕлтĕм. К. П. Прокопьев чăваш шкулĕнчен 1890 çулта вĕренсе тухнăскер, юлашки вăхăтра Курганра пурăннă. Усрава илнĕ хĕрĕ - Соня темиçе çул каялла Константин Прокопьевич çуралса ÿснĕ ялта - Çĕнĕ Йĕлмелĕнче те пулса курнă,- тет вăл.

И. Я. Яковлев 1896 çулта Н. П. Вишневский патне çырнă çырăвĕнче К. П. Прокопьев çинчен асăнса çапла çырни пур:

«Многоуважаемый Николай Павлович!

Вчера я получил письмо от нашего бывшего воспитанника Семена Прокопьева, недавно принятого в Вашу Бирскую учительскую школу... Не излишне упомянуть, что старший его брат, окончивший курс у нас, очень способный человек и деловой, энергичный священник...». (Речь идет о К. П. Прокопьеве, окончившем Симбирскую чувашскую учительскую школу, а затем духовную академию. Ему принадлежит ряд трудов по истории чувашской культуры - **Н. К.**) Çак йĕркесене «И. Я. Яковлев. Из переписки» кĕнекери 137 страницăра вулама пулать. Çапла каласа кăтартрĕ А. И. Казаков. Асăннă кĕнекене ун патĕнче уçкаласа пăхатăп. Унта çырнă йĕркесене вулатăп. Ялăн кунçулне тĕпченĕ май çак паллă çыннăн пурнăçĕпе çыхăннă документсемпе мана паллашма çав тери кăмăллă пулчĕ. Сăмах май каласан, К. П. Прокопьев А. И. Казаковăн тăванĕ те пулать иккен. Константин Прокопьевич çинчен ăна унăн ашшĕ, Иван Емельянович каласа панă пулнă. Ашшĕн асаилĕвĕсене тĕплĕнрех çырса илменнишĕн паянхи кунччен те кулянать вăл. Апла пулса тухнă пулсан та Александр Ивановичăн мухтанма сăлтавĕ пур. Килĕнче паллă çыннăн сăн ÿкерчĕкĕ, иртнĕ ĕмĕрти документсем упранаççĕ. Акă ман ума тепĕр документ кăларса хучĕ. Унта çапла çырнă: "1905 года октября 21 дня я, нижеподписавшийся Симбирской губернии, Буинского уезда, Убеевской волости, села Ново-Ильмового Куста крестьянин Николай Михайлов заключили сии условия с одножителями крестьянами Василием Ефимовым и Емельяном Прокопьевым в том, что я, Михайлов сдам им, Ефимову и Прокопьеву один душевой собственный надел с причитающими луговыми угодьями сроком с ярового посева 1906 года до нового передела полос по личным душам т. е. сколько посевов придется до нового переучета. Ценой договорились чистого дохода за все время аренды 18 руб. и подачи казенные мир акта 1 га натуральной повинности должны исполнять ими, Ефимовым и Прокопьевым, деньги от Михайлова восемнадцать рублей получить от них все сполна. В том и подписываюсь, а за него неграмотного по его личной просьбе расписывался одножитель Дмитрий Никитович Сергеев. При написании сей условий расписались свидетелями одножитель Гаврила Герасимов, за неграмотного Герасимова по его личной просьбе расписался одножитель Алексей Иванов.

**Сельский староста села Новаго Ильмовый Куста**
**Егорь Андреев.**

Çак хут çинче çырса кăтартнă Прокопьев хушамат унăн мăнаслăшшĕ пулать. Çакнашкал документсем унăн архивĕнче сахал мар. Пурне те пĕлме юратнăран Александр шкулта вĕреннĕ чухнех тĕрлĕрен кружоксене çӳренĕ. Хăй ĕçлесе илнĕ укçапа «Смена» ятлă фотоаппарат туянать. Кружокра çамрăк каччă фотоӳкерчĕк ӳкерме, ăна кăларма тĕплĕн вĕренсе çитет. А. И. Ефремов учитель ăна фотографăн вăрттăнлăхне пĕлме вĕрентет. Ăна хальхи кунччен те вăл ырăпа çеç асăнать. Вăл ӳкернĕ фотоӳкерчĕксенче ялăн сăн-сăпатне, унта пурăнакан çынсен сăнарĕсене курма пулать. Çаксем уншăн чи хаклисем. Темиçе çул хушши ӳкернĕ фотонегативсем ялти музейре упранаççĕ.

Калаçса ларнă май манăн унăн пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлес шухăш çуралчĕ. Анчах та Александр Иванович хăйĕн çинчен каласа пама юратмасть. Ытларах пирĕн сăмах та ял историйĕ çинчен çеç пычĕ.

Тăван ялĕнче вара Иван Емельяновичăн ачисене ырлаççĕ, вĕсемпе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Пĕррехинче яла кайсан икĕ кинеми калаçса тăнине итлерĕм:

- Пăхăр-ха Иван Емельяновичăн ачисене, вĕсене ӳсĕр çапкаланса çӳренине нихăçан та курма çук,- тет пĕр кинеми хăйĕн ывăлне.

- Пирĕн те ачасене вĕсем пек ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тăратасчĕ,- тет тепри.

Казаковсем, чăнах та, Çĕнĕ Йĕлмелĕнче хисеплĕ çынсем. Александр Иванович ашшĕне эпĕ астумастăп. Анчах ваттисем каланă тăрăх, вăл ăста çын пулнă, хăйне тирпейлĕ те ăслă тытнă, ачисене те çапла вĕрентнĕ. Ывăлĕсемпе хĕрĕсем, ӳссе çитĕнсен, тĕрлĕ çĕре саланнă, ялта Петĕрпе Геннадий пурăнаççĕ.

Александр Иванович вăтам шкул пĕтерсен хăйĕн пурнăç çулне пĕчĕк ĕç вырăнĕнчен пуçланă, колхозра механизатор ĕçĕнче пĕр вăхăт хушши ĕçленĕ. Çав вăхăтрах института вĕренме кĕме хатĕрленнĕ. Совет Çарне илсе кайиччене Ульяновскри ял хуçалăх институчĕн механизаци факультетне вĕренме кĕрет. Салтакран старшина званийĕпе таврăнсан, Ульяновскри механически завода ĕçе вырнаçать. Çав вăхăтрах заочно вĕренет. Пĕр вăхăт хушши автозаводра та ĕçлет. Институтран вĕренсе тухсан Чăнлă районне ĕçлеме килет. Ял хуçалăх управленийĕнче аслă инженер пулса ĕçлет. Çав вырăнта нумай вăхăт хушши те ĕçлеймест, ăна урăх вырăна куçараççĕ. Районти почта çыхăну узелĕн начальникĕ пулса тăрать. Вунтăватă çул пĕр вырăнтах ĕçлет. Ялта çуралса ӳснĕскер, кунта та ĕçченлĕхпе, сăпайлăхпа палăрнă. Пĕрре кăна мар ăна районти пуçлăхсем мухтанă. Ĕçрен пушаннă хыççăн вăл каçсерен чăваш писателĕсен илемлĕ произведенийĕсене вуланă. Мăшăрĕ те унăн, Александра Николаевна - канăçсăр этем. Килти йĕркелĕх, çемье çирĕплĕхĕ, тĕпрен илсен, хĕрарăмран килет-çке. Ачисем те хăйсем пекех ĕçченлĕхпе палăраççĕ. Хĕрĕ Наташа - Канашри финанс техникумĕнче вĕренет. Ашшĕ пекех вĕреннĕ çын пулма ĕмĕтленет.

Çемçе диван çинче калаçса ларнă май вăхăт иртни те сисĕнмерĕ. Сăмах хыççăн сăмах явăнса пычĕ. Каç та пулчĕ. Ялăн пурнăçĕ тата авалхи историйĕ çинчен ытларах калаçрăмăр пулас. Çĕнĕ Йĕлмел ял

Совечĕн председателĕ Г. Карсаков ялăн историне пухас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ăна вăл алă пусса çирĕплетнĕ Хисеп Грамотине парса чысларăм.

Казаковсем пек çынсем çинче тытăнса тăрать ял. Тăван яла, тăван çĕре чун-чĕререн юратса пурăннине вĕсем сăмахпа мар, кулленхи пурнăçпа, хăйсен ĕçĕпе çирĕплетсе параççĕ. Вĕсем пек пулма тăрăшасчĕ пирĕн пурин те. А. И. Казаковăн пурнăçĕ ял çыннисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать те.

* * *

## Пур çĕре те ĕлкĕрет

Геннадий Николаевич Карсаков Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 1956 çулта нумай ачаллă çемьере çуралнă. Ашшĕпе амăшĕ хресченсем. Ялта сакăр класс пĕтерсе тухсан Ульяновск облаçĕнчи Кивĕ Улхашра вăтам пĕлӳ илнĕ. Çавăн хыççăн Канашри педучилищĕне вĕренме кĕрет. Совет Çарĕнчен таврăннă хыççăн 1978 çулта унтан вĕренсе тухать. Çакăн хыççăн Кивĕ Чакă ялĕнче музыка тата физкультура учителĕ, 1979 çулта Кивĕ Йĕлмелĕнчи пуçламăш шкулта учитель пулса ĕçлет. Заочно Хусанти пединститутран вĕренсе тухать. 1989-1991 çулсенче Ростоври партин аслă шкулĕнче журналистика уйрăмне пĕтерет. Авланнă, икĕ ача пăхса ӳстерет.

Пысăк ĕмĕтпе пурăнать вăл. Пушă вăхăт тупăнсанах кĕнеке вулама юратать. Уйрăмах истори темипе çырнă авторсен кĕнекисене. «Çĕнĕ çул», «Канаш», "Сувар" хаçатсен обществăлла корреспонденчĕ, таврапĕлӳçĕ.

* * *

## А. КАЗАКОВ: «Куç умĕнчех ӳссе çын пулчĕ»

Виталий Николаевич Пришельцевпа эпир пĕр касăра (Пасар кассинче П. М. Миронов çуралнă урамра) Çĕнĕ Йĕлмелĕнче çуралса ӳссе çитĕннĕ çынсем. Вăл манран 7 çул кĕçĕнрех. Урамăн тепĕр енчи ретре пире хирĕçле çуртра П. М. Миронов çуралнă вырăнпа юнашар пурăнатчĕ вĕсен çемйи. Унăн икĕ тетĕшĕ, вĕсенчен пĕри Федя ятлăскер (манпа пĕр çулхи), ачана хăйсенчен хăвармасăр çавăтса çӳретчĕç. Çапла эпир ача чухнех вăхăтсене пĕрле выляса-кулса ирттернĕ. Вăрçă çулĕсенчи йывăр вăхăтсенче пурăнма çăмăл пулман. Аттесем вăрçăра пулнă. Темĕнле йывăр вăхăт пулсан та манăн куç умĕнчех çитĕнсе çын пулчĕ Виталий, прицепщик-плугарьтен райпо председательне çитрĕ. Вăл вăхăтра шкулта çичĕ çул çеç вĕреннĕ, эпĕ çиччĕмĕш класра чухне вăл 1-мĕш класра вĕренме пуçларĕ. 1954 çулта çичĕ класс пĕтерсе тухрĕ.

Лайăх вĕренсе тухрĕ пулин те малалла вĕренме кайма май пулмарĕ ăна. Аякка вĕренме каймалла. Вăрçă хыççăнхи çулсенче те çăмăл пулмарĕ-ха пурăнма. Тăхăнмалли çук, выçăллă-тутăллă пурăнмалла, укçа-тенкĕпе те йывăр. Çавăнпа та шкул хыççăнах ĕçе кӳлĕнмелле пулчĕ унăн, колхозра прицепщик-плугарь пулса ĕçлеме пуçларĕ. Александр Карсаков, Михаил Мискин трактористсемпе пĕрле ĕçлерĕ. Вĕсем унăн наставникĕсем пулса ăна салтака кайиччен пулăшса пычĕç.

...Ялти «Красный Восход» урамне пысăк çырма уйăрса тăрать. Унта пурăнакансем хăйсем патĕнче магазин çуккипе тарăхаççĕ. Ялти магазина çырма урлă çӳремелле, çуркуннепе кĕркунне çӳреме питĕ кансĕр. Магазин валли çурт та илсе лартрĕç. Анчах лавккаç пулса ĕçлеме килĕшекен çын пулмарĕ. Çак вăхăтра Виталий çартан таврăнать. Ăна райпона чĕнтереççĕ.

- Сирĕн ялти «Красный Восход» урамĕнче пурăнакансем магазин ĕçлеменнипе тертленеççĕ, унта ĕçлеме лавккаç çукки тарăхтарать,- сăмахлать райпо председателĕ.

- Çапла, илтрĕм...- тавăрать Виталий.

- Тен, унта ĕçлеме эсир килĕшетĕр? - шикленерех калать председатель. Çав вăхăтрах хăй Виталий мĕн каласса кĕтет.

- Ĕçлеме эпĕ хирĕç мар,- тавăрать çамрăк каччă кăшпах шухăшланă хыççăн.- Анчах пултарайăп-ши? Шут ĕçĕпе нихăçан та аппаланса курман...

«Кăна магазина явăçтарма пулать»,- шухăшлать председатель, анчах хăйĕн савăнăçне пĕлтерме васкамасть-ха. Калаçу хыççăн хăйĕн çар хыççăн канмасăрах Виталий çак пĕчĕкçĕ магазинра лавккаç пулса ĕçлеме пуçлать. Ĕç унăн кăмăлне каять. Тепĕр çулхинех Хусанти кооперативнăй техникума заочно вĕренме кĕрет, 1968 çулта унтан вĕренсе тухать.

«Красный Восход» урамĕнчи магазинра 3 çул ĕçленĕ хыççăн ăна 1966 çулта райпо бухгалтерĕ пулса ĕçлеме куçараççĕ. Çакăнта ĕçленĕ чухне хăйĕн пĕлĕвĕ çителĕксĕррине туять вăл. Çавăнпа та 1969 çулта Мускаври кооперативнăй институтра заочно вĕренме пуçăнать. 1974 çулта çакăнтан ăнăçлăн вĕренсе тухать. Малалла аслă бухгалтер, суту-илӳ хозрасчетлă пĕрлешĕвĕн тĕп бухгалтерĕ, 1976-85 çулсенче вăл хатĕрлев кантурĕн (заготконтора) директорĕ пулса ĕçлет, унтан райпо председателĕн суту-илӳ енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулса тăрать. 1991 çулхи март уйăхĕнче ăна райпо председательне суйлаççĕ.

Кирек мĕнле ĕç шанса парсан та Виталий Николаевич ăна чыслăн пурнăçласа пырать, вăй-халне шеллемест. Суту-илӳ ĕçĕнче халĕ питĕ йывăр тапхăр: магазинсем пушă, кирлĕ япаласене туянма çук... Темĕнле йывăрлăхсем пулсан та райпо юлашки 5 çуллăх таварçаврăнăшпе тата ытти енĕсемпе те плана ăнăçлăн пурнăçлать. Вăл малашне те пурнăçласа пырĕ. Мĕншĕн тесен ăна 30 çула яхăн суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекен, «Отличник потребительской кооперации» знакне тата темиçе Хисеп грамотисемпе наградăланă В. Н. Пришельцев ветеран ертсе пырать. Малашне ашшĕ çулĕпе Светлана ятлă хĕрĕ кайĕ, халĕ вăл çак тĕллевпе Мускаври кооперативнăй институтра вĕренет. Чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх, вăй-хал сунатпăр çулсемпе ултăмĕш теçетке çине куçнă ĕçчене.

**("Канаш", 1992, 27-мĕш №.)**

## Хăй ĕçĕнче ăстаçă

Кăçалхи апрель уйăхĕн пуçламăшĕнче эпĕ Çĕнĕ хулара пурăнакан П. И. Казаков патĕнче хăнара пулса куртăм. Тĕлпулу кĕтмен çĕртенех пулса иртрĕ. Ырă чунлă çынпа мана хамăн чи çывăх юлташ паллаштарчĕ.

Унпа курса калаҫма ӗмӗт тахҫантанпах ҫуралчӗ. Анчах... Тӗрлӗ сӑлтавсене пула Петр Ивановичпа вӑхӑтӗнче курса калаҫма май килмерӗ. Ҫине тӑмасан пӗр ӗҫе те пурнӑҫа кӗртме ҫук ҫав. Хамӑн пӗтӗм ӗҫе пӑрахсах телефонпа шӑнкӑравларӑм. Телефон кӗпҫине Петр Иванович тытрӗ.

Хампа паллаштарсан унпа тӗл пулса калаҫма кӑмӑл пурри ҫинчен пӗлтертӗм. Вӑл килӗшрӗ. Унӑн килӗнче тӗл пултӑмӑр. Мӑшӑрӗ - Людмила Сюмгина Тимӗрҫентен. Кӑмӑллӑскер. Эпӗ пырса кӗнӗ чухне тӗпелте кашӑк-тирӗк шӑкӑртаттаратчӗ. Сахал-им килте хӗрарӑм валли ӗҫлемелли. Пӳрт-ҫурчӗ таса та тирпейлӗ. Кашни япала хӑйӗн вырӑнӗнче.

Сӑмаха пуҫарса яма кил хуҫи хӑй пулӑшрӗ. Унпа иксӗмӗр паянхи пурнӑҫ ҫинчен калаҫса ларнӑ май чылай ҫул каялларах пулса иртнисене те аса илтӗмӗр. Ҫав вӑхӑтрах арӑмӗ ҫӑкӑр касрӗ, варени банки уҫрӗ, калаҫӑва пирӗнпе хутшӑнмарӗ вӑл. Хушша кӗрсе пире чӑрмантарас мар терӗ пулмалла. Хӗрӗ - Марина садике ҫӳрет. Мана ашшӗ илсе панӑ вылямаллисене кӑтартрӗ.

- Кур-ха, пачах вӑтанмасть,- тӗлӗнчӗ амӑшӗ,- ача-пӑча тени ют ҫын килсен кӑмака хыҫӗнчен тухакан марччӗ. Хамӑр ҫапла ӳснӗ те... Ку вара... Саманине кура-ши, пӗчӗккисем те ытла хӑюллӑ халӗ, шутсӑр харсӑр.

Хӑна килнӗ ятпа кил хуҫийӗ килти сӑрапа хӑналарӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Петр Ивановичӑн чӗлхи-ҫӑварӗ пушшех уҫӑлса япшарланчӗ. Калаҫма та ҫӑмӑлах калаҫрӗ. Хӑйне тахҫантанпа пӗлекен ҫынпа тӗл пулнӑ пекех тытрӗ. Ӑшӑ кӑмӑллӑскер килти савӑнӑҫне пӗртте пытармарӗ. Ҫемьере тату пурӑнаҫҫӗ вӗсем. Килте мӗн кирли веҫех пур. Арӑмӗ, Людмила Васильевна, бухгалтер. Ӗҫ коллективӗнче хисепре.

Ҫав хушӑрах ман ума помидорпа хӑяртан тунӑ салат тата ытти тутлӑ апат-ҫимӗҫ кӑларса хучӗ.

- Ҫи-ха, ҫи... Пасарта туянман, хамӑр хатӗрленӗ... Атте, Иван Петрович, вӑрҫӑран таврӑнсан, пӗтӗм ӗмӗрне шкулта хуҫалӑх заведующийӗ (завхоз) пулса ӗҫлерӗ. Сӑра-эрехпе ашкӑнман, чипер пурӑнма тӑрӑшнӑ,- терӗ Петр Иванович ман ҫине савӑнӑҫлӑ куҫпа пӑхса.

Сӑмах ҫине сӑмах. Ыйту хыҫҫӑн ыйту патӑм ӑна. Вӑл хӑйӗн кунҫулне тӗкӗр ҫинчи пек кӑларса хучӗ. Кивӗ Улхашри (Чӑнлӑ районӗ) вӑтам шкултан вӗренсе тухсан пӗр вӑхӑт хушши Бауман ячӗпе хисепленсе тӑракан колхозра механизатор пулса ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах Ульяновскри ял хуҫалӑх институтне заочно вӗренме кӗрет. Совет Ҫарӗнче хӗсметре пулнӑ вӑхӑтра ҫӗршыври тӗрлӗ хуласенче пулса курать. Китай патшалӑхӗнчен инҫе те мар вырнаҫнӑ вырӑнта юлашки ҫур ҫулне ирттерет. Ҫартан патшалӑхӑн тӗрлӗ наградисемпе таврӑнать. Тепӗр уйӑхранах хулари механически завода ӗҫе кӗрет, вӗренӗве малалла тӑсать. Тӑватӑ курс пӗтерсен ӑна механик должноҫне лартаҫҫӗ. Ҫак ӗҫре 1979 ҫулччен ӗҫлеме пултарнӑ. Ун хыҫҫӑн авиакомплексра цех начальникӗ пулса пӗр вӑхӑт хушши вӑй хурать. Халӗ вӑл Раҫҫейри авиаци материалӗсен институчӗн Ульяновскри филиалӗнче аслӑ специалист пулса ӗҫлет.

Петр Иванович коммунист ятне вараламан. Халӗ те вӑл чунӗпе

коммунист. «Ёçне кура хисепě»,- тенě ваттисем. Çак сăмахсене вăл тивěçлех. Çакăнта ěçлекенсем ăна хисеплесе ěçченлěхшěн мухтаççě. Хăй ěçěнче вăл чăн-чăн ăстаçă. Арăмě çуралса ÿснě ялта унăн çывăх çыннисем пурăнаççě. Вěсем те ăна чун-чěререн хисеплеççě. Çакăн пек çын вăл, Петр Иванович.

* * *

## Ал айěнчех-çке пуянлăх...

...Ун чухне тěреклě кěлеткеллě, яштака пÿллě каччă вунултă çул тултарсанах тăван килтен инçете тухса кайма шутламарě. Кивě Улхашри вăтам шкула вěренме кăмăлě пурри çинчен пěлтерсе заявлени çырса пачě. Вěренÿре унăн тăрăшулăхě палăрчě, пур предметсемпе те пěр танах вěренсе пыма тăрăшрě каччă. Уйрăмах ял хуçалăхěпе çыхăннă предметсене тěпе хурса вěренчě. Шкул программипе çырнă кěнекесемсěр пуçне библиотекăран илсе килнě кěнекесене тишкерчě. Ял хуçалăх техникипе хирте акса ÿстерекен тыр-пулсен технологине тěплěн вěренме тăрăшрě. Сăмах пирěн Николай Михайлович Мискин çинчен пырать. Агроном пулас шухăш ăна çав çулсенчех канăçсăрлантарма тытăннă. Вăл Ульяновскри ял хуçалăх институтне вěренме кěрет. Çав çулсенче Улхаш хěрěпе О. Алляпа çывăх паллашать. Мăшăрлă пулаççě. Вěсем пилěк ача пăхса ÿстереççě. Кил хуçи çирěп йěркелěхшěн кěрешет-тěк, çемье те тěреклě, ялта ырă ятлă. Оля мăшăрě йăваш, ырă кăмăллă, çурхи чечек пек илемлě. Ялти сбербанкра нумай çул хушши ěçлет ěнтě.

Çамрăк чухне Николай Михайлович комбайнер, тракторист тата ытти ял хуçалăх ěçěсенче ěçлесе курнă. Ялăн йывăр пурнăçне хăйěн аллинчи пилěк пÿрнисене пěлнě пекех пěлет. Унăн ашшě, иртнě вăрçă участникě Михаил Петрович, çěре кěричченех колхозра çирěп йěрке тăвассишěн кěрешнě, ял-йыш ăна ăста платник пулнипе пěлет. Улми йывăççинчен аякка ÿкмест тенě пек, ашшěн тěрěс çулне ывăлě малалла тăсса пырать.

Мискинсен çемйи çырма айккинчи çěнě те пысăк çуртра пурăнать. Николай Михайлович, тин кăна колхозран таврăннăскер, апат çиме ларичченех килти ěçсенче арăмне пулăшма васкарě. Выльăхěсене апатлантарчě, урамри техникине тепěр хут тěрěслерě. Пурте хатěр. Пÿрте те кěме юрать. Сăнран пăхсан ăна хěрěх сакăр çулта тесе калаймăн. Çамрăк сăнлă, питěнче пěркеленчěк паллисем пачах çук. Куçěсем çамрăк чухнехи пекех йăваш та илěртÿллěн çиçсе тăраççě.

Ал тытса саламланă хыççăн кил хуçи мана килне кěме чěнчě. Сăмах пирěн тÿрех ял хуçалăх производстви çине куçрě.

- Ял çыннин ěçě нихăçан та çăмăл пулман. Паян пушшех те йывăр çěр ěçченне. Ёç укçине пěлтěрхи август уйăхěнченпе паман. Йывăрлăха пăхмасăр ял-йышсем колхозра тÿрě кăмăлпа вăй хураççě: пěрисем уй-хирте, теприсем выльăх-чěрлěх пăхаççě. Пирěн хуçалăх нумай отрасльлě, выльăх-чěрлěх продукчěсем туса илес, тěш-тырă, сахăр кăшманě ÿстерес енěпе ěçлет. Колхозăн 650 ěне (вěсенчен икçěрěшě - сăваканнисем), пин ытла сысна, 1850 гектар çěр лаптăкě, вěсенчен 1607 гектарě - сухалакан çěрсем. Пěлтěр пěрчěллě тата пăрça йышши культурăсене кашни гектартан вăтамран - 31,4 центнер, кукуруза тěшши - 72 центнер, çěр улми -

183 центнер, сахăр кăшманĕ - 153 центнер туса илтĕмĕр. Колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсен сорчĕсене çĕнетес ĕçре Ульяновск облаçĕнчи ял хуçалăхĕн наукăпа тĕпчев институчĕн ученăйĕсемпе тачă çыхăну тытать. Хуçалăхра кашни çулах «Саратовская-5» ыраш, «Симбирская» çурхи тулă, «Днепровская-220» урпа, «Труженик» пăрça сорчĕсене акатпăр. Виç-тăвать çул каялла хуçалăхра 5-шер центнер çурхи туллăн «Ишеевская» çĕнĕ супер элита сортне, сĕллĕн «Голап» тата «К-127» амарант» сорчĕсен вăрлăхĕсене акнăччĕ. Урожай тухăçлă пулнăччĕ. Ĕлĕкрех пулас тухăç валли 520 тонна минераллă удобренисем туяннăччĕ. Халĕ вара...

Сăмах вĕçленсен эпĕ Николай Михайловичран «Ильмово» колхоза еплерех майпа йĕркелесе яни çинчен каласа пама ыйтатăп.

- 1991 çулхи март уйăхĕнче колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ.Çавăн чухне Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ хăй пĕр колхоз пулса тăчĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ятне те ял ячĕпе çыхăнтарчĕç колхозниксем. Колхоз председателĕ пулма мана суйларĕç. Ĕлĕкрех (30 çулсенче) ял хăйне уйрăм колхоз пулнă. Пĕр вăхăт хушши Ленин ячĕпе хисепленсе тăнă. Çав вăхăтрах ялăн тепĕр енче Суворов ячĕллĕ колхоз вырнаçнă. Пĕр вăхăтра ялта икĕ пĕрлешӳллĕ уйрăм хуçалăх ĕçлеме пултарнă. Каярахпа Ленин ячĕпе хисепленсе тăракан колхоз Япалак ялĕнчи хуçалăхпа пĕрлешсе Бауман ячĕпе хисепленсе тăракан колхозниксене пĕрлештерекен хуçалăх пулса тăрать. Паян акă каллех уйрăм хуçалăх. Ăна йĕркелесе янăранпа 5 çул çитрĕ...

Юлашки вăхăтра мана хуçалăхра темиçе хутчен те пулса курма тӳрĕ килчĕ. Çакăнта ĕçлекенсемпе курса калаçнă хыççăн пĕр ĕнерен уйăхра вăтамран 194 килограмм сĕт суса илни çинчен, самăртма хупнă ĕне-выльăхсем талăкра 765 грамм, пăрусем - 543 грамм, сыснасем - 280 грамм ӳт хушни çинчен пĕлтĕм. Лару-тăру, паллах, кунта та çăмăл мар. Запас пайĕсем, минераллă удобренисем, çункăç илме те укçа-тенкĕ çук. Çапах та хуçалăхри механизаторсем техникăна юсаса пĕтернĕ.

- Ĕлĕкхи пек çĕнĕ техника туянаймăн,- тет Николай Михайлович,- çавăнпа мĕн пуррине тӳрлетсе ĕçре усă курма тивет. Ял çынни хĕл кунĕнче те, çулла та алă усса ларма хăнăхман, вĕсене ĕçе явăçтарни, пĕлсе ертсе пыни кăна кирлĕ... Вырăнти çĕрсемпе пĕлсе усă курсан вуншар миллион тенкĕлĕх тупăш илме пулать. Ал айĕнчех-çке пуянлăх...

Н. М. Мискин çĕр ĕçне ăнсăртран суйласа илмен. Вĕренсе пĕтерсенех хăй суйласа илнĕ профессипе ĕçлет. 1972 çултанпа КПСС членĕ, Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ, И. Я. Яковлев ячĕллĕ чăваш обществин членĕ, хисеплĕ таврапĕлӳçĕ.

...Ирхине ирех хулана каймалла тесе Амосовсен кил-çурчĕ умне пырса тăтăм. Вăл Çĕпрелĕнче ĕçленипе яла машинăпа килкелет, унпа пĕрле ларса кайма килĕшнĕччĕ. Урамра тĕттĕм пулсан та тул çутăлни палăратьĕнтĕ. Николай Михайлович (çак урамра пурăнать вăл) ял-йыш вăраничченех колхоз правленийĕн çурчĕ еннелле утни курăнса кайрĕ. Ĕç кунĕ унăн ирех пуçланса каç пулсан çеç вĕçленет.

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет: Н. М. Мискинăн

пурнăçĕ ял-йышшăн ырă тĕслĕх. Вăл çынсене кăмăл-шухăшпа лайăхрах пулма, пĕр-пĕрне хисеплеме, ĕçе юратма, çирĕп йĕркелĕхшĕн кĕрешме хистет, вĕрентет. Ан тив, пирĕн хушăра çавăн пек çынсем йышлăрах пулччĕр.

* * *

## Ёнер тинĕс çӳревçи, паян...

...Çар хĕсмечĕ вĕçленчĕ. Малалла ăçта каймалла: вĕренме е ĕçлеме? Леонид Вожаровский ку ыйтăва çар хĕсметĕнче пулнă вăхăтрах татса панă. Çамрăкăн пăрахут çинче ĕçлес кăмăл пулнă. Салтакра пĕрле пулнă юлташĕсемпе канашласа Новороссийск хулинчи тинĕс çӳрев училищине вĕренме кĕнĕ. Вĕренĕвĕн икĕ çулĕ сисĕнмесĕрех иртнĕ. Алла документ (ВИЗА) илсен Леонида «Сплит» ятлă пăрахут çине ĕçлеме яраççĕ. Пĕрремĕш хут вăл инçетри тинĕс çулçӳревне тухса каять. Итали - Куба - Испани çĕршывĕсене çитсе курать. Виçĕ уйăха яхăн çулçӳревре пулать. Паллах, çак ĕçре пурте ĕçлеме пултараймаççĕ. Ĕçе илнĕ чухне те пĕрремĕш вырăнта сывлăх енчен çирĕп пулни кирлĕ. Леонид вара сывлăхран аптраман. Йывăр ĕçрен хăраса тăман. Мĕн хушнине кăмăлтан пурнăçласа пынă. Акăлчан чĕлхине аван пĕлни те ăна ют çĕршывра çӳреме хавхалантарнă.

Практикăран таврăнсан тин ăна матрос-моторист профессине илни çинчен калакан хут (свидетельство) панă. Çуралса ӳснĕ ялне кайса курса килеймесĕрех инçетри тинĕс çулçӳревне тухса каять вăл. Хальхинче «Жданов» теплоходпа Куба - Франци - Англи маршрутпа ют çĕршывсене нефть продукчĕсене илсе çитернĕ çĕрте пулать. Кунта та пуçлăхсем мĕн хушнине пĕтĕмпех пурнăçлать вăл. Кĕске вăхăт хушшинчех Леонид Чили, Бразили, Инди, Япони, Египет, АПШ (Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем), Аргентина çĕршывĕсене çитсе курать. Унти çынсен пурнăçĕпе паллашать, вĕсемпе çывăх туслашать.

- Ют çĕршывсенчи лавккасене çӳреме виçĕ матроса çеç кăларатчĕç: вĕсенчен пĕри коммуннист пулмалла пулнă. Пĕр-пĕринчен уйрăлса çӳреме те юрамастчĕ. Уйăхра пире 30 АПШ долларне (ун чухне 1 доллар 65 пуспа танлашнă) кунсăр пуçне тата ытти патшалăхсен укçисене те паратчĕç,- аса илет Леонид.- Килти альбомра манăн инçетри туссемпе асăнмалăх ӳкерттернĕ фотоӳкерчĕксем упранаççĕ. Хăш-пĕр чухне вара, тинĕсе тунсăхласа çитсен, альбома уçкаласа пăхкалатăп та чун уçăлсах каять, кичемлĕх те иртсе кайнăнах туйăнать вара.

Леонид Вожаровский виçĕ çул çурă ĕçлет çакăнта. Авлансан ирĕксĕрех тинĕспе сывпуллашмалла пулса тухать.. Сăлтавĕ каламасăрах паллă ĕнтĕ. Арăмĕпе пĕчĕк ачисене пĕччен килĕнче пăрахса хăвараймăн. Тинĕс çулçӳревçин ĕçĕ çапла. Çур çула яхăн та çыран çине тухмасăрах тинĕсре çӳреме пултараççĕ.

- Ман хыççăн çак ĕçре ĕçлеме Женя Утеевпа Миша Патшеев пычĕç, анчах вĕсем тăван яла таврăнаймарĕç. Çамрăклах çĕре кĕчĕç,- ассăн сывласа ячĕ Леонид.- тăприсем çăмăл пулччĕр вĕсен. Вĕсем манăн ентешсемччĕ.

Халĕ Л. П. Вожаровский хулари таксистсен паркĕнчи моторсене юсакан цехра ĕçлет. Вăл ĕçлекен коллектив çăмăл машинăсен моторĕсене

юсать. Кунта пурте хӑйсен техникине юсаттарма пултараҫҫӗ. Заказне маларах парса хумалла ҫеҫ. Леонидӑн ӗҫӗпе предприяти пуҫлӑхӗ В. Г. Шинтин питӗ кӑмӑллӑ. Кирек мӗнле яваплӑ ӗҫе те ӑна кӑна шанса параҫҫӗ кунта. Пӗлеҫҫӗ, хушнӑ ӗҫе Леонид пурнӑҫлатех. Ӗҫе вӑл пуринчен малтан пырса ҫитет те килне вара чи юлашкинчен кӑна каять. Вӑл юсанӑ мотор вӑрахчен ӗҫлет иккен. Ҫакӑ вӑл хӑйӗн ӗҫне тӗплӗн тунине пӗлтерет. Вӑл кунта чӑн-чӑн маҫтӑр.

* * *

## Пирӗн обществӑлла корреспондент

Александр Ананьевич Казаков ӗҫ стажне хӗрӗх ҫул каялла, Хурӑнварти вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, 1951 ҫулхи август уйӑхӗнче пуҫланӑ. Ун чухне ӑна Чӑваш Паснапуҫӗнчи (Ҫӗпрел районӗ) ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкула математика тата чӑваш чӗлхипе литература учителӗ пулса ӗҫлеме янӑ. Кунта ӗҫленӗ вӑхӑтрах Совет Ҫарне илнӗ, кун хыҫҫӑн виҫӗ ҫула яхӑн Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче хӗсметре тӑнӑ. Унтан таврӑнсан каллех Чӑваш Паснапуҫӗнче, Кивӗ Чакӑра тата Аслӑ Аксури вӑтам шкулсенче ачасене вӗрентнӗ. Ӗҫленӗ хушӑрах Ульяновскри пединститутран заочно вӗренсе тухать. 1958 ҫултан пуҫласа паянхи кунччченех (33 ҫул) хӑйӗн тӑван ялӗнче, Ҫӗнӗ Йӗлмелӗнчи вӑтам шкулта математикӑна вӗрентет. Вӑл пӗр вӑхӑтрах - класс руководителӗ, шахмат кружокне илсе пырать, ҫаплах ытти обществӑлла ӗҫсене активлӑ хутшӑнать. Ҫӗпрел районӗнче тухса тӑракан «Ҫӗнӗ ҫул», Ульяновскри «Канаш», Хусанти "Сувар" хаҫатсенче унӑн калавӗсем, шӳчӗсем, статйисем тӑтӑшах пичетленеҫҫӗ. Вӑл Ульяновск облаҫӗнчи Чӑвашсен И. Я. Яковлев ячӗпе хисепленекен культурӑпа ҫутӗҫ обществин пуҫламӑш организацин председателӗ те. Пуҫламӑш организаци нумай пулмасть кӑна йӗркеленнӗ пулсан та, унта учительсемпе вӗренекенсем 58 ҫын йышра тӑраҫҫӗ. Унӑн ретне кӗрес текенсем татах та йышлӑ. Общество членӗсем Чӑнлӑ районӗнчи Чӑвашкасси ялӗнче И. Я. Яковлев Кунне ирттернӗ ҫӗре активлӑ хутшӑнчӗҫ, ҫаплах Ульяновскри акатуйне те ҫитрӗҫ. Унта та, кунта та фольклор ушкӑнӗ хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартрӗ.

Музей совечӗн членӗ пулнӑ май, ялта краеведени музейне йӗркелес енӗпе те чылай ӗҫлет Александр Ананьевич. Ҫав пулас музей валли нумай экспонатсем пуҫтарнӑ та ӗнтӗ. Ял, шкул, чиркӳ историйӗсене, паллӑ ҫынсен кун-ҫулӗсем ҫинчен архив материалӗсем тӑрӑх, ватӑ ҫынсем каланисене шута илсе тӗпчесе ҫырать ветеран. Ҫав материалсенчен чылайӑшӗ районта тухса тӑракан хаҫатра та пичетленнӗ.

А. А. Казаков учитель мӗн чухлӗ ҫынна пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларманши! Акӑ вӗсенчен хӑш-пӗрисем ҫеҫ: П. П. Головин - СССР Халӑх учителӗ, РСФСР Тава тивӗҫлӗ учителӗ, Н. И. Калаков - полковник, Ҫар академине пӗтернӗскер, В. И. Мресов - майор, МВД академине пӗтернӗскер, Н. М. Мискин - Тутар АССРӗн тава тивӗҫлӗ агрономӗ, ҫӗнӗрен йӗркеленнӗ «Ильмово» колхоз председателӗ, И. В. Изендеев, совхоз директорӗ, Ульяновск облаҫӗнчи хуҫалӑхсенчен пӗринче ӗҫлекенскер, Т. Н. Великанов - экономист-агроном, В. Н. Пришельцев - райпо председателӗ, Г. Н. Карсаков - ял Совечӗн вырӑнти самоуправленийӗн пуҫлӑхӗ, Ростоври Партин аслӑ шкулӗн журналис-

тика уйрăмне пĕтернĕскер, Н. М. Николаева - врач, П. Н. Егоров - Çĕнĕ Йĕлмелĕнчи вăтам шкул директорĕ... Пурне те çырса та пĕтерес çук.

Юлашкинчен çакна калар: вăл утса тухнă 40 çул - çăмăл пулман, пирĕн юбиляр унпа хăюллăн утнă, тĕл пулакан йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлнĕ. Ăна «Ĕç ветеранĕ» медальпе тата йышлă грамотăсемпе наградăланă. Малашне те çирĕп сывлăх сунар педагогика ĕçĕн ветеранне А. А. Казакова.

**(«Капаш», 1991, 24-25-мĕш №№.)**

Вулакансем А. Казаков çырнă хайлавсене савса вулаççĕ. Çыравçă çырнисем çăмăл вуланаççĕ. Кĕнеке валли эпĕ унăн кулăшла тĕрленчĕкĕсене суйласа илтĕм? Акă вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем.

## Пуçлăха ларсан...

...Нинукпа Верук самăртма хупнă выльăхсем патĕнче килĕшгерсе ĕçлерĕç. Май килнĕ чух хăйсен килĕнчи выльăхĕсем валли те апат-çимĕç илсе кайни пулкаланă. Пĕр-пĕрне яланах курмăш пулнă. "Эсĕ мана ан кур, эп - сана" - пулнă вĕсен хушшинчи шаннă сăмах. Çакăн пек пурăнкаланă хушăра Верука хăйсем ĕçлекен фермăра пуçлăх туса хураççĕ.

- Нинук, мĕн тума сысна апатне килне илсе каятăн? - тепĕр кунне тытса чарчĕ ăна Верук çул çинче.

- Чим-ха, Верук, иксĕмĕр пĕрле ĕçленĕ вăхăтра яланах кăштах илсе кайкаланă вĕт-ха, кун пек шавлар мар.

- Ун пек те пулнă пулĕ. Халĕ вара эпĕ ферма пуçлăхĕ. Манăн вăрăсене чармаллах. Унсăрăн самăртма хупнă выльăхсем те лайăх ӳсĕм параймĕç. Уншăн мана айăплама пултараççĕ.

## Кĕске хулăсем

- Ох, йывăр та пулчĕ паян...
- Мĕн йатрăн вара çав тери?
- Задача йывăр пулчĕ.

* * *

- Мĕнле ваксене тĕрĕс ваксем, мĕнлисене тĕрĕс мар ваксем тесе калаççĕ? - ыйтать ачасенчен математика учителĕ.

- Йăнăшсăр çырнă ваксене тĕрĕс ваксем, йăнăшпа çырнисене тĕрĕс мар ваксем теççĕ,- тет пĕр вĕренекен.

* * *

- Çак интегралсемпе ниепле те задача шутлаймастăп.
- Çавна та пĕлместĕн-и? Эпĕ питĕ лайăх пĕлеттĕм.
- Ăнлантарса пар-ха, эппин?
- Э, маннă çав.

## Ăспару

Ĕçре мухтава тухас тесен, пуçлăха юрама пĕл. Унсăрăн эсĕ начар ĕçлекенех шутланăн.

* * *

Критикăлла статья çырма лартăн пулсан, унăн "геройĕпе" мĕнле тытăçу пулассине малтанах картса хур.

* * *

Пуртăпа мăлатук тытнипех платник пултăм тесе ан мухтан, кăранташпа блокнот тытнипех сăвăç пултăм тесе кăкăрна шаккама ан васка.

* * *

Пилĕк йĕркеллĕ заметкуна пилĕк кун çырнипех ялкор пултăм тесе ан кала.

# Сисмекей Мĕтри

## (К А Л А В)

Трихван Мĕтри фермăра ĕçлекен илемлĕ сăн-питлĕ яштака кăна Нинук ятлă чиперкке хĕре кăмăлласа пăрахрĕ. Мĕтри те япăх мар каччă, апла пулин те Нинук Мĕтрие темшĕн савмасть. Çакăн çинчен тўрремĕнех калама та хăюлăх çитерейместь. «Каярахпа хăех сиссе илĕ те, килме пăрахĕ», - тесе шухăшларĕ.

-Хăв çине тăхăнма йĕркеллĕ костюму та çук-ха, çапах хĕрсем хыççăн чупатăн, - терĕ ăна пĕррехинче Нинук, ун çинче лайăх костюм пур çинчех, юриех хайĕнчен сивĕтесшĕн пулса.

Тепĕр кун каçхине Мĕтри хаклă тăракан костюм тăхăнса Нинук патне пычĕ. Анчах Нинук унпа калаçасшăн та пулмарĕ.

- Темшĕн кăмăлсăр эсĕ? - терĕ Мĕтри çакна сиссе.

- Аллу çине йĕркеллĕ сехет те çыхса курман-ха эсĕ, çапах çынна кăмăлсăр тесшĕн, - пат татса хучĕ хĕр.

Мĕтри тарăхсах çитрĕ. Унăн аллинче «Полет» сехет, ылтăн корпуслă çеç мар. Калĕччĕ мĕн те пулин, хĕр çилленесрен хăрать. Тепĕр кунне Мĕтри ылтăн корпуслă сехет çыхса пычĕ.

- Ах, каллех Нинук кăмăлсăр, - хăвăртах туйса илчĕ вăл, унăн ылтăн сехечĕ çине пăхасшăн та пулманнине сиссе.

- Уруна йĕркеллĕ атă-пушмак тăхăнса курнă-и-ха эсĕ? - питлесех каларĕ хĕр ăна. Чăтмалла-тăк чăтмалла, шарламасть Мĕтри.

- Атă-пушмак тавраш кăна илейĕп-ха, - мăкăртатса илчĕ Мĕтри.

Ĕненетĕр-и? Тепĕр каçхине вăл лакпа витнĕ туфли тăхăнса тухрĕ, ăна вăл Ульяновскинчен илсе килчĕ. Ирхине кайса каçхине таврăнчĕ.

- Нинукăн мана нимĕн каламалли те юлмарĕ, - савăнчĕ Мĕтри хĕр патне каяс умĕн.

Анчах кăлăхах.

- Çывăха ан кил, нихăçан та эпĕ сана савман, савасси те пулас çук. Сисмекей эсĕ, - терĕ те аяккалса пăрăнса утрĕ Нинук.

Тарăхать, çиллине ниçта хураймасть Мĕтри. Ун çийĕнче Нинук ыйтнисем пурте пур-çке! Пĕлччĕр пурте çакна!

- Акă, çĕнĕ костюма хывса пăрахса лакированнăй туфлипе таçта çити тапса сиктерĕп, миçе сехетре вĕçсе кайнине ылтăн сехет çинче пăхса тăрăп! - хыттăнах тарăхса каларĕ Мĕтри. Çакă унăн юлашки сăмахĕ пулчĕ.

# Ёнсене хыҫтарать

Иван Лукич паян кунӗпех салхуллӑн ҫӳрет, лара-тӑра пӗлмест, никампа та чӗнсе калаҫасси те килмест. Пӑртак тӑрсан аптӑранӑ енне тенӗ пек, ӗнсине кӑтӑр-кӑтӑр хыҫса илет. Паян вӑл кунӗпех МТПра хӑй ҫӳрекен машина патӗнче темӗн аппаланать. Ҫапах та Иван Лукич хӑйӗн пӑлханӑвне систересшӗн мар. Анчах унӑн пӑшӑрханӑвӗ куҫран пӑхсах сисӗнет.

- Мӗн пулнӑ-ши ӑна, канӑҫлӑхне ҫухатрӗ,- теҫҫӗ пӗрисем ун ҫинчен.- Пӗрмаях ӗнсине кӑтӑр-кӑтӑр хыҫса илет-ҫке?

- Кун пек пулакан марччӗ-ҫке,- текелеҫҫӗ теприсем.- «Перекур» тенине илтсенех Иван Лукич юлташӗсем патне пырса тӑчӗ. Калӑн, лешсем ҫакна ҫеҫ кӗтнӗ, тесе.

- Мӗн паян эсӗ ӗнсӳне кӑтӑр-кӑтӑр хыҫса ҫӳретӗн? - лаплаттарса хучӗ Митрафан Степанчӑ. «Пӗлеҫҫӗ иккен пӗтӗмпех,- шухӑш вӗҫрӗ ун пуҫӗнче.- Калас пулӗ пӗреххут».

- Аванах хыҫтарать, - ирӗксӗррӗн тенӗ пек каларӗ Иван Лукич.- Кӳршӗ ялти магазина ыйтмасӑр эрех илме кайнӑшӑн 50 тенкӗ тата унта эрех ӗҫнипе ҫул-йӗр правилисене пӑснӑшӑн тата 200 тенкӗ штраф хаплаттарчӗҫ. Эпӗ уйӑх ӗҫлесен те ун чухлӗ укҫа илес ҫук.

- Арӑм пӗлсен пӗтерет ӗнтӗ,- йывӑррӑн сывласа илсе каларӗ вӑл.

Арӑма ан пӗлтерӗр, хамах тӳлӗп, тесе йӑлӑнмаллаччӗ санӑн пӗреххут.- тӗртсе илчӗ Спиритун.

- Итлеҫҫӗ-им вӗсем мана... Ҫитменнине тата хаҫатра пичетлесе кӑларатпӑр тесе хӑратрӗҫ.

Пурте ахӑлтатса кулса ячӗҫ. Ку уяр ҫанталӑкра ҫиҫӗм ҫиҫсе аслати авӑтнӑ пекех пулчӗ.

- Каплипе шофер прависӗр те тӑрса юлма пулать,- ҫавӑнтах питлесе илчӗ хыҫалта тӑракан Михаля.

Иван Лукич та ҫакна те илтрӗ, те илтмерӗ, те илтмӗш ҫеҫ пулчӗ. Анчах нимӗн те шарламарӗ. Пӗр хӗрелчӗ, пӗр шуралчӗ, куҫӗнчен куҫҫуль тухас патне ҫитрӗ.

«Ма пӗлтертӗм-ши хамӑн хуйхӑма?» - тенӗнех туйӑнчӗ унӑн хурлӑхлӑ та ӳкӗнӗҫлӗ сӑн-пичӗ.

# Йытӑпа кушак туслӑрах

Пӗр-пӗринпе килӗштермен ҫынсене кушакпа йытӑ пек пурӑнаҫҫӗ, теҫҫӗ. Анчах яланах кун пек пулмасть иккен.

Акӑ, пирӗн килтех кушакпа йытӑ (Маруҫпа Шарик) тӗлӗнмелле туслӑн пурӑнаҫҫӗ. Хӑш-пӗр чухне ҫемье ҫывӑрма выртиччен кушак пӳрте кӗрсе юлаймасть. Ун пек чухне вӑл хӑйӗн тусӗ Шарик патне кӗрсе выртать. Хырӑмӗ выҫсан ухутана тухса кӗрет, ун хыҫҫӑн каллех ӑшӑ йӑвара. Ирхине ҫеҫ хуҫасен пӳртне кӗрет.

Пӗррехиче ҫапла ирхине Шарик патне пӗр йытӑ килсе тухнӑ та ҫапӑҫма тапратнӑ. Маруҫ ҫакна курса Шарике пулӑшма васканӑ. Тӳрех тӑшман ҫине сиксе ларнӑ та ӗнсинчен кӑшлама тытӑннӑ. Самантрах, хӑйне тӑшман тавӑрасран хӑраса пулас, Маруҫ юпа ҫине чӑр-чар хӑпарса та кайнӑ. Тӑшман та кушак тепӗр хут тапӑнасран шикленнӗ

пулас, пăрахсах тарнă. Шарикĕн тӳтинчен юн юхать. Тăшман кайсанах Маруç юпа çинчен анчĕ те ун патне пычĕ, чĕлхипе çуласа юнне тасатма тытăнчĕ. Çакăн хыççăн ун йĕри-тавра кăмăллăн мăрлатса çаврăнчĕ те... таçта кайса çухалчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ - шăши тытса килсе ун умне хучĕ.

- Акă, кăштах апатланса яр-ха,- терĕ пулас мăрлатса. Çапла, тепĕр чухне кушакпа йытă та хăш-пĕр çынсенчен туслăрах пурăнаççĕ.

***

## Пирĕн ентеш - СССР халăх учителĕ

Ишеевка (Ульяновск районĕ) поселокĕнче пурăнакан П. П. Головина, "СССР Халăх учителĕ» хисеплĕ ята пани çинчен эпĕ «Учительская газета» (132-мĕш N, 1988) хаçата вуласа тухнă хыççăн пĕлтĕм. Ун çинчен хăй вăхăтĕнче радиопа та, телевизорпа та пĕлтерчĕç.

Головинсен йăхĕ Çĕнĕ Йĕлмелĕнче тахçантанпах пырать. Петр Петровичăн ашшĕ - Петр Никифорович - хресчен пулнă, конюхра та ĕçленĕ. Вăрçă çулĕсенче ăна Иркутск облаçне чукун çул тунă çĕре илсе кайнă. Вăл унта проходчик пулса ĕçленĕ. Амăшĕ, Анна Петровна, колхозра ĕçлесе ĕмĕрне ирттернĕ.

Головинсен ачисем мĕн пĕчĕкренех тăрăшуллă та кăмăллă çынсем пулса ӳссе çитĕннĕ. Вĕсем вĕренӳре те, ĕçре те, общественăлла пурнăçра та чи маттуррисем.

Петр Петрович 1947 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче тăван ялтан инçетре çуралнă, самай пысăк çемьере ӳссе çитĕнсе çын пулнă.

Вăл çуралсанах Иркутскран çемье часах тăван яла таврăннă. Петр ун чухне алăри ача кăна пулнă. Ачалăхĕпе çамрăклăхĕ унăн Çĕнĕ Йĕлмелĕнче иртеççĕ. Пĕрремĕш класа вĕренме кайнă чухнех ашшĕне кĕтӳ кĕтме пулăшнă. Çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл вăтам пĕлӳ илме Кивĕ Улхаша çӳренĕ. Унта виçĕ çул вĕреннĕ.

1963 çулта Ульяновскри пединститута литература факультетне вĕренме кĕресшĕн пынă, анчах унта конкурс пысăк пулнипе ăна математикăпа физика факультетне кĕме сĕнеççĕ. Ку предметсемпе Петĕрĕн аттестат çинче лайăх паллăсем пулнă. Çакăнтан вĕренсе тухсан çамрăк специалиста Çĕнĕ Малăкла районĕнчи Новочеремшанскри шкула ĕçлеме яраççĕ.

Çирĕм тăвата çул хушши юратнă ĕçре - учитель-методист пулса ĕçлет вăл, вĕсенчен 15 çул хушши Ишеевкăри вăтам шкулта вăй хурать. Ачасене математикăпа физика предмечĕсене юратма вĕрентмелли тĕрлĕрен майсем тупать. Çав вăхăтрах техникăпа творчество кружокне ертсе пырать. Ачасемпе пĕрле (вĕсене пулăшса) урокра тĕрлĕ предметсемпе усă курса вĕренмелли пособисем хатĕрлет. Шкулта ачасен пултарулăх выставкине йĕркелеме пулăшать. Кунсăр пуçне вĕсем, Пĕтĕм Союзри тата Раççейре йĕркеленĕ выставкăсене, ытти ют çĕршывсенче ирттернĕ конкурссене хутшăнаççĕ. Выставкăсенче, конкурссенче пысăк кăтартусемшĕн ачасене тата ăна хаклă парнесем парса чыслаççĕ. Вăл ĕçлекен шкула унăн опычĕпе паллашма хулари педагогика институтĕнчен, облаçри шкулсенчен учительсем йышлăн пыраççĕ. Вăл хăйĕн ĕç опычĕн вăрттăнлăхĕпе паллаштарать, паха канашсемпе сĕнӳсем парать.

Физикăпа тата математикăпа çырнă унăн наукăлла ĕçĕсене «Математика в школе»», «Физика в школе», «Школа и производство» тата ытти журналсенче вулама пулать. Çĕршыври тĕрлĕ журналсенче унăн çирĕме яхăн ĕçĕ пичетленнĕ.

1994 çулта вăл тепĕр çитĕнӳ тăвать - Сарос учителĕ пулса тăрать, пĕр çул хушши Америкăран стипенди илсе тăрать. Укçапа кĕнеке кăларнă çĕрте усă курнă. Пурĕ П. П. Головин электродинамикăна ăнланма пулăшма ултă пособи çырнă. Петр Петровичăн килĕнче ВДНХан çичĕ ылтăн тата кĕмĕл медалĕсем упранаççĕ. «Хисеп палли» орден пур. Вăл хăйĕн ĕçĕсене тĕнчери тата Совет Союзĕнчи (кайран Раççейри) выставкăсенче нумай хутчен кăтартма хунă. Вĕсем чылай чухне пĕрремĕш вырăнсене тивĕçнĕ.

**(«Канаш», 1996, 4-мĕш №.)**

## *Поздравляем!*

ЕЩЕ ОДНОМУ педагогу - Петру Петровичу Головину присвоено почетное звание «Народный учитель СССР». Указ Президиума Верховного Совета СССР об этом был опубликован в нашей газете 29 октября. А сегодня хотя бы немного расскажем о новом народном учителе из Ишеевской средней школы Ульяновской области.

Любимому своему предмету - физике - Петр Петрович учит ребят уже два десятка лет. Все вроде бы было обычно в его педагогической судьбе: пользовался уважением коллег, находил взаимопонимание с детьми, нередко слышал благодарности от своих выпускников. Но хотелось, как он сам говорит, видеть реальные результаты не спустя годы, а как можно скорее. Тем более, что хорошие оценки - это еще не все. Надо, чтобы проявились знания в конкретных делах. И тогда родился в школе физико-технический кружок.

Те, кто глубоко не знакомился с работой этого кружка, бывало, говорили: «Ну что его так хвалят? И у нас есть физико-технический». Но потом, познакомившись с руководителем и его питомцами поближе, понимали: есть здесь своя система, своя широкая, продуманная тематика. Казалось бы, действительно, такие внеклассные объединения ребят - не редкость. Но в немногих мы увидим глубину ребячьей любви к физике. Все - от наглядных пособий до действующих моделей космических кораблей делают они сами.

Внеурочные занятия с ребятами - одно из основных звеньев системы работы Головина. Самое главное - это повышает уровень подготовки ребят, их увлеченность предметом. Уже пять лет школа участвует в экспозициях ВДНХ СССР. Она награждена дипломами, а семьдесят ребят - медалями главной выставки страны. Творческие работы питомцев Петра Петровича демонстрировались на международных выставках в Греции, Финляндии, Кубе, Индии.

Редакция «Учительской газеты» от всей души поздравляет учителя-методиста, заслуженного учителя школы РСФСР Петра Петровича Головина с присвоением звания «Народный учитель СССР».

**(1988).**

Подробно об ученической фирме "Импульс" вы узнаете прочитав статью:

**«Импульс» - солидная фирма**

Ученическая учебно-методическая и производственная фирма «Импульс» Ишеевской средней школы Ульяновской области, организованная в 1989 году и руководимая Головиным Петром Петровичем, народным учителем, Соросовским учителем, кандидатом педагогических наук, занимается:

- профессиональным обучением учащихся VIII-XI классов;
- разработкой, производством и реализацией учебно-наглядных методических пособий для развития физико-технического творчества учащихся;
- повышением квалификации учителей физики в области практической электродинамики в рамках Всероссийской авторской школы.

На уроках трудового обучения учащиеся (мальчики) VIII-XI классов общеобразовательной школы осваивают профессию монтажника радиоаппаратуры и приборов. Учащимся IX-ого класса присваивается 1-й квалификационный разряд, XI-ого класса 2-й и 3-й.

Уроки профессионального обучения также являются экспериментальной лабораторией, где производится первоначальное опробование разрабатываемых учебно-наглядных пособий.

Гордость фирмы - два класса-цеха с заводским оборудованием более чем на тридцать рабочих мест. В этих цехах проходят профессиональную подготовку учащиеся 10-11-х классов. Программа их подготовки включает: теоретическую часть, практические занятия по отработке полученных знаний, изготовление продукции для реализации и квалификационный экзамен на получение разряда по специальности монтажник радиоаппаратуры и приборов.

Фирма работает на полном хозрасчете. Вырученные от продажи продукции средства идут на зарплату и стипендии учащимся, на содержание штата, на развитие фирмы.

В данное время П. П. Головин работает над второй частью книги «Лабораторные работы и практикум по электродинамике», где описываются работы по элементам автоматики, радиотехнике, электронике, цифровой технике.

Заканчивается оформление книги «Сам учись радиотехнике дома и в школе» и одноименного комплекта-конструктора, предназначенных для самостоятельных исследований учащихся в области практической электродинамики.

При фирме «Импульс» работает авторская Всероссийская школа повышения квалификации учителей в области практической электродинамики школьного курса физики.

Школа работает на выезде по приглашению местных органов образования.

Занятия проводятся с группой учителей до 40 человек (столько, сколько вмещает кабинет физики) по книгам Головина П. П. «Практическая электродинамика», «Кружок физико-технического творчества», «Лабораторные работы и практикум по электродинамике» на базе

комплекта «Лабораторные работы и практикум по электродинамике», выпускаемого ученической фирмой «Импульс».

Для проведения занятий все необходимые детали и пособия привозятся автором. Приглашающая сторона предоставляет кабинет физики.

**Полная программа школы включает 40 часов занятий:**

В течение 1992-1995 гг.руководитель фирмы провел более 50 занятий Всероссийской школы в разных регионах России: Москве, Сыктывкаре, Йошкар-Оле, Пензе, Саратове, Чебоксарах, Рязани, Смоленске, Воркуте, Инте, Печоре, Ухте, Анадыре, Магадане, Санкт-Петербурге, Самаре, Казани, Челябинске, Уфе, Новгороде и т. д.

Раньше в Ишеевку приезжали за опытом преподаватели физики со всей страны. По нынешним временам это стало накладно, поэтому теперь руководители приглашают к себе. Петр Петрович уже прочитал 50 курсов в разных городах России. Только за последнее время по два раза побывал в Казани, Самаре, Уфе, Чебоксарах, один раз в Санкт-Петербурге.

Недавно П. П. Головин вернулся из самого далекого региона России - Чукотки (1996).

